КС(Чув.)
М15
26062-чув.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ

# САТУРЛА ИЛЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-026062

26062 чув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 3288.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ

К С(Чув) М15 Куф

# САТУРПА ИЛЕМ

ВИÇĔ ПЬЕСА

Ку.

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1983

ББК 38.3 Чув
М 15

Текстне И. Максимов-Кошкинскин «Пьесăсем, калавсем, асаилÿсем» кĕнекинчен илнĕ. Ăна Чăваш кĕнеке издательстви 1963 çулта кăларнă.

П... 20..

**Максимов-Кошкинский И. С.**

М 15 Сатурпа Илем: Виçĕ пьеса.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1983. 176 с.

70 п.

1983 çулта паллă драматург И. С. Максимов-Кошкинский çуралнăранпа 90 çул тултарать. Çавна май Чăваш кĕнеке издательствинче «Сатурпа Илем» кĕнеке пичетленсе тухать. Унта историлле-революцилле темăпа çырнă виçĕ пьеса кĕнĕ: «Сатурпа Илем», «Пугачев парни», «Тăвăл хыççăн тăвăл».

**ББК 83.3 Чув.**

М $\frac{4702650000-84}{М\ 136(03)-83}$ 68—83

26062-чув

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# САТУРПА ИЛЕМ

4 актлӑ, 6 картинӑллӑ драма

## ДРАМӐРИ ҪЫНСЕМ:

**Сатур** — художник.
**Илем** — музыкант.
**Хӗлип** — редакци секретарӗ.
**Ҫавӗрле** — учредительнӑй пуху членӗ.
**Лена** — редакцире ӗҫлекен хӗр.
**Праски** — редакци технички.
**Таня** — кӗпе-йӗм ҫуса пурӑнакан.
**Асамат** — корректор.
**Иван Васильевич** — рабочи.
**Громов** — матрос.
**Васильев**
**Закиров** — рабочисем.
**Антонов** — офицер.
**Иванов** — губком секретарӗ.
**Шакмак** — шуррисен офицерӗ.
**Сармантей** — хуҫа ачи.
**Ҫлавдюша** — гимназистка.
**Кил хуҫи арӑмӗ.**
**Ҫапитан.**
**Штабри салтак.**
**Часовой.**
**Дозорнӑй.**
**Хӗрлӗ армеец.**
**Почтальон.**

Рабочисем, хӗрлӗ армеецсем, матроссем, шуррисен салтакӗсем. Драмӑри ӗҫ 1918 ҫулта Атӑл хӗрринчи пӗр хулара пулса иртет.

# ПĔРРЕМĔШ АКТ

## Пĕрремĕш картина

Редакци. Икĕ алăк, балкон. Виçĕ сĕтел, пукансем. Стена çумĕнче телефон. Чаршав уçăличченех корнетпа чăваш кĕвви калани илтĕнет. Чаршав ерипен уçăлать. П р а с к и пÿлĕме пуçтарать. Урайĕнчи хут татăкĕсене пухать те балкон алăкне уçса ярать. Параппан сасси çывхарать.

П р а с к и *(балкон çинчен урамалла пăхса)*. Илем! Илем!

Корнет сасси чарăнать, И л е м кĕрет. Аллинче корнет.

И л е м. Мĕн кăшкăратăн, Праски?

П р а с к и. Кил-ха кунта. Куратăн-и, кам пырать?

И л е м *(балкон çине тухса)*. Куратăп. Хĕрлĕ гвардеецсем килеççĕ.

П р а с к и. Лайăхрах пăх... Малта, малта кам пырать? Сăран пиншакли çумĕнче...

И л е м. Ăçта?

Пауза. Параппан сасси çывхарать.

Чим, ман пÿлĕмрен куçлăх илсе килчче. Сĕтел çинче выртать.

П р а с к и каять. И л е м параппан çапнă майăн корнетпа марш калать.

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц васкаса кĕрет.

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц. Юлташ! Хаçат парсамччĕ, тархасшăн.

И л е м *(выляма чарăнса)*. Вулама-и?

Х ĕ р л ĕ а р м е е ц. Çук, чикаркка чĕркеме. Сирĕн хаçата ăнланма хĕн: пĕрре пĕр майлă çыратăр, тепĕр чух — урăх майлă. Пуçа пăтрататăр çеç...

Илем хаҫат илсе парать.

Тавтапуҫ, юлташ. *(Хӑвӑрт каять.)*

Илем. Пуҫа пӑтрататӑр ҫеҫ... Ӑслӑ каланӑ! *(Балкон ҫине тухать.)*

Параппан сасси аяккарах илтӗнме пуҫлать. Пауза. Праски куҫлӑх илсе килет.

Праски *(Илеме куҫлӑх парса)*. Ме, тыт хӑвӑртрах куҫлӑхна. Ҫамрӑклах суккӑрланнӑ.

Илем. Выртса вуланӑран вӑл, Праски. Ҫывӑхрине эп аванах куратӑп. Аякри ҫеҫ тӗтреллӗ курӑнать.

Праски *(урамалла пӑхса)*. Иртсе кайрӗҫ. Куҫлӑхупа аппаланса кураймасӑрах юлтӑн.

Илем *(куҫлӑхне тӑхӑнса)*. Куҫлӑхпа пӑхсан та, куҫлӑхсӑр пӑхсан та, урамра хӗрлӗ гвардеецсемсӗр пуҫне урӑх никам та курӑнмасть.

Праски. Эх, Николай Петрович. Хӑвӑн юлташна та палламарӑн. Хӗрлӗ гвардеецсемпе Сатур пырать.

Илем. Сатур? Хӗрлӗ гвардеецсемпе? Ан палка.

Праски урай ҫума пуҫлать. Илем чаршав уҫӑличчен вылянӑ чӑваш кӗввисен вариацийӗсене калать. Почтальон кӗрет.

Почтальон. Салам, юлташсем! Перасковья, почта йышӑн. Заказной ҫырусем пур.

Праски. Илем, алӑ пусса пар-ха...

Илем *(корнет калама чарӑнса)*. Итлетӗп, чипер Праски. *(Почтальон патне пырса, кӗнеки ҫине алӑ пусать.)*

Почтальон. Фронтри ӗҫсем мӗнле, юлташ?

Илем. Паян сводка илмен-ха.

Почтальон. Хулара ырӑ мар хыпар ҫӳрет: шуррисем ҫывхараҫҫӗ, теҫҫӗ.

Илем *(алӑ пусса)*. Шуррисем... Хӗрлисем... Охо, мана та ҫыру пур иккен...

Почтальон. Суяҫҫӗ пулӗ... Сыв пулӑр. *(Каять.)*

Илем *(ҫырусене сӗтел ҫине хурать, пӗр конвертне уҫса вулать)*. «Сирӗн сонатӑна консерваторинчи профессор...» *(Кӑшкӑрса.)* Ура! Праски, ман сонатӑна Мускавра ырланӑ. *(Ассӑн сывласа.)* Ух! *(Пауза.)* Праски!

Праски *(урай ҫума чарӑнса)*. Мӗн?

Илем *(хутне кӑтартса)*. Вула... Ӑнланатӑн-и? Эх! *(Праские ыталать.)*

Праски. Ой, хытӑ ан чӑмӑрта-ха.

Илем (*Праские тытса*). Праски! Мана консерваторие илеççĕ.

Праски. Чăнах-и?

Илем. Эпĕ композитор пулатăп... Опера çыратăп... Оперетта... (*Телефон шăнкăравĕ. Илем телефон патне пырать. Телефон трубкине илсе.*) Итлетĕп... Редакци... Салам... Çук, килмен-ха... Килмен тетĕп!..

Хĕлип кĕрет.

Хĕлип. Сывă-и, Илем?

Илем. Акă, Филипп Степанович хăй çитрĕ... Хĕлип, сана Асамат чĕнет. (*Трубкине Хĕлипе парать, хăй сĕтел хушшине кайса ларать.*)

Хĕлип (*телефонпа*). Сывă-и?.. Мĕн-мĕн? Хытăрах кала. Ну, итлетĕп. Сатур? Мĕн Сатур? Какое имеешь право Сатура корректурăсене кăтартма? Мĕн? Кавĕрле статйине кĕртрĕн-и? Вырнаçаймарĕ-им? Мĕн? Сатур кăларса пăрахрĕ? Кам вăл? Редактор-им? Большевик, большевик! Эсĕ ху та большевикланса кайнă пулас. Хаçата наборласа пĕтернĕ-и? Оттисксене хăвăртрах илсе кил... Юрĕ, кунта калаçăпăр. (*Телефон трубкине çакать.*) Праски, мĕншĕн урайне иртерех çумарăн?

Праски. Ĕлкĕреймерĕм, Филипп Степанович.

Хĕлип. Çĕрле пухусем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳретĕр те кăнтăрлаччен ыйха туртатăр. Пăрах çума...

Праски витрине йăтса каять.

(*Хĕлип сĕтел хушшине ларать.*) Илем, çак статьяна куçар-ха.

Илем (*Хĕлип патне пырса, хаçата илсе*). Ĕнер большевиксен хаçачĕ çинчен куçарттаратăр, паян меньшевиксен хаçатĕнчен... Халăх пуçне пăтрататăр çеç... (*Хăй вырăнне ларать.*)

Хĕлип. Пирĕн хаçат беспартийнăй.

Илем. Эсир акă мĕнле тăвăр: Ленăна меньшевиксенне куçарттарăр, мана — большевиксенне. Апла тусан, пирĕн пуç пăтранмĕ хăть.

Хĕлип. Эсĕ те, хăвăн тусу пек, большевиксен енне сулăнтăн-им?

Илем. Манăн туссем — художниксем, артистсем.

Хĕлип. Авă, Сатур... Большевиксен партине çырăннă, тет.

Илем. Сатур — большевик? Художник партие çыраннă-и?..

Лена кӗрет.

Лена. Салам, юлташсем!

Илем. А, Елена Васильевна та ҫитрӗ. Аван ҫывӑртӑн-и? Тӗлӗкре кама куртӑн?

Лена. Сана.

Илем. Апла пулсан, ҫумӑр е ҫил-тӑвӑл пулать.

Хӗлип. Безобрази, Елена Васильевна, вунӑ сехет, эсир тин килетӗр.

Илем. Савнипе бульварта ҫӳрерӗ пулӗ. Ҫапла-и, Елена Васильевна? *(Каять.)*

Хӗлип *(хут парса)*. Ҫакна хӑвӑртрах пӑхса тухӑр та тӳрлетӗр. Ыранхи номере кӗртмелле.

Лена *(вуласа)*. «Сулахай социалист-революционерсем...» *(Хӗлипе.)* Кама кирлӗ кунашкал палкав?

Хӗлип. Сире паян мӗн пулнӑ?

Лена. Кам ҫырнӑ кӑна?

Хӗлип. Кирек кам пултӑр, сирӗн ӗҫ мар.

Лена. Епле пирӗн ӗҫ мар? Куншӑн хаҫата хупма пултараҫҫӗ.

Хӗлип. Хаҫат паян тухмасть, ыран.

Лена. Ыран та хупӗҫ.

Хӗлип. Ку ыйту, Асамат калашле, дискуссионнӑй. Паян пур, ыран ҫук.

Лена. Мӗн ҫук?

Хӗлип. Совет влаҫӗ.

Лена. Ахальтен мар сире Сатур эсерсен йытти тет.

Хӗлип. Чӑнах-и?

Лена. Редакцинчен тахҫанах ӗнселесе кӑлармалла, тет.

Хӗлип. Кам кама ӗнселесси малашне курӑнӗ. Чим, эсир Сатурпа туслашнӑ, темеҫҫӗ-и?

Лена. Кам каларӗ?

Хӗлип. Иртнӗ каҫ бульварта иксӗр ҫӳреттӗр-ҫке.

Лена. Пухура пултӑмӑр та, ӑсатса ячӗ.

Хӗлип. Пӑрахӑр ҫав шӑпӑрлан Сатура.

Лена. Мӗншӗн пӑрахас? Сатур — ӑслӑ ҫын. Ӑна халӗ комиссар тӑвасшӑн, тет.

Хӗлип. Астӑвӑр, Елена Васильевна, сыхланӑр Сатуртан. Вӑл сире аташтарма пултарать.

Лена. Мӗн тӑвас? Юрататӑп Сатур пеккисене.

Сатур кӗрет.

Сатур. Сывӑ-и, юлташсем. Аван ҫывӑртӑн-и, Елена

Васильевна? *(Алă парать, унтан Хĕлип патне пырать.)* Акă мĕн, Хĕлип... Çакăн пек статьяна хаçата тата кĕртсен...

Х ĕ л и п. Эсĕ кам? Редактор-и? Кам сана хаçатран статьясене кăларса пăрахма ирĕк пачĕ?

С а т у р. Авторĕ кам?

Х ĕ л и п. Редакци хăйĕн сотрудникĕсен псевдонимĕсене кашни иртсе çÿрекене уçса памасть.

С а т у р. Эх, тытса лăскăттăм та сана пĕрре...

Х ĕ л и п. Аллу кĕске.

Л е н а. Сатур, çакна хаçата кĕртме юрать-и?

Х ĕ л и п. Сатур редактор мар!

С а т у р *(Лена патне пырса, статьяна вулать)*. Ак ун вырăнĕ. *(Статьяна çурса пăрахать.)*

Х ĕ л и п *(кăшкăрса)*. Какое имеешь право?

С а т у р. Лăплан, Хĕлип. *(Хĕлип патне пырса.)* Ыранхи номере çакна кĕрт.

Х ĕ л и п *(вуласа)*. Редакторсăр кунашкал япалана кĕртме пултараймастăп.

С а т у р. Редактор ăçта?

Х ĕ л и п. Командировкăра.

С а т у р. Вăл таврăнасса кĕтмелле-и?

Х ĕ л и п. Мĕн тăвăн, кĕтес пулать. Тепĕр тесен, кĕтни те ахалех. Эпир кунашкал япалана пичетлеме пултараймастпăр. Пирĕн хаçат...

С а т у р. Беспартийнăй тесшĕн-и? Акă мĕн: чĕнсе каланине ыранхи номере кĕртнĕ пултăр. Илтрĕн-и?

И л е м кĕрет.

И л е м. Кам çухăрать, тетĕп... Сатур килнĕ иккен. Сывă-и? *(Алă парать.)* Мĕн харкашатăн?

С а т у р. Хĕлипе ятлатăп. Чĕнсе каланине хаçата кĕртесшĕн мар.

И л е м. Япăх çырнă пулĕ. Сан чăвашла яках тухмасть. Кăтарт-ха. *(Сатур хутне парать, Илем вулать.)* «Чухăнсемпе батраксене тата вăтам хресченсене... Контрреволюци пуçне çĕклерĕ... Самарпа Чĕмпĕр шуррисен аллинче... Вĕсем йышăннă вырăнта çĕр каллех улпутсен аллине куçнă...» *(Чарăнать.)* Аха, ăнлантăм... Хĕлипĕн ашшĕ пуян пулнă. Вăл ашшĕ çĕрне туртса илнĕшĕн кунашкал чĕнсе каланине пичетлесшĕн мар.

Х ĕ л и п. Санăн аçу чухăн-им?

И л е м. Чухăн мар, анчах...

С а т у р. Анчах чухӑнсен ҫӗрне тара илсе акман. Ҫапла-и, Илем?

И л е м. Тӗрӗс. Хӗлипсен яланлӑха илнӗ ҫӗр мӗн чухлӗччӗ?

Х ӗ л и п. Охо, искусство мӗнле калаҫа пуҫларӗ?

С а т у р. Эсӗ чӗнсе каланин вӗҫне вула.

И л е м. *(вуласа)*. «Октябрь революци тивлетне упрар. Ҫам ҫӗнӗрен улпутсемпе пуянсен чури пулас мар тет, пурте Хӗрлӗ Ҫара, тӑшманпа ҫапӑҫма». *(Чарӑнать.)*

С а т у р. Ну, мӗнле?

И л е м. Ӑнланмалла ҫырнӑ.

С а т у р. Ху ӑнлантӑн-и?

И л е м. Мӗн каласшӑн эс?

С а т у р. Ҫавна ҫеҫ, ӑнлантӑн-и тесе ҫеҫ ыйтрӑм.

И л е м. Итле-ха, Сатур...

С а т у р. Итлетӗп, тусӑм.

И л е м. Пӑрах ман пуҫа пӑтратма. Эп политика ӗҫне хутшӑнман, хутшӑнас та ҫук. Эпӗ артист.

С а т у р. Ҫу япӑх хӳтлӗх, тусӑм...

Х ӗ л и п. Итле-ха, Сатур. Ҫунта парти комитечӗ мар, редакци...

С а т у р *(Хӗлипе)*. Ну — мӗнле?

Х ӗ л и п. Чӗнсе калани пирки-и?

С а т у р. Ҫӗртетӗн-и хаҫата?

Х ӗ л и п. Ҫӗртместӗп!

С а т у р *(телефон патне пырса)*. 22—53... Реввоенсовет? Ҫам калаҫать? Иван Васильевич, чӗнсе каланине хаҫата кӗртесшӗн мар... Редакторӗ ҫук, секретарӗ ҫеҫ. Ҫапла хӑтланаҫҫӗ пулсан, ку хаҫата хупса, урӑх кӑларма пуҫламалла мар-и?

Х ӗ л и п. Итле-ха, Сатур...

С а т у р. Юрӗ, редакторне-и? Тупӑпӑр... Фронта-и? Паян, каҫхи пӑрахутпа... *(Трубкине ҫакать.)* Акӑ мӗн, Хӗлип... Икӗ сехетре политотдела пыр.

Х ӗ л и п. Чӗнсе каланине ыранхи номере кӗртмелле-и?

С а т у р. Унта калаҫӑпӑр. Ну, сыв пулӑр, юлташсем. Елена Васильевна, мана ӑсатма пыратӑн-и?

Л е н а. Юрӗ, пырӑп.

К а в ӗ р л е кӗрет.

К а в ӗ р л е. Сывӑ-и, тӑвансем. *(Сатур кайма тӑрать.)* Чим-ха, Сатур... *(Сатур чарӑнать.)* Эсӗ чӑнах Хӗрлӗ Ҫара ху ирӗкпе ҫырӑннӑ-и?

Сатур. Ну?

Ҫавӗрле. Тӗлӗнмелле. Художник — хӗрлӗ салтак. Художник — большевик!

Сатур. Эсир, Гаврил Иванович, медицина факультетӗнче вӗреннӗччӗ-и ҫак?

Ҫавӗрле. Ҫук, юридическинче.

Сатур. Шел. Ҫӗҫӗ чирӗ ҫинчен ыйтса пӗлесшӗнччӗ. Ҫӗҫӗ ҫын чӗлхи ҫине тухать, теҫҫӗ. Чӑнах-ши?

Лена. Тухмасть пулӗ, Сатур.

Сатур *(Ҫавӗрле ҫине пӑхса)*. Хӑшин чӗлхи ытлашши кӗҫтет те, ҫавӑнпа каларӑм... *(Илем умне чарӑнса.)* Эс галстукна ытла пӑвса ҫыхнӑ, Илем тусӑм... Пырна ыраттармасть-и?

Илем. Галстук? Аванах ҫыхнӑ-ҫке.

Сатур. Хӗлип, ан ман, икӗ сехетре штаба. *(Каять.)*

Ҫавӗрле. Штаба? Мӗн тума?

Хӗлип. Пӗлместӗп.

Лена. Хаҫата хупасшӑн пулас.

Ҫавӗрле. Мӗншӗн?

Лена. Сирӗн статьясене пичетленӗшӗн пулӗ.

Ҫавӗрле. Филипп Степанович, ман статьяна набора ятӑр-и?

Хӗлип. Ленӑна пӑхса тухма патӑм та, Сатур ҫурса пӑрахрӗ.

Ҫавӗрле. Сатур пеккисене ирӗк пама юрамасть. Илем, хут пар-ха... Ҫӗнӗрен ҫырам.

Лена. Ан тӑрӑшӑр, Гаврил Иванович. Сирӗн статья пурпӗр хаҫата кӗмест.

Хӗлип. Сирӗн ӗҫ мар. Ҫырӑр, Гаврил Иванович, ҫырӑр.

Лена. Тӗрмене лекес килсен, кӗрт.

Хӗлип *(кӑшкӑрса)*. Ҫитет!

Ҫавӗрле. Шуйттан самани! Ирӗклӗх... Социализм... *(Хутне ҫурса пӑрахать.)*

Илем. Диктатура...

Ҫавӗрле. Мӗн?

Илем. Диктатура тетӗп. Пролетари диктатури урлӑ ҫеҫ этем социализм ҫулӗ ҫине тухӗ, теҫҫӗ большевиксем...

Ҫавӗрле. Филипп Степанович, хаҫата епле те пулин хӳтӗлемелле.

Хӗлип. Тӑрӑшӑпӑр.

Илем. Гаврил Иванович, каҫарӑр, тархасшӑн... Сирӗн фрака вӑхӑтра леҫсе параймарӑм... Паян татах концертра каламалла та... Тӑхӑнма те юрать ӗнтӗ...

Ҫ а в ĕ р л е. Тăхăнах, Илем.

Х ĕ л и п. Гаврил Иванович, эсир хăвăртрах ҫырса пĕтерĕр.

И л е м. Тата пĕр ыйту пурччĕ, Гаврил Иванович...

Х ĕ л и п. Ан кансĕрле, тархасшăн.

Ҫ а в ĕ р л е. Мĕн ҫинчен, Илем?

И л е м. Акă шуррисем Самара илнĕ, теҫҫĕ. Унта Учредилка комитечĕ пуҫлăх, теҫҫĕ... Мĕнле власть вăл?

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫу влаҫ Учредительный пуху пухăниччен ҫеҫ. Учредилка Российăра мĕнле власть пулмаллине сӳтсе явĕ.

Л е н а. Учредилка та Совет влаҫех пултăр тесен?..

Ҫ а в ĕ р л е. Апла пулмĕ. *(Ҫырать.)*

Л е н а. Ҫаплах пулсан?

Ҫ а в ĕ р л е. Эпир Совет влаҫне хирĕҫ мар, анчах власть большевиксен аллинче ан пултăр. Ăнлантăр-и?

Л е н а. Ăнланма хĕн...

И л е м. Ăнлантăм... Совет ятне ҫеҫ хăварасшăн, эппин. Мĕнле каламалла...

Л е н а. Интереслĕ... Анчах халăх сире каллех отставка парсан?

Х ĕ л и п. Мĕн эсир? Ĕҫлеме килнĕ-и кунта е дискусси тума-и?

Т а н я кĕпе йăтса кĕрет.

И л е м. Э, Таня! Илсе килтĕн-им? Аван, питĕ вăхăтлă. Паян мунчана каяс тенĕччĕ.

Т а н я *(шутласа)*. Алшăлли пĕрре. *(Хурать.)* Ҫĕпи иккĕ... *(Хурать.)* Чăлха... Анчах санăн йĕмӳ ҫук, Илем. Йĕмсĕр епле мунчана кайăн?

И л е м. Епле ҫук? *(Хутне пăхса.)* Ҫунта пĕрре тесе ҫырнă-ҫке.

Т а н я *(йĕмне кăтартса)*. Ун ячĕ ҫеҫ. Саплама та май ҫук.

И л е м *(йĕмне лӳчĕркесе)*. Ҫынна ан кăтарт, Таня.

Т а н я. Пурте-и?

И л е м. Пурте. Мĕн чухлĕ тӳлемелле?

Т а н я. Эпĕ тӳлесе хăвартăм.

И л е м. Эккей, укҫа та ҫумра пулмарĕ. Хĕлип, сан пур-и? Гонорар иличчен парсамччĕ.

Т а н я. Ан кивҫенлен. Илместĕп. *(Шăппăн.)* Эпĕ статья ҫыртăм. Те юрăхлă пулчĕ. Тӳрлетме май пулсан, хаҫата кĕрт-ха.

И л е м *(кăшт пăхса)*. Юрĕ, пăхса тухăп.

Т а н я. Ҫасхине ман пата пыр.

И л е м. Паян концерт.

Т а н я. Пĕрле кайăпăр. Юрать-и?

И л е м. Юрать.

Т а н я каять. И л е м, кĕпе-йĕмне йăтса, сулахайри алăкран тухать.

А с а м а т *(сцена хыҫĕнче)*. Салам, Татьяна!

А с а м а т кĕрет.

Салам, юлташсем!

Х ĕ л и п. Итле-ха, Асамат... Мĕншĕн Сатура корректурăсене кăтартатăн?

А с а м а т. Унăн, Хĕлип Степанчă, мандат пур.

Х ĕ л и п. Мандат?

А с а м а т *(шăппăн)*. Реввоенсовет панă. Эпĕ Гаврил Иванович статйи вырăнне хамăн сăвва кĕртрĕм.

Х ĕ л и п. Ҫам ирĕк пачĕ сана ҫапла хăтланма?

А с а м а т. Пушă вырăн юлать терĕм те.

Х ĕ л и п. Безобрази!

А с а м а т. Сатур ырларĕ. Эпĕ ăна вуласа патăм...

Ҫ а в ĕ р л е. Сатур, Сатур. Шуйттан! *(Хутне ҫурса тăкать.)*

Л е н а. Сăввуна вуласа пар-ха, Асамат.

А с а м а т *(вуласа)*.

Сана, сана, Хĕрлĕ Ҫар!
Пехиллетĕп сăввăма...

И л е м кĕрет.

Аркат, салат контăра!

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫама?

А с а м а т. Ҫонтăра!.. Итлĕр малалла *(вуласа)*.

Аркат, салат контăра!
Иртсе кайĕ тискер ҫĕр...
Хĕвел тухĕ, йăл кулĕ,
Ешĕл ҫерем ҫĕнĕрен...

Тупă сасси, кантăк кĕленчи ванни илтĕнет.

Л е н а. Ай! *(Пауза.)* Ҫу мĕне пĕлтерет?

Ҫ а в ĕ р л е. Большевиксен ĕмĕрĕ кĕскелнине. *(Тупă сасси.)* Охо, лайăх кĕмсĕртеттереҫҫĕ.

И л е м. Гаврил Иванович, камсем переҫҫĕ?

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫамсене переҫҫĕ тесе ыйт, Илем.

Илем. Ну, камсене пересçĕ, тейĕпĕр.

Кавĕрле. Сатур пеккисене çĕр çинчен тасатаççĕ.

Илем. Камсем?

Кавĕрле. Чăн-чăн революционерсем. Ну, Филипп Степанович, икĕ сехетре штаба кайма кирлĕ мар. Ун вырăнне ыран пирĕн штаба пырăр. *(Балкон çине тухса.)* Епле тараççĕ. Асамат, кил кунта. Çак уяв çинчен сăвă çыр.

Тупă сасси.

Лена. Ай! Ăçта пытанас?

Кавĕрле. Пытанма кирлĕ мар. Алă çуп, Елена Васильевна. Илем, кала корнетна. Савăнăçлă кĕвĕ кала!

Асамат. Атя тарар, Илем...

Илем. Ăçта?

Таня чупса кĕрет.

Таня *(Илем патне пырса)*. Илем... Урампа шуррисем килеççĕ...

Илем. Каяр ман пӳлĕме. *(Таньăпа пĕрле каять.)*

Кавĕрле. Епле утаççĕ пирĕн салтаксем!

Тупă сасси. Сатур кĕрет, телефон патне пырать.

Сатур. 22—53. Штаб... Сатур калаçать... Кам? Акă мĕн... Мускав урамĕнче шуррисем... Хăвăртрах хĕрлĕ армеецсене ярăр. Пĕр пулеметпа та чарма пулать.

Кавĕрле Сатур калаçнине итлесе тăрать. Унтан, ун патне пырса, телефон трубкине туртса илет.

Кавĕрле. Пăрах калаçма!

Сатур *(трубкине туртса илсе)*. Ан кансĕрлĕр. *(Калаçма пуçлать.)* Шуррисем штаб еннелле кайрĕç.

Кавĕрле *(трубкăна çĕнĕрен илсе, Сатура тĕртсе ярать)*. Сирĕл телефон патĕнчен.

Сатур. Аха... Акă.. мĕн... *(Револьвер кăларса.)* Ну?

Илем кĕрет.

Илем. Сатур тусăм, ан пер, тархасшăн... *(Кавĕрлене.)* Кайăр телефон патĕнчен. Мĕн, чавка пек, çăвара карса тăратăр?

Кавĕрле телефон патĕнчен каять.

Сатур *(телефонпа)*. Штаб. Штаб...

Праски чупса кӗрет.

Праски. Кунта офицерпа салтаксем кӗреҫҫӗ.
Илем. Сатур, хӑвӑртрах тар.

Сатур хыҫалти алӑкпа каять. Офицерпа икӗ салтак кӗреҫҫӗ.

Офицер. Ку большевиксен редакцийӗ-и?
Кавӗрле. Ҫук, ку чӑваш хаҫачӗн редакцийӗ.
Офицер. Кунта пӗр большевик кӗчӗ, терӗҫ.
Кавӗрле. Тӗрӗс, анчах вӑл тарчӗ.

Сатур каялла кӗрет. Ун хыҫҫӑн тата икӗ салтак кӗреҫҫӗ.

Кавӗрле. Акӑ вӑл. Тытса кайӑр.
Офицер *(Сатур патне пырать)*. Учредительнӑй пуху комитечӗ ячӗпе сире арестлетпӗр.
Илем *(офицер патне пырса)*. Ваше благороди, ку ҫын... *(Кавӗрле ҫине кӑтартса)* суять. Кунта большевик ҫук.
Офицер. Эсир кам пулатӑр? *(Илем кӗсйинчен документ кӑларса кӑтартать.)* Каҫарӑр, тархасшӑн, кансӗрленӗшӗн. *(Честь парать.)* Сыв пулӑр, господа. *(Каять.)*

Салтаксем офицер хыҫҫӑн утаҫҫӗ.

Кавӗрле. Ку мӗне пӗлтерет? Мӗнле документ кӑтартрӑн офицера?
Илем *(документне пӑхса)*. Хам документ вырӑнне сирӗнне — учредительнӑй пуху членӗн мандатне тыттарнӑ... Мана панӑ фрак кӗсйинчеччӗ те... Сире парас тесе кӗсъене чикнӗччӗ... Каҫарӑр, Гаврил Иванович, вӑхӑтра параймарӑм. *(Мандатне парать.)*
Сатур *(Илеме алӑ парса)*. Сыв пул, Илем... Лена! *(Алӑ парать.)*
Лена. Ӑҫта каятӑн? Урамра шуррисем.
Сатур. Кунта та шуррисем. *(Каять.)*
Лена. Мӗн тӑвас? Сатура вӗлерме пултараҫҫӗ. *(Балкон ҫине тухать.)*
Кавӗрле. Ан хурланӑр, Сатур пӗтнӗ ҫын.
Илем *(балкон ҫинче)*. Сатур, сулахай еннелле ан кай. Шуррисем килеҫҫӗ. Сылтӑмалла, сылтӑмалла!

Пӑшал сасси.

Лена. Ай, вӗлерчӗҫ Сатура.

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫавă кирлĕ. *(Пауза.)*
И л е м. Тивмерĕ. Тарчĕ. Хăтăлчĕ Сатур!
Л е н а. Шурри ăна курчĕ... Хăвалать. Сатур чарăнчĕ.

П ă ш а л сасси.

И л е м. Сатур печĕ... Лĕш ӳкрĕ.
Л е н а. Маттур, Сатур!

Х у ç а а р ă м ĕ кĕрет.

Х у ç а а р ă м ĕ. Редактор ăçта? Ăçта редактор?
Х ĕ л и п. Мĕн тума кирлĕ сире редактор?
Х у ç а а р ă м ĕ. Хваттертен халех тасалăр. Большевиксем хуларан кайнă.
Ҫ а в ĕ р л е. Анчах хваттертен каймастпăр. Кунта урăх редакци пулать.
Х у ç а а р ă м ĕ. Нимĕнле редакци те кирлĕ мар. Пурпĕр укçа тӳлемеççĕ. Халех тасалăр.
Ҫ а в ĕ р л е. Учредительнăй пуху ячĕпе калатăп...
Х у ç а а р ă м ĕ. Ҫам эсир?
Ҫ а в ĕ р л е *(мандат кăтартса)*. Вулăр.
Х у ç а а р ă м ĕ. Ҫаçарăр, тархасшăн, чăрмантарнăшăн... Апла кунта...
Ҫ а в ĕ р л е. Пирĕн редакци пулать.

Ч а р ш а в

## ИҪҪĔМĔШ АКТ

### Иккĕмĕш картина

Пысăк çурт балконĕ. Хулăн колоннăсем. Кĕленче алăкпа чӳречесем витĕр çутă ӳкет. Чаршав уçăличченех корнетпа кĕвĕ калани илтĕнет. Вĕçĕ. Алă çупни, «бис» кăшкăрни илтĕнет. Чаршав уçăлать.

И л е м п е Л е н а тухаççĕ. Унтан Х ĕ л и п тухать.

Х ĕ л и п. Маттур, Илем! Браво. Пит лайăх каларăн. Тавтапуç.
И л е м. Мĕншĕн тав тăватăн?
Х ĕ л и п. Ҫомуч* ячĕпе тав тăватăп. Эсĕ хăвăн ăсталăхупа, талантупа пирĕн çара пулăшрăн.
И л е м *(çилленсе)*. Эпĕ никама та пулăшман.

* Учредилецсен комитечĕ.

Хĕлип. Ҫонцерта мĕн сăлтавпа тунине пĕлместĕн-им?

Илем. Пĕлессĕм те килмест.

Оркестр вальс калама пуҫлать.

Хĕлип. Бал пуҫланчĕ. Ҫаяр ташлама, Елена Васильевна.

Лена. Ывăнтăм.

Хĕлип каять.

Илем. Ырă каҫ пултăр, Елена Васильевна! *(Кайма тăрать.)*

Лена. Илем!

Илем чарăнать.

Ҫала-ха... Сатур хĕрлисемпе кайнă-ши?

Илем. Пĕлместĕп.

Лена. Шуррисен аллине лексен, персе вĕлерĕҫ.

Илем. Ан хăра, Сатур хулара ҫук. Ҫук, Елена Васильевна... Сывă пулăр. *(Илем хăвăрт каять.)*

Илем хыҫҫăн Лена утать. Хĕлиппе Асамат кĕреҫҫĕ.

Асамат. Хĕлип Степанчă, мĕншĕн мана программăран кăларса пăрахрăр?

Хĕлип. Ҫама кирлĕ сан сăвву?

Асамат. Епле кама кирлĕ?

Хĕлип. Хăвăн сăввусене вулама фронтăн леш енне кай. *(Каять.)*

Асамат. Ак сана Ҫомуч... Хаҫатра пичетлемеҫҫĕ: пире кунашкал поэзи кирлĕ мар, теҫҫĕ. Шуйттан ăнланать-и вĕсене. Ҫаларăм Илеме, хĕрлисемпе каяр тесе, итлемерĕ. «Эпир санпа нейтральнăй ҫынсем...» Ак сана нейтральнăй.

Ҫавĕрлепе Шакмак кĕреҫҫĕ.

Ҫавĕрле. Ну, ĕҫсем мĕнле, Асамат? Мĕншĕн сăвă ҫырма пăрахрăн?

Асамат. Ҫыратăп та, пичетлемеҫҫĕ. Ҫалăр-ха, тархасшăн, Гаврил Иванович... Искусство нейтральнăй пулмалла-и?

Ҫавĕрле. Чепуха!

Асамат. Ҫаларăм Илеме, ку ыйтăва тĕплĕрех сӳтсе явмалла тесе, итлемерĕ. *(Каять.)*

Кавĕрле. Дмитрий Иванович, эсир хăвăр уесри восстани çинчен калама пуçланăччĕ... Мĕнле, ĕç тухрĕ-и?

Шакмак. Тухмарĕ. Пуянсем пикенсех тытăнчĕç те, чухăннисем пит хирĕç тăчĕç. Вăтам пурăнакансене вырăнтан та хускатаймарăмăр.

Кавĕрле. Ун вырăнне ку енчен хĕрлисене лайăхрах хĕсмелле. Фронт урлă каçса килни пит аван. Эсир кунти çĕршыва лайăх пĕлетĕр. Штабра сирĕн пек çынсем кирлĕ.

Шакмак. Мĕнле, ĕç ăнсах кайсан, Мускава та илетпĕр пулĕ, Гаврил Иванович? Унтан Питĕре...

Кавĕрле. Пĕр-ик уйăхран Мускава çитес тетпĕр те, анчах мобилизаци ăнăçлă пымасть. Халăх çара каясшăн мар... Агитаци ĕçне лайăхлатмалла... Большевиксен авторитечĕ пĕтмест. Çавна пĕтерме мел тупмалла.

Шакмак. Халăхăн сехрине хăпартмалла. Мобилизацирен пăрăнакансене урам варрине кашта туса çакмалла.

Кавĕрле. Çакса та, персе те вĕлеретпĕр те, хăрамаççĕ.

Музыка.

Шакмак. Ну, эпĕ кайрăм.

Кавĕрле. Ташласа пăхас тетĕр-им?

Шакмак. Да, авалхине аса илес тетĕп. Офицерсен собранийĕсенчи балсене астăватăр-и? *(Каять.)*

Кавĕрле. Авалхи? Авалхи те мар, Совет та мар...

Лена кĕрет, ун хыççăн — Сармантей.

Сармантей. Елена Васильевна, мĕншĕн манран таратăр? Сирĕнпе вальс ташласшăнччĕ.

Лена. Ывăнтăм, Митрофан Клементьич. Мĕн те пулин ĕçмелли илсе килĕрччĕ, тархасшăн.

Сармантей. Ситро-и?

Кавĕрле. Актрисăна ситро ĕçтереççĕ-и? Шампански илсе килĕр.

Сармантей. Пĕр самантра шампански кунта пулĕ. *(Каять.)*

Кавĕрле. Мĕнле, Елена Васильевна? Бал кăмăла каять-и? Мĕншĕн чĕнместĕр? Е Сатура халиччен манаймастăр-и? Епле çав çынна юратма пултарнă-ха эсир?

Лена. Чĕрене чарма çук-çке, Гаврил Иванович.

2. Сатурпа Илем.

26062-448

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

Ҫ а в ĕ р л е. Мĕншĕн пирĕн хаҫатра ĕҫлеместĕр? Сатур ҫапла хушса хăварчĕ-и?

Л е н а. Тӳррипе каласан, эп сире ĕненместĕп. Темĕнле авантюра майлă сирĕн власть. Урамра ăҫта килчĕ унта ҫын вилли... Хăрушă!

Ҫ а в ĕ р л е. Большевиксен виллисем вĕсем. Хăрамалла мар, савăнмалла.

Л е н а. Халăха урнă тискер кайăк пек туллатăр. Эсир государство деятелĕсем пек мар, укҫине выляса янă ҫынсем майлă хăтланатăр.

Ҫ а в ĕ р л е. Пăрахар ун ҫинчен калаҫма, Елена Васильевна. Эсир политикăна ăнланаймастăр.

Л е н а. Ман шутпа, эсир хăвăр ĕҫе хăвăр та ĕненместĕр. Ҫапла-и?

С а р м а н т е й поднос ҫинче икĕ пысăк черкке шампански илсе кĕрет.

С а р м а н т е й. Тархасшăн, Елена Васильевна.

Ҫ а в ĕ р л е *(поднос ҫине укҫа хурса, черккесене илет. Пĕрне Ленăна парать)*. Тав сире, чипер актриса.

С а р м а н т е й. Пардон... Ку мĕне пĕлтерет?

Ҫ а в ĕ р л е. Ан ҫилленĕр, Митрофан Ҫлементьич.

С а р м а н т е й. Тархасшăн, тархасшăн... *(Каять.)*

Ш а к м а к кĕрет.

Ш а к м а к. Гаврил Иванович, телефонпа калаҫма кайăр, чĕнеҫҫĕ.

Ҫ а в ĕ р л е. Халех. Паллашăр, господа.

Ш а к м а к. Лена! *(Лена патне пырса алă тытать.)* Сывă-и?

Ҫ а в ĕ р л е. О, эсир пĕр-пĕрне паллатăр пулас?

Ш а к м а к. Эпир Елена Васильевнăпа пĕр гимназире вĕреннĕ.

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫăшт суятăр пулĕ, Дмитрий Иваныч. Авал арҫынсемпе хĕрсем пĕрле вĕренместчĕҫ.

Ш а к м а к. Ҫаҫарăр, эпĕ пĕр хулара вĕреннĕ тесшĕнччĕ.

Ҫ а в ĕ р л е. Ҫалаҫăр. Тен, гимназире пĕр парта хушшинче ларнă пулĕ. Эпĕ кайрăм. Елена Васильевна, бал хыҫҫăн сире хамăн машинăпа ăсатса ярăп. *(Шакмака.)* Тепре куриччен, хĕрсен гимназийĕнче вĕреннĕскер. *(Каять.)*

Ш а к м а к. Ку мĕне пĕлтерет? Ҫĕвĕҫмест-и вăл?

Л е н а. Пĕлместĕп. Нумайранпа вăл ман хыççăн сĕтĕрĕнсе çӳрет. Театрта вылянă чух кулисăран тухма пĕлместчĕ. Йăлăхтарчĕ.

Ш а к м а к. Театр тенĕрен... Сатур та сирĕнпе вылямастчĕ-и?

Л е н а. Эсир ăна паллатăр-им?

Ш а к м а к. Вăл хĕрлисен комиссарĕ пулнă темеççĕ-и?

Л е н а. Пĕлместĕп.

Ш а к м а к. Ан суйăр. Савни кам пулнине те пĕлместĕр-и?

Л е н а. Сатур манăн савни мар.

Ш а к м а к. Эсир ун хваттерĕнче пулнă-и?

Л е н а. Ку мĕн? Допрос-и?

Ш а к м а к. Допрос пултăр. Малалла мĕн?

Л е н а. Апла пулсан, нимĕн те каламастăп.

Ш а к м а к. Кунта каламасан, урăх тĕлте калăр. Унта урăхларах калаçăпăр. *(Пауза.)* Калăр, Сатур сирĕн савни-и?

Л е н а *(çилленсе)*. Ну, савни... Юрататăп, унсăрăн пурăнаймастăп... Тата мĕн?

Ш а к м а к. Ан пăлханăр, Елена Васильевна. Ку пире кирлĕ мар...

Л е н а. Тата мĕн кирлĕ?

Ш а к м а к. Унăн хваттерĕнче пулнă-и?

Л е н а. Ну, пулнă.

Ш а к м а к. Леш, мăнастир урамĕнче-и?

Л е н а. Çавăнта.

Ш а к м а к. Унăн урăх хваттер пулман-и?

Л е н а. Пулман.

Ш а к м а к. Акă мĕн, Елена Васильевна. Эсир, бал пĕтсен, Қавĕрлепе каймастăр. Сире эпĕ ăсататăп.

Л е н а. Унпа та, сирĕнпе те каймастăп. Пĕччен каятăп.

Ш а к м а к. Пĕччен мар, манпа. Мансăр ку çуртран ан тухăр. Тарса хăтăлаймăр, пурпĕр тытатпăр. Ăнлантăр-и?

Вальс кĕвви илтĕнет. С а р м а н т е й кĕрет.

С а р м а н т е й. Елена Васильевна, каяр вальс ташлама.

Ш а к м а к. Қаçарăр, вăл манпа ташлама пулчĕ. Çапла-и?

Лена. Қаçарăр, Митрофан Қлементьевич, ташлас килмест... Пуç ыратать... *(Каять.)*

Лена хыççăн Шакмак утать.

Сармантей. Мĕн чухлĕ укçа пĕтертĕм çак Лена пирки. Қашни спектакльте чечек, кашни курмассерен, кофейнăя кĕрсе, пончикпа шоколад ĕçтереттĕм. Лавçă тытса мĕн чухлĕ укçа пĕтертĕм. Çапах мана юратмасть. Çук, маншăн пурнăç пĕтрĕ. Ыранах шуррисен çарне хам ирĕкпе çырăнатăп та фронта...

Офицер кĕрет.

Офицер. Пит аван. Хушаматăр мĕнле?

Сармантей. Сармантей.

Офицер. Ятăр?

Сармантей. Митрофан Қлементьевич.

Офицер. Акă мĕн, господин Сармантей. Сирĕн ĕмĕт çитрĕ. Ыран ирхине 5 сехетре 2-мĕш полкăн штабне пырăр.

Сармантей. Мĕн тума?

Офицер. Çар ĕçне вĕренме.

Сармантей. Ман ят тухман-ха. Эпĕ çамрăк.

Офицер. Ят тухни кирлĕ мар. Эсир доброволец, *(Каять.)*

Қлавдюша кĕрет.

Қлавдюша. Митроша! Эсĕ те çара çырăнтăн-и?

Сармантей. Çырăнтăм. Хам ирĕкпе çырăнтăм. Тархасласах ыйтрăм. Çырсамăр, терĕм...

Қлавдюша. Ну?! Хальччен сана хăравçă тесе... Атя вальс ташлама, доброволец!

Сармантей. Чикеленсех кайăр хăвăр вальссемпе. Доброволец!

Қлавдюша. Митроша...

Сармантей. Митрахван тесе чĕн, эпĕ халĕ салтак.

Çутă сÿнет, оркестр чăрăнать.

Қлавдюша. Ай, мĕншĕн тĕттĕмленчĕ?

Сармантей. Хĕрлисем хулана каялла илмеççĕ-и? Хăвăртрах илччĕрччĕç. Салтака каймăттăм.

Қавĕрлесасси. Лăпланăр, тăвансем!

Шакмак *(телефон патне васкаса пырать)*. 2—43. Тавтапуç. Электростанци-и? Дворянсен собранинчен ка-

лаҫаççӗ. Пирӗн кунта çутӑ сӳнчӗ. Хӑвӑртрах монтер ярӑр. Мӗн? Пӗтӗм хулипе çутӑ çук? Мӗншӗн? Гаврил Иванович! *(Кавӗрле пырать, телефон трубкине алӑпа хупласа.)* Кӗçӗр çутӑ пулмасть.

Кавӗрле. Машина пӑсӑлнӑ-и?

Шакмак. Рабочисем ӗçлеме пӑрахнӑ.

Кавӗрле. Трубкӑна парӑр-ха.

Шакмак трубкине парать.

Аллӑ... Комуч уполномоченнӑйӗ сӑмахлать... Халех çутӑ панӑ пултӑр! Мӗн, мӗн? *(Трубкине аллипе хупласа.)* Арестленисем станцие таврӑнмасӑр çутӑ памастпӑр, теççӗ. Мӗн тӑвас, Дмитрий Иваныч? Кӑларса ярас пулать пулӗ? Унсӑрӑн вӗсем машинӑна пӑрахӑça кӑларӗç тата...

Шакмак. Акӑ вӑл, Иванов ӗçӗ! Малашне вӗсем тем тума та пултараççӗ.

Кавӗрле. Тытса çакас пулать Иванова!

Шакмак. Шыратпӑр та, тупаймастпӑр-çке...

Сцена тӗттӗмленет.
Заводри пӳлӗм. Телефон, сӗтел, пукансем. Сцена çинче Иванов, Иван Васильевич, Закиров, Громов тата Васильев. Сӗтел çинче çурта çунать.

Иванов. Çапла, юлташсем... Шуррисем пысӑк ӗç пуçласшӑн. Хуласенче, ялсенче мобилизаци пырать. Хулари салтаксене эшелонӗ-эшелонӗпе фронта ӑсатаççӗ.

Громов. Иртнӗ каç çичӗ батальон Атӑл урлӑ каçарса ячӗç. Каппель отрячӗ те каçса кайрӗ.

Васильев. Наступлени пуçлама хатӗрленеççӗ, паллах.

Иванов. Сан ӗçсем мӗнле, Громов юлташ?

Громов. Виçӗ буксира стройран кӑлартӑмӑр. Юсама затона илсе кайрӗç.

Иванов. Атӑл урлӑ каçаракан баржӑна путарӑр.

Громов. Есть.

Иванов. Иван Васильевич, сирӗн заводри рабочисем асӑрханмасӑр ӗçлеççӗ. Паян каллех вунӑ çынна арестленӗ.

Иван Васильевич. Хам та ӑнланаймастӑп, Андрей Платонович.

Иванов. Провокатор пур... Сыхланарах ӗçлес пулать. Васильев юлташ, чӑвашла куçарнӑ воззвани çинче йӑнӑш нумай, теççӗ. Кам куçарать вӗсене?

Васильев. Сатур куçарать.

— Иванов. Ачаранпах хулара пураннӑскер, чӑвашла мана пуçланӑ, курӑнать.

Васильев. Тата тепĕр çын пур та...

Иванов. Кам?

Васильев. Редакцинче ĕçлет.

Иванов. Хушамачĕ?

Васильев. Илем.

Иванов. Музыкант-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Шанчӑклӑ çын-и?

Васильев. Шанчӑклӑ пек те... Арӑмĕ пуласси те ун коммунистка.

Иванов. Хутшӑнтарас пулать ӑна пирĕн ĕçе. Çапла, юлташсем, пысӑк ĕçсем çывхараççĕ. Кашни самантрах хатĕр пулмалла. Кашни рабочие пӑшал памалла.

Шӑнкӑрав. Иван Васильевич каять. Пауза. Кӑшт тӑрсан, Иван Васильевичпа Антонов кĕреççĕ. Антонов офицер тумĕпе.

Иванов. Ну? Ӳкерсе илтĕн-и?

Антонов *(пакет парса)*. Пурте хатĕр, Андрей Платонович.

Иванов *(план çине пӑхса)*. Иван Васильевич, план копине хӑвӑртрах хамӑрӑннисем патне çитерес пулать. Ку ĕçе кам тума пултарать?

Иван Васильевич. Сатур мĕнле пек?

Иванов. Килĕшетĕп. Ӑна маскировка тума çăмӑл. Этюдникпа кайма пултарать. Громов, эс Сатура паллатӑн-и?

Громов. Паллатӑп-çке.

Иванов. Атӑл урлӑ каçарса яр вара.

Громов. Есть.

Иванов. Маттур, Антонов юлташ! Маттур! Ну халĕ ташлама кай.

Антонов. Анчах бал саланмарĕ-ши? Çутӑ çук.

Иванов. Закиров юлташ, шӑнкӑртаттарса пӑх-ха. Мĕнле унта ĕçсем?

Закиров *(телефон трубкине илет)*. Алло... Центральнӑй! Вера Михайловна, эсир-и? Закиров сӑмахлать... Итлесе лараканни çук-и?.. Апла пулсан, электростанципе çыхӑнтар-ха... *(Тата шӑнкӑртаттарать.)* Завьялов иптеш-и? Закиров калаçать. Мĕнле унта сирĕн ĕçсем?.. Аха, кӑларса яратпӑр терĕç-и? Пит аван! Анчах арестленисем станцие таврӑнмасӑр çутӑ ан парӑр... Аха, таврӑнчĕç-и?.. Апла пулсан, çутӑ пар, ташлаччӑр.

Çутă сӳнет. Каллех иккĕмĕш картинăри декораци курăнса каять.

Кавĕрле сасси. Тăвансем, электростанцинче машина кăшт пăсăлнă. Тӳрлетсе пĕтерсен, çутă пулать. Музыка!

Оркестр сасси. Электричество çутăлать. Балкон çине Хĕлип кĕрет. Сармантейпе Клавдюша ыталашнине курать.

Хĕлип. Интереслĕ! Çынтан та вăтанмастăр пулас эсир?

Клавдюша (*Сармантейрен уйрăлса*). Митроша тĕттĕм çĕрте ыталаса илчĕ те...

Хĕлип. Сармантее чуптуса йăлăхрăр пулĕ, халĕ ташлама каяр.

Клавдюша. Сирĕнпе ташлама яланах хатĕр, Филипп Степанович.

Хĕлиппе Клавдюша ташлама каяççĕ.

Сармантей (*витлесе*). Хи-хи-хи... Тупăннă сарă хĕр... Аçу пуяннипе çеç каччăсем сан хыççăн çӳреççĕ. Ахаль пулсан, сан çине çаврăнса та пăхмĕччĕç... Касмăк!

Асамат кĕрет, пуçне уснă.

Мĕншĕн пуçна усрăн, Асамат? Е сана та савни улталарĕ-и?

Асамат. Тупнă проблема. Савни! Ман пуçра наука ыйтăвĕ. Искусство нейтральнăй-ши, нейтральнăй мар-ши?

Сармантей. Пăрах шухăшлама. Атя буфета, сăра ĕçĕпĕр. Ман пысăк хурлăх.

Асамат. Мĕнле хурлăх?

Сармантей. Савни улталарĕ — ку пĕрре... Салтака «добровольно» çырчĕç — иккĕ.

Асамат. Малтанхи хурлăху икĕ бутылкăпа та çырлахатчĕ пулĕ, иккĕмĕшĕ пирки вуниккĕрен кая ĕçме юрамасть. Тӳррипе каласан, кĕсъери укçана пĕтĕмпех ĕçсе пĕтермелле, мĕншĕн тесен фронта лексен, хĕрлисем сана пурпĕр вĕлереççĕ. Ăнлантăн-и?

Сармантей. Ăнлантăм.

Каяççĕ.

Чаршав

## Виççĕмĕш картина

Пĕчĕк таса пӳлĕм. Стена çинче кăранташпа ӳкернĕ Таня портречĕ тата ытти ӳкерчĕксем те нумай.

Сатур сĕтел хушшинче çырса ларать. Çӳлте рояль калани илтĕнет. Ташă кĕвви калаççĕ.

Алăка шаккаççĕ. Сатур уçать. Илем кĕрет, вăл фракпа. Хулпуççи çине çанăсăр хура плащ уртса янă. Сатур хăй вырăнне ларать.

Илем. Таня килте çук-им?

Сатур. Çук.

Илем. Ăçта кайнă?

Сатур. Пĕлместĕп.

Илем *(плащне хывса çакать)*. Лена сан çинчен ыйтрĕ... Пит пăшăрханать пулас.

Сатур. Эп хуларине каларăн пулĕ?

Илем. Каламарăм.

Сатур. Асту, ăнсăртран персе ан яр. *(Пауза.)* Концерт аван иртрĕ-и? Алă çупрĕç-и?

Илем. Çупрĕç. Тав турĕç... Комуч ячĕпе тав турĕç. Йĕксĕксем!

Пауза.

Сатур. Илем, мана пĕр ĕç туса памăн-ши?

Илем. Каллех ăçта та пулин каймалла-и?

Сатур. Эсĕ Васильев наборщика паллатăн-и?

Илем. Паллатăп-çке.

Сатур *(хутне кăтартса)*. Çак хута çавна леçсе памалла та...

Илем. Ку ĕçрен хăтар мана, Сатур.

Сатур. Хăратăн-им?

Илем. Те ăнланаймастăн, те ăнланасшăн мар эс. Эпĕ сирĕн ĕçе хутшăнасшăн мар.

Сатур. Мĕншĕн? Хирĕç-им?

Илем. Çук та...

Сатур. Тата мĕн?

Илем. Эпĕ артист, искусство çынни... Искусство çыннин пăлхавран катара тăмалла.

Сатур. Çук, Илем. Художник хăйĕн пултарулăхĕпе революцие пулăшмалла. Ку сахал. Кирлĕ пулсан, алла пăшал тытса, ытти революционерсемпе пĕрле баррикада çинче пулмалла.

Çӳлте «Коль славен» калаççĕ.

Илтетĕн-и, мĕн калаççĕ?

Илем. «Коль славен».

Сатур. Паян «Коль славен», ыран «Боже царя храни».

Илем. Аплах пулмĕ. Çапах та вĕсем социалистсем...

Сатур. Социализмлăхĕ вĕсен... Астăватăн-и, Керенский вăхăтĕнче кам сиксе тухрĕ? Корнилов. Ку «социалистсем» хыçĕнче те пĕр-пĕр патша генералĕ кĕтсе тăрать пулĕ-ха.

Илем. Паян концерт умĕн Каверле сăмах каларĕ. Эпир пĕтĕм халăх телейĕшĕн тăрăшрăмăр, коммунистсем халăха пайласа тăкрĕç, тет.

Сатур. Çакнашкал сăмахсемпе сирĕн пеккисене тĕрĕс çултан пăрса яма тăрăшаççĕ те ĕнтĕ вĕсем... *(Пауза.)* Илем, çакна пăхса тух-ха. Ман чăвашла яка тухмасть.

Илем *(сĕтел патне ларса)*. Кӳр, тӳрлетсе парам.

Алăка шаккаççĕ. Сатур уçать. Таня кĕрет. Аллинче чăматан.

Таня. Э, Илем те таврăннă иккен. Мĕншĕн пит ир килтĕн? Ташлама юлмарăн-им?

Илем. Ывăнтăм.

Таня. Апла пулсан, вырт, кан кăшт. Мĕн çыратăн?

Илем. Чĕнсе каланине тӳрлететĕп.

Таня. Пит аван. Сатур, куна кĕçĕрех пичетлеме леçсе памалла.

Илем. Таня, кала-ха, тархасшăн, эсĕ чăнах та партие çырăннă-и?

Таня. Кам каларĕ?

Илем. Никам та каламарĕ те... Çапла пек туйăнать.

Таня. Çырăнман-çке.

Сатур. Тĕлĕнетĕп санран, Татьяна. Пулас упăшкунтан пытаратăн.

Илем. Сатур чăн калать-и?

Таня *(кулса)*. Суять.

Илем. Ку мĕнле чăматан? *(Уçма пикенет.)*

Таня. Ан уç, Илем.

Илем *(уçса пĕр листине илсе)*. Каллех чĕнсе калани...

Алăка шакаççĕ.

Таня *(Илем аллинчи хута илсе, чăматана хурать)*.

Каларăм ан уç тесе. *(Чăматана кравать айне тĕртсе.)* Сатур, итле... Кам шаккать?

Сатур алăк патне пырать. Шаккаççĕ.

Сатур. Иван Васильевич. *(Алăка уçать.)*

Иван Васильевич кĕрет.

Иван Васильевич. Сывă çӳретĕр-и, ачасем. Эпĕ сирĕн пата пĕр самантлăха çеç. Анчах кама та пулин сыхлама тăратасчĕ. Йĕрлекенсем пулма пултараççĕ.

Илем. Эпĕ кайма пултаратăп.

Иван Васильевич. Сире палласах каймастăп та... Чим, эсир музыкант мар-и? Хушаматăр мĕнлеччĕ-ха сирĕн?

Илем. Илем.

Иван Васильевич. Астăватăп, астăватăп. Хĕрлĕ армеецсене кăтартнă концертра чăваш кĕвви каларăр. Питĕ кăмăла кайрĕ. Нумайранпа чăваш кĕввине илтменччĕ. 5-мĕш çулхи революци хыççăн эпĕ Шупашкар уесĕнче ссылкăра пурăнтăм... Çавăнта илтнĕччĕ. Чăвашла калаçма та çавăнтах вĕрентĕм. Çапла... Эсир партире тăратăр-и çак?

Илем. Çук, тăмастăп-ха.

Иван Васильевич. Ну, юрĕ... Тухса сыхлăр эппин. Хапхаран кам та пулин кĕрсен, чӳречене шаккăр.

Илем. Юрать, Иван Васильевич.

Иван Васильевич. Эсир ман ята та пĕлетĕр иккен.

Илем. Сирĕн ята пĕлмен çын хулара çук та пулĕ.

Таня. Хам кайса сыхлам-и, Иван Васильевич?

Иван Васильевич. Юрамасть, Татьяна Алексеевна. Арçын ĕçĕ вăл. Ну, Илем... Хушамату сирĕн пит илемлĕ.

Илем. Илем ман псевдоним.

Иван Васильевич. Аха... Артистсем хушамачĕсене улăштарма юратаççĕ вара. Ну, кайăр эппин.

Илем каять. Иван Васильевич ăна ăсатса ярать, алăка питĕрет.

Таня. Мĕншĕн Илеме ятăр? Хам кайма пултараттăм.

Иван Васильевич. Çапла кирлĕ, Татьяна Алек-

севна. Илем партире тӑмасть-ха, ҫавӑнпа... Ан хӑра, унта хураллакансем пур. *(Чӳрече патне пырса.)* Ку чӳречерен тухма пулать-и?

Т а н я. Тухма пулать, Иван Васильевич.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ларӑр, ачасем. *(Лараҫҫӗ.)* Татьяна Алексеевна, чӗнсе каланисене пичетленӗ-и?

Т а н я. Пичетленӗ. Халӗ ҫеҫ типографинчен илсе килтӗм.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Аван. Тата ялсенче салатмаллисене те ҫырма хушнӑччӗ. Ҫыртӑн-и, Сатур?

С а т у р. Ҫыртӑм. Акӑ вӑл. *(Кӑтартать.)*

И в а н В а с и л ь е в и ч. Хӑвӑртрах Васильева пар. Тиражне ӳстерме кала... Тата... тепӗр ӗҫ пур... Сатур, сана парти чаплӑ ӗҫ тума хушасшӑн... Анчах ку питӗ йывӑр ӗҫ. Тума пултараймасан, тӳрех кала, ан вӑтан.

С а т у р. Мӗнле ӗҫ?

И в а н В а с и л ь е в и ч *(пакет кӑларса)*. Ҫак пакета пирӗн штаба ҫитермелле.

С а т у р. Епле пирӗн штаба? Пирӗн штаб фронтӑн леш енче-ҫке.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ҫавӑнта ҫитермелле те ӗнтӗ.

С а т у р. Фронт урлӑ каҫмалла-и?

И в а н В а с и л ь е в и ч. Фронт урлӑ. Эсӗ кунти ҫӗршыва аван пӗлет, терӗҫ.

С а т у р. Пӗлетӗп.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Ҫапла терӗҫ ҫав. Ну, ытлашши калаҫса ларма вӑхӑт ҫук. Парти хушнине сана каларӑм. Акӑ хуларан тухма пропуск... Ҫул ҫине укҫа. Атӑл урлӑ Громов каҫарса ярӗ. Шуррисен аллине лексен-тусан, ку пакета пӗтермелле. Ӑнлантӑн-и? Пӗтермелле. Ну, аван ҫит, Сатур. *(Сатура чуптӑвать.)*

С а т у р. Ан шиклен, Иван Васильч. Пакета штаба ҫитеретӗпех.

И в а н В а с и л ь е в и ч *(кулса)*. Ак ҫакӑншӑн юрататӑп та сана, Сатур. Эс этюдниксемпе кай вара... Этюд ҫырма кайнӑ пек пултӑр... *(Таньӑна.)* Татьяна Алексеевна, эпӗ хамӑр заводри Кузнецов рабочи патӗнче пурӑнатӑп... Адресне пӗлетӗн-и?

Т а н я. Пӗлетӗп.

И в а н В а с и л ь е в и ч. Чӗнсе каланисене пичетлекене леҫсе пама ан ман. *(Каять.)*

Т а н я ӑсатса ярать. И л е м кӗрет.

И л е м. Сатур, эсӗ ӑҫта кайма пуҫтарӑннӑ?

С а т у р. Каймалли пур, тусăм. *(Таньăна алă парса.)* Вăл-ку пулсан, аннене çырупа пĕлтер... Ленăна салам кала. *(Илеме алă парать.)*

И л е м. Ăçта каятăн?

С а т у р. Хула тулашне, этюд çырма.

И л е м. Ан калаç. Кам çĕрле этюд çырать?

С а т у р *(ассăн сывласа)*. Ирхи хĕвел хĕлхемĕ завод трубисене хĕретнине, Атăлăн лăпкă шывне çутатнине çырас тетĕп, Илем тус. *(Кулса.)* Ку сăмахсене Асамат çапла çырнăччĕ:

Ирхи хĕвел хăпарать,
Атăл, Атăл çуталать.
Тарăн шыва хумхатса,
Шĕвĕр кимĕ кисренет...

Юлашки сăмахне тупаймарăм. Ну, чипер юлăр, юлташсем. Илем, алăка питĕр. *(Алăк патĕнче.)* Эпĕ таврăннă çĕре партие çырăн... Темскерле, килĕшӳсĕр капла: савни — коммунистка, эсĕ, Асамат калашле, «нейтралитет». Ну-ну, ан çиллен... Çакна ан ман, тусăм: консерватори Мускавра. Мускавпа пирĕн хула хушшинче — фронт. Сан вĕренме каймалли çулна пӳлсе тăрать. Çула тăшмансенчен тасатмалла. *(Каять.)*

И л е м *(алăка питĕрет)*. Таня, эсĕ мана саватăп теттĕн, ман арăм пулма сăмах патăн... Кала-ха, тархасшăн, ăçта кайрĕ Сатур?

Т а н я. Пĕлместĕп.

И л е м. Эпĕ сана ку ĕçпе çыхланман тесе... Пĕтĕм чун хавалăмпа юратрăм.

Т а н я. Халĕ юратми пултăн-им? Е партие çырăннăранпа улшăнтăм-и?

И л е м. Улшăнман та...

Т а н я. Çапах сивĕнтĕн-и?

И л е м. Сивĕнмен... Ĕлекхи пекех саватăп та. Темĕнле... Сатур калашле, килĕшӳллĕ мар пек. Эпĕ музыкант, артист... Эсĕ... Эпĕ коммунисткăсем урăхла тесе...

Т а н я. Кулăшла калаçатăн эсĕ хăш чух... Пурăна киле ху та партие çырăнăн ак. Пĕрле ĕçлĕпĕр, вĕренĕпĕр... Пĕрле çĕнĕ пурнăç тăвăпăр.

И л е м. Çук, Таня, эпĕ художник.

Т а н я. Сатур художник мар-и?

И л е м. Сатур... Сатур вăл...

Т а н я. Революцишĕн вилĕме хирĕç кайрĕ. Асра тыт ун сăмахĕсене. Шуррисем сан çулна çеç мар, пĕтĕм ха-

лăх çулне пӳлесшĕн. Лайăхрах шухăшла... Эпĕ самантлăха пĕр çĕре кайса килем-ха... Алăка питĕр.

Илем. Чим, Таня, хам кайăп. Чĕнсе каланисене пар.

Таня. Ҫама памаллине пĕлетĕн-и?

Илем. Пĕлетĕп. Ҫӳршĕри çуртра пурăнать...

Таня. Тĕрĕс... Виççĕмĕш хваттерте. *(Чĕнсе каланисене Илеме парать.)*

Алăка шаккаççĕ. Пауза.

Таня *(алăк патне пырса)*. Ҫам унта?

Лена сасси. Эпĕ... Лена.

Таня. Пĕчченех-и?

Лена. Пĕччен... Уç ĕнтĕ.

Таня. Халех... Тумланам-ха... Çывăрма выртнăччĕ те... *(Алăк патĕнчен кайса.)* Лена килнĕ.

Илем. Пĕчченех-и?

Таня. Пĕччен тет... *(Алăка кайса уçать.)*

Лена кĕрет, Таня алăка хупма тăрать. Шакмак кĕрет.

Таня. Эсир кам пулатăр?

Шакмак. Ҫаçарăр, тархасшăн... Елена Васильевна кăшт суйрĕ.

Лена. Ан çиллен, Таня...

Шакмак. Ырă каçпа ырă сунатăп, тăвансем!

Лена. Э, Илем те кунта. Паллашăр... Ҫу ман авалхи пĕлĕш, Шакмак.

Илем. Чăваш хушшинче паллă хушамат. Шакмак пуяна пурте пĕлеççĕ.

Лена. Эпир пĕр самантлăха çеç... Сатура курас тесе килтĕмĕр те...

Таня. Мĕнле Сатура?

Шакмак. Художник Сатура, сирĕн пĕлĕше.

Илем. Тупнă кама шырама. Сатур хулара та çук. Вăл хĕрлисемпе кайнă.

Шакмак. Ҫайнă-ши? *(Таньăна.)* Сирĕн хушаматăр мĕнле?

Таня. Алексеева.

Шакмак. Ҫу сирĕн пӳлĕм-и?

Таня. Манăн.

Шакмак. Сатур кунта. Эсир ăна пытарса пурăнатăр.

Таня. Сатур кунта çук.

Шакмак. Ҫу пӳлĕмре çуккине куратăп. Анчах ăçта кайнă вăл?

Т а н я. Эпӗ Сатура курман.

Ш а к м а к. Ан суйăр. Суйсан, йывăртарах пулӗ.

Л е н а. Ҫаяр, Митя. Ҫынсене ҫывăрма кансӗрлес мар.

Ш а к м а к. Ну? *(Пауза.)* Юлашки хут ыйтатăп: ăҫта Сатур?

И л е м. Ҫук ҫынна ăҫтан тупса парас сире? Тӗлӗнмелле.

Ш а к м а к. Гражданка Алексеева, эсир большевиксен партийӗнче тăратăр-и?

И л е м. Таня коммунистка мар.

Ш а к м а к. Сиртен ыйтмаҫҫӗ.

Л е н а. Ҫаяр, Митя... Тӗк пурăнакансене хăратса ҫӳретпӗр.

Ш а к м а к. Эсир губком секретарьне Иванова пӗлнӗ-и?

Т а н я. Пӗлмен.

Ш а к м а к шăхăрать, и к ӗ с а л т а к кӗреҫҫӗ.

Ш а к м а к. Ҫак хӗре штаба илсе кайăр. *(Таня ҫине кăтартать.)*

И л е м. Таньăна штаба? Мӗн тума?

Ш а к м а к. Большевика хăй пӳлӗмӗнче пытарса пурăннăшăн. Ăнлантăр-и?

Л е н а. Митя, ан ухмахлан...

Ш а к м а к. Гражданка Алексеева, пуҫтарăнăр.

Т а н я *(Илем патне пырса).* Сыв пул, Илем. Пӳлӗме питӗрсе кай. Япаласем нумаях мар та...

И л е м. Эпӗ сан пата пурăнма куҫас тенӗччӗ.

Т а н я. Куҫах, Илем. *(Илем патне ыткăнать.)*

Салтаксем Т а н ь ă н а илсе каяҫҫӗ.

Ш а к м а к. Ҫаяр, Елена Васильевна. *(Лена чӗнмест.)* Ну, ырă каҫ пултăр, тăвансем... *(Каять.)*

Вăрăм пауза.

И л е м. Сатура тыттарма ертсе килтӗн пулать? Ун вырăнне урăххине ҫаклатрăр... Эх, Лена.

Л е н а. Ҫук, Илем, эпӗ тыттарма килмен. Сатур хулара ҫуккине пӗлсех кунта ертсе килтӗм.

И л е м. Ан суй. Ҫала, савнине тытса панăшăн миҫе пин пама пулчӗҫ? Ивановшăн вунă пин параҫҫӗ, пӗлетӗп. Сатуршăн мӗн чухлӗ? Ҫăшт сахалтарах-и?

Л е н а. Эх, Илем. *(Пукан çине ларать, макăрать.)*

И л е м. Шуррисене сутăнтăн пулать?

Л е н а *(сиксе тăрса)*. Ху сутăнман-им?

И л е м. Эпĕ?

Л е н а. Эсĕ çав... Кам паян шуррисене пулăшма тунă концертра каларĕ? Мантăн-им?

И л е м. Мана ирĕксĕр выляттарчĕç.

Л е н а. Эпĕ те кунта хам ирĕкпе килмен.

И л е м. Каçар, Лена... *(Пауза.)* Сатур сана салам калама хушрĕ.

Л е н а. Хăçан?

И л е м. Вăл эсир килес умĕн çеç кунтан тухса кайрĕ.

Л е н а. Ăçта?

И л е м. Пĕлместĕп, каламарĕ.

Л е н а. Пĕлетĕн те калама хăратăн. Ан хăра, Илем. Никама та каламăп. Эпĕ те сан пекех телейсĕр. Иксĕмĕр те савнисене çухатрăмăр.

И л е м. Пĕтерчĕç... *(Пауза.)* Хам умра савнине тытса кайрĕç... Е Таньăна персе вĕлерсен? Епле çăлас? Кама тархаслас? Кама?

Л е н а. Чим, Кавĕрле патне кайса килем-ха... Вăл дворянсен собранинчех пулĕ.

И л е м. Ан кай. Вăл пирĕн хута кĕрес çук.

Л е н а. Чăваш чăваш хутне кĕрĕ, тен.

И л е м. Шакмак та чăваш... *(Пауза. Çӳлте рояль калани, ташлани илтĕнет.)* Илтетĕн-и? Çӳлте Сармантей купса пурăнать. Вăл та чăваш... Епле савăнаççĕ вĕсем... Ташлаççĕ... Эпир мĕншĕн савăнмастпăр? Мĕншĕн ташламастпăр? Ташла, Лена! *(Кăшкăрса.)* Ташла, тетĕп! Илтетĕн-и? Ташла! *(Пауза.)* Алла пăшал илсе, ытти революционерсемпе пĕрле баррикада çинче пулмалла! Анчах эпĕ халиччен пăшал тытса курман... *(Пауза. Сасартăк сиксе тăрса.)* Лена, пуçлар çапăçма.

Л е н а. Епле çапăçас? Эпир шуррисем енче-çке.

И л е м. Ку енчен хамăраннисене пулăшар. Алла пăшал тытса çапăçма пултараймасан, урăхла çапăçăпăр. *(Алăка питĕрет те чăматана туртса кăларать, уçать, чĕнсе каланисене илет.)* Куратăн-и çаксене?

Л е н а. Мĕнле хутсем кусем?

И л е м. Пульăсем. Шуррисене пемелли пульăсем. Хĕрлĕ армеецсем тăхлан пульăсемпе переççĕ, эпир çак чĕнсе каланисемпе перĕпĕр. Пеме пуçлар-и, Лена?

Л е н а. Мĕн тумалла?

И л е м. Кусене салтаксем хушшинче салатма пичет-

ленĕ. Халех салатмалла... Анчах кам урлă? Лена, ыран ирхине супăнь заводне кай та Кузнецов рабочин адресне пĕлсе кил.

Л е н а. Мĕн тума?

И л е м. Кайран пĕлĕн. *(Кĕсйинчен хут кăларать.)* Куна хăвăн хуçуна пар. Эсĕ Васильев патĕнчех пурăнатăн-и-ха?

Л е н а. Çавăнта.

И л е м. Васильев çывăрать пулĕ. Вăрат та хăйне пар. Арăмне ан пар.

Л е н а. Мĕн каламалла?

И л е м. Сатур тусĕ Илем пачĕ, те. Хăвăртрах кай. Сывă пул. *(Ленăна ăсатса, алăка питĕрет. Таня портречĕ патне пырать.)* Таня... Савнă тусăм. Пĕрле савăнса пурăнас вăхăтра тăшман пире уйăрчĕ. Епле хăтарас сана? Епле? *(Çÿлте музыка калани вăйланать.)* Эсир, эсир пĕтертĕр ман савнине! Савăнăр! Ташлăр, тискер кайăксем! Хĕрлисем хулара чух эсир хăвăр йăвăрсенче, чĕрĕп пек, хутланса ларттăр. Халĕ пуçăрсене çĕклерĕр. Анчах нумаях ташлаймăр. Сирĕн кĕвве пирĕн вăйлă марш çĕнтерĕ. *(Корнетне илсе калама пуçлать.)*

Кĕвĕ майĕпен вăйланса пырать. И л е м корнечĕ çумне тата темĕн чухлĕ трубасем калани хутшăнать. Рояль сасси илтĕнми пулать.

Ч а р ш а в

## ВИÇÇĔМĔШ АКТ

### Тăваттăмĕш картина

Пĕрремĕш актри декораци. Лена сĕтелĕ çук. Кун каçа суланнă. Х ĕ л и п телефон патĕнче. И л е м сĕтел хушшинче пуçне чиксе ларать.

Х ĕ л и п. Типографи-и? Асамата телефон патне чĕнĕр-ха. *(Илеме.)* Мĕнле, Илем, Таньăна тĕрмерен хăтартăн-и? Мĕншĕн чĕнместĕн? Кавĕрлепе калаçса пăх, тен, пулăшĕ.

И л е м. Кавĕрле кам, пĕлетĕн-и?

Х ĕ л и п. Пысăк çын, Комуч уполномоченнăйĕн помощникĕ.

И л е м. Çавă çав, Комуч уполномоченнăйĕн помощникĕ.

Хĕлип. Эсĕ те... Большевичкăпа çыхланнă. Урăххине тупаймарăн-им? Çитменнине, кĕпе-йĕм çăвакан.

Илем. Кĕпе-йĕм çăвакан çын мар-и?

Хĕлип *(телефонпа)*. Алло! Кам? Аха, эсĕ-и? Калаха, тархасшăн, мĕншĕн халиччен те хаçат тухмасть? Ĕнер тухмалли хаçат халĕ те çук. Мĕн? Наборщиксем çук... Ăçта кайнă? Пурте харăс чирленĕ-и? Хунар юпи çине çакмалла вĕсене! Юрĕ, ыран кăларăпăр. *(Трубкине çакать.)* Çапла, Илем тус. Большевик арăмран хăтăлтăн пулать.

Илем. Таня ман арăм мар.

Хĕлип. Качча илетĕп теместĕнччĕ-и?

Илем. Илетĕп.

Хĕлип. Çук хĕре епле качча илĕн-ха?

Илем. Епле çук хĕре?

Хĕлип. Персе вĕлернĕ пулсан?

Илем *(сиксе тăрса)*. Мĕн? Персе вĕлернĕ? Хăçан?

Хĕлип. Ан кăшкăр. Эпĕ «вĕлернĕ» темерĕм, «вĕлернĕ пулсан» терĕм. Мĕншĕн тесен большевиксене пурне те персе вĕлерессĕ е хунар юпи çине çакассĕ.

Илем. Таня большевик мар.

Хĕлип. Большевиксемпе пĕр майлисене те çакассĕ.

Илем. Пĕтĕм халăха вĕлерсе пĕтерейместĕр.

Хĕлип. Мĕншĕн пĕтĕм халăха?

Илем. Большевиксем майлă, çавăнпа.

Хĕлип. Пурте вĕсем майлă мар.

Илем. Пуянсемпе ăнланайманнисем çеç хирĕç.

Праски кĕрет.

Праски. Илем, сана çыру. *(Парать те каять.)*

Илем *(çырăва уçса вулать)*. «Лашасене шуррисен çарне илсе кайрĕç... Пиччĕсем, шуррисен çарне каяс мар тесе, вăрманта пытанса пурăнатчĕç... анчах Хĕлип ашшĕ вĕсене тытса пачĕ... Ял варрине кашта турĕç те халăх умĕнче çакса вĕлерчĕç»... *(Кăшкăрса.)* Йĕксĕк!

Хĕлип. Кама вăрçатăн?

Илем. Сан аçуна. Миçе çынна çакса вĕлерттернĕ-ши?

Хĕлип. Э, леш дезертирсене çакни çинчен калатăн-и? Пĕлетĕп. Çирĕм çынна. Ыранхи номерте ун çинчен хроника тухать.

Илем. Пĕр хĕрхенмесĕр калаçатăн... Эсĕ чул чĕреллĕ пулас.

Хĕлип. Мĕншĕн хĕрхенмелле вĕсене? Çапла кирлĕ.

Илем *(вулать)*. «Туртса илнĕ çĕрĕсене Хĕлип ашшĕне каялла партарчĕç». Савăн, Хĕлип!.. Сирĕн çĕре каялла панă...

Хĕлип. Пит аван.

Сармантей йывăç пăшал сĕтĕрсе кĕрет.

Хĕлип. Э, Сармантей çитрĕ. «Сармантейĕн сар чăххи сар çăмарта тунă, тет. Сармантей те йĕрет, тет, сар чăххи те какалать, тет...» Ну, ĕçсем мĕнле, Митрахван?

Сармантей. Сармантейĕнни пекех... Йĕресси çеç юлчĕ. *(Илеме алă парса.)* Сывă-и, артист? *(Хĕлипе алă парса.)* Чипер çӳретĕн-и, Хĕлип?

Хĕлип. Мĕн эс пит шурса кайнă?

Сармантей. Пилĕк сехетрен пуçласа çак вăхăта çитиччен уттарса çӳретрĕç. Канма памасть, шăпăрлан унтерĕ.

Хĕлип. Эсĕ те шуррисене вăрçа пуçламан-и?

Сармантей. Вуникĕ сехет, аптранă йытă пек, чĕлхене кăларса çӳре-ха, эсĕ те урăхла юрлăн. Парад тăваççĕ тата, мурсем. Çук, хĕрлисемех аванччĕ: вĕсем пирĕн пеккисене салтака илместчĕç.

Хĕлип. Тăм пуç! Ху купса ывăлĕ, хĕрлисене мухтатăн. Сан хĕрлисене хирĕç çапăçмалла.

Сармантей. Э, пирĕн пеккисемпе хĕрлисене çапăçса çĕнтереймĕн. Виçĕ кун йывăç пăшал йăттарса çӳретрĕç те, ыран фронта ямалла, теççĕ.

Хĕлип. Хăвăн пурлăхна та сыхласшăн мар-и?

Сармантей. Авал пирĕн пурлăха ыттисем сыхланă.

Хĕлип. Халĕ «ыттисем» пит сыхласшăнах мар çав. Мобилизациленĕ салтаксем фронтран тарни çинчен илтнĕ-и?

Сармантей. Эпĕ те таратăп.

Хĕлип. Доброволеца кунашкал калаçни килĕшмест.

Сармантей. Доброволец. Ĕнсерен парсах çырчĕç те, доброволец. *(Шыв ĕçет.)* Хĕлип Степанчă, Елена Васильевнăна курман-и?

Хĕлип. Роман сирĕн мĕнле пырать? Вĕçне çитмен-и? Пичете пама вăхăт мар-и?

Сармантей. Анăçлă пулмарĕ ман роман. Укçа тăкни çеç пулчĕ. Эсĕ те ун çумне çыпçăнса пăхрăн пулас? Мĕнле? Сана та сирпĕтрĕ-и? *(Илем патне пырса.)* Илем, эсĕ артист ăрăвĕ... Елена Васильевнăна курман-и?

Илем. Ан çыпçăн

С а р м а н т е й. Ма шăртланатăн?

Х ĕ л и п. Ун савнине тĕрмене хупнă.

С а р м а н т е й. Тĕрмене хупни туртса илни мар. Халĕ çур хула тĕрмере ларать. Ан хурлан. Хĕрлисем хулана каялла илсен, кăларĕç ак.

Х ĕ л и п. Чим, чим, эсĕ хĕрлисем килессе кĕтетĕн пулас?

С а р м а н т е й. Килеççĕ пулĕ. Хулара çапла калаçаççĕ. Хĕлип Степанчă, эсĕ Қавĕрлепе пĕлĕш. Фронта яриччен штаба хĕсĕнсе юласчĕ. Протекци ту-ха.

Автомобиль сасси.

Х ĕ л и п. Акă вăл хăй те сăмах çинех çитрĕ.

С а р м а н т е й. Қам, Лена-и?

Х ĕ л и п. Çук, Қавĕрле.

Қ а в ĕ р л е п е Ш а к м а к хыпăнса кĕреççĕ.

Қ а в ĕ р л е. Филипп Степанович, экстреннăй выпуск кăлармалла.

Х ĕ л и п. Мĕнле хулана илнĕ? Шупашкара мар-и?

Қ а в ĕ р л е. Хуларан пысăкраххине лектернĕ. Ак вула. *(Хут парать.)*

Х ĕ л и п *(вулать, унтан ыйтать)*. Вилнĕ-и?

Қ а в ĕ р л е. Вилнĕ.

Х ĕ л и п *(телефонпа)*. Центральнăй. 22—45... Типографи-и? Асамата чĕнĕр. Хăвăртрах... Васкавлă ĕç. *(Қавĕрлене.)* Ленин вилнĕ пулсан...

И л е м *(сиксе тăрса, Хĕлипе пӳлсе)*. Қам вилнĕ тетĕн?

Қ а в ĕ р л е. Ленин вилнĕ, Илем, Ленин!

И л е м. Суя пулĕ...

Қ а в ĕ р л е. Пăшалпа персе вĕлернĕ.

И л е м. Қам пенĕ?

Қ а в ĕ р л е. Пирĕн парти членĕ, Қаплан.

И л е м кăшт çеç кайса ӳкмест. Аллипе сĕтелтен тĕренсе тăрать.

Қ а в ĕ р л е. Сана мĕн пулчĕ, Илем? Шуралса кайрăн...

И л е м. Нимĕн те пулман... «Савăнăçлă» хыпар илтнипе пулĕ...

Т е л е ф о н шăнкăравĕ. И л е м хăвăрт тухса каять.

Х ĕ л и п *(телефонпа)*. Асамат-и? Халех сана материал парса яратăп. Васкавлă хыпар кăлармалла. Ара,

пĕр енне çеç çапмалла... Наборщиксем çук? Леш... хушамачĕ мĕнле-ха çавăн?.. Меньшевик... Вара, Богоявленский... Çавăнпа калаçса пăх... Тексчĕ нумай мар... Вăл хаваслансах ĕçлĕ. Хыпарĕ çавнашкал... Халех Праские яратăп. Праски!

Праски кĕрет.

Типографие чуп... Асамата çакна пар... Хăвăртрах çавăнкала!

Праски каять.

Шакмак. Çапла, коммунистсен генийĕ стройран тухрĕ.

Кавĕрле. Ку хыпар пирĕн енчисене чылаях хавхалантарĕ.

Шакмак. Анчах фронт леш енчисем тата çирĕпрех çапăçма пуçлĕç.

Хĕлип. Капла Совет влаçĕ хăех арканать пулĕ ĕнтĕ.

Шакмак. Кĕтсех тăр арканасса... Ленинăн парти пур, çакна ан ман! Унашкал çирĕп парти хальччен тĕнчере те пулман.

Кавĕрле. Филипп Степанович, паян ĕлкĕрейместпĕр пулĕ... Ыран чăвашсене пухас, çак хыпарпа çыхăнтарса доклад тăвас. Докладне хам тăвăп.

Хĕлип. Юрĕ, эпĕ хаçатра пĕлтерӳ кăларăп.

Кавĕрле. Ну, каяр, Дмитрий Иванович. *(Тăраççĕ.)*

Сармантей *(Кавĕрле патне пырса)*. Гаврил Иванович... Ман сирĕнпе калаçмалли пурччĕ.

Кавĕрле. Мĕн çинчен?

Сармантей. Мана салтака илчĕç те... Ăçта та пулин штаба вырнаçма пулмасть-и?

Кавĕрле. Фронта каяс килмест-им? Ай, ай, намăс! Илтмерĕн-им, мĕнле хыпарсем? Хавасланса çапăçмалла хĕрлисемпе.

Шакмак. Сирĕн хушаматăр мĕнле?

Сарматей. Сармантей.

Шакмак. Акă мĕн, господин Сармантей. Казармăна кайăр та отделĕннăйне хăвăра пилĕк талăклăха арестлеме ыйтăр.

Сармантей. Мĕншĕн?

Шакмак. Винтовкăпа учрежденисем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳренĕшĕн.

Сармантей *(пăшалне кăтартса)*. Ку бутафори.

Шакмак. Пурпĕр.

Сармантей. Тупăннă власть.

Шакмак. Хуп ҫăварна!.. Кругом... арш! *(Сармантей каять.)* Ним йĕрки те ҫук. Совет влаҫне пĕтересшĕн хăйсем, фронта каймалла чух, чăхăмҫă кĕсресем пек, сăмсисене каялла пăраҫҫĕ.

Хуҫа арăмĕ кĕрет.

Хуҫа арăмĕ. Тăвансем, пирĕн ҫара пулăшсамăрччĕ, тархасшăн.

Шакмак. Хăвăр мĕн чухлĕ патăр?

Хуҫа арăмĕ. Эпĕ пухса ҫӳретĕп... Уншăн, укҫа илместĕп.

Шакмак. Пухса ҫӳренĕшĕн тӳлемелле мар-и тата? Сире фронта ярасчĕ. Пулемет шатăртаттарма пуҫласан, вĕренĕттĕр калаҫма.

Хуҫа арăмĕ. Эпĕ шуррисене пулăшатăп. Ак, ку хваттере те йӳн хакпа патăм.

Хĕлип. Совет чухне сире нимĕн те тӳлемен.

Хуҫа арăмĕ. Вĕсем турра маннă ҫынсем... Ҫурта туртса илчĕҫ. Пирĕн ҫара пулăшсамăрччĕ, тархасшăн.

Никам та укҫа памасть, хуҫа арăмĕ тухса каять.

Шакмак. Куратăр-и? Малтан пулăшкаларĕҫ, хĕрлисем пире хĕсĕрлеме пуҫласан, урăхла юрла пуҫларĕҫ. Ҫук, ҫакăн пеккисем валли урăхла власть кирлĕ.

Кавĕрле. Мĕнли?

Шакмак. Влаҫа ҫар аллине памалла... Ҫар диктатор пулмалла.

Кавĕрле. Эсир Корнилов шухăшлă пулас, Дмитрий Иванович? Ку демократие хирĕҫ шухăш.

Шакмак. Хамăр хушăмăрта ку сăмаха асăнмасан та юрамалла. Йăлăхтарчĕ. Демократи, демократи тетĕр. Нимĕнле демократи те ҫук сирĕн. Ман шутпа, маскăна хывма вăхăт. Маска ĕҫе кансĕрле пуҫларĕ. Каяр.

Телефон шăнкăравĕ.

Хĕлип *(телефонпа)*. Редакци. Кунта. Гаврил Иванович, сире чĕнеҫҫĕ.

Кавĕрле *(телефон патне пырса)*. Итлетĕп... Эпĕ. Мĕн? Мĕн? Юрĕ, халех пыратăп. *(Трубкине ҫакать.)* Дмитрий Иванович, хăвăртрах артиллери казармине отряд ярăр.

Шакмак. Мĕн пулнă?

Кавĕрле .Салтаксем фронта каясшăн мар. Пăлхав пуҫланă. Офицерсене гауптвахтăна хупнă.

Шакмак. Аван ĕçлет Иванов!

Кавĕрле. Мĕншĕн тытса çакмастăр çавна?

Шакмак. Шыратпăр та, тупаймастпăр.

Кавĕрле. Лайăхрах йĕрлемелле. Хулара пĕр большевик та ан пултăр. Пурне те пĕтермелле. Кашни хунар юпи çинче большевик çакăнса тăтăр. Кашни хунар юпи çинче.

Шакмак. Хулара хунар юпи, ялта йăмра çитмĕ.

Кавĕрле. Филипп Степанович, эсир йывăç казармăна кайăр. Унта чăвашсем нумай. Митинг тăвăр. Ман машинăпа леçсе ярĕç. Каяр.

Кавĕрлепе Шакмак каяççĕ. Асамат кĕрет.

Асамат. Хĕлип Степанчă, васкавлă хыпар тухмасть.

Хĕлип. Мĕншĕн?

Асамат. Леш, Богоявленский наборлама пуçларĕ те, рабочисем пырса набора салатрĕç.

Кавĕрле сасси *(сцена хыçĕнче)*. Филипп Степанович!

Хĕлип. Ман вăхăт çук. Илемпе калаç. Васкавлă хыпар кăлармалла. Илтрĕн-и? Кавĕрле хушрĕ. *(Каять.)*

Асамат *(пукан çине ларать)*. Кăлармалла... Кавĕрлене хушма çăмăл. Унăн ман вырăнта пуласчĕ. Пĕр енчен кусем хĕсеççĕ, тепĕр енчен рабочисен сăмахне те итлес килет. Темĕн тумалла ĕнтĕ?

Илем кĕрет.

Асамат. Мĕн пуçна усрăн, Илем? Чирлерĕн-им?

Илем. Васкавлă хыпар кăлартăн-и?

Асамат. Тухмасть. Рабочисем наборласшăн мар. *(Илем патне пырса шăппăн.)* Ленин вилмен, тет.

Илем. Вилмен? Чăнах-и?

Асамат. Рабочисем çапла калаçĕç. Вĕсем пĕлеççĕ.

Илем *(савăнăçлăн)*. Эх, Асамат!

Асамат. Мĕн?

Илем *(балкон патнелле утса)*. Çанталăк пит аван. Пăх-ха, хĕвел епле хĕртет... Атăл... Атăл мĕнле илемлĕ!

Асамат *(аллине сулса)*. Шуррисем килнĕренпе Атăла та курман ĕнтĕ. Темĕнле, çут тĕнче тĕксĕмленнĕ пек туйăнать.

Илем. Кала-ха, Асамат: кам енче эс?

Асамат. Епле кам енче?

Илем. Хĕрлисем кăмăллăрах пек-и сана, шуррисем-и?

Асамат. Ӑнланаймарӑм-ха сана...

Илем. Каччӑ та икӗ хӗре пӗр пек юратмасть. Пӗри кӑмӑллӑрах пек туйӑнать.

Асамат. Эс аташа пуҫларӑн пулас, тусӑм.

Илем. Мӗншӗн?

Асамат. Мӗншӗн тесен, хӗрлисене чипер хӗрпе танлаштаратӑн пулсан, шуррисене курпун юмӑҫ карчӑкӗпе те танлаштарма юрамасть...

Илем. Тӗрӗс!.. Акӑ мӗн, Асамат. Эсӗ Таня хваттерӗ тӗлне пӗлетӗн-и?

Асамат. Пӗлетӗп.

Илем. Паян 11 сехетре ҫавӑнта пыр. Юрать-и?

Асамат. Юрать. Леш, васкавлӑ хыпар пирки мӗн тӑвас? Ҫӑва тӗпне-и?

Илем *(хаваслӑн)*. Ҫӑва тӗпне!

Праски чӑматан йӑтса кӗрет.

Асамат. Эсӗ ӑҫта пуҫтарӑннӑ, Праски?

Праски. Ҫӗнӗ хваттере куҫатӑп.

Асамат. Уявлама пырас-и?

Праски. Пыр. *(Илеме шӑппӑн.)* Сана пӗр ҫын курасшӑн.

Илем. Кам?

Праски. Хушаматне каламарӗ.

Илем. Асамата ӑсат.

Асамат. Праски, тӳррипе кала-ха, кам енче эс? Хӗрлисем енче-и е шуррисем енче?

Праски. Пӗлместӗп.

Асамат. Калӑпӑр, эсӗ икӗ качча юрататӑн. Ну, Илемпе мана тейӗпӗр... Хӑшӗ кӑмӑллӑрах пек?

Праски. Иксӗр те кӑмӑллӑ.

Асамат. Суятӑн. Илеме хытӑрах юрататӑн пулӗ?

Праски. Сухална хыр, вара сана ытларах юратӑп. Ну, каяр, редакцие хупмалла.

Асамат. Хӗрлисемпе шуррисем ҫинчен тӗплӗрех шухӑшласа пӑх, Праски. Ку ыйту — пурнӑҫ ыйтӑвӗ.

Праски. Ху мӗнле шухӑшлан?

Асамат. Кӑна вӑрттӑн ҫеҫ калама пултаратӑп. *(Шӑппӑн калать.)*

Праски. Эпӗ те сан пекех шухӑшлатӑп.

Асамат. Маттур хӗр эс, Праски. Кӳр-ха пӗрре чуптӑвам.

Праски. Малтан сухална хыр.

Асамат. Халех парикмахерскине каятăп. Илем, пĕр керенка кĕтмелле парччĕ.

Праски. Атя хăвăртрах... Укçине хам парăп. *(Асамата аллинчен тытса хыçалти алăк еннелле утать.)*

Асамат. Çулталăка яхăн сан хыççăн çӳретĕп, сухал кансĕрленине пĕлмен. Ну, 11 сехетре, Илем.

Каяççĕ. Иван Васильевич кĕрет.

Илем. Иван Васильевич.

Иван Васильевич. Қалаçма юратать пулас сирĕн юлташăр. Алăк хыçĕнче кĕтсе ывăнтăм. *(Алă парса.)* Сывă-и, Илем?

Илем. Сывă-ха, Иван Васильевич. Чим, параднăй алăка питĕрем-ха.

Иван Васильевич. Ăна хам питĕртĕм. Хыçалтине питĕрме хушăр.

Илем *(алăк патне пырса)*. Праски, алăка питĕр. Никама та ан кĕрт.

Иван Васильевич. Ку хĕртен пуçне кунта никам та çук-и?

Илем. Çук.

Иван Васильевич. Шанчăклăскер-и?

Илем. Хамăр çын.

Иван Васильевич *(балкон çине кайса пăхать)*. Ларар. *(Лараççĕ)*. Эсир тăшмансем мĕн туни çинчен илтмен пулĕ?

Илем. Илтнĕ, Иван Васильевич. Анчах Ленин вилмен, тет.

Иван Васильевич. Вилмен... Шуррисем юри вилнĕ тесе хыпар сараççĕ... Халăх хална пусарасшăн.

Илем. Пит савăннă.

Иван Васильевич. Савăнччăр. Анчах пирĕн Ленина вĕлерме тапăннă тăшмансемпе тата вăйлăрах кĕрешмелле. Эсир, Илем, кĕрешĕве хутшăннă теме пулать, анчах сирĕн Ленинпа çыхăну тытмалла. Унсăрăн йăнăшма пултаратăр.

Илем. Темскер, ăнланаймарăм-ха сире, Иван Васильевич...

Иван Васильевич. Ленин партийĕ пур. Çав партипе çыхăнмалла.

Илем. Эпĕ партире ĕçлеме пултараймастăп пулĕ.

Иван Васильевич. Парти вĕрентĕ. Партие сирĕн пек çынсем кирлĕ. *(Пауза.)* Ну, мĕнле, Илем тус?

Илем. Рекомендаци кам парĕ?

Иван Васильевич. Пĕрне Васильев пама пулчĕ, тепĕрне хам парăп.

Илем *(ала парса)*. Тавтапуç, Иван Васильевич... *(Пауза.)* Çапах кăшт шикленетĕп...

Иван Васильевич. Мĕншĕн?

Илем. Пултараймасран хăратăп.

Иван Васильевич. Татьяна Алексеевна, сахал вĕреннĕ пулсан та, епле ĕçлетчĕ... Малтан сире сочувствующине çырăпăр, кайран члена илĕпĕр...

Илем *(çăмăллăн сывласа)*. Сочувствующине пулсан, юрать. *(Телефон шăнкăртаттарать, трубкăна илсе.)* Алло. Эпĕ. Ҫам калаçать? Аха... Сывă-ха. Паянхи концерта-и? Кала директора... Илем пыраймасть, чирленĕ, те.

Иван Васильевич *(Илем патне пырса, трубкине аллипе хупласа)*. Çук, капла юрамасть... Килĕшĕр.

Илем *(телефонпа)*. Чим... Кала, Илем пырать, те. Анчах малтанхи отделенине кĕртĕр. Ман тепĕр çĕрте каламалла. *(Телефон трубкине çакать.)* Ăнланаймарăм, Иван Васильевич... Концерт офицерсен пухăвĕнче пулать.

Иван Васильевич. Чеерех пулмалла, Илем тус. Эпир шуррисен тылĕнче... Çакна манма юрамасть. Тата мĕн ыйтас тенĕччĕ çак? Паян икĕ концертра пулмаллаçке сирĕн...

Илем. Юри каларăм. Паян ман пĕр чăваш поэчĕпе курнăçмалла. Сăвă лайăх çырать, анчах манашкал аташкаласа пурăнчĕ. Халĕ ăнлана пуçларĕ пулас.

Иван Васильевич. Пит аван... Пире поэт та усăллă пулĕ. Ну, сывă пулăр, Илем... Ыран ирхине Кузнецов патне пырăр. Пароль — «Ка́ма». *(Ала парать.)*

Илем. Иван пичче... Ҫаçарăр пичче тенĕшĕн...

Иван Васильевич. Юрать. Мана нумайăшĕ çапла чĕнеççĕ. Ну, мĕн калас тетĕр, Илем тус?

Илем. Эпĕ чăваш салтакĕсем хушшинче сарма тесе чĕнсе каланисене пичетлеттертĕм те... Салатма те юрать... *(Чăматанран пĕр листине илсе парать.)*

Иван Васильевич. Чăвашла мана пуçларăмçке, Илем. *(Вулать.)* Ҫăна вырăслинчен куçартăр-и?

Илем. Леш, политотдел кăларнинчен куçартăм... Вĕçне шуррисен салтакĕсем валли хам хушса çыртăм. Акă вăл. *(Кăтартать.)*

Иван Васильевич *(вуласа)*. «Хамăрăннисемпе çапăçас вырăнне»... Чим, ку сăмаха ăнланаймарăм...

Илем. «Ķуçăр».

Иванов. Аха... «хĕрлисем енне куçăр». Пит аван. Хăвăртрах салатăр.

Шăнкăрав.

Илем *(балкон çинç тухса)*. Ķам унта?

Хĕлип сасси. Эпĕ. Уç.

Праски кĕрет.

Илем. Праски, Хĕлип таврăннă. Параднăйне уç.

Праски каять.

Сире, Иван Васильевич, хыçалти алăкпа ăсатса ярăп.

Ķаяççĕ.

Хĕлиппе Праски кĕреççĕ. Хĕлип пуçне шурă тутăрпа çыхнă. Ахлатать, чăматан çине ларать.

Праски. Сире мĕн пулнă, Хĕлип Степанчă?

Хĕлип. Салтаксем хĕнерĕç. Сăмах калама тытăнтăм çеç, таçтан хамăр тарçă пулнăскер сиксе тухрĕ те янахран яра пачĕ. Ун хыççăн теприсем... Аран тарса ÿкрĕм. Вĕлереççĕ пулĕ тенĕччĕ. *(Чăматана асăрхаса.)* Ķу мĕнле чăматан? Санăн-и, Праски?

Праски. Манăн мар.

Хĕлип *(çĕклесе пăхать, чăматан уçăлать, чĕнсе каланисем тухса ÿкеççĕ)*. Э, Асаматăн пулĕ. Пит васкавлă кăларăм. Маттур, Асамат!.. *(Пĕрне илсе вулать.)* «Пĕтĕм тĕнчери... Эсерсемпе буржуйсем... халăх тăшманĕсем...» Пĕтрĕмĕр. Ķу большевиксем чĕнсе калани! Ķам илсе килнĕ кусене?

Праски. Пĕлместĕп.

Хĕлип. Епле пĕлместĕн? Ķунта ют çын пулман пуль?

Праски. Ķурман... Эпĕ типографинчен халĕ çеç таврăнтăм...

Тупă сасси. Ķантăк кĕленче çĕмрĕлет.

Хĕлип *(сиксе тăрса)*. Праски, кусене кăмакана пăрах... Эпĕ кайрăм. *(Хăвăрт каять.)*

Тупă сасси. Илем кĕрет.

Илем. Чăматана кам уçрĕ?

Праски. Хĕлип.

Илем. Сисмерĕ-и?

Праски. Çук.

Илем. Хăвăртрах пуçтар та казармăна кайса пиччŷне пар.

Чаршав

## ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

### Пиллĕкмĕш картина

Штабри пӳлĕм. Çĕрле. Сĕтел, çемçе пукансем. Сĕтел çинче графин, икĕ телефон, пĕри — çар телефонĕ. Сармантей сĕтел хушшинче тĕлĕрсе ларать.

Шакмак кĕрет. Сармантей сиксе тăрать.

Шакмак. Çывăратăн-им?

Сармантей. Çук, господин поручик, шухăшларăм.

Шакмак. Мĕн çинчен?

Сармантей. Мускава хăçан çитесси çинчен, господин поручик.

Шакмак. «Мускава». Лондона çитсе ӳкесси çинчен шухăшламарăн-и тата? Илтнĕ-и, йывăç казармăри салтаксем мĕн тунă?

Сармантей. Фронта каясшăн мар, тет, пулас.

Шакмак. Фронта каясса кайнă та, анчах пурте хĕрлисен енне куçнă.

Сармантей. Охо!

Шакмак. «Охо» çав. Кам ĕçĕ вăл, пĕлетĕн-и?

Сармантей. Паллă камăн, большевиксен...

Шакмак. Тата сан юлташусен. Акă, куратăн-и? *(Чĕнсе каланине кăларса парать.)*

Сармантей *(вуласа)*. «Хамăр çарпа, хĕрлисемпе пĕрлешсе...» Чăвашла хаçат тухмасть, большевиксем чĕнсе каланине кăларнă... Аван ĕçлеççĕ!

Шакмак шăнкăрав шăнкăртаттарать. Офицер кĕрет.

Шакмак Мĕнле? Каларĕ-и?

Офицер. Нимĕн те каламасть.

Шакмак. Хистесе пăхрăр-и?

Офицер. Пăхрăм та, пулăшмасть.

Ш а к м а к. Леш, поэчӗ, мӗн те пулин каларӗ-и? Вӑл типографинче ӗҫленӗ... Чӗнсе каланисене хатӗрлекенсене пӗлет.

О ф и ц е р. Ҫаламасть. Салтаксем валли шуррисем ҫинчен сатирӑллӑ сӑвӑ ҫырса айӑпа кӗнине ҫеҫ йышӑнать. Алҫырӑвӗ пирӗн алӑра та...

Ш а к м а к. Ҫук, капла ӗҫ тухмасть, урӑх май шыраса тупас пулать.

О ф и ц е р. Поэчӗпе мӗн тумалла, господин поручик? Ҫашта ҫине ӑсатмалла-и?

Ш а к м а к. Унта ӑсатма ӗлкӗрӗпӗр. Малтан пуҫне ҫӗмӗрмелле, пӳрнисене кайран та татӑпӑр. Асаматне те тӗрмене.

О ф и ц е р. Лашапа ӑсатма тивет.

Ш а к м а к *(кулса)*. Утайми турӑр-им? Халӗ Алексеевӑна кунта ертсе килӗр. Ҫӑшт тӑрсан — савнине... Сисетӗр-и?

О ф и ц е р. Сисетӗп, господин поручик. *(Каять.)*

Ш а к м а к. Сармантей, сана пысӑк ӗҫ тума хушас тетӗп. Алексеевӑпа Илем Иванов ӑҫта пытанса пурӑннине пӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсене ирӗке яратпӑр. Туслаш вӗсемпе... Калаҫнӑ чух пире ятлакала. Формӑна пӑрах. Малашне кунта ӗҫлеместӗн. Эсӗ дезертир, ӑнлантӑн-и?

С а р м а н т е й. Ӑнлантӑм, господин поручик.

Ш а к м а к. Асту, чеерех пул. Киле ан кай, пытанса пурӑннӑ пек пул: пурӑнма укҫа парӑпӑр.

С а р м а н т е й. Иванова тытса парсан, вунӑ пинне мана паратӑр-и вара, господин поручик?

Ш а к м а к. Паратпӑр.

Т а н я кӗрет. Ун хыҫӗнче винтовкӑллӑ салтак. Таня шурса кайнӑ.

Ш а к м а к *(салтака)*. Эсӗ кай. *(Салтак каять.)* Начар кавалер эс, Митрофан Клементьевич... Пирӗн пата чипер хӗр килчӗ, эсӗ ӑна пукан та лартса памастӑн.

С а р м а н т е й. Каҫар, Таня... *(Пукан лартса парать.)*

Ш а к м а к. Ну, ларӑр, Татьяна... *(Хут ҫине пӑхса.)* Алексеевна. Ахалех арестлерӗмӗр сире. Каҫарӑр... Эсир Илемӗн арӑмӗ пуласси-и ҫак? Илем — аван ҫын, лайӑх музыкант... Эсир коммунистка мар иккен. Анчах большевиксене хӳтӗлени аван мар, Татьяна Алексеевна.

Т а н я. Эпӗ никама та хӳтӗлемен.

Ш а к м а к *(сасартӑк кӑшкӑрса)*. Суятӑр! *(Хӑйне алла илсе.)* Каҫарӑр, Татьяна Алексеевна... Эпӗ паян кӑшт чирлӗ... Пӗлетӗп, ку элек... Ахалех сире асаплантартӑ-

мăр... Қаçарăр... Ну, Митрофан Клементьевич, Татьяна Алексеевнăна ăсатса яр.

Т а н я. Ăçта?

Ш а к м а к. Ирĕке. *(Пауза.)*

Таня суланса каять, Шакмак пырса тытать, пукан çине лартать, графинтан шыв тултарса парать. Таня стаканне илмест.

Ан хăрăр... Наркăмăш яман. Ĕçĕр... Митрофан Клементьевич... Тулта сивĕ... Татьяна Алексеевнăна киле çитме плащ илсе килĕрччĕ. Леш пӳлĕмре çакăнса тăрать.

С а р м а н т е й каять.

Лăпланăр. Митрофан Клементьевич сире киле ăсатса ярĕ. Қаçарăр... *(Сĕтел çинчен хут илсе.)* Акă сире пропуск. Çĕрле хулара пропусксăр çӳреме юрамасть.

Сармантей пĕркенмелли хура плащ илсе килет. Таньăна тăхăнма пулăшать.

Т а н я *(плаща пăхса)*. Чим, ку Илем плащĕ мар-и?

Ш а к м а к. Çавăн.

Т а н я. Ăна та арестленĕ-и?

Ш а к м а к. Йăнăшрăмăр. Ăна та халех ирĕке кăларăпăр. Сармантей ăсатса ярсамччĕ, тархасшăн...

С а р м а н т е й. Қаяр, Таня.

Т а н я. Эпĕ пĕччен те кайма пултаратăп.

Ш а к м а к. Илеме те пĕрлех кăлармаллаччĕ те, ĕçне вĕçлеме ĕлкĕреймерĕмĕр... Ан хăрăр, çур сехетрен вăл сирен пата пырĕ.

И л е м кĕрет. Ун хыçĕнче о ф и ц е р.

И л е м. Таня!

Т а н я. Илем!

Ш а к м а к. Митрофан Клементьевич, ăсатса яр.

И л е м. Ăçта?

Ш а к м а к. Киле.

С а р м а н т е й. Қаяр, Таня.

С а р м а н т е й  Т а н ь ă н а  аллинчен тытса тухса каять. О ф и ц е р та каять.

Ш а к м а к. Ну, Илем... Савни ирĕкре, халĕ сирĕн тухмалла. Ан кутăнланăр. Мĕн пулнине пурне те каласа парăр.

И л е м. Ман каламалли çук.

Шакмак. Акă мĕн, пăрахар пĕр-пĕрне улталама. Эпĕ те ача мар, эсир те сăпкара выртмастăр. Эсир большевик маррине пĕлетпĕр, анчах большевиксем сире хăйсен енне çавăрасшăн. Сатур вăл ĕçе тăваймарĕ, халĕ ыттисем тытăннă.

Илем. Тăрăшни те ахалех... Эпĕ артист. Артист, хăвăр пĕлетĕр, политика ĕçне хутшăнмасть.

Шакмак. Ку юмаха кукамуна каласа парăр. Кунта юмах итлеме юратмаççĕ. Халĕ иккĕшĕнчен пĕрне суйлăр: ирĕке каяс тетĕр-и е вилĕм кашти çине-и?

Илем. Эпĕ нимĕнле преступлени те туман.

Шакмак. Чĕнсе каланине çырнă, пичетленĕ, салатнă... Алексеевăпа иксĕр Сатура пытарса пурăннă, Асамата хăвăр ĕçе хутшăнтарнă! Тата мĕн кирлĕ? Куншăн сире пĕр сăмахсăрах кашта çине ăсатмалла та, анчах хĕрхенетпĕр. Эсир чаплă музыкант пулас çын... Сирĕн талант чăваш ятне çĕклеме тивĕç. Илем ячĕ пĕтĕм тĕнчене савăнтарĕ. Сирĕн сăнăра чипер ледисемпе графиньăсем хăйсен будуарĕсенче розăпа лили хушшинче усрĕç. Америкăри миллиардер хĕрĕсем сирĕнпе паллашма хапсăнĕç. Мĕнле илемлĕ пуласлăх сирĕн умра, Илем!.. Ак çак хут çине алă пусăр та, ирĕке. *(Илеме хут парать.)*

Илем. *(ларать, вулать)*. Эпĕ сутăнчăк пулма пултараймастăп.

Шакмак. Пултараймасан, кĕçĕрех кашта çине... Акă ручка... *(Ручка тытса тăрать.)*

Илем. Халиччен этем садизмĕн вĕçĕ пур тесе...

Сармантей чупса кĕрет. Пичĕ-куçĕ, тумĕ вараланнă.

Сармантей. Господин поручик!

Шакмак. Мĕн пулчĕ? *(Ручка аллинчен ӳкет.)*

Сармантей. Алексеева тарчĕ.

Шакмак. Э, шуйттан, сехрене хăпартрăн... Эпĕ... *(Хăйне алла илсе.)* Епле тарчĕ? Эпĕ сана ăсатса яма çеç хушрăм-иç. Эс ирсĕр ĕç тума тапăнтăн пулĕ?

Сармантей. Çук, аванах калаçса пыраттăмăр. Леш, карлăксăр кĕпер урлă каçнă чух мана тĕртсе ячĕ те тара пачĕ... Эпĕ кĕпер айне тăрăнтăм.

Шакмак. Фу, санран ирсĕр шăршă кĕрет. Тăм пуç, хĕре ăсатма пултараймастăн.

Сармантей. Эпĕ, господин поручик...

Шакмак. Пӳлĕме ан шăршлантар. Кайса çăвăн.

Сармантей каять.

Ну, Илем... Алă пусăр.

Илем. Хутне те хатĕрлесе хунă.

Шакмак. Пирĕн пурте хатĕр. Вилĕм кашти те хатĕр. *(Чӳрече каррине уçать.)* Пăхăр...

Илем сиксе тăрать, пахать.

Ҫуратăр-и, миçе çын çакăнса тăрать?

Илем каялла пукан çине ларать, пуçне аяккалла пăрать.

Сирĕн валли те вырăн юлнă. Сирĕнпе юнашар савнине çакăпăр. Венчетре юнашар тăрас вырăнне вилĕм кашти çинче сулланса тăрăр. *(Пауза. Чӳрече каррине хупать. Ручкине урайĕнчен илсе, Илеме парать.)*

Ҫутă сӳнет. Шакмак çурта çутать. Ҫавĕрле васкаса кĕрет.

Ҫавĕрле. Дмитрий Иванович, ĕçсем начар. Хулари рабочисем стачка пуçланă.

Телефон шăнкăртаттарать.

Шакмак *(трубкине илсе)*. Итлетĕп... Апла пулма пултараймасть! *(Ҫавĕрлене.)* Рабочисене пусарма янă салтаксем, рабочисемпе пĕрлешсе, икĕ офицера персе вĕлернĕ.

Ҫавĕрле. Дмитрий Иванович, Ҫаппель отрячĕпе казармăна кайăр.

Шакмак. Чим, вĕрентĕп вĕсене рабочисемпе пĕрлешме. *(Ҫăшкăрса.)* Сармантей!

Сармантей кĕрет. Вăл тумланма та ĕлкĕреймен.

Сармантей. Эпĕ тумланма та ĕлкĕреймерĕм-ха, господин поручик. Э, Гаврил Иванович! Сывă-и?

Ҫавĕрле. Сире мĕн пулнă? Мĕншĕн çара уран?

Шакмак. Илем савнийĕ тăмсая кĕпер айне тăрăнтарнă.

Сармантей. Асатма кайрăм та... Аванах калаçса пыраттăмăр... Леш, карлăксăр кĕпер урлă каçнă чух...

Шакмак. Чарăн палкама. Илеме çак хут çине алă пустар та кăларса яр. *(Хăвăрт каять.)*

Ҫавĕрле *(сĕтел патне пырса)*. Мĕнле хут çине алă пустаратăр Илеме? Ҫăтартăр-ха?

Сармантей *(хутне памасăр)*. Ҫăтартма юрамасть, Гаврил Иванович. Секрет.

Ҫавĕрле. Мĕн?

Сармантей. Кунашкал хутсене ют сынна кăтартмастпăр.

Кавĕрле. Эпĕ, сирĕн шутпа, ют çын эппин? Эпĕ камне пĕлетĕр-и?

Сармантей. Пĕлетĕп. Анчах эсир граждански власть, эпир çар.

Кавĕрле. Марш кунтан!

Сармантей. Сирĕн приказ маншăн закон мар.

Кавĕрле. Пуçна çапса çурасса кĕтетĕн-и?

Сармантей. Ку узурпаци! Кун пирки штаб начальникне рапорт çыратăп.

Сармантей каять.

Кавĕрле. Катăк йĕмпе çӳрет хăй, çапах командовать тăвасшăн. (*Шыв ĕçет.*)

Илем. Куртăр-и, Гаврил Иванович? Мĕн хăтланаççĕ Сармантейсем?

Кавĕрле. Сармантейсем?

Илем. Сармантейсем çав. Ĕнер вĕсем ачашларĕç сире, паян эсир хушнине итлемеççĕ, ыран сире пӳлĕмрен хăвалама пуçлĕç, пурăна киле ĕнселесе те каларĕç... Пуян хăйĕн тарçине малтан йăпатать, кайран, кирлĕ мар пулсан, килĕнчен хăваласа ярать. Çӳрет вара мĕскĕн, тĕнче тăрăх çапкаланса.

Кавĕрле. Мĕн каласшăн эсир? Пире пуянсен тарçи тесшĕн-и?

Илем. Çаплах пулса тухать пулĕ.

Кавĕрле. Çук, эпир халăх тусĕсем.

Илем. Халăх ĕмĕр Сармантейсемпе кĕрешнĕ. Октябрьте çĕнтерчĕ. Халĕ эсир вĕсене çĕнĕрен çул уçса пама хăтланатăр. Хăвăра халăх тусĕсем тени — сирĕн фантази е маска çеç вăл. Ăнланаймасан, Ленина вуласа пăхăр.

Кавĕрле. Эсир Ленина та вуланă-и?

Илем. Губком куçарма панăччĕ... Çавă аса килчĕ.

Кавĕрле. Ленин...

Илем. Кайма юрать-и?

Кавĕрле. Акă пропуск... Анчах (*хутне илсе парать*) кун çине алă пусăр.

Илем. Юрĕ, Иванова тытса парам, эппин, сире... (*Утать.*) Çапах та Ленин кĕнекине вуласа пăхăр. Усăллă пулĕ. (*Каять*).

Кавĕрле. Ленин... Пĕтĕм тĕнче унăн ятне асăнать... Пĕтĕм тĕнчене кисрентерчĕ Ленин. (*Пауза.*) Е вăл

чăнах та... Çук. Рабочисемпе чухăн хресченсем çеç ун енче... Интеллигенци пирĕн! Илемсем... Сатурсем... Э, черт! *(Нимĕн тума пĕлмест, ларать те пуçне усать.)*

Лена кĕрет. Пауза.

Кавĕрле. Елена Васильевна!.. Мĕн çăмăлпа?

Лена. Илеме арестленĕ. Вăл айăпсăр.

Кавĕрле. Мĕнле çын эсир, Елена Васильевна?

Лена. Епле мĕнле çын?

Кавĕрле. Кам майлă эсир?

Лена. Никам майлă та мар.

Кавĕрле. Суятăр. Кун пек самантра çын юхăм варринче тытăнса тăраймасть. *(Пауза.)* Илеме кăлартăмăр.

Лена. Тавтапуç.

Кавĕрле. Сатура курас килмест-и?

Лена. Ăçта Сатур? Е вăл та сирĕн алла лекнĕ-и?

Кавĕрле. Çук, тытаймарăмăр. Сатурсем çак кунсенче хулара пулĕç. Анчах эсир ăна кураймăр.

Лена. Мĕншĕн?

Кавĕрле. Эсир пирĕнпе каятăр.

Лена. Эпĕ сирĕн ĕçе хутшăнман, çавăнпа кунтах юлатăп.

Кавĕрле. Çук, эсир манпа каятăр.

Лена алăк патнелле утать. Кавĕрле пӳлет.

Лена. Ярăр!

Кавĕрле. Ямастăп! *(Пауза.)* Елена Васильевна... Лена... Халиччен те сисместĕр-и?

Лена *(ун çине нумайччен пăхса)*. Кураймастăп эп сире... Илтетĕр-и? Кураймастăп! *(Хăвăрт тухса каять.)*

Кавĕрле. Эй, кам унта? Васильевăна штабран ан кăларăр.

Шакмак *(сцена хыçĕнче)*. Сармантей, Васильевăна штабран кăларса яр.

Шакмак кĕрет.

Кавĕрле. Ку мĕне пĕлтерет?

Шакмак. Хĕрпе аппаланма халĕ вăхăт çук.

Кавĕрле. Хĕр умĕнче намăслантаратăр пулать мана?

Шакмак. Пĕр хĕр умĕнче намăсланни мĕн вăл, пĕтĕм халăх умĕнче намăса юлассинчен сыхланмаллаччĕ. Пĕлетĕр-и, рабочисем мĕн тунă?

К а в ё р л е. Стачка пуçланă.

Ш а к м а к. Вăл сахал. Арсенала çĕмĕрсе, пăшалсене хăйсем хушшинче салатнă. *(Шыв ĕçесшĕн, шывĕ çук. Шăнкăртаттарать.)*

С а л т а к кĕрет.

Мĕншĕн графинта шыв çук? Халех тултарса кил.

С а л т а к. Водопровод ĕçлемест, господин поручик.

Ш а к м а к. Акă сире Идель-Уральские Соединенные Штаты. Патшалăх мар, шыв та парасшăн мар пире рабочисем.

О ф и ц е р *(кĕрет)*. Господин поручик, çырма леш енчи слободара хĕрлисем.

Ш а к м а к. Чугун çул кĕперне сирпĕнтерĕр. Ку ĕçе тума сире хушатăп.

О ф и ц е р. Итлетĕп, господин поручик. *(Каять.)*

Ш а к м а к. Ну, Гаврил Иванович, пуçлар-и?

К а в ё р л е. Мĕн пуçламалла?

Ш а к м а к *(сăмаха тăсса)*. Эвакуаци!

Ч а р ш а в

## Улттăмĕш картина

Атăл çинчи пристань. Пристань çумĕнче пĕчĕк буксир-пăрахут. Пристань çинче пĕр хунар çунать. Пăрахут çинче шалти çутă çеç курăнать. Чӳречесем тĕттĕм. Аякра тупă сасси илтĕнкелет. Тул çутăлас умĕн. Трап патĕнче ч а с о в о й.

С а р м а н т е й с а с с и. Аха... Пристань... Халех. *(«Касса» тесе çырнă алăка уçса.)* Господин поручик! Сире телефон патне чĕнеççĕ. *(Курăнми пулать.)* Халех килет!

Ш а к м а к, пăрахут çинчен тухса, кассăна кĕрсе каять. С а р м а н т е й тухать.

Ш а к м а к с а с с и. Кам калаçать? Туран хĕрлисен пăрахучĕсем анаççĕ тенĕ хыпарсем пур... *(Касса алăкне хупать.)*

С а р м а н т е й. Эх, мĕншĕн çыхлантăм çаксемпе? Эпĕ мĕн те пулин пулать тесе... Мускава илетпĕр, Питĕре... Ак сире Мускав. Кăна пĕлнĕ пулсан, тахçанах тармаллаччĕ. *(Ассăн сывласа.)* Халĕ ак тарма та май çук ĕнтĕ.

Хĕлип кĕрет. Аллинче чăматан.

Хĕлип. Сывă-и, Митрофан Клементьевич? Ĕçсем мĕнле?

Сармантей. Ĕçсем калама çук лайăх. Ыран Мускава çитетпĕр, виçмине Питĕре... унтан... Парижа, Мадрида, Сингапура, Шайтанбурга...

Хĕлип. Мĕн эс? Ухмахланнă-им?

Сармантей. Аслăлантăм.

Шакмак тухать.

Шакмак. Сармантей, телефон патне кай.

Сармантей. Итлетĕп, господин поручик. *(Кассăна кĕрет.)*

Хĕлип. Сывă-и, Дмитрий Иванович?

Шакмак. Эсир штабран-и?

Хĕлип. Çавăнтан.

Шакмак. Кавĕрлене курмарăр-и?

Хĕлип. Вăл штабран хăйĕн машинипе тухса кайрĕ. Халĕ те çитмен-и?

Шакмак. Темшĕн килеймерĕ-ха. Хулара хĕрлисем çук-и?

Хĕлип. Çук.

Шакмак. Штаб кайнă-и?

Хĕлип. Кайнă.

Шакмак. Пит аван. Каяр.

Иккĕшĕ те пăрахут çине каяççĕ. Хуçа арăмĕ япаласем йăтса кĕрет. Тӳрех пăрахут çине утать. Часовой винтовкăпа чарать.

Часовой. Пропуск пур-и?

Хуçа арăмĕ. Мĕнле пропуск, мĕн тума?

Часовой. Хуларан тарма.

Хуçа арăмĕ. Тарма та пропуск кирлĕ-и?

Часовой. Пропусксăр юрамасть.

Телефон шăнкăравĕ.

Сармантей *(пуçне алăкран кăларса)*. Господин поручик!

Шакмак пăрахут çинчен тухать.

Хуçа арăмĕ *(Шакмак хыççăн утса)*. Ваше благороди, пропуск парсамăрччĕ.

Шакмак. Мĕнле пропуск?

Хуçа арăмĕ. Хуларан тарма.

Шакмак. Тарма пропуск кирлĕ мар.

Хуçа арăмĕ. Салтак кирлĕ тет.

Шакмак. А-а, пăрахутпа-и? Тĕрĕс. Анчах эпир ют çынна пăрахут çине кĕртместпĕр.

Хуçа арăмĕ. Эпĕ ют çын мар. Эпĕ шуррисем майлă. Сирĕн çар валли укçа та пуçтартăм. Ачасем те мана «буржуйка» тесе витлеççĕ...

Телефон шăнкăравĕ.

Сармантей сасси. Халех килет. *(Пуçне кăларса.)* Господин поручик!

Шакмак. Çапла, ырă çыннăм, Атăл хĕррипе пропусксăрах тарма пултаратăр. *(Касса пӳлĕмне кĕрет. Унтан хăвăрт тухать.)*

Хуçа арăмĕ. Митрофан Клементьевич, пăрахут çине кĕртсе ярсамăрччĕ. Эпĕ ахаль тумăп.

Сармантей *(аяккалла çавăтса)*. Ну?

Хуçа арăмĕ. Мĕн чухлĕ?

Сармантей. Пилĕк пин.

Хуçа арăмĕ. Ой, пит нумай ыйтатăр.

Сармантей. Ну, пилĕкçĕр.

Хуçа арăмĕ *(укçа парса)*. Илĕр, тархасшăн.

Сармантей. Михĕсем хушшине хĕсĕнсе выртăр. *(Хуçа арăмне пăрахут çине кĕртсе ярать. Укçа шутлать.)* Икçĕр, виççĕр. Шуйттан карчăкĕ! Улталарĕ... Пилĕкçĕр вырăнне тăватçĕр çеç тыттарнă. *(Пăрахут çине кĕме тытăнать.)*

Клавдюша кĕрет.

Клавдюша. Митроша!

Сармантей чарăнать.

Эсир çак пăрахутпа таратăр-и?

Сармантей. Çак кимĕпе та-рат-пăр.

Клавдюша. Ай-юй... Пит начар пăрахут хăварнă сире валли.

Сармантей. Лайăххисемпе пуçлăхсем тарнă. Эпир хӳрешкисем çеç. Тав турра, кунашкаллине хăварнă, унсăрăн Кавĕрлепе Шакмакăн çуран тарма тиветчĕ.

Клавдюша. Мана та хăвăрпа лартса кайăр-ха.

Сармантей. Эс мĕншĕн таратăн?

Клавдюша. Буржуйсем пурте хуларан тараççĕ.

Сармантей. Буржуйсем, буржуйсем... Эс шуррисен ҫарӗнче пулман. Эп, ак ухмах...

Клавдюша. Хӗрлисенчен хӑратӑп.

Сармантей. Сан пеккисемпе темӗн тӑваҫҫӗ пулӗ вӗсем...

Клавдюша. Апла пулсан, хамӑр пристань патне ҫитиччен лартса кайӑр.

Сармантей (*Клавдюшӑна пӑрахут ҫине кӗртсе ярасшӑн*).

Часовой чарать.

Ку ман арӑм. (*Часовой Клавдюшӑна кӗртсе ярать.*)

Шакмак васкаса кӗрет.

Шакмак. Сармантей! Капитана ман пата яр.

Сармантей. Итлетӗп, господин поручик.

Сармантей каять. Офицер Таньӑна ҫавӑтса кӗрет.

Шакмак. Татьяна Алексеевна! Каллех пирӗн алла лекрӗр-и? Алексеевӑна мӗншӗн ертсе килтӗр, господин подпоручик?

Офицер. Чугун ҫул кӗперне сирпӗнтерме кансӗрлерӗ.

Шакмак. Епле?

Офицер. Ҫунакан шнура пырса сӳнтерчӗ. Шнура сӳнтермен пулсан, кӗперпе пӗрле хӗрлисен бронепоезчӗ те сывлӑша ыткӑнатчӗ.

Шакмак. Тепӗр шашка хутӑр-и?

Офицер. Ёлкӗреймерӗмӗр. Рабочисен отрячӗ кӗпере сыхлама пырса ҫитрӗ.

Шакмак. Хӗрлисем хулана кӗчӗҫ-и?

Офицер. Бронепоезд халь ҫеҫ вокзал патне кайрӗ.

Илем кӗрет. Аллинче чӑматан, корнет футлярӗ.

Шакмак. О, Николай Петрович! Эсир те пирӗнпе каяс тетӗр-и?

Илем. Сирӗнпе тарас терӗм, Дмитрий Иванович.

Таня. Илем!

Шакмак (*Таня ҫине кӑтартса*). Кӑна ман каютӑна.

Офицер (*Таньӑна*). Утӑр.

Таня. Эх, Илем. (*Хӑвӑрт пӑрахут ҫине кӗрсе каять.*)

Офицер Таня хыҫҫӑн утать.

Ш а к м а к. Большевиксен сĕрĕмĕ сирĕлчĕ эппин?

И л е м. Сирĕлчĕ, Дмитрий Иванович.

Ш а к м а к. Пит аван!

Г р о м о в кĕрет.

Ш а к м а к *(Громова, Илем çине кăтартса)*. Çак çынна каюта парăр.

Г р о м о в. Итлетĕп, господин поручик.

Ш а к м а к пăрахут çине каять.

И л е м. Қалăр-ха, гражданин, ку пристань çинче ман пĕлĕш матрос пулмалла...

Г р о м о в. Хушамачĕ мĕнле унăн?

И л е м. Громов.

Г р о м о в. Ветлуга.

И л е м. Қáма.

Г р о м о в. Қу сирĕн чăматан-и? *(Чăматан йăтма хатĕрленет.)*

И л е м. Чимĕр-ха, ун çăри пăсăлнă. *(Çăрине çаклатма пĕшкĕнет те, чăматанĕ уçăлса каять.)*

Чăматанран япаласем тухса ӳкеççĕ.

Эккей... *(Пуçтарма пĕшкĕнет. Шăппăн.)* Пăрахут пристань çумĕнчен хускалмалла мар. Иванов çапла хушрĕ.

Г р о м о в. Тăрăшăпăр.

И л е м. Қапитан хамăр çын-и?

Г р о м о в. Хамăр çын.

Ш а к м а к с а с с и. Қаласшăн мар-и? Ак сана! Ак сана!

Г р о м о в. Алексеевăна хĕнет. Ирсĕр!

Ш а к м а к с а с с и. Трюма пăрахăр!

И л е м *(хытă сасăпа)*. Чăматана йăтăр, гражданин.

Г р о м о в *(хытă сасăпа)*. Итлетĕп.

Г р о м о в чăматан йăтса пăрахут çине каять, И л е м ун хыççăн утать. Пăрахут çине Ш а к м а к хăпарать, аллине шурă тутăрпа шăлать.

Ш а к м а к. Сармантей! *(Сармантей кассăран тухать.)* Çырана улăхса пăх. Қавĕрле килни курăнмасть-и?

С а р м а н т е й. Халех, господин поручик.

Ш а к м а к пăрахут çине каять. С а р м а н т е й ун хыççăн пăхса тăрать те сăхсăхса илет.

Тав турра. Халё тартăм ёнтё. *(Погонёсене татса пăрахать, кайма тытăнать. Чарăнса, погонёсене илсе, атă кунчине чикет. Тарма тытăнать, анчах сасартăк чарăнать.)*

Ленăпа Ҫавёрле кёреҫҫё.

Ҫавёрле. Чăматана каютăна леҫсе хурăр. *(Чăматанне Сармантее парать.)*

Сармантей пăрахут ҫине каять.

Лена. Гаврил Иванович, тархаслатăп, хăварăр мана кунта.

Ҫавёрле. Турткаланса ан тăрăр. Пурпёр ямастăп.

Ҫапитанпа Илем пăрахут ҫине хăпараҫҫё.

Лена. Илем! Эсё те кунта-и?

Илем. Ҫунта, Елена Васильевна. Эпё те хёрлисенчен таратăп.

Лена хăвăрт пăрахут ҫине каять.

Ҫавёрле. Господин капитан, пăрахута ăсатăр.

Ҫапитан. Пăрахутăн рулё пăсăлнă та, ҫавна тӳрлетсенех каятпăр.

Ҫавёрле. Васкатăр! *(Пăрахут еннелле утать.)*

Офицер пăрахут ҫине хăпарать. Биноклыпе тăвалла пăхать.

Офицер. Господин капитан, пăхăр-ха, туран пăрахутсем анаҫҫё-и?

Ҫапитан *(биноклыпе пăхса)*. Тёрёс, пăрахутсем килеҫҫё.

Офицер. Пирённисем-и?

Ҫапитан. Пёлме хён. Тен, пирённисем пулё.

Офицер *(аяккалла пăхса)*. Господин поручик, туран пăрахутсем анаҫҫё.

Шакмак чупса тухать.

Шакмак *(биноклыпе пăхса)*. Хёрлисем. Господин капитан, пăрахута ăсатăр.

Ҫапитан. Ан хăрăр. Вёсем пире хăваласа ҫитеймёҫ.

Шакмак. Мёншён пăрахута чарса тăратăр?

Ҫапитан. Руль пăсăлнă. *(Аяккалла.)* Братва! Час юсаса пётертёр-и?

Матроссасси. Халех пӗтет.

Шакмак. Урӑх кӗтме юрамасть...

Капитан. Рульсӑр пӑрахут каяймасть, господин поручик.

Офицер. Господин поручик, васкас пулать. Пӑрахутсем ҫывхараҫҫӗ. *(Каять.)*

Шакмак. Господин капитан, ӑсатӑр пӑрахута.

Капитан. Господин поручик, пӑрахут ҫинче эп хуҫа. Ман ӗҫе ан хутшӑнӑр.

Пристань ҫине дозорнӑй хашкаса кӗрет.

Дозорнӑй. Ваше благороди, хула енчен хӗрлисем килеҫҫӗ.

Шакмак. Чалки!

Капитан. Братва! Ют ҫын командине ан итлӗр.

Шакмак. Юлашки хут калатӑп: ӑсатӑр пӑрахута!

Капитан. Юсаса пӗтермесӗр пӑрахут вырӑнтан хускалмасть.

Шакмак *(револьвер кӑларса)*. Эп сана, большевиксен... *(Револьверпа капитана тӗллет.)*

Илем браунинг кӑларса перет, Шакмак ӳкет.

Сатурсасси. Маттур, Илем!

Илем. Сатур! Ҫитрӗр-им?

Сатурсасси. Ҫитрӗмӗр, Илем тус!

Кавӗрле пӑрахут ҫине хӑпарать.

Кавӗрле. Кам печӗ? *(Шакмак виллине курса.)* Дмитрий Ивановича кам вӗлерчӗ?

Пристане Сатурпа хӗрлӗ армеецсем кӗреҫҫӗ.
Сатур салтак тумӗпе.

Кавӗрле. А-а, ҫитрӗр-и? *(Пӑшалне кӑларать, Сатура тӗллет.)*

Илем ӑна аллинчен ярса тытать. Громов тухать, пулӑшать.

Кавӗрле. Господин капитан, ӑсатӑр пӑрахута.

Сатур. Капитан юлташ, пӑрахута эп хушмасӑр вырӑнтан ан хускатӑр.

Капитан. Итлетӗп, командир юлташ.

Илем. Комучӑн особоуполномоченнӑй помощникӗпе мӗн тумалла, Сатур?

Сатур. Трюма хупăр.

Матроссем Кавёрлене тытса чараççĕ.

Кавёрле (*Илем çине пăхса*). Сутăнчăк!

Илем. Кам сутăнчăкки халĕ паллă ĕнтĕ, Гаврил Иванович. Ку ыйту пирки дискусси тумăпăр.

Кавёрлене матроссем çавăтса каяççĕ.

Илем. Сатур, трюмра пирĕннисем.

Сатур (*кăшкăрса*). Юлташсем! Пăрахут çине!

Хĕрлĕ армеецсем пăрахут çине хăпараççĕ.
Лена чупса кĕрет.

Лена (*Сатур умне ыткăнса*). Сатур!

Сатур. Лена! Епле лекрĕн кунта?

Лена. Кайран, кайран, Сатур.

Асамат кĕрет.

Сатур. Асамат! Эс ăçта пулнă?

Асамат. Трюмра... Салам! (*Сатура алă парать.*)

Илем Таньăна çавăтса тухать.

Лена. Таня!

Сатур (*Таня патне чупса пырать, хулĕнчен тытать*). Кам хĕнерĕ сана?

Таня. Шакмак.

Лена. Ирсĕр!

Сатур. Илем персе вĕлерчĕ ăна.

Лена. Илем? Эсĕ кунта тарма килмен-им?

Асамат. Мĕн? Илем шуррисемпе тарма? Пулма пултараймасть.

Илем. Çук, эпĕ кунта губком хушнипе пăрахута чарса тăма килтĕм.

Таня (*Илем патнелле ыткăнса*). Илем! (*Ăнран кайса ÿкме тытăнать.*)

Сатур. Илем, Лена... Таньăна халех больницăна леçĕр.

Капитан. Пирĕн пăрахутсем çывхараççĕ.

Пăрахут кăшкăртать.

Пăрахут хамăрăннисене кĕтсе илме каять. Кам пырас тет, пăрахут çине!

Илем. Таня, больницăна каяр-и?

Таня. Малтан хамăр пăрахутсене кĕтсе илер.

Пăрахутсем кăшкăртаççĕ. Малтан пĕри, унтан тепри... Арестленисем пăрахут çине тухаççĕ. Пристаньрисем те пăрахут çине каяççĕ. Пăрахут сассисем çывхараççĕ. Мачта çинчи шурă ялав анать.

Капитан (*пăрахута юлашки хут кăшкăртса, хăй кĕперĕ çине хăпарать*). Чалки!

Громов трап илет, пристань карлăкне хупать.

Сатур. Илем тус, кала ĕнтĕ хăвăн корнетна!

Илем корнетне кăларать те марш калама пуçлать.

Капитан. (*рупорпа*). Каялла...

Пăрахут пристань çумĕнчен уйрăлать.

Малалла! Яра пар!

Илем корнечĕ çумне оркестр хутшăнать. Мачта тăррине хĕрлĕ ялав хăпарать, пăрахут çинчи çынсене ирхи хĕвел пайăрки çутатать.

Чаршав

# ПУГАЧЕВ ПАРНИ

Тăватă пайлă пьеса

## ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Ваня** — улпут батракĕ, вырăс. Çÿллĕ, сарлака хулпуççиллĕ каччă. Васкамасăр калаçать. Утти те çавнашкалах. Ҫарттуссăр çÿрет.
**Вася** — Саваламан хуçан тарçи, чăваш. Ваня пекех çÿллĕ. Вăтанарах калаçать. Хĕрсе кайсан, тытăнкăллă сăмахлать.
**Петр Петрович Петров** — ялти учитель, вырăс. Вăтă пулсан та, вăр-вар çаврăнкалать. Ҫуçлăхпа.
**Вера Андреевна Цветкова** — Питĕртен килнĕ хĕр, вырăс.
**Нина Александровна** — пуян улпут хĕрĕ, вырăс.
**Варвара Кирилловна Глинская** — унăн амăшĕ. Мăнтăр, мăн кăмăллă хĕрарăм.
**Саваламан** — вулăс земствин председателĕ, чăваш.
**Дорофей Дорофеич** — улпут управляющийĕ.
**Мухамедьян** — улпут батракĕ, тутар. Пит йĕрÿллĕ çын.
**Дарья** — батрачка, вырăс. Парка та çÿллĕ хĕрарăм.
**Даша** — улпут горничнăйĕ, вырăс. Çамрăк хĕр.
**Угрюмов** — улпут ялĕнчи çын.
**Лида** — Петр Петрович хĕрĕ, 11—12 çулта.
**Дьякон** — çÿллĕ те ырхан çын, шурă пиртен çĕленĕ ряса тăхăннă.
**Василь Васильч** — чухăн чăваш.
**Трифон** — вырăс, яш çын.
**Абдрахман** — чухăн тутар.

Вырăс, тутар, чăваш хресченĕсем, салтаксем. Пьесăри ĕç 1917 çулхи июль уйăхĕнче пулса иртет.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Арман пĕви хĕрринче. Пĕве карлăкĕсем курăнаççĕ. Пĕве леш енче темиçе хутлă шыв арманĕ, ту çинче, вăрман хыçĕнче, икĕ хутлă шап-шурă улпут çурчĕ, ун çумĕнче улăм витнĕ, тайăлнă йывăç пÿртсем курăнаççĕ.

Петров пĕве хĕрринче вăлта хулли тытса ларать. Дорофеич пĕве урлă каçать. Каялла пăхса кăшкăрать. Сăмахне сцена хыçĕнчех пуçлать.

Дорофеич. Комитет, комитет! Комитет тесе ĕçлемесĕр укça илес тетĕр-им? Арманта комитет хуçа мар, Угрюмов! *(Петров патнелле пырса.)* Ой-ой-ой... Ну и самана! Сывă-и, Петр Петрович? *(Алă парать.)* Ой, ывăнтăм... Керенский те ман чухлĕ калаçман пулĕ.

Петров. Мĕн пулнă аплах?

Дорофеич. Арманти рабочисем каллех пăлхана пуçланă. Малтан Угрюмова, рабочи пулнă тесе, хавхалансах йышăнчĕç. Халĕ — ăна та итлемеççĕ... Леш, вилнĕ кухарка ачине — Ваньăна — комитет тунă та вăл хушнине çех итлеççĕ.

Петров. Дорофей Дорофеич, сирĕн туртмалли пур-и? Табак пĕтрĕ те...

Дорофеич. Пур, пур. *(Пирус парать, хăй те ларса туртса ярать.)* Выльăх картишĕнчи батрачкăсем те паян ĕне сума тухман. Шалу ÿстерттересшĕн, ĕç кунне чакарттарасшăн... Ку сахал, тата пухура çăвар типиччен калаçма тиврĕ.

Петров. Мĕнле пухура?

Дорофеич. Ял пухăвĕнче. Паян леш çукраххисем арман пĕви патне пухăннă та хайхи Пугачев парни текен улпут çаранне çулма кĕрĕшнисене каялла çавăрнă. Унтан пуху пухса, улпут çаранне çулма кĕрĕшмелле мар тесе йышăннă. Апла та, капла та ăнлантартăм. Ĕç хакне те ÿстерсе пăхрăм. Çук, хăйсеннех переççĕ: çулмастпăр, çаран халăха куçмалла!— теççĕ те, çав анчах.

П е т р о в. Авӑ мӗн...

Д о р о ф е и ч. Ҫавӑ ҫав. Барыня, кун ҫинчен илтсен, пуҫларӗ мана ятлама... «Халӑхпа калаҫма пӗлместӗн, ватсупнӑ!» — тет. Ҫилленнипе лара-тӑра пӗлмест. Кама-кама ятламарӗ пулӗ. Керенскине те, Милюковне те... Микула патшине те лектерчӗ. Хӑй ун портретне кравать тӗлне ҫакса хунӑ, ҫапах тӑм пуҫлӑ патша тесе вӑрҫать. *(Пауза.)* Мӗнле, Петр Петрович?.. Улпут ҫаранӗ чӑнах халӑха куҫмалла-ши?

П е т р о в. Ҫаранӗ мар, ҫӗрӗ те куҫмалла та-ха, учредиловкине темшӗн пухаймарӗҫ.

Д о р о ф е и ч. Барыня сисет пулмалла... Ҫавӑнпа ҫарана хӑвӑртрах ҫултарса, уттине хутора турттарма хушать. *(Ура ҫине тӑрса.)* Кайса Сӗвекасси чӑвашӗсемпе калаҫса пӑхас... Вӗсем те килӗшмесен, кама ҫултарас вара?

П е т р о в. Ӳтемӗш тутарӗсемпе калаҫса пӑхӑр...

Д о р о ф е и ч *(аллине сулса)*. Эй, вӗсемпе ӗҫ тухать-и... Пурте Мухамедьян хӑраххисем. *(Утать.)*

М у х а м е д ь я н, пӗве урлӑ каҫса, сцена урлӑ утать.

Мухамедьян! Эсӗ ӑҫта пуҫтарӑннӑ?

М у х а м е д ь я н. Хамӑр яла каятӑп, арӑм патне...

Д о р о ф е и ч. Нина Александровна сана пристане кайма хушмарӗ-и?

М у х а м е д ь я н. Ҫӗрле — ларкӑч ҫинче, кӑнтӑрла — ларкӑч ҫинче... Хӑҫан ҫывӑрмалла? Саккунпа сакӑр сехет ӗҫлемелле, вунултӑ сехет канмалла.

Д о р о ф е и ч. Расчет илес килет-им?

М у х а м е д ь я н. Расчет та илместӗп, сакӑр сехетрен ытла та ӗҫлеместӗп. Ӑнлантӑр-и?

Д о р о ф е и ч. Ӑнлантӑм. Каҫхине кантура пыр.

М у х а м е д ь я н. Кантура та пымастӑп. Комитетпа калаҫӑр. *(Хӑвӑрт каять.)*

Д о р о ф е и ч. Илтрӗр-и, мӗнле сӑмахлать Мухамедьян?

П е т р о в. Мӗн ҫӑмӑлпа пристане каймаллаччӗ, Дорофей Дорофеич?

Д о р о ф е и ч. Улпут хӗрӗ патне Петроградран юлташӗ килет, тет-и... Халӗ ҫех Чулхуларан телеграмма илнӗ... Пӑрахутпа анать. *(Ассӑн сывласа.)* Ай-яй-яй! Ҫак урнӑ саманара хӑна йышӑнаҫҫӗ тата... Урисем ҫине ӗне пусман ҫав.

Эсӗ тата мӗн ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫапкаланса ҫӳретӗн?

Дарья. Ваня патне килсеттӗм.

Дорофеич. Мӗн тума кирлӗ вӑл сана? Утӑ ҫулма тухрӑр-и?

Дарья. Ҫав ӗҫпе килтӗм те.

Дорофеич. Епле «ҫав ӗҫпе»?

Дарья. Иртнӗ каҫ хуторти рабочисем ӗҫ хакне ӳстермелле текен резолюци йышӑнчӗҫ.

Дорофеич. О господи! Йӗпе ҫине сапа. Эсир капла барыньӑна йӗмсӗр хӑваратӑр.

Дарья. Ӗҫ хакне ӳстермесен, стачка пуҫламалла, терӗҫ.

Дорофеич. Мӗнле стачка?

Дарья. Ӗҫлеме пӑрахатпӑр.

Дорофеич. Илтетӗр-и, Петр Петрович? Мӗн хӑтланаҫҫӗ, э? Асту, тетя Дарья, пӑрах халӑха пӑлхатма. Упӑшку пек, хӑвӑн пуҫна ҫиетӗн ак... Кала рабочисене: ыран ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах утӑ ҫулма тухчӑр. Тухмасан... Эсӗ комитет-и-ха?

Дарья. Комитет.

Дорофеич. То-то... *(Сцена хыҫӗнче шав.)* Каллех арманта шав пуҫланчӗ пулас?

Угрюмов *(чупса кӗрет)*. Дорофей Дорофеич! Рабочисем ӗҫлеме пӑрахрӗҫ. Авӑртма килнӗ халӑха армантан хӑваласа кӑларчӗҫ. Ыран килме хушаҫҫӗ. Мӗн тӑвас?

Дорофеич. Мӗн тӑвас, мӗн тӑвас! Эпӗ турӑ мар вӗт, ӑҫтан пӗлем?..

Дьякон *(тайкаланса кӗрет, аллинче вӑлта хулли, витре)*. Турӑ ҫук, Дорофей Дорофеич! Рабочисем те ҫук.

Дорофеич. Ҫук мар ҫав, пур. *(Угрюмова.)* Халех лаша кӳл те вулӑса вӗҫтер... Саваламана кала.

Угрюмов. Саваламан съезда кайнӑ, тет...

Дьякон. Саваламан та ҫук!

Дорофеич. Эсир хӑвӑр та ҫук пулӗ апла?

Дьякон. Хам та ҫук.

Дорофеич. Самогон шӑрши камран кӗрет? Сире ман вырӑна лартасчӗ, пӗлӗттӗр пуррипе ҫуккине.

Дьякон. Тарӑр, Дорофей Дорофеич!

Дорофеич. Тармалли ҫех юлчӗ пулӗ ӗнтӗ, чӑнах та... Ну, эпӗ кайрӑм... *(Каять.)*

Угрюмов. Дорофей Дорофеич! Мӗн тумалла?

Дорофеич *(аллине сулса)*. Кайран... Кайран ка-

лаçăпăр... *(Юлашки сăмахне сцена хыçĕнче кăшкăрать.)*

Дьякон. Эсĕ те тар, Степан Иваныч! Арман пĕвине лекиччен тар. Кунашкал саманара айккинче пулни авантарах... Улпут енче те хăрушă, халăх енче те шанчăклах мар.

Дарья. Халăх енче шанчăклă та. Анчах хăшпĕрисем, улпутпа çыхланса, халăха манаççĕ.

Угрюмов каять.

Дьякон *(Петров çумне ларса)*. Лартăм-лартăм, ларни те ахалех пулчĕ, пĕр пулă та тытаймарăм.

Петров. Кунĕ паян çавнашкал пулĕ, отец дьякон, эпĕ те тытаймарăм.

Дьякон. Вăлта ярса ларнă чух каллех шухăша кайрăм.

Петров. Леш, турă çинчен пулĕ-ха?

Дьякон. Çавăн çинчен. Турă чăнах та çук пулĕ. Тетя Дарья, сан шухăшпа мĕнле пек?

Дарья. Хăвăр халăха кадилăпа тĕтĕретĕр, турă çук тесе ларатăр. Эсир хăвăр шухăша чиркÿре каласа парăр.

Дьякон. Аха... Ку — идея. Анчах уншăн мана тĕрмене хупмĕç-и? Э, тепĕр тесен, хупчăр... Христос асапланнă, эпĕ те тÿсетĕп...

Дарья *(тăрса)*. Тьфу! Намăссăр! Хăй турă çук тет, Христоса асăнать. Петр Петрович, Ваня арманта-ши?

Петров. Çавăнтах пулĕ. Халĕ çеç кăшкăрашрĕç.

Дарья каять.

Дьякон. Тетя Дарья! Чим-ха.

Дарья чарăнать.

Сăмакун камăн пур, пĕлместĕн-и?

Дарья каять.

Çилленчĕ. Тĕлĕнмелле... Çавнашкал паттăр арăм турра ĕненет... Мĕн тăвăн? Тĕттĕмлĕх...

Петров. Эсир, акă, вĕреннĕ çын та, çапах ĕненетĕр.

Дьякон. Пирĕн служба çавнашкал. Хамăр ĕненмесен те, халăха ĕнентермелле. Просвирни карчăкĕ патне кайса пăхас. Унăн сăмакун пулаканччĕ. *(Утать.)*

Нина кĕрет.

Кĕвĕ Музине хĕрÿллĕ салам!

Н и н а. Каллех пулла кайнӑ пулас эсир, Никодим Варфоломеич? Сире арӑмӑр шырать.

Д ь я к о н. Арӑм? Арӑм ҫук.

Н и н а. Епле ҫук? Халӗ ҫеҫ урамра йӑкӑртатса ҫӳретчӗ.

Д ь я к о н. Представлени... Тӗнче — ӑсри сӑнар ҫеҫ... *(Каять.)*

Н и н а. Дьякон та пурнӑҫ йӗркине ҫухатнӑ пулас...

Д ь я к о н  с а с с и. Итлӗр! Ешӗл вӑрман... Лӑпкӑ шыв... Вӗҫен кайӑксем. Пурте итлӗр... Тӗнчере нимӗн те ҫук!.. *(Мефистофель арине юрлать.)* «Ҫӗр ҫинче мӗнпур этем...»

П е т р о в. Паян ытлашши ӗҫнӗ пулас. Йӗркеллӗ ӗҫсен, чиркӳ юррисене юрлаканччӗ, паян опера ҫине куҫнӑ.

Н и н а. Пурнӑҫ арпашса кайрӗ... Пурте пӑтранаҫҫӗ. Рабочисем ӗҫлесшӗн мар, хресченсем... Мухамедьян мӗнле лайӑх кучерччӗ, вӑл та итлеми пулчӗ. Малашне, ларкӑч ҫине ларса, хамӑн тилхепе тытмалла пулать пулӗ? Ӗнесене те хамӑнах сумалла пулӗ... Паян пилӗк батрачка расчет илчӗҫ. Нимӗн те ӑнланаймастӑп. Тепӗр тесен, мӗнрен тӗлӗнмелле? Диалектика законӗ ҫавнашкал, теҫҫӗ большевиксем. Ҫапла-и, Петр Петрович?

П е т р о в. Диалектикӑна вӗренмен ҫав, Нина Александровна.

Н и н а. Паян — батрак... ыран — хуҫа... Паян — хуҫа, ыран... Петр Петрович, мӗншӗн пурнӑҫ ҫав тери кичем?

П е т р о в. Пурнӑҫ кичем мар, Нина Александровна. Сире ӗҫлеменрен ҫапла туйӑнать пулӗ. Эсир хӑвӑра валли мӗнле те пулин ӗҫ тупӑр. Ак, ман пек, вӑлта туянӑр та пулӑ тытма пуҫлӑр. Вӑхӑт иртни те сисӗнмӗ. Эсир музыкант... Сирӗн пурнӑҫ кӗввине итлемелле... Илтетӗр-и? Арман пӗви шавлать, ҫӳлте вӗҫен кайӑксем юрлаҫҫӗ... Шыв, тӗкӗр пек, тип-тикӗс... Симӗс йывӑҫсем, ешӗл курӑксем, тӗрлӗ тӗслӗ чечексем... Пурте хӑйсен сӑнӗсене шывра курса савӑнаҫҫӗ. Ларатӑн ак ҫапла итлесе те, хавасланнипе ҫӗре ыталас килет.

Н и н а. Телейлӗ ҫын эсир, Петр Петрович. Пӗчӗк япаларa пысӑккине куратӑр. Эпӗ нумая хапсӑнма вӗреннӗ. Анчах нумаййи те йӑлӑхтарчӗ. *(Пауза.)* Дьякон пек, ӗҫме пуҫлас мар-и? Ӳсӗре тӗнче урӑхла курнать, теҫҫӗ. Мӗнле сирӗн шутпа, Петр Петрович? Пуҫлас-и ӗҫме?

П е т р о в *(аяккалла пӑхса)*. Чимӗр-ха, дьякон шыва кӗме тытӑнман-и? Просвирни патне каятӑп терӗ-ҫке? Та-

рăн çĕре пынă тата. Шыва кайса вилĕ ўсĕрскер. *(Хăвăрт каять.)*

Н и н а. Эх, кичем...

В а н я, пĕве çине тухса, пĕр шлюзне çĕклет. Шыв хытăрах шавлама пуçлать.

Ваня!

В а н я. А, Нина Александровна! Салам!

Н и н а. Иртнĕ каç эсĕ ăçта пулнă? Шырарăм сана, тупаймарăм.

В а н я. Мĕн, ĕç пурччĕ-им?

Н и н а. Кимĕпе ишме каясшăнччĕ.

В а н я. Саваламан ăçта? Кашни каç унпа çўреместĕрччĕ-и?

Н и н а. Йăлăхтарчĕ.

В а н я. Кĕтмен хыпар. Килĕштерейменĕр, эппин? *(Кайма тытăнать.)*

Н и н а. Ваня!

В а н я *(чарăнса)*. Мĕн, Нина Александровна?

Н и н а. Кичем.

В а н я. Кичем пулсан, юрлăр. Сирĕн сасă уçă.

Н и н а. Юрлас килмест.

В а н я. Тата мĕнле канаш парас сире, пĕлместĕп.

Н и н а. Сана комитет председателĕ тунă, темеççĕ-и?

В а н я. Рабочисем суйласа лартрĕç.

Н и н а. Интереслĕ... Сан ĕç пĕтнĕ-и?

В а н я. Пĕтертĕмĕр.

Н и н а. Атя кимĕпе. Эсĕ хуткупăс калăн, эпĕ юрлăп. Уçланкă тĕлне çитсен, çаран çине тухăпăр... Чечек татăпăр. Астăватăн-и, ача чухне иксĕмĕр чечек татма çўреттĕмĕр? Эпĕ аннерен вăрттăн сан пата пыраттăм та, иксĕмĕр вăрмана каяттăмăр. Пĕрре эсĕ çухатрăн мана. Нумайччен: «Нина!» — тесе кăшкăртăн. Эпĕ юри пытаннăччĕ.

В а н я. Ача чухнехине мĕн асăнмалла. Ун чух эпир хамăр хушăмăрти тарăн вара курман. Халĕ ăна иксĕмĕр те лайăх куратпăр. Эсир варăн пĕр енче, эпĕ—тепĕр енче.

Н и н а. Юрату тĕпсĕр вар урлă кĕпер хывать, тенĕ пĕр поэт.

В а н я. Ĕненместĕп. Пурнăç юмах мар, Нина Александровна.

Н и н а. Анчах пурнăç хăш чухне юмахри пек илемлĕ те савăнăçлă пулать. Ку хамăртан килет.

В а н я. Тĕрĕс, савăнăçлă пурнăç тăвасси хамăртан та килет.

Нина. Эсĕ савăнăçа хăвăнтан ху сирсе яратăн.

Ваня. Пăрахăр ун çинчен калаçма. Темĕнле, килĕшӳсĕр... Эсир улпут хĕрĕ, эпĕ...

Нина. Батрак тесшĕн-и? Çук, Ваня, эсĕ халĕ çӳле çĕкленме пуçларăн... Революци вăхăтĕнче сан пек çынсем паттăрсем пулма пултараççĕ. Паттăрсене хĕрсем юратаççĕ.

Ваня. Варăн тепĕр енчисем вĕсене кураймаççĕ. Çапла-и?

Вася кĕрет.

Нина. Ку мĕнле каччă?

Ваня. Манăн тус, Анаткассисем.

Нина *(Вася çине тинкерсе пăхать)*. Ну, Ваня, каçхине каятпăр-и?

Ваня. Сăмах пама пултараймастăп, Нина Александровна.

Нина. Юрĕ, чĕнме ярăп. *(Каять.)*

Ваня. Куртăн-и, Вася?

Вася. Куртăм. Çĕлен пек авкаланать. Ман хуçа трактирĕнче çакăн пекки картина çинче пур. Кăпăклă сăра курки тытса тăрать. Шăлне йĕрнĕ, куçĕсене хĕснĕ... Кулать.

Ваня. Ку та сăра курки тытса тăраканни пекки çав. Пит чее тата. Çавăнпа вăл ман тавра явкаланма пуçларĕ юлашки вăхăтра.

Вася. Курăнать. Асту, ун серепине ан лек.

Ваня. Ан хăра, лекмĕп. Ну, ĕçсем мĕнле, Вася? Хăвăр ялсемпе калаçрăн-и?

Вася. Хĕвел ансан килме пулчĕç...

Ваня. Сĕвекассисемпе курнăçрăн-и?

Вася. Иртнĕ каç пухура пултăм... Калаçрăм. Темĕн иккĕленсе тăраççĕ... Саваламан вĕсен пуçне пăтрататъ. Хăйсен ялĕ-çке. Ĕненеççĕ. Ӳтемĕш тутарĕсене систермеллеччĕ. Вĕсем хутшăнас пек калаçатчĕç.

Ваня. Унта Мухамедьяна ятăм... Чим, эсĕ мăкшăлла пĕлместĕн-и?

Вася. Епле пĕлес мар? Карталăра виçĕ çул тарçăра пурăнтăм.

Ваня. Паллакан çынсем пур-и?

Вася. Пур.

Ваня. Акă мĕн. Вĕсем ялĕпех Теренин улпут çаранне çулма тухнă, тет. Çавсене те чĕнесчĕ. Вĕсене те улпут

çаранне çулма пăрахтармалла. Анчах ĕлкĕрейместĕн пулĕ.

Вася. Ĕлкĕреп. Тӳрĕ кайсан инçех мар. Эпĕ вĕсене тӳрех кунта ертсе килĕп. Армана пухăнатпăр-и?

Ваня. Çавăнта.

Вася хăвăрт каять.

Эх, çакăн пеккисем нумайрах пулсан... Тата... вĕрентекенни пулсан...

Мухамедьян *(чупса кĕрет)*. Иван! Сĕвекассисем улпут çаранне çулма кĕрешнĕ!

Ваня. Суятăн пулĕ.

Мухамедьян. Суймастăп. Хам куçпа хам куртăм, хам хăлхампа хам илтрĕм, Дорофеич хăй вĕсемпе каласса тăратчĕ... Мĕнле пулчĕ ку? Пĕр ял хирĕç тăрать, тепĕр ял кĕрĕшет. Қапла хăтлансан, улпут арăмĕ каллех пирĕн ĕнсе çине утланса ларать. Эх, аллах!

Ваня. Ан хăра, çулма памăпăр.

Трифон кĕрет. Унпа икĕ-виçĕ вырăс.

Мухамедьян. Трифон! Қил-ха кунта.

Трифон. Мĕн калас тетĕн, Мухамедьян?

Мухамедьян. Наççар хыпар, Трифон тус, бик наççар хыпар. Сĕвекассисем улпут çаранне çулма кĕрĕшнĕ.

Трифон. Ну?!

Мухамедьян. Ыран ирхине çулма тухаççĕ.

Трифон. Ваня, пирĕн ялсем Пугачев парнине валеçес теççĕ.

Ваня. Аван шухăш! Ытти ялсемпе каласса татăлас та, çав анчах.

Дорофеичпа Василь Васильч тата икĕ-виçĕ чăваш сцена урлă арман пĕви еннелле утаççĕ.

Трифон. Василь Васильч, ăçта каятăр?

Дорофеич. Мăкарыччи ĕçме. Утă çулма кĕрĕшрĕç.

Василь Васильч. Атя, Трифон, пирĕнпе. Дорофеич тасине лартма пулчĕ.

Трифон. Ан кай, Василь Васильч.

Василь Васильч. Мĕншĕн?

Трифон. Пурпĕр çултармастпăр!

Дорофеич. Авă мĕнле... Хăвăр çуласшăн мар та, çынсене те çултарасшăн мар-и?.. Атя, Василь Васильч, ан калаç унпа.

Т р и ф о н *(çулне пӳлет)*. Ямастăп! Улпут патне çывхарнă ан пултăр!

Д о р о ф е и ч. Трифон! Мĕн хăтланатăн? Тĕрмене ларас тетĕн-им?

В а н я *(Дорофеича сирсе ярса)*. Дорофей Дорофеич! Акă мĕн: эсир кайăр, ĕçмелли хатĕрлĕр, эпир пырăпăр.

М у х а м е д ь я н. Ара... Эсир кайăр кунтан... Авантарах пулĕ.

Д о р о ф е и ч. Ку... ку — бунт!

В а н я. Нумай калаçса ан тăрăр. Паян сăмахласа ывăнтăр пулĕ. Урăра çапса хуçиччен вĕçтерĕр кунтан! Триша, ан тив. Кайччăр каяс çĕре. Кайран хăйсемех ӳкĕнĕç.

Д о р о ф е и ч. Авă Саваламан таврăнать... Кăтартĕ вăл сире бунт!

Шăнкăрав сасси. Чăматан йăтса С а в а л а м а н кĕрет. Унпа пĕрле В е р а.

С а в а л а м а н. Çитрĕмĕр, Вера Андреевна... Пĕве урлă каçсанах Глинскисен çурчĕ-çĕрĕ пулать.

Д о р о ф е и ч. Пит вăхăтра çитрĕр, Гаврил Романович. *(Алă парать.)* Чипер таврăнтăр-и? *(Верăна алă парса.)* Паллашар... Дорофей Дорофеич... Глинскисен управляющийĕ. Гаврил Романович, пулăшăр, тархасшăн... Пĕтереççĕ...

С а в а л а м а н. Мĕн пулнă?

Д о р о ф е и ч. Пирĕн ялсем улпут çаранне çулмалла мар тесе йышăнчĕç.

С а в а л а м а н. Мĕнех вара? Йышăнччăр. Урăх ялсене тытăр.

Д о р о ф е и ч. Сирĕн ялсене тытрăм та, анчах кусем *(алăпа кăтартса)* хăваласа яратпăр тесе хăратаççĕ. Çултарасшăн мар.

С а в а л а м а н. Мĕншĕн?

Д о р о ф е и ч. Хăйсем валеççе çуласшăн.

С а в а л а м а н *(Верăна)*. Куратăр-и, мĕн хăтланаççĕ? Ăнлантарап-ăнлантарап, усси çук. Да, тĕттĕм халăха ирĕклĕх пăсать. *(Дорофеича.)* Ан хăрăр, Дорофей Дорофеич, никам та чараймĕ. Кансĕрлекенсене тĕрмене ăсатăпăр. *(Ыттисене.)* Илтрĕр-и? Кансĕрлекенсене — тĕрмене! Вера Андреевна, тепре куриччен. Пирĕн яла чăваш кĕввисем çырма пырăр. *(Алă парать.)*

П е т р о в *(кĕрет)*. Гаврил Романович! Салам! Ну, съезд мĕнле иртрĕ?

Саваламан. Лăпкă иртрĕ. Пĕр ыйтупа çеç чăрмав пулчĕ.

Петров. Çĕр пирки-и?

Саваламан. Çук, шкулсенче «Закон божие» вĕрентесси пирки. Пĕрисем — вĕрентмелле теççĕ, теприсем — хирĕç.

Петров *(кулса)*. Пирĕн дьякона суйласа ямалламĕн. Вăл «Закон божие» хирĕç калană пулĕччĕ. Халăх наказĕ çунчĕ пулать.

Саваламан. Леш, улпут çĕрĕсем çинчен-и? Да, ку ыйтăва съезд кун йĕркине кĕртмерĕ... Каçарăр, тархасшăн... Сире паллаштармарăм та... Ку — Нина Александровнăсен ялĕнчи учитель.

Петров *(алă парса)*. Петр Петрович.

Вера. Цветкова.

Саваламан. Вера Андреевна консерваторинче Нина Александровнăпа пĕрле вĕренет... Пирĕн таврари вак халăхсен юрă кĕввисене çырма килнĕ. Ну, эпĕ кайрăм. *(Каять.)*

Петров. Аван ĕç. Илемлĕ юрăсем юрлаççĕ ку таврари инородецсем.

Дорофеич. Чимĕр, эпир сире илме лаша ятăмăрçке?

Вера. Манăн телеграммăна вăхăтра илеймерĕр пулĕ терĕм те... Пристаньре эпĕ Саваламанпа паллашрăм...

Дорофеич. Эккей... Вăхăтра лаша яраймарăмăр. *(Мухамедьяна.)* Сан пирки пулчĕ ку киревсĕр ĕç. *(Чăматанне йăтать.)* Каяр, Вера Андреевна. *(Василь Васильча.)* Эсир кантура пырăр.

Вера. Дорофей Дорофеич, сирĕн ĕç нумай пулĕ... Мана çамрăксем ăсатĕç.

Дорофеич. Юрĕ эппин. Ман чăнах та васкамалла. Каяр, Василь Васильч. Сирĕн ĕçе пĕтерес те, тĕттĕм пуличчен хутора кайса килес... Ой-ой... Унта та тамаша.

Василь Васильч. Эсир утăр... Эпир хăваласа çитĕпĕр... *(Дорофеич каять. Пауза.)* Трифон, эсир Пугачев парнине чăнласах валеçес тетĕр-и? Саккунлă пулать-ши ку?

Лида сасси. Атте! Апат пиçнĕ...

Петров. Халех, хĕрĕм. Сыв пулăр, Вера Андреевна. Вăхăт пулсан, пирĕн пата та пырса ларăр. Питĕр хыпарĕсене итлес килет.

Вера. Пырăп, Петр Петрович.

Петров. Эсир сăмахлăр. Пысăк ĕçе шухăшларах

тумалла. *(Василь Васильч çумĕнчен иртсе кайнă чух чарăнса.)* Саккуна ăна, саккунçăсем кăлармасан, халăх хăй кăларать. Халăх саккунĕ саккунлă пулать, Василь Васильч. *(Каять.)*

Вера. Қалаçăр, калаçăр.

Пурте пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ.

Мĕн хăймасăр тăратăр? *(Пауза.)* Манран вăтанатăр-им? Юрĕ, эпĕ сире кансĕрлемĕп... Ну, кам мана ăсатса ярать?

Пĕри те чĕнмеççĕ.

Мĕн чĕнместĕр? Закон çинчен шухăшлатăр-и? Илтмерĕр-и, учитель мĕн каларĕ? *(Ваньăна.)* Сирĕн ятăр мĕнлеччĕ çак?

Ваня. Ваня.

Вера. Ăсатăр мана, Ваня.

Ваня вырăнтан хускалмасть.

Чăматана йăтăр...

Ваня Вера патне пырса чăматанне йăтать.

Қаяр. *(Каялла çаврăнса.)* Чипер каç пултăр, юлташсем!

Ваньăпа Вера каяççĕ.

Василь Васильч. Пăхма улпут тавраш пек, сăмахласса...

Трифон *(каякансем еннелле пăхса)*. Юлташсем терĕ.

Мухамедьян. Хăюллă хĕр!

Чаршав

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Глинскисен çуртĕнчи балконлă пӳлĕм. Виçĕ алăк. Рояль. Стена çинче авалхи портретсем. Чаршав уçăличченех «Интернационал» кĕввисенчен йĕркеленĕ вариаци илтĕнет.

Нина *(рояль каласа)*. Илемлĕ музыка-и, маман?

Глинская *(алăк патĕнче тăрать)*. Тĕлĕнмелле кĕвĕ. Чуна хĕпĕртеттерет.

Нина. Қăмăла каять-и?

Глинская. Кала, Ниночка, кала! Мĕнле композитор çырнă ăна?

Нина *(каласа)*. Пĕлместĕп... *(Каласан-каласан, сасартăк чарăнать те, клавишсем çине выртса, макăрма тытăнать.)*

Глинская. Мĕн пулчĕ сана, Ниночка? Мĕншĕн макăратăн?

Нина. Пĕлетĕн-и, мĕн каларăм эпĕ, маман?

Глинская. Пĕлместĕп... Анчах пит савăнăçлă кĕвĕ.

Нина. Савăнăçлă тетĕн?! Ку — пытару маршĕ!

Глинская. Мĕн аташатăн? Пытару маршĕ савăнăçлă пулать-и?

Нина. Пирĕншĕн пытару маршĕ! Илтетĕн-и? Пирĕншĕн! Революци хумĕ пире çак маршпа çĕр çинчен шăлса ывăтĕ.

Глинская. Эсĕ чирлемен-и, Нина? Аташа пуçланă пулас...

Нина. Çук, маман, чирлемен. Эпир хамăра пытарма виле шăтăкĕ чаватпăр. Тен, шăтăка выртас вăхăт та инçех мар пулĕ? *(Каллех калать.)* Эпир çĕрпе хуплансан, халăх, çак хаваслă кĕвве юрласа, пирĕн виле тăприне таптаса малалла утĕ.

Глинская. Эсĕ ялта пурăнса йăлăхрăн пулĕ, çавăнпа пуçна кирлĕ мар шухăшсем кĕреççĕ. Уçăлма хулана кайса кил.

Нина. Хулара та çак кĕвĕ. Кирек ăçта кайсан та, çак кĕвĕ янăрать.

Глинская. Çапах та каласамччĕ, тархасшăн, мĕнле кĕвĕ калатăн эсĕ?

Нина. Революци маршĕ ку, маман! Пусмăрлăхра пурăнакан халăхсен гимнĕ! Ăнлантăн-и?

Глинская. Сана ăнланма хĕн. Мĕншĕн кирлĕ мара каласа хăвна хурлантаратăн?

Нина. Пурăнас килет, анне! Çутă хĕвел хĕлхемĕпе ăшăнас килет, илемлĕ тĕнчене пăхса савăнас килет!.. Ку кĕвĕ этеме çапăçма йыхăрать. Э, ăнланмастăн эсĕ мана, анне. Эсĕ пурнăçа пурăнса ирттернĕ ĕнтĕ. Эпĕ — çамрăк, тин çех пурăнма пуçланă, анчах революцин вăйлă тăвăлĕ мана малалла утма кансĕрлет. *(Калама пăрахса, сиксе тăрать.)* Эх! Ăмăрткайăк чĕрни пулнă пулсан, ÿчĕсене чава-чава илĕттĕм. Пĕтерчĕç вĕсем ман пурнăçа, татрĕç илемлĕ çамрăк ĕмĕре.

Глинская. Ан хурлан, хĕрĕм. Пурăна киле самана

лăпланĕ-ха. Ав, Питĕрте правительство рабочисене мĕн тунă?

Нина. Тискер вăй, улăп çĕкленет, маман! Çав улăп— халăх. Çĕнтерес çук ăна Керенскипе Саваламансем.

Дорофеич *(кĕрет)*. Ырă кунпа ырă сунатăп, Варвара Кирилловна... *(Аллине чуптăвать.)* Нина Александровна. *(Пуç таять.)*

Глинская. Мĕн пит хыпаланса килтĕн, Дорофеич?

Дорофеич. Самана пăсăлнăçемĕн пăсăлса пырать, Варвара Кирилловна.

Нина. Эпĕ сире кансĕрлетĕп пулĕ.

Глинская. Çук, ларах, Нина. *(Дорофеича.)* Ну, лар та каласа пар.

Дорофеич *(ларса)*. Малтанах — лайăх мар хыпар. Иртнĕ каç такамсем арман пĕви çинче Угрюмова хĕненĕ. Арăмĕ килсе каларĕ. Халĕ килĕнче аран сывласа выртать, тет.

Нина. Пурăна киле сана та ислетĕç ак. Çапа пĕлмен пушă хăйне çаврăнса тивнĕ, тет. Тупăннă икĕ тăм пуç. Вырăспа чăваша та вăрçтараймаççĕ. Чăлах провокаторсем эсир! Маман, эпĕ каятăп.

Глинская. Каях. Анчах Вера Андреевна ăçта? Паян иртенпех курман ăна.

Дорофеич. Халĕ те таврăнман-и? Вăл паян хĕвел тухнă тухманах тăчĕ те шыва кайса кĕчĕ, унтан юрă çырма кайрĕ. Эпĕ лаша кӳлсе парам-и терĕм те, кирлĕ мар, терĕ. Пит кăмăллă хĕр Вера Андреевна. Кашни çынпа калаçать, ачасене ачашлать, юрă юрлаттарать...

Нина *(алăк патне пырса)*. Даша! Вера Андреевна таврăнсан, мана систер... Эпĕ паркра пулатăп. *(Каять.)*

Глинская. Ну, сĕвекассисем çулма тухрĕç-и?

Дорофеич. Тухмарĕç, Варвара Кирилловна...

Глинская. Хамăр ялсемпе тепĕр хут калаçса пăхмарăн-и?

Дорофеич. Калаçрăм. Çулас текенсем пур та, анчах комитет хушмасăр, улпут ĕçне ĕçлеместпĕр, терĕç.

Глинская. Мĕнле комитет?

Дорофеич. Рабочисен комитечĕ майли. Халĕ ялсенче те комитетсем тăва пуçланă... Хамăр ял комитетне пирĕн Ваньăна та суйланă, тет.

Глинская. Халех расчет пар. Мĕн ăна халиччен тытса пурăнатăн?

Дорофеич. Мĕн? Ваньăна расчет-и? Унтан, Варвара Кирилловна, Саваламан та хăрать. Ваньăпа йăваш-

рах калаç, тет. Ваня халь, мĕнле калас, власть пекки... Вăл манран та вăйлăрах... Ун сăмахне рабочисем итлеç-çĕ. Çавăнпа чеерех пулмалла. Пăлхав-мĕн пуçлансан, темĕн туса хурĕç... 1905-мĕш çулта утă капанĕсем ял-кăшнине манма юрамасть... Ун чухне сире хĕçпăшаллă хурал хӳтĕлерĕ, халĕ кам хӳтĕлĕ?

Глинская. Салтаксем çук-им?

Дорофеич *(аллине сулса)*. Эй, хальхи салтак... Фронтра мĕн хăтланаççĕ, илтнĕ пулĕ? Командирсем хушнине итлемеççĕ, тет. Тата пăшалĕсене çĕклесех килĕ-сене таврăнаççĕ.

Глинская. Тĕлĕнмелле... Çуркунне Саваламансе-не урра кăшкăрсах йышăнчĕç, халĕ...

Дорофеич. Халĕ, тĕл пулсан та, пуçĕсене аяккал-ла пăраççĕ. Саваламансен авторитечĕ пĕтрĕ, Варвара Кирилловна... Халĕ Ваньăсем çӳлелле хăпарма пуçла-рĕç.

Глинская. Хуторти ĕçсем мĕнле?

Дорофеич. Халĕ çеç унтан таврăнтăм.

Глинская. Дарйăна арестленĕ-и?

Дорофеич. Ман шутпа, Варвара Кирилловна, ку ĕçе пăсни çеç пулчĕ.

Глинская. Мĕншĕн?

Дорофеич. Рабочисене арестпа хăратаймăн. Лăп-ланас вырăнне вĕсем стачка пуçланă.

Глинская. Стачка?

Дорофеич. Стачка çав. Ĕçлеме пăрахнă. Паян ĕç-леме пуçлаччăр тесе, шалу та ӳстерсе пăхрăм,— пулăш-марĕ. Договор çине алă пусмасан, калаçмастпăр та, теççĕ.

Глинская. Мĕнле договор?

Дорофеич. Темĕн те пĕр çырса тултарнă.

Глинская. Алă пусрăн-и?

Дорофеич. Мана шанмаççĕ. Улпут майри хăй алă пусмалла, терĕç. Варвара Кирилловна, алă пусатăрах пулĕ. Икĕ инкекрен çăмăлтараххине суйлас пулать.

Глинская. Мон дье!* Мĕн тăвас, кайăпăр эппин...

Дорофеич. Тархасшăн, рабочисемпе йĕркеллĕрех калаçăр вара, Варвара Кирилловна.

Глинская *(çилленсе)*. Ан вĕрент мана! *(Тăрать, алăк патнелле каять.)*

Дорофеич *(ун хыççăн утса)*. Самани çавнашкал,

---

* Турăçăм (французла).

Варвара Кирилловна... Темĕн тума пултарассĕ. Хăшпĕр çĕрте улпут çаранĕсене çулаççĕ, тет, тыррисене валеçсе выраççĕ, тет.

Дорофеичпа Глинская каяççĕ. Ваня кĕрет.

Ваня *(тепĕр алăк патне пырса)*. Даша! Дашенька! Кил-ха кунта.

Даша кĕрет.

Вера Андреевнăна кала, пĕр самантлăха тухтăр. Ваня чĕнет, те.

Даша. Вера Андреевна килте çук, Ваня.

Ваня. Эх, питĕ кирлĕччĕ. *(Кайма тăрать.)*

Даша. Ваня!

Ваня *(чарăнса)*. Мĕн, Даша?

Даша. Иртнĕ каç ăçта пултăн?

Ваня *(çиллене)*. Сана мĕн тума кирлĕ эпĕ ăçта пулни?

Даша. Мана кирлĕ мар та... Нина Александровна темиçе хут сана шырама ячĕ.

Ваня. Мĕн тума кирлĕ пулнă эп ăна?

Даша. Ваня! Сыхлан. Пĕтерет вăл сана.

Ваня. Кирлĕ мара ан калаç. Епле пĕтертĕр мана?

Даша. Сисетĕп эпĕ...

Ваня. Эпĕ те сисетĕп, Дашенька. Ан хăра, эпĕ вăл камне лайăх пĕлетĕп. Ну, тепре куриччен. *(Кайма тытăнать, чарăнать.)* Эх, кăшт çеç манман. Вася сана салам калама хушрĕ.

Даша. Чăнах-и? Ăçта куртăн эс ăна?

Ваня. Ăçта курни сана кирлĕ мар, анчах, Дашăна курсан, хĕрӳллĕ салам кала, терĕ. Чим, хăçан паллашма ĕлкĕрнĕ-ха эс унпа?

Даша. Пĕркун вăл сан патна килчĕ, эсĕ таçта кайнăччĕ. Çавăн чухне урамра калаçса тăтăмăр.

Ваня. Аван ача! Санран салам калас-и?

Даша. Кала. Ӳлĕм сан патна килсен, мана систер вара. Юрать-и?

Ваня. Юрать.

Вера кĕрет.

Даша. Ак Вера Андреевна та çитрĕ. Вера Андреевна, Нина Александровна паркра. Эсир таврăнсан, систерме хушрĕ. Калас-и?

Вера. Ҫирлӗ мар. Варвара Ҫирилловна килте-и?

Даша. Вӗсем управляющипе хутора кайрӗҫ. Ҫайса сире валли апат хатӗрлеме хушам эппин. Ӑҫта ҫиетӗр: столовӑйӗнче-и е верандӑра?

Вера. Ан чӑрман, Дашенька. Ман ҫиес килмест.

Даша каять.

Сывӑ-и, Ваня!

Ваня. Салам, Вера Андреевна... Эпӗ сирӗн пата килсеттӗм.

Вера. Ӗҫ пур-им?

Ваня. Иртнӗ каҫ тетя Дарйӑна арестленӗ.

Вера. Саваламан ӗҫлет. Пирӗн вӑя чакарма хӑтланать... Ӑҫта ларать Дарья Афанасьевна? Вулӑсра-и?

Ваня. Уеса илсе кайрӗҫ... Вулӑсра пулнӑ пулсан, эпир ӑна паянах хӑтарнӑ пулӑттӑмӑр...

Вера. Хула Советне пӗлтерес пулать.

Ваня. Юрать, хам кайса килӗп е Мухамедьяна ярӑп.

Вера. Сирӗн кунтан кайма юрамасть: ыран ирех хутора кайса рабочисемпе калаҫӑр. Дарья Афанасьевнӑна арестленӗшӗн вӗсем тем тума пултараҫҫӗ.

Ваня. Петр Петрович хулана каятӑп терӗ. Вӑл Совета кӗрсе тухма пултарать те...

Вера. Пит аван. Петр Петрович шанчӑклӑ ҫын.

Ваня. Ну, эпӗ кайрӑм, Вера Андреевна. *(Алӑк патнелле утать.)*

Вера. Тӑхта-ха, эпӗ Совета ҫыру ҫырам.

Ваня чарӑнать.

*(Вера, сӗтел хушшине ларса, ҫыру ҫырма пуҫлать. Ҫырнӑ май.)* Ваня, мӗншӗн эсир улпут ҫаранне ҫултарасшӑн мар?

Ваня. Епле мӗншӗн пултӑр? Утӑ улпута ан лектӗр тетпӗр?

Вера. Паян эпӗ Ҫураккассинче пултӑм. Ҫураккассисем ятлаҫҫӗ сире, Мухамедьянпа иксӗре: утти те вӑхӑтра ҫулмасан пӗтет, укҫа та ӗҫлесе илейместпӗр, теҫҫӗ. Вӗсем утӑ ҫулма кӗрӗшесшӗн...

Ваня. Ҫӗрӗшчӗр, анчах эпир вӗсене ҫулма памастпӑр, хӑваласа яратпӑр.

Вера. Ҫаймасан?

Ваня. Пӗтӗм ялпа тухатпӑр.

В е р а. Чăвашпа вырăса хирĕçтерес тетĕр-и? Саваламансене çавă кирлĕ те.

М у х а м е д ь я н кĕрет.

М у х а м е д ь я н. Шырарăм, шырарăм сана, Иван... *(Верăна курса.)* Салам, Вера Андреевна!

В е р а. Салам, Мухамедьян Валиевич!

М у х а м е д ь я н. Хуçисем килте çук-и?

В а н я. Никам та çук.

М у х а м е д ь я н. Ĕç пăсăла пуçларĕ, Иван. Ӳтемĕш тутарĕсем улпут çаранне çулма кĕрĕшнĕ. Ыран Пугачев çаранне ялĕпех тухаççĕ.

В а н я. Комитет мĕншĕн чармасть?

М у х а м е д ь я н. Комитет та халăх майлă.

В а н я. Эсĕ мĕн пăхса тăнă? Эсĕ Ӳтемĕш комитечĕн членĕ вĕт...

М у х а м е д ь я н. Комитет членĕ те бит, сасăланă чух пĕр эпĕ çеç хирĕç алă çĕклерĕм...

В а н я. Мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ?

М у х а м е д ь я н. Пĕлместĕп, Иван. Кунта килнĕ чух шухăшларăм-шухăшларăм, нимĕн те шухăшласа тупаймарăм...

В а н я. Куракkассисем те ыран çулма тухасшăн...

М у х а м е д ь я н. Эх, аллах! Ӳкĕтлерĕмĕр, ӳкĕтлерĕмĕр, усси пулмарĕ... Акă мĕн, Иван: ыран сирĕн ялсене пухас та, утă çулма тухакансене çаран çинчен хăваласа ярас... Ял сирĕн пысăк, Ӳтемĕш тутарĕсемпе Куракkасси чăвашĕсене...

В а н я. Мĕн эс, ялпа яла çапăçтарасшăн-и?

М у х а м е д ь я н. Тĕрĕс, чăн-чăн çапăçу пулма пултарать... Ман шухăш юрăхсăр, урăхла тăвас пулать... Мĕн тумалла, хам та пĕлместĕп... *(Иртсе каякан Дашăна курса.)* Даша, çăвар типрĕ те...

Д а ш а *(сцена хыçĕнче)*. Кухньăра кăвас пур, кайса ĕç.

М у х а м е д ь я н каять.

В е р а *(Ваньăна çыру парса)*. Совет председательне патăр Петр Петрович... Акă мĕн, Ваня: паянах Куракkасси, Ӳтемĕш, хăвăр ял комитет членĕсене пухăр та улпут çаранне çулма йышăнăр.

В а н я. Мĕн? Халиччен улпут çаранне çулма ан тухăр теттĕмĕр, сасартăк... Кун хыççăн халăх пирĕнпе калаçма та пăрахĕ.

В е р а. Йăнăша вăхăтра тӳрлетсен, халăх сире ытларах ĕненĕ. Эсир ак мĕнле тăвăр: улпут çаранне çулăр, анчах утă капанĕсене вулăс комитечĕн аллине парăр.

В а н я. Ак ку ăслă шухăш! *(Алăк патне пырса.)* Мухамедьян, ăçта эс?

М у х а м е д ь я н *(сцена хыçĕнче)*. Эп кунта!

В а н я. Кил-ха, кил!

М у х а м е д ь я н *(сцена хыçĕнче)*. Хасĕр пыратăп...

Мухамедьян кĕрет.

В а н я. Акă мĕн, тусăм: улпут çаранне çулас пулать.

М у х а м е д ь я н. Мĕн, мĕн? Эс аташма пуçламан пулĕ те?..

В а н я. Анчах çулнă утине вулăс комитечĕн аллине илетпĕр. Ăнлантăн-и?

М у х а м е д ь я н. Тухта, тухта элĕ... Аха, ăнлантăм!.. Ну, пуç та сан, Иван!

В а н я. Таврари комитет членĕсене паянах пуçтарма пулать-и?

М у х а м е д ь я н. Пуçтаратпăр... халех хура ăйăра утланатăп та вĕçтеретĕп. Шыв арманне пухăнмалла-и?

В а н я. Çавăнта.

М у х а м е д ь я н. Сывă пулса тăрăр-ха эппин, Вера Андреевна.

В е р а. Тепре куриччен, Мухамедьян Валиевич.

Мухамедьян тутар такмакĕ юрлакаласа тухса каять.

В а н я *(кăшт чĕнмесĕр тăнă хыççăн)*. Ăслă, ăслă шухăш! Ăс çитмен вĕт çакна шухăшласа кăларма...

В е р а. Эсĕ мĕн çинчен, Ваня?

В а н я. Ара, сирĕн шухăшран тĕлĕнетĕп мар-и... Çаранне те вăхăтра çулатпăр, ути те улпута лекмест...

В е р а. Эпĕ шухăшласа кăларман ăна, Ваня, ялти стариксем çапла тăвасшăн... Ну, халĕ кай... Нина Александровна килме пултарать...

В а н я *(кайма тытăнать, чарăнать)*. Вера Андреевна...

В е р а. Мĕн, Ваня?

В а н я. Эсир çĕрле, тархасшăн, пĕччен ан çӳрĕр. Ăçта та пулин каймалла пулсан, мана систерĕр.

В е р а. Арестлесрен хăратăн-им? Ан хăра. Сирĕнсĕр пуçне эпĕ камне никам та пĕлмест.

В а н я. Уншăн мар. Ялта тĕрлĕ çын пур... Сирĕн пек чипер хĕре...

Вера. Ан вăтантар-ха мана. Ман пекки нумай... Ак, Нина, чăнах та, чипер вара... Сан кăмăлна каять-и вăл?

Ваня. Вася калашле, картин çинче сăра курки тытса тăракан хĕр пекки ĕнтĕ.

Вера *(чӳречерен пăхса)*. Куратăн-и, епле утать. Арçынсем унашкал хĕрсене юратаççĕ пулас?

Ваня. Эпĕ, Вера Андреевна, урăххине юратрăм.

Вера. Чипер-и?

Ваня *(Вера çине пăхса)*. Чипер... *(Сасартăк.)* Ну, каç пуличчен... *(Кайма тăрать.)*

Вера. Ваня...

Ваня *(чарăнса)*. Мĕн, Вера Андреевна?

Вера *(тытăнса тăрса)*. Хăвăртрах кай... Нина ан куртăр.

Ваня. Çывхарать-им?

Вера. Чарăнчĕ... Чечек татать...

Ваня *(чӳрече патне пырса)*. Татнă чечекне ывăтрĕ. Хумханать...

Вера. Виçĕмкун кимĕ çинче ларса пынă чух сан çинчен куçне илме пĕлмерĕ.. Сисрĕн-и?

Ваня. Сисрĕм... Вăйĕ çитсен, хăй аллипе пăвса вĕлерĕччĕ те мана...

Вера. Кай хăвăртрах... Килет.

Ваня *(ассăн сывласа)*. Килет çав. Тĕттĕм пулсан, пырăр вара. *(Вера çине пăхать, хăвăрт тухса каять.)*

Вера нотăсем кăларать, рояль умне ларса, чăваш кĕвви калать. Нина кĕрет.

Нина. Верочка! Çапла хăтланма юрать-и вара?

Вера *(калама чарăнать, шикленсе)*. Мĕн? Эпĕ нимех те туман-çке?..

Нина *(Верăна чуптуса)*. Тĕттĕм пулсан таврăнатăн, çутăлнă-çутăлманах ĕçе тытăнатăн. Канас пулать кăшт. Тата мĕншĕн çуран çӳретĕн? Лаша кӳлтер. Ан вăтан, ху килĕнти пек пул.

Вера. Тавтапуç, Ниночка. Итле, мĕнле илемлĕ кĕвĕ çырса илтĕм паян. *(Калать.)* Ку хĕр йĕрри кĕвви. Кăна хĕр туйра юрлать, тет.

Нина. Хурлăхлă кĕвĕ.

Вера. Чăвашсен хĕр вăрлас йăла халĕ те пĕтмен, тет. *(Каласа.)* Çак кĕвве тĕпе хурса, «Хĕр йĕрри» ятлă соната çырас тетĕп.

Нина. Кичем ан пултăр.

Вера *(хаваслакса)*. Кичем пулмĕ. Сонатăра чăваш хĕрĕн историне кăтартас. Малтан хĕр — чура, пурнăç ваййи... Унтан пурнăç улшăнать... Хĕр савнине кайма ирĕк илет. Савăнăçлă, телейлĕ пурнăç пуçланать, савăнăçлă çемĕсем илтĕнеççĕ. *(Калать.)* Соната вĕçĕ марш пек пулмалла. *(Калать. Кĕввинче «Интернационал» çемми илтĕнет.)* Аван-и?

Нина. Вĕçĕнче ташă кĕвви кирлĕ мар-и?

Вера. Çук, марш кирлĕ. *(Каласа.)* Ĕмĕр чуралăхра пурăннă хĕр пысăк хулара, çӳллĕ çуртсем хушшинче, асфальт сарнă урампа, йăл-йăл кулса, телейлĕ пурнăçпа савăнса, мăнкăмăллăн утать. Пысăк оркестр марш калать, телейлĕ хĕр савăнăçлă юрă юрлать. *(Вера хĕпĕртесе рояль калать.)*

Саваламан кĕрет, итлесе тăрать. Вера калама чарăнать.

Саваламан *(алă çупса)*. Браво! Браво! Мĕнле марш ку? Пит савăнăçлă?

Вера. Чăваш хĕрĕн триумфĕ!

Саваламан. Салам, Нина Александровна... *(Алă парать.)* Вера Андреевна... *(Алă парать.)* Сирĕн куç умне çак тумпа курăннăшăн каçарăр. Паян иртенпех вулăс тăрăх çӳрерĕм. Безобразие! Лашасене çара парасшăн мар. Лаша пухас вырăнне вăрçа пĕтермелле, теççĕ. Кашни ялта батраксемпе чухăнсен комитечĕсене суйланă. Правительство комиссарĕсене итлемеççĕ, комитет хушнине çеç тăваççĕ. Хăçан суйлама ĕлкĕрнĕ вĕсене? Тĕлĕнмелле! Халиччен большевиксен сĕрĕмĕ пирĕн вулăсра сисĕнместчĕ, сасартăк — комитет!

Нина. Гаврил Романович! Пăрахăр хĕрарăм ушкăнĕнче лашасемпе комитетсем çинчен калаçма. Хĕрсемпе калаçма урăх тема тупаймарăр-им? Эпир политикăпа интересленместпĕр. Çапла-и, Верочка?

Вера. Тĕрĕс...

Саваламан. Каçарăр, тархасшăн. Вулăсра ĕçлеме пуçланăранпа пуç анăра пуçларĕ.

Нина. Авлансан та арăмупа лаша çинчен калаçас тетĕн-и? Пĕлетĕн-и, Верочка... Гаврил Романович мана качча илес, тет. Арăм пулма ыйтса пăхрĕ.

Вера. Чăнах-и?

Нина. Ĕç манра çеç тытăнса тăрать.

Саваламан. Кунтан кулма кирлĕ мар, Нина Александровна. Эпĕ чăнласах, чунтан...

Нина. Пĕлетĕп. Çавăнпа кулса калаçмастăп. Анчах

мана пĕр япала тĕлĕнтерет: эпĕ пуян улпут хĕрĕ, эсир — социалист.

Вера. Мĕнле социалист?

Саваламан. Эпĕ социалист-революционерсен партинче тăратăп.

Нина. Халиччен вăл пирĕнпе — улпутсемпе — кĕрешнĕ,— халĕ хăй улпут хĕрне качча илесшĕн... Хăвăр тăшмана ыталас тетĕр-и вара? Пикантно! Мĕнле шухăшлатăн кун пирки, Вера?

Вера. Нимĕн калама та пĕлместĕп. Эпĕ политика ĕçне хутшăнман. Эпĕ — композитор...

Саваламан. Нина Александровна та политикăна ăнланаймасть. Политика вăл — уйрăм япала.

Нина. Қалăпăр, эпĕ сире качча пырам... Анне вилсен, имени пире куçать... Эсир вара пуян улпут пулатăр. Социалист-улпут! Хăвăрпа хăвăрăн кĕрешмелле пулать-и вара? Хăвăр çĕре хăвăрăнах туртса илмелле пулать-и?

Саваламан. Çĕр çинчен калаçма ир. Вăл ыйту Учредительнăй собрани мĕнле йышăннинчен килет.

Нина. Çавăнпа эпĕ те сире качча тухма Учредительнăй собрани пухăниччен тăхтас терĕм.

Саваламан. Мĕнле ăнланмалла куна?

Нина. Туя хăвăртрах тăвас тетĕр пулсан, учредилкăна хăвăртрах пухăр.

Саваламан. Эсир кулатăр пулас манран?

Даша кĕрет.

Даша. Гаврил Романыч! Сире Петр Петрович курасшăн. Самантлăха тухма ыйтать.

Саваламан. Çын патĕнче те канлĕх памаççĕ, шыраса тупаççех. Қала: вăхăчĕ çук те, ĕçĕ пулсан, ыран вулăса пытăр.

Нина. Мĕншĕн старике çуран уттармалла? Даша, кала, Петр Петрович кунта кĕтĕр.

Даша каять.

Эпир Верочкăпа столовăя каятпăр. Қалаçса пĕтерсен, эсир те пырăр. Қаяр, Верочка.

Верăпа Нина каяççĕ. Петров кĕрет.

Петров. Салам, Гаврил Романович.

Саваламан. Тĕлĕнетĕп сиртен, Петр Петрович. Çын

хăнана килет, эсир... Вулăса пыма пултараймастăр-им?

Петров. Ķаçарăр, Гаврил Романович. Ёçĕ питĕ васкавлă. Миçе хут вулăса пытăм, сире тĕл пулаймарăм.

Саваламан. Леш, шкул юсасси пирки пуль-ха?

Петров. Çав ĕçпех.

Саваламан. Тупнă васкавлă ĕç! Смета туса патăр-и?

Петров. Çуркуннех панă. Астумастăр-им?

Саваламан. Пăхса тухăпăр.

Петров. Пит вăрăма каять, Гаврил Романыч. Юсамалли нумай. Вĕренме пуçличчен туса пĕтересчĕ.

Саваламан. Пĕчĕк ыйтупа ман пуçа ан çавăрăрха, Петр Петрович. Ман пуçра патшалăх ĕçĕсем.

Петров. Шкул ĕçĕ те пĕчĕк ĕç мар, Гаврил Романыч. Революци пулчĕ, ачасем çаплах çĕрĕк шкулта. Ман шутпа, вĕсене вĕренме пысăк, çутă шкулсем тумалла. Ачасен ылтăн хĕвел çутипе савăнса вĕренмелле!

Саваламан. Эсир фантазер, Петр Петрович...

Петров. Мĕн ку? Революци пулчĕ, пурнăç улшăнăвĕ халăха курăнмасть... Сирĕн, Гаврил Романыч, Керенский патне доклад çырса ямалла: «Çапла-çапла, шкулсем начар, хресченсен çĕр сахал, халăх кӳренет, улпут çĕрĕсене туртса илмелле»,— тесе çырăр.

Саваламан. Итлĕр-ха, Петр Петрович... Эсир ухмахлана пуçланă-и?

Петров. Эпĕ, паллах, политика тĕлĕшпе профанха... Анчах халăх сире, ман шутпа, ахальтен ятламасть. Учредительнăй собрание ку таранччен пухаймаççĕ, теççĕ.

Саваламан. Сирĕн шутпа, Учредительнăй собрание пухасси манран килет-и?

Петров. Сиртен те килет. Правительство пуçлăхĕ как-никак сирĕн парти членĕ. Эсир хăвăр юлташа хистеме те пултаратăр.

Саваламан. Охо! Сире те большевизм сĕрĕмĕ тивнĕ пулас?

Петров. Нимĕнле сĕрĕм те тивмен мана. Эпĕ халăх хушшинчи сăмаха çеç каларăм. Халăх сăмахне тăна илмен парти—парти-и вăл? Ун пек партирен тухас пулать.

Саваламан. Большевиксен партине çырăнмалла мар-и тата?

Петров. Большевиксен партинче тăни, ман шутпа,— хисеплĕ ĕç. Вĕсем халăх шухăшне пĕлеççĕ, халăха тĕрĕс çулпа яма тăрăшаççĕ.

С а в а л а м а н. Эсир большевик, Петр Петрович.

П е т р о в. Сирӗн большевиксен партине ҫыранмалла. Тепӗр тесен, большевиксем сире хӑйсен партине илес ҫук та-ха...

С а в а л а м а н. Эсир ҫырӑнма та ӗлкӗртӗр-и?

П е т р о в. Мӗнле калас? Большевиксен ячейки кунта пулсан, турткалансах тӑмӑттӑм.

С а в а л а м а н. Апла пулсан — хӑвӑр валли тупӑк хатӗрлӗр. Эсир пурнӑҫшӑн пӗтнӗ ҫын.

П е т р о в. Ку ыйту тавлашуллӑ, Гаврил Романыч. Ман шутпа, сирӗн ак, чӑнах та, тупӑк хатӗрлемелле. Сире валли халӑх виле шӑтӑкӗ чавма пуҫларӗ пулас.

С а в а л а м а н. Чарӑнӑр! Сире ку сӑмахсемшӗн арестлемелле.

П е т р о в. Анчах халӗ эпӗ нимӗнле партире те тӑмастӑп.

С а в а л а м а н. Халӗ тӑмастӑр пулсан, малашне ҫырӑнатӑр.

П е т р о в. Авансла арестлес тетӗр-и?

С а в а л а м а н. Эсир кулатӑр пулас манран?

П е т р о в. Кулӑшлинчен кулмалла, йӗрӗнчӗкрен йӗрӗнмелле, тӑшманпа кӗрешмелле, тенӗ ӑслисем.

Г л и н с к а я кӗрет.

С а в а л а м а н. Варвара Кирилловна... Салам! *(Аллине чуптӑвать.)* Қаҫарӑр, эпӗ сирӗн ҫуртра хуҫа пек пултӑм.

П е т р о в. Салам, Варвара Кирилловна.

Г л и н с к а я *(сиввӗн)*. Салам, салам... Мӗншӗн эсир тӗттӗмре ларатӑр? Даша! *(Даша кӗрет.)* Мӗншӗн хӑнасене ҫутӑ памастӑн? Қурмастӑн-им, тӗттӗм?

Д а ш а. Халех, барыня. *(Каять.)*

П е т р о в. Ырӑ каҫ пултӑр, Варвара Кирилловна... Сыв пулӑр, Гаврил Романович. Сметӑна, тархасшӑн, хӑвӑртрах пӑхса тухӑр.

Г л и н с к а я. Ӑҫтаваскатӑр, Петр Петрович? Ларӑрха. Юлашки вӑхӑтра эсир пирӗн пата ҫӳреме пӑрахрӑр. Аван мар, аван мар.

П е т р о в. Қаҫарӑр, Варвара Кирилловна, киле васкатӑп. Қарчӑк хӑнана кайрӗ те, Лида килте пӗччен. Сыв пулӑр.

П е т р о в каять.

Саваламан. Петр Петровича хăвăр пата ан кĕртĕр, Варвара Кирилловна. Вăл аташа пуçланă.

Глинская. Чирленĕ-им?

Саваламан. Чирленинчен те хăрушă. Вăл — большевик.

Глинская. Ан аташăр-ха, тархасшăн... Петр Петрович ун пек çын марччĕ-çке? Кам та пулин пăснă пулĕ ăна.

Саваламан. Кам пăснине пĕлместĕп, анчах пăсăлнă.

Глинская. Петр Петрович! Лăпкă учитель... большевик!.. Мон дье! Пурăна киле пĕтĕм халăх пăсăлса кайĕ капла. Кирек мĕн калăр, Гаврил Романыч, большевиксем пирĕн таврара пурах. Шырас пулать вĕсене, пĕтерес пулать!

Саваламан. Шыратпăр та, тупаймастпăр-çке.

Глинская. Вĕсем сире те влаçран сирпĕтме пултараççĕ.

Саваламан. Ан хăрăр, Варвара Кирилловна. Эпир çирĕп тăратпăр. Хуторта ĕçсем мĕнле?

Глинская. Халĕ çех унтан таврăнтăм. Рабочисем договор çине алă пусма чĕнтерчĕç. Договорсăр ĕçлесшĕн мар.

Саваламан. Алă пусрăр-и?

Глинская. Епле алă пусас ун пек договор çине? Ĕмĕрне пулман условисем пама ыйтса çырнă; ĕç кунĕ — сакăр сехет, чирлисене — шалу, çулсерен ваккат... Чăтаймарăм, çурса пăрахрăм.

Саваламан. Аван тунă... Çирĕпрех пулмалла вĕсемпе. Ӳкĕтлесе ĕç тухмасть. Сăмахласси пĕтрĕ, малашне пăшалпа калаçăпăр!

Глинская. Ытлашши алхасса кайрĕ халăх. Пусармалла.

Саваламан. Пусарăпăр, Варвара Кирилловна, пусарăпăр. Губернирен салтаксем яма пулчĕç.

Глинская. Анчах салтаксем те шанчăклă мар, теççĕ.

Саваламан. Вĕсене те пусарăпăр!

Глинская. Ваньăна епле те пулин арестлемелле. Çав рабочисене пăлхатать.

Саваламан. Ваня çамрăк ача... Вăл — хушнине тăваканни çех. Кунта урăххи, вăйлăраххи пур. Çавна лектерес пулать! Вера Андреевна çинчен мĕн шухăшлатăр эсир? Кам вăл?

Глинская. Гаврил Романыч, эсир чăнласах аташа пуçланă пулас? Вера — паллă профессор хĕрĕ... Нинăн тусĕ. Эпĕ унăн ашшĕне лайăх пĕлетĕп... Ăçтан шухăшласа кăлартăр куна?

Саваламан. Каçарăр... Эп ахаль çех ыйтрăм... Цветкова сирĕн пата килнĕренпе ялсенче ĕçсем пăсăла пуçларĕç те, çавăнпа каларăм. Тархасшăн, кун çинчен Нина Александровнăна ан калăр. Çилленме пултарать.

Глинская. Юрĕ, каламăп... Гаврил Романыч, эсир хутора кайса килеймĕр-ши? Рабочисемпе хăвăр калаçса пăхăр. Сирĕн сăмаха, тен, итлĕç. Эсир çапах та социалист.

Саваламан. Кайса килĕп, Варвара Кирилловна... Конфликта мĕнле те пулин майлаштарăпăр...

Чан сасси. Иккĕш те итлеççĕ.

Ку мĕн? Пушар тухман-и? *(Балкон çине чупса тухать, ун çине çутă ӳкет.)* Варвара Кирилловна! Килĕрха кунта. Сирĕн хутор çунать пулас?

Глинская *(балкон çине тухать)*. Ах! *(Ăнсăр пулса ӳкме тытăнать.)*

Саваламан *(Глинскаяна тытать, диван çине çавăтса пырса)*. Даша! Хăвăртрах шыв пар! Лăпланăр, Варвара Кирилловна. Тен, мунча çех çунать пулĕ... Паян шăматкун... Рабочисем мунча хутнă пулĕ те... Даша! *(Пауза.)* Никам та килмест. *(Балкон çине кайса пăхать.)* Çук, мунча мар... Тырă кĕлечĕсем çунаççĕ...

Даша кĕрет.

Даша. Гаврил Романыч, хутор çунать!

Саваламан. Куратăп... Шыв пар, барыня ăнран кайрĕ.

Даша. Халех. *(Каять.)*

Дорофеич чупса кĕрет.

Дорофеич. Варвара Кирилловна! Барыня! Хутор çунать!

Саваламан. Ан кăшкăрăр! Курмастăр-им, барыня ăнсăр выртать.

Дорофеич. Каларăм, рабочисемпе йăвашрах калаçăр тесе, итлемерĕ. Хальхи саманара унашкал калаçма юрать-и? «Вăрă-хурахсем»!—тесе пĕтерчĕ рабочисене. Ак сана вăрă-хурах! Халĕ рабочисем вăй илчĕç... Ха-

лĕ халăхпа чеерех калаçмалла. Гаврил Романыч, сирĕн лашăр кӳлнипех тăрать пулас. Қаяр хăвăртрах хутора.

Саваламан. Варвара Кирилловнăна çаплах хăварас-и?

Дорофеич (*аллипе сулса*). Эй, вилсех каймĕ-ха!

Дорофеичпа Саваламан каяççĕ. Даша шыв илсе кĕрет, барыньăна пĕрĕхет. Леш тăна кĕрет.

Глинская. Хăвăртрах Дорофеич патне чуп. Қала: хутора кайтăр.

Даша. Вĕсем халĕ çех Гаврил Романычпа унта тухса кайрĕç.

Глинская. Мон дье, мон дье! Мĕн тăвас, мĕн тăвас! Нина Александровна ăçта?

Даша. Столовăйĕнче ларать.

Глинская. Пĕчченех-и?

Даша. Пĕчченех.

Глинская. Пушар тухнине пĕлмест-им?

Даша. Қаларăм.

Глинская. Хăвăртрах кунта чĕн ăна.

Даша каять. Нина кĕрет. Пĕр аллинче кĕленче, тепринче — черкке. Тайкаланать.

Нина. Çунатпăр-и, маман?

Глинская. Нина! Сана мĕн пулнă? Мĕншĕн тайкаланатăн? Чим, аллунта сан мĕн?

Нина. Қоньяк!

Глинская. Қоньяк? Эсĕ ӳсĕр пулас?

Нина. Тĕрĕс, эпĕ ӳсĕр. Халĕ сана ĕçтерме килтĕм. (*Черккине коньяк тултарать, амăшне пама тăрать.*) Қаçар, маман... Халăх йăлипе малтан хамăн ĕçмелле-ччĕ. (*Черккене çĕклесе.*) Тав сана, савнă аннеçĕм. (*Ĕçет тата тултарать. Час тултараймасть.*)

Глинская. Нина! Ниночка!..

Нина. Ан макăр, маман. Макăрас вырăнне коньяк ĕç.

Глинская. Çак самантра... хурлăхлă каç... Қурмастăн-им, хутор çунать?

Нина. Қуратăп... Çапла пулмалла. Тыт черкке, маман. Ĕçместĕн-им? Қăлăхах ĕçместĕн. Қоньяк чуна лăплантарать. Дьякон та самогон ĕçсе хăйне йăпатать. (*Балкон çине тухать, вут çути илемлĕн ун пурçăн тумĕ çинче вылять.*) Илемлĕ ялкăшать. Паян хутор çех çунатьха. Ыран... Ыран вут çулăмĕ темиçе ĕмĕр тавралăха илем кӳрсе тăнă Ампира çавăрса илĕ... Ампир ялкăша пуçлĕ!

Глинская. Мĕнле Ампир? Мĕн аташатăн, Нина?

Нина. Пирĕн ытараймн особняка*, дворянсен йăвине, вут çавăрса илĕ. Эпир столбовой дворянсем-и çак, маман?

Глинская. Çапла, Ниночка... Столбовой дворянсем.

Нина. Çак хĕлхеме *(аллипе кăтартса)* вăхăтра сÿнтереймесен, пирĕн тайăлнă тĕреке, дворянсен юпине, йăвантарĕç те чавнă виле шăтăкне хамăрах тĕртсе ярĕç.

Глинская. Епле пусарас урнă халăха? Мĕнле майпа? Саваламанпа ун çинчен калаçрăм, вăл рабочисемпе сăмахлăп, терĕ.

Нина. Саваламан! Керенский мĕлки çех вăл. Вĕсене хăйсене хытăрах алла илмелле. Вĕсем пирĕн йытăсем. Йытта, хаяртарах пултăр тесен, сăнчăрлаççĕ. Халĕ вĕсем вĕреççĕ çех, малашне туллама пуçлĕç. Керенский, ав, пуçларĕ... Саваламанне те вĕскĕртмелле. Халăха туллаттармалла. Халех хуларан салтаксене чĕнтермелле те пăлханакансене авалхи пек хулăпа, шомполпа... ÿчĕсем кăвакарса, юнланса пĕтиччен хĕнемелле. Халăх юнне хĕрхенме кирлĕ мар. Урамсенче юн çырмисем юхчăр... Юн çырмисем шавлаччăр!.. *(Пауза.)* Эх, мĕн калаçатăп эпĕ? Иртсе кайрĕ пирĕн телейлĕ ĕмĕр. Ан макăр, маман. Хутор мĕн вăл? Чунсăр пурлăх çех. Манăн акă чун ялкăшать, ниçта вырăн тупаймасть... Никам та сÿнтереймĕ ман ăшри вут-çулăма... Çапах макăрмастăп. Маман, ĕç коньяк! Улăштарар этем йăлине. Халиччен çынна пытарсан пумилкке тунă. Эпир санпа малтан, виле шăтăкне выртиччен, хамăр пумилккене хамăр уявлар. Кайран, эпир пĕтсен, пире асăнакансем те пулмĕç. *(Черккене амăшне парать, амăшĕ илмест.)* Апла пулсан... к черту! *(Черккене ывăтать, çĕмĕрĕлнĕ сасă илтĕнет. Пушар енне пăхать.)* Мĕнле тискер ĕç! Пушар тухсан, ял кĕрлесе тăраканччĕ. Халĕ пĕр сасă та илтĕнмест. Йыттисем те уламаççĕ... Шăп. Тÿлек çĕр. Çил те вĕрмест... Хутор тĕттĕм киот умĕнчи пĕртен-пĕр çурта пек çунать. Хăрушă тăвăл умĕн çакăн пек тÿлек çанталăк пулать...

Дьякон *(сцена хыçĕнче)*. Тĕнчере нимĕн те çук! Турă та çук... эпĕ те çук!..

Глинская. Кам тискер сасăпа кăшкăрать?

Нина. Дьякон пулăран таврăнать. Вĕсен те ĕмĕрĕ кĕскелет. Вĕсем те пирĕн çума виле шăтăкне выртĕç.

---

* Уйрăм ларакан пуян çурт.

Дьякон *(сцена хыҫӗнче)*. Турӑ ҫук, эпӗ те ҫук!..

Нина. Нимӗн те ҫук.

Глинская. Нимӗн те ҫук? Ял ҫыннисем пушара сӳнтерме каймарӗҫ пулас... Хӑрушӑ...

Нина. Кичем... Эх, мӗнле кичем пурнӑҫ, маман. Ялкӑшакан вут ҫулӑмӗ те чун хавалне ҫӗклеймест. *(Рояль патне пырать, клавишсем ҫине тӗрӗнет. Рояль тискер сасӑ кӑларать.)*

Угрюмов кӗрет. Пӗр куҫне шурӑ тутӑрпа ҫыхнӑ. Алӑк патӗнче тӑрать.

Глинская *(хӑраса)*. Кам? Кам эсӗ?

Угрюмов. Эпӗ, барыня... Угрюмов... Паллаймарӑр-им?

Глинская. Мӗншӗн ыйтмасӑр кӗретӗн? Епле хӑйрӑн?

Угрюмов. Пӳртре никама та курмарӑм та...

Глинская. Мӗн тума ҫӗрле килтӗн?

Угрюмов. Пӗр вӑрттӑн ӗҫ пур, барыня. Кӑнтӑрла килме хӑрарӑм... Комитетчиксем курма пултараҫҫӗ, терӗм.

Вера васкаса кӗрет.

Нина *(Вера патне пырса)*. Вера... Верочка... *(Ыталаса илсе.)* Ӑҫта тухса кайрӑн эсӗ? Мана та систермерӗн. Чӗрӳ мӗншӗн пит сикет?

Вера. Уҫӑлса ҫӳреме кайрӑм та, пушар тухнине курсан, чупса килтӗм.

Угрюмов. Уҫӑлса ҫӳреме-ши, барышня?

Нина *(кӑшкӑрса.)* Сана мӗн ӗҫ? Марш кунтан!

Угрюмов. Эпӗ мӗн... эпӗ халех каятӑп... *(Кайма тытӑнать, каялла ҫаврӑнса.)* Госпожа Цветкова, эпӗ сире таҫта курнӑ пек...

Вера *(ун ҫине тинкерсе пӑхса, сӑмахсене татса)*. Эпӗ те сире курнӑ пек...

Чаршав

## ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ

Малтанхи актӑн декорацийӗ. Ҫӗрле, уйӑх ҫути. Улпут ҫурчӗн хӑшпӗр чӳречисем ҫап-ҫутӑ. Аякра вырӑс, тутар, чӑваш юррисем илтӗнеҫҫӗ. Сцена ҫинче Вася. Ун аллинче чукмар. Нина кӗрет.

Нина. Ырӑ каҫ пултӑр, Вася!

Вася. Салам, Нина Александровна!
Нина. Ма эс пĕччен?

Вася чĕнмест.

Савнине кĕтетĕн пулĕ-ха?
Вася. Çавна кĕтетĕп те...
Нина. Ваньăна курман-и?
Вася. Вĕсем Вера Андреевнăпа иккĕшĕ выртмари ачасем патне юрă итлеме кайрĕç...
Нина. Аякка кайрĕç-и?
Вася. Çук, Емелькке сăрчĕ айне çеç.
Нина. Апла пулсан, Ваньăна чĕнсе кил-ха... Нина Александровна кĕтет, те...

Вася каять.

Нина. Пурте малашнехине ĕмĕтленсе пурăнаççĕ... Вера, халăх юррисене пухса, симфони çырасшăн... Вася савнине кĕтет, паллах, ăна качча илме шухăшлать... Ваня Саваламанпа кĕрешет, ăна сирпĕнтерсе, хăй вулăс пуçлăхĕ пуласшăн... Эпĕ анчах... нимĕн те тумастăп, ним çинчен те ĕмĕтленместĕп...

Ваня кĕрет. Аллинче хуткупăс.

Ваня. Ырă каç сунатăп, Нина Александровна! Мĕн пулнă?
Нина. Нимĕн те пулман.
Ваня. Ма чĕнтертĕр мана?
Нина. Кимĕпе ярăнма каяс тетĕп.
Ваня. Ерçейместĕп, Нина Александровна...
Нина. Пĕлетĕп, кашни каç унпа...
Ваня. Кампа?
Нина. Анчах унпа çыхланма кирлĕ марччĕ сан, Ваня...
Ваня. Кам çинчен калаçатăр эсир?
Нина. Ан пытар ĕнтĕ... Анчах эп ăна кансĕрлеместĕп... Ан тив, ашкăнтăр, демократилле вылятăр... Кăçал çавнашкал мода... Анчах кĕçĕр эпĕ санпа йăпанас тетĕп... Илтетĕн-и, Ваня?
Ваня. Илтетĕп те-ха, анчах ерçейместĕп-çке...
Нина *(кимĕ çине ларать те кĕсменĕсене илет)*. Лар та пуçла купăс калама.
Ваня. Мĕнле-ха капла...
Нина. Лар, тетĕп сана!..

Ваня кимĕ çине ларать. Нина кимме кĕсменпе тĕксе ярать, курăнми пулаççĕ. Вася кĕрет. Вăл пĕве хĕрринче тăрать. Пауза. Хуткупăс калани илтĕнет.

Вася. Пулать вĕт пике!

Хуткупăс сасси шăпланать. Петровпа Лида кĕреççĕ.

Петров *(Лидăна çавăтса)*. Авал çак çарансем пĕр вăхăтра пурте таврари ялсен пулнă. Пугачев улпутран туртса илнĕ те хресченсене панă. Кайран, Пугачева тытсан, çаран каллех улпут аллине куçнă. Кĕтерне патша, Пугачев пăлхавне пусарасшăн, Глинский улпута хăй çаранне çех мар, хресченсен çаранне те касса панă. Тутарсем те, вырăссем те, чăвашсем те çарансăр тăрса юлнă вара. Çавăнпа çак çарана «Пугачев парни» теççĕ, хĕрĕм.

Вася. Петр Петрович! Сывă-и?

Петров. Вася, эсĕ мар-и? Салам! *(Алă парать.)*

Вася. Мĕн пит каça юлнă? Ăçтан таврăнатăр?

Петров. Хулана кайсаттăмăр та... Пăрахут кая юлса килчĕ.

Вася. Мĕн ĕçпе апла?

Петров. Çуркуннеренпех шкул пирки çÿретĕп мар-и. Вулăса миçе хут кайрăм, ĕçне татса памаççĕ. Уеса кайрăм, унта та йĕркине тупаймарăм. *(Ларать.)* Лар, Лидочка, канар. Эсĕ чĕлĕм туртатăн-и, Вася? Ме, хула кучченнеçне тутанса пăх.

Вася. Туртма вĕренеймерĕм-ха, Петр Петрович.

Петров *(чĕлĕмне тивертсе)*. Эсĕ мĕн чукмарпа çÿретĕн?

Вася. Утă капанĕсене хураллатăп.

Петров. Улпут патне ĕçлеме кĕтĕн-им?

Дорофеич кĕрет.

Дорофеич. Сывă-и, Петр Петрович. Салам, Лидочка. Хулара мĕнле хыпарсем?

Петров. Нимĕнех те илтĕнмест.

Дорофеич. Ун вырăнне кунта ĕмĕрне пулман мыскарасем пулса иртрĕç. *(Вася çине кăтартса.)* Куратăр-и çакна? Чукмарпа тăрать. Мĕн туса тăрать тетĕр ăна?

Петров. Утă капанĕсене сыхлатăп, терĕ.

Дорофеич. Камран сыхлать? Улпутран!

Петров. Темскер пăтрататăр пулас эсир, Дорофей Дорофеич.

Дорофеич. Эпĕ мар, çаксем... *(каллех Вася çине аллипе тĕллесе)* халăха пăтратаççĕ. Улпут пурлăхне улпутран сыхлаççĕ. Улпут капанĕсене улпут хăй ан вăрлатăр тесе, хурал тăраççĕ. Тамаша!

Петров. Ăнланмалларах каласа парăр ĕнтĕ.

Дорофеич. Юрать, йĕркипе каласа парам эппин. Пирус пур-и?

Петров парать.

Тавтапуç. Ну, вот... *(Пирус тивертет.)* Пычĕç таврари ял уполномоченнăйĕсем ман пата. Улпут çаранне çулма вăхăт çитнĕ... Эпир виçĕ ялпа... Хамăр ял вырăсĕсем, унтан Ӳтемĕш тутарĕсем, Сĕвекасси чăвашĕсем... Эпир виçĕ ялпа момент çулса парăпăр, терĕç. Ну, Саваламан агитацилени ахаль çухалмарĕ иккен, тетĕп. Анчах укçине вăхăтра тӳлемелле тесе, договор çырар, терĕç. Хакне те ытлашши ыйтмарĕç... *(Сӳннĕ пирусне тивертет.)* Договор çыртăмăр, алă пусрăмăр. Тепĕр кун виçĕ ял кĕшĕрех улăха... Арçынсем те, хĕрарăмсем те, хĕрсем те — пурте çава йăтса тухрĕç. Пуçларĕç çулма. Çава сасси улăхра оркестр пек янăрать. Виçĕ кун хушшинче çарана пуçтарчĕç пăрахрĕç. Барыня ĕненмест. Хăй улăха кайса пăхрĕ. Гаврил Романыч барыня умĕнче йăкăртатса çеç çӳрет. Кĕрӳшĕ пуласшăн-çке-ха, Нина Александровнăна качча илесшĕн. «Акă мĕн тăвать пирĕн агитаци!» — тет Саваламан. Барыня хавасланнипе кулса ячĕ. Вунă çул барыня кулнине курманччĕ. Леш, пиллĕкмĕш çулхи пăлхава пусарсан, пăлхав пуçлакансене арестлесе кайсан, кулнине астăватăп.

Петров. Савăнмасăр. Ĕмĕрне пулман ĕç ку. Ман Лида ыйха кайрĕ пулас? Çывăр, хĕрĕм, çывăр...

Дорофеич. Уполномоченнăйсене, леш, договор çине алă пусаканнисене, барыня «на чай» пама хушрĕ. Эпĕ: «Çапла, çапла, савнă граждансем, барыня сире тав тăвать. Ывăннă хыççăн шăмшакăра çемçетме самогон кирлĕ... Акă сире пĕрер тенкĕ»,— тесе укçа тыттартăм. Вĕсем: «Комитет взятка илмест!»—терĕç те укçине илмесĕрех кайрĕç. Ак халăх мĕнле ăсăланнă, тетĕп.

Петров. Интереслĕ... Укçине илмерĕç, эппин?

Дорофеич. Илмерĕç. Пирус парăр-ха, Петр Петрович.

Петров парать.

Тавтапуç. *(Тивертет.)* Паян пĕр капан утине ыраш акнă вăхăтра лашасене пăтратма тесе выльăх картишне турт-

тарма хушрӑм. Рабочисем лашасене кӳлчӗҫ те улӑха вӗҫтерчӗҫ. Кӑшт тӑрсан, пӑхатӑп, рабочисем пушӑ таврӑнаççӗ. «Мӗншӗн пушӑ таврӑнатӑр?»— тетӗп. «Утӑ пӳлмасан, мӗн тиес?»— теççӗ рабочисем. «Как так утӑ пулмасан? Улӑхра миçе капан!»— тетӗп. «Пӗр капан та çук!»— теççӗ. Эпӗ куçа чартӑм пӑрахрӑм. «Пӗр каçрах пӗтӗм утта вӑрласа кайнӑ-шим?»— тетӗп. «Çук, капанӗсем выранӗнчех, анчах улпут çаранӗ халӑха куçнӑ, çавӑнпа утӑ та халӑхӑн пулмалла. Вулӑс комитечӗ çапла постановлени йышӑннӑ!»— теççӗ рабочисем. «Ак сире Саваламан! Ак сире агитаци!»— тетӗп хам ӑшӑмра.

П е т р о в. Апла эсир халӑха хӑйӗн çаранне çулнӑшӑн укçа тӳлерӗр пулать. Кулӑшла!

Д о р о ф е и ч. Сире кулӑ, Петр Петрович, мана... Мана барыня куншӑн туратлӑ туйипе хулпуççи урлӑ янклаттарчӗ. Халӗ те ыратать. «Ухмах! Хӑвна улталанӑшӑн «на чай» паратӑн!»— тет.

П е т р о в. Да, ӑслӑ ӗçлеççӗ. Маттур!

Д о р о ф е и ч. Мана, Дорофеича, патак çитерчӗç! Чӑн-чӑн вӑрӑ-хурахсем ӗнтӗ.

В а с я. Улпут хӑй вӑрӑ-хурах! Авал ку çаран халӑхӑн пулнӑ.

Д о р о ф е и ч. Апла эсир улпут тыррине те хӑвӑр валли вырӑр? Улпут çӗрӗ те авал халӑхӑн пулнӑ.

В а с я. Тыррине те выратпӑр.

Д о р о ф е и ч. Илтрӗр-и, мӗнле калаçать? *(Васьӑна.)* Пурӑна киле эсир улпута хӑйӗн килӗнчен те хӑваласа кӑларӑр?

В а с я. Вӑхӑт çитсен, кӑларӑпӑр-ха.

Д о р о ф е и ч *(витлесе)*. Вӑхӑт çитсен... Ӑнланатӑн-и? Кӑна закона пӑсни теççӗ.

В а с я. Мӗншӗн саккун кӑлармаççӗ?

Д о р о ф е и ч. Вӑхӑт çитсен кӑларӗç, санран ыйтмӗç.

В а с я. Вӗсем кӑларасса кӗтсен...

П е т р о в. Ну, эсир тавлашӑр, эпир каяр. Лида, Лидочка... вӑран, хӗрӗм... Киле кайӑпӑр.

Лида *(вӑранса)*. Çывӑрма уçӑ кунта, атте.

П е т р о в. Каяр, хӗрӗм. *(Тӑрать.)* Сыв пул, Вася.

Д о р о ф е и ч. Эпӗ те сирӗнпе пыратӑп.

П е т р о в. Эсир ӑçта кайма тухнӑччӗ, Дорофеич?

Д о р о ф е и ч. Хам та пӗлместӗп ӗнтӗ. Барыня ислетнӗ хыççӑн киле те кайман. Анранӑ сурӑх пек çапкаланса çӳретӗп çапла.

Лидăпа Петров каяççĕ. Вĕсем кайсан, Дорофеич тăрать.

Ой-ой-ой! Пурнăç-и ку? *(Ерипен утать.)*

Дарья кĕрет, Дорофеича çухаран çавăрса илет.

Дорофеич. Тетя Дарья!?

Вася. Салам, Дарья Афанасьевна!

Дарья. Кам унта?

Вася. Эпĕ, Дарья Афанасьевна.

Дарья. Э, Вася... Çак йĕксĕке арман пĕвине пăрахма пулăш-ха. Пăяв çук-и? Аллине-урине çыхас, ишсе ан тухтăр.

Вася. Пăяв çук çав. Выртмари ачасенчен чĕлпĕр илсе килем-и?

Дорофеич. Ан ухмахлан, тетя Дарья. Мĕншĕн мана шыва пăрахасшăн эс?

Дарья. Тĕрмене хуптарнăшăн.

Дорофеич. Тупата турăшăн, эпĕ хуптарман. Саваламан ĕçĕ вăл. Эпĕ ун пек ĕçпе çыхланман. Турă умĕнче калатăп. *(Сăхсăхать.)*

Вася. Пăяв илсе килес-и, тетя Дарья?

Дарья *(Дорофеича тĕртсе ярса)*. Кирлĕ мар. Çилĕ иртсе кайрĕ. Акă мĕн, Дорофеич: малашне те улпут ури тупанне çуллама пăрахмасан, арман пĕвине лекетĕнех. Ан ман çакна. Кай!

Дорофеич. Каятăп, тетя Дарья, каятăп... Ну и самана! Пасăр барыня ватрĕ, халĕ батрачка сехрене хăпартрĕ. *(Каять, чарăнать.)* Чим, сана кам тĕрмерен кăларчĕ?

Дарья. Кай!

Дорофеич. Каятăп... Ой-ой-ой! Пурнăç-и ку?

Дорофеич каялла çаврăнса пăхкаласа каять.

Вася. Эсĕ чăнласах Дорофеича шыва пăрахатăн пулĕ тесе. Пăяв илме каяс тенĕччĕ.

Дарья. Хăратрăм çех. Хăравçă çын вăл, анчах жулик. Барыньăна та, рабочисене те çаратса пурăнать.

Вася. Сана судпа кăларчĕç-и, Дарья Афанасьевна?

Дарья. Суд пулман. Тĕрмерен тӳрех кăларчĕç.

Вася. Кам кăларчĕ?

Дарья. Уесри рабочисем кăларчĕç. Хулари рабочисен вулăсра комитет пекки пур. Ăна Совет теççĕ.

Вася. Ав, мĕнле...

Д а р ь я *(тăрать.)* Вера Андреевна килте-ши? Советран ăна çыру ярса пачĕç те, çавна парасшăнччĕ.

В а с я. Вĕсем Мухамедьянпа выртмари ачасем патне юрă итлеме кайрĕç. Эсĕ çырăвне мана парса хăвар, эпĕ парăп.

Д а р ь я. Юрĕ эппин, эпĕ каям... *(Хĕвĕнчен çыру кăларса парать.)* Асту, паянах пар. Васкавлă çыру.

В а с я. Юрĕ, Дарья Афанасьевна. Эсĕ çула май Даша патне кĕрсе тухсамччĕ... Кала: «Вася кĕтет»,—те.

Д а р ь я. Кĕрсе тухăп. *(Кулса.)* Савни чĕнет, тейĕп. *(Каять.)*

В а с я *(аяккалла пăхса)*. Тĕттĕм пулсанах пырăп, терĕ-çке. *(Ассăн сывласа.)* Эх, чипер те вара хăй. Шурă чĕрçиттине аякран курсанах, чĕре кăлт-кăлт сикме пуçлать. Кĕçĕр хам юратни çинчен каласа паратăпах ĕнтĕ... Хăй те мана юрататать пулсан? Эх, Даша! Ыталаса илĕттĕм те сана хурах кăшкăриччен чăмăртăттăм. *(Пăхать.)* Килмест. Юратмасть пулĕ çав. Манашкаллине юратать-и вара вăл? *(Аяккалла пăхать, курать.)* Даша пулас... Шурă чĕрçиттипе... Ой, çавă... Даша, Дашенька! Эпĕ кунта!

Д а ш а кĕрет.

Д а ш а. Кĕтсе ывăнтăн пулĕ, Вася? Ан çиллен. Барыня Вера Андреевнăна шыраттарчĕ. Шырарăм-шырарăм, тупаймарăм. Кунта та çав майпа çех килтĕм.

В а с я. Мĕн тума кирлĕ ăна Вера Андреевна?

Д а ш а. Кам пĕлет. Ларар. Килĕ-ха хăçан та пулин...

Ларaççĕ. Пауза.

Мĕншĕн нимĕн те чĕнместĕн? Каламалли нумай темерĕн-и?

В а с я. Каламалли пур та... Çиллентересрен хăратăп.

Д а ш а. Кала, Вася, çилленмĕп.

В а с я. Эсĕ миçере, Даша?

Д а ш а. Вунсаккăрта.

В а с я. Эпĕ те вунсаккăрта... Эсĕ хăш уйăхра çуралнă?

Д а ш а. Май уйăхĕнче.

В а с я. Çуркунне, чечексем çуралнă вăхăтра иккен... Çавăнпа та эсĕ чечек пек...

Д а ш а. Сарă чечек пек-и?

В а с я. Çук, кăвак чечек пек... Эпĕ январь уйăхĕнче çуралнă.

Даша. Çавăнпа юман пек тĕреклĕ. *(Пауза.)* Санăн аçу-аннў пур-и?

Вася. Çук. Эпĕ ачаранпа çын патĕнче тарçăра ўснĕ. Атте те кĕтўçĕ пулнă.

Даша. Ман анне улпут ĕнисене сусах вилчĕ.

Вася. Эсĕ те тăлăх эппин?

Даша. Тăлăх çав. *(Пауза.)*

Вася. Эх, кил-çурт çукки касать!

Даша. Мĕн тăватăн эсĕ кил-çуртпа?

Вася. Авланăттăм.

Даша. Мĕншĕн çамрăклах авланасшăн?

Вася. Савни пит чипер. Урăх çынна каясран хăратăп.

Даша. Сана юратать пулсан, урăххине каймĕ.

Вася. Юратмасть пулĕ çав.

Даша. Юратмасан, качча та пымасть вăл.

Вася. Ăна вăрлама та пулать-ха...

Даша. Вăрлама юрамасть, Вася. Эсĕ хĕрĕпе калаçса пăхнă-и? Тен, юратать пулĕ.

Вася. Хăюлăхăм çитеймест-çке.

Даша. Эпĕ те пĕр ачана юратрăм. Ăна курмасăр пĕр сехет те пурăнас килмест.

Вася. Ачи ху пекех чипер пулĕ.

Даша. Чипер.

Вася. Эх, пулаççĕ тĕнчере телейлĕ çынсем!..

Даша. Вася...

Вася. Мĕн?

Даша. Эсĕ хăвăн савнине чуптуса курнă-и?

Вася. Чуптума мар, ыталаса та пăхман.

Даша. Мĕншĕн?

Вася. Юратмасть пулсан, чуптăвас вырăнне çупкă парĕ.

Даша. Юратать, Вася, юратать.

Вася. Чăнах-и?

Даша. Чăн.

Вася. Эх! *(Дашăна ыталать, сиксе тăрать. Тинкерет.)* Даша!

Даша. Мĕн?

Вася. Дашенька! Эх! *(Тепĕр хут ыталать.)*

Даша. Чăмăртаса вĕлеретĕн, Ваçук... *(Вася çине пăхать.)* Савнă тусăм!

Вася. Эх, пурăнăпăр та вара иксĕмĕр! Пўрт лартăпăр... Çĕр нумай пулать...

Даша. Ята çур пилĕк-и?

В а с я. Улпутăн сахал-и çĕр! Эпĕ шутласа пăхрăм: сирĕн ялсене, пирĕн ялсене, ÿтемĕшсене, пăхăрçăсене улпут çĕрне валеçсе парсан, кашни çынна виçшер теçеттин лекет. Çаранне эп шута илмен-ха...

Д а ш а. Улпут çĕрне чăнласах туртса илеççĕ-ши?

В а с я. Туртса илетпĕр, Дашенька! Çавнашкал саккун кăларатпăр.

Д а ш а *(Васьăна ыталаса)*. Мĕнле ăслă эс, Ваçук!

В е р ă п а М у х а м е д ь я н кĕреççĕ.

В а с я. Мухамедьян! Пĕр-ик минут каярах килмеллеччĕ.

М у х а м е д ь я н. Қаçар, Ваççили, пĕлмен. Пĕлнĕ пулсан, урăх сукмакпа кайнă пулăттăмăр.

В е р а. Даша та кунта-мĕн.

Д а ш а. Эпĕ сире шыраса килтĕм, Вера Андреевна.

М у х а м е д ь я н. Вера Андреевнăна шырарăн, Ваççилие тупрăн пулать. Пĕр-пĕрне савакан каччăпа хĕрĕн сукмаксем ялан юплĕ пулаççĕ ĕнтĕ. Темле катара пулсан та, пĕр уçланка тухаççĕ.

Д а ш а. Суймастăп, Мухамедьян. Барыня Вера Андреевнăна хĕвел аннăранпах шыраттарать.

В е р а. Мĕн тума кирлĕ пултăм-ха эп ăна? Халиччен эпĕ пуррипе çуккине те пĕлесшĕн марччĕ-çке?

В а с я. Вера Андреевна, Дарья Афанасьевнăна тĕрмерен кăларнă. Киле таврăнчĕ. Сире çыру илсе килнĕ. *(Çырăвне Верăна парать.)*

В е р а. Тавтапуç, Васенька.

М у х а м е д ь я н. Суд пулнă-ши?

В а с я. Судсăрах тухнă. Рабочисем кăларнă, тет.

М у х а м е д ь я н. Маттур, маттур ĕçлеççĕ хулари большевиксем.

Малалла В а с ь ă п а М у х а м е д ь я н калаçни илтĕнмест.

В е р а *(çырăвне çунакан кăвайт патне пырса вулать)*. «Çак çырăва илсенех хулана килĕр. Эсир камне вырăнти власть пĕлнĕ, малашне сире унта юлма юрамасть: сире арестлеме хушнă... Уесри рабочисемпе салтаксен Совечĕн председателĕ...» *(Çырăвне çуркаласа вута пăрахать.)* Мухамедьян, ман халех хулана тухса каяс пулать.

М у х а м е д ь я н. Халех лаша кÿлме каятăп. Хура ăйăра кÿлĕп те, момент пристане çитерĕ.

Вера. Вася, эс Ваньăна курман-и?

Вася. Вăл улпут хĕрĕпе хĕвел анас умĕн кимĕпе ярăнма кайрĕ.

Вера. Шел. Ҫайиччен курса калаçасшăнччĕ.

Вася. Эпĕ ăна чĕнсе килме пултаратăп. Таçтах кайман пулĕ. Пĕве хĕррипе кайăп та...

Вера. Ҫайса чĕнсемччĕ, Васенька.

Вася каять.

Даша, барыня патĕнче никам та çук-и?

Даша. Ун патĕнче Саваламан ларать.

Мухамедьян. Урăх никам та çук-и?

Даша. Ҫук. Тĕттĕм пулсан, Угрюмов пырса кайрĕ. Кухньăра икĕ салтак чей ĕçсе ларатчĕç.

Мухамедьян. Салтаксем?

Даша. Юлашки вăхăтра Саваламан пĕччен çӳремест. Халăхран хăрать пулмалла.

Мухамедьян. Шулай эппин... Саваламан ырă мар ĕç тăвасшăн пулас... Акă мĕн, Вера Андреевна: эпĕ лаша кунта кӳлсе килĕп. Япалусене Даша илсе тухĕ. Ҫайрăмăр, Даша.

Даша. Ну, чипер çитмелле пултăр, Вера Андреевна. *(Верăна алă парать.)*

Вера *(Дашăна чуптуса)*. Сывă пул, Даша. Анчах барыньăна эпĕ кайни çинчен нимĕн те ан кала.

Даша. Юрать.

Мухамедьянпа Даша каяççĕ. Василь Васильч, Трифон, Абдрахман тата пĕр чăваш кĕреççĕ. Пурте йĕвен йăтнă. Сцена çине калаçса тухаççĕ.

Василь Васильч. Ҫапах та купчăй крепость пекки тунă пулсан, саккунлă пулнă пулĕччĕ, Трифон тусăм.

Абдрахман. Мĕн калаçатăн, Ваççиль абзы. Алпут арăмĕ купчăй çине вилсен те алă пусас çук.

Трифон. А, Вера Андреевна та кунта иккен.

Василь Васильч. Салам, Вера Андреевна *(алă парать)*.

Абдрахман. Мĕнле пурăнатăр, иптеш Цветкова?

Вера. Пурăнатпăр-ха пĕр май, Абдрахман Закирыч... Мĕн çинчен пит хĕрсех тавлашатăр эсир?

Абдрахман. Ваççиль абзи алпут çаранне купчăй крепость туса туртса илмелле, тет.

Василь Васильч. Ара, апла тусан, саккунлă пулĕччĕ, тетĕп.

Абдрахман. Саккунлă, саккунлă... Алпут хăй саккунлă туртса илнĕ-и хресченсен çĕрне? Пугачев ку çарана пирĕн мăн асаттесене парнеленĕ вит! Çаран авал пирĕн пулнă вит!

Василь Васильч. Вăл çаплах та-ха... Э, тепĕр тесен, улпут арăмĕ йӳн хакпа пурпĕр сутас çук...

Трифон. Çаранне çеç мар, улпут тыррине те хамăр вырса илетпĕр ак.

Василь Васильч. Тыррине вырса илесчĕ... Вара çĕнĕ тырăччен-ех çăкăр çиейттĕмĕр.

Абдрахман. Унтан таврари ялсемпе çĕрне валеçĕпĕр.

Вера. Тĕрĕс, Абдрахман Закирыч!

Василь Васильч. Саваламан Учредилка саккун кăлариччен тăхтама хушать.

Абдрахман. Саваламана итлесен, пирнешкеллисем ĕмĕр ырă пурăнăç курас çук.

Василь Васильч. Улпут çĕрне валеçсен, пит аван пулĕччĕ те-ха... Анчах саккунлă пулĕ-ши?

Вера. Саккунлă пулать, Василь Васильч. Ленин çапла калать.

Василь Васильч. Ленин калать пулсан, саккунлă пулать ĕнтĕ.

Саваламан, Угрюмов, икĕ салтак кĕреççĕ.

Саваламан *(Верăна курса)*. Акă ăçта эсир. *(Вера патне пырса.)* Сире шыраса супрăмăр кĕçĕр...

Вера. Мĕн тума кирлĕ пултăм эп сире?

Саваламан. Қаçарăр чăрмантарнăшăн, Вера Андреевна. Аван мар та... Мĕн тăвăн? Служба.

Вера. Хăвăртрах калăр, мĕн кирлĕ?

Саваламан. Эсир Глинскисем патне мĕн тума килнĕ?

Вера. Мĕн пĕлмен пек ыйтатăр? Хăнана.

Саваламан. Ялсенчи комитетсене, вулăсри большевиксен ячейкине кам организациленĕ?

Вера. Мĕншĕн ун çинчен манран ыйтатăр? Эп ăçтан пĕлем?

Саваламан. Суйма кирлĕ мар. Эпир пурне те пĕлетпĕр. Эсир хистенипе хресченсем улпут утине туртса илчĕç, рабочисем хутора çунтарса ячĕç.

Вера. Тата мĕн?

Саваламан. Уесри правительство комиссарĕ хуш-

нипе сире арестлетĕп. Акă ордер. *(Салтаксене.)* Цветковăна вулăса ăсатăр.

Салтаксем Вера патне пыраççĕ.

Трифон. Ав, Ваня килет... *(Кăшкăрса.)* Ваня! Ваня! Кил кунта хăвăртрах!

Ваньăпа Вася кĕреççĕ. Иккĕшĕ те хашкаççĕ.

Ваня. Мĕн пулнă, Трифон?

Трифон. Вера Андреевнăна арестлесшĕн.

Ваня *(Саваламан патне пырса)*. Вулăсри комитет ячĕпе Цветковăна ирĕке яма ыйтатăп.

Саваламан. Комитет маншăн власть мар. *(Салтаксене.)* Илсе кайăр.

Ваня. Власть мар? Трифон, выртмари халăха чĕнсе кил-ха.

Трифон хăвăрт тухса каять. Нина кĕрет.

Акă мĕн, гражданин Саваламан. Пăрахăр ку шухăша!

Нина. Гаврил Романович, эсир мĕн тăватăр кунта?

Ваня. Вера Андреевнăна арестлесшĕн.

Нина. Мĕншĕн?

Саваламан. Гражданка Цветкова хистенипе рабочисем сирĕн хутора çунтарнă.

Нина. Вера, Саваламан чăн калать-и?

Вера. Суять.

Нина. Кам сире Вера çинчен суйса панă?

Саваламан. Сирĕн ăна пĕлме кирлĕ мар.

Вера. Паллă — кам. Жандарм пулнăскер. *(Угрюмов çине аллипе кăтартать.)*

Саваламан *(Угрюмова)*. Эсĕ чăнах жандарм пулнă-и?

Угрюмов. Цветкова суять. Эпĕ рабочи пулнă.

Вера. Вунулттăмĕш çулта пирĕн хваттере ухтартăр, мантăр-им?

Василь Васильч. Ытти жандармсем тĕрмере, ку епле хăтăлса юлнă?

Абдрахман. Арман пĕвине ывăтас ăна, çав анчах.

Ваня *(салтаксене)*. Илтетĕр-и, юлташсем?

Салтак. Илтрĕм те-ха...

Трифон тата выртмари çынсем кĕреççĕ: вырăссем, чăвашсем, тутарсем.

В а н я. Жандарма вулăса ăсатăр. Ыран комитетра унпа мĕн тăвассине сӳтсе явăпăр.

Салтаксем, Верăран уйрăлса, Угрюмов патне пыраççĕ.

С а л т а к *(Угрюмова)*. Ут, гражданин.

У г р ю м о в а салтаксем илсе каяççĕ. М у х а м е д ь я н чупса кĕрет.

М у х а м е д ь я н. Вера Андреевна! Лаша кӳлсе килтĕм.

В е р а. Спасибо, Мухамедьян.

Н и н а. Вера, эсĕ ăçта кайма пуçтараннă?

В е р а. Питĕре.

Н и н а. Мĕншĕн?

В е р а. Ху куратăн, мĕн хăтланаççĕ.

Н и н а *(Саваламана)*. Ку, Гаврил Романович, Верăна çех мар, мана та çупкă пани пулать.

С а в а л а м а н. Ķаçарăр, Нина Александровна... Эпĕ власть.

Н и н а. Власть. *(Саваламан çине пăхать, темĕн каласшăн, каламасть.)* Вера, каяр.

В е р а. Ķаçар, Нина. Ķун хыççăн сирĕн патăрта пурăнма аван мар. Варвара Ķирилловна мĕн калĕ? Хăналанăшăн тав сире... *(Нинăна чуптăвать.)* Варвара Ķирилловнăна салам кала. Сыв пулăр, гражданин Саваламан. *(Ваня патне пырать.)* Ваня, мана ăсатса ярсамччĕ, тархасшăн.

Пурте каяççĕ. В а н я купăс калаҫа пуçлать. Савăнăçлă кĕвĕ. Сцена çине С а в а л а м а н п а Н и н а юлаççĕ.

Н и н а. Ķаллех пĕччен.

С а в а л а м а н. Еплe пĕччен? Эсир хăвăр валли каччă тупнă пулас? Бульварла роман çыраканшăн аван сюжет. Улпут хĕрĕ, батрак... Пикантно!

Н и н а. Эпĕ сире кăшт ăслăрах тесе...

Сцена хыçĕнче çаплах хуткупăс янăрать.

С а в а л а м а н. Эсир Цветкова большевик иккенне ĕненместĕр пулас?

Н и н а *(çиллене)*. Апла пулсан, мĕншĕн арестлемерĕр?

С а в а л а м а н. Эсир кансĕрлерĕр, çавăнпа.

Н и н а. Ан суйăр, Ваньăран хăратăр.

С а в а л а м а н. Ан култарăр, тархасшăн.

Нина. Çапла, çапла... Ваня енче халăх, сирĕн енче, калама намăс, жандарм... Мĕнле имшеррĕн курăнатăр эсир хăюллă батрак çумĕнче. Çапла, Ваня пеккисем герой пулма пултараççĕ. Мĕн чĕнместĕр? Пурăна киле Ваньăсем сире хăваласа ярĕç те влаçа хăйсен аллине илĕç ак.

Саваламан. Тĕлĕнетĕп сиртен, Нина Александровна. Эсир улпут хĕрĕ пек сăмахламастăр. Хăвăр тăшманăрсене мухтатăр.

Нина. Çук, Саваламан... Кураймастăп тăшмана. Вăйăм çитсен, чăмăртаса лапчăтăттăм, шăлпа кăшлăттăм... Анчах вĕсен хăюлăхне курсан, юратас килет вĕсене. Хăш чух, чун тăвăлса çитнĕ вăхăтра, хама пăхса çитĕнтернĕ аннене ылханма хатĕр.

Саваламан. Эсир чирленĕ пулас, Нина Александровна. *(Ун патне пырса.)* Атьăр, киле ăсатса ярам.

Нина *(ура çине тăрать, Саваламан çине пăхать)*. Акă мĕн... Пошли вы к черту. *(Хăвăрт тухса каять.)*

Дьякон кĕрет. Усĕр.

Дьякон. Христос—миф, вăл тĕнчере пулман... пулман. *(Саваламан патне пырса.)* Эсир те миф!

Саваламан ним те чĕнмест.

*(Дьякон малалла утать, сцена çинчен тухас умĕн чарăнать те Саваламан çине пăхать.)* Эсир те тĕнчере çук! *(Каять.)*

Чаршав

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Иккĕмĕш пай декорацийĕ. Балкон çинче, уйра хĕвел çути. Пӳлĕмре çурма тĕттĕм.

Дорофеич *(васкаса кĕрет)*. Даша! Дашенька!

Даша кĕрет.

Барыня ăçта?

Даша. Апатланчĕ те канма выртрĕ.

Дорофеич. О господи! Канма выртнă... Епле çак вăхăтра ыйхи тупăнать? Хăвăртрах вăрат. Дорофеич питĕ васкавлă ĕçпе килчĕ, те...

Даша каять.

Ак урнă самана! Ķашни кун мĕн те пулин siksе тухать. Эх, пурнăç. Даша! Даша!

Даша кĕрет.

Дашенька, кăвас илсе килччĕ, тархасшăн. Çăвар типрĕ.

Даша. Халех. *(Каять.)*

Дорофеич *(кĕсйине хыпаласа)*. Чим, портсигар ăçта ман? Васканипе пухăва манса хăварнă пулас. Даша!

Даша кĕрет. Аллинче графин, стакан.

Даша. Акă кăвас. Ĕçĕр.

Дорофеич *(кăвас ĕçсе)*. Барыньăн пирус пулаканччĕ. Пĕр-иккĕшне илсе кил, тархасшăн.

Даша. Юрать. *(Каять.)*

Дорофеич кăвас ĕçет. Глинская кĕрет.

Дорофеич. Ķаçарăр çывăрма кансĕрленĕшĕн, Варвара Ķирилловна. Ĕçĕ пит васкавлă.

Глинская. Мĕнле ĕç? Лар та каласа пар. *(Ларать.)*

Дорофеич *(ун умне пукан лартса)*. Паян пирĕн ялта вулăсри комитетсен пухăвĕ. Саваламан канаш панипе эпĕ те унта кайрăм, калаçма сăмах ыйтрăм. Пуху умне тухрăм та тытăнтăм сăмаха çаптарма. Ķеренскирен те илемлĕ каларăм пулĕ. «Çапла, çапла, савнă граждансем, эсир улпут уттине туртса илтĕр. Ķу саккунлă ĕç мар, куншăн сире власть айăплама пултарать, çавăнпа утта каялла парăр!» — терĕм. Унччен те пулмарĕ, пĕри siksе тăчĕ те, ман çине кăтартса: «Ан итлĕр улпут йыттине!» — терĕ. Çаплах каларĕ: «Улпут йыттине», — терĕ. «Суять, улпута утă кирлĕ мар!» — терĕ. «Епле кирлĕ мар? Улпутăн çавăн чухлĕ лаша, ĕне, сурăх... Хĕле кĕрсен, мĕн çитерес вĕсене?» — тетĕп. «Паян улпутăн, ыран халăхăн. Улпутăн выльăх картишне те комитет аллине памалла!» — терĕ ку. Эпĕ çăвара картăм пăрахрăм. «Ыран-паян тырă вырма тухмалла, кĕлте турттармалла, авăн çапмалла. Лашасăр епле ĕçлемелле?» — тетĕп. «Хирти тыррине те комитет аллине памалла!» — терĕ оратор. «Тĕрĕс! Резолюци йышăнас!» — тесе кăшкăрма тытăнчĕç делегатсем.

Глинская. Мон дье! Гаврил Романыч пухура пулчӗ-и? Ӑнлантарчӗ-и халӑха?

Дорофеич. Ӑнлантарчӗ. Пӗр сехете яхӑн каларӗ. Анчах ӑна никам та итлемерӗ. Урама чӗлӗм туртма тухса кайрӗҫ.

Глинская. Унашкал пухӑва салатса ямаллаччӗ.

Дорофеич. Салтаксем ҫук-ҫке, Варвара Кирилловна.

Глинская. Вулӑса салтаксем килнӗ темерӗ-и Саваламан.

Дорофеич. Салтаксем пухӑва салатас вырӑнне хӑйсем кӑшкӑрашма пуҫларӗҫ. Вӗсем пирӗн халӑхран та усал. «Долой Вӑхӑтлӑх правительство! Совет влаҫӗ сывӑ пултӑр!» — тесе кӑшкӑраҫҫӗ.

Глинская. Ку тата мӗнле власть?

Дорофеич. Мӗнле каламалла... Комитет майлӑ пулать, тет-и. Кӗскен каласан, халӑх влаҫӗ... Большевиксем Раҫҫейре Совет влаҫӗ тӑвасшӑн, тет.

Глинская. Пирӗн халӑх мӗнле?

Дорофеич. Вӗсем те салтаксем хыҫҫӑн: «Совет влаҫӗ сывӑ пултӑр!» — теме пуҫларӗҫ.

Глинская. Пухура большевиксем ҫук пулӗ-ҫке?

Дорофеич. Эх, Варвара Кирилловна. Вера Андреевна сирӗн пата килнӗренпе нумайӑшӗ большевика тухса кайрӗҫ.

Глинская, Хамӑр килте тӑшмана хӑналаса пурӑнтӑмӑр. Мӑшкӑл!

Дорофеич. Пит ӑста ӗҫлеҫҫӗ вӗсем. Халӗ вулӑсра вӗсем хуҫа. Саваламан йӑлишӗн ҫех ҫапкаланса ҫӳрет.

Глинская. Ан та кала, Дорофеич. Пӗтетпӗр пулӗ.

Дорофеич. Пӗтетӗр пулӗ, Варвара Кирилловна.

Глинская. Эпир пӗтсен, эсӗ те пӗтетӗн вара.

Дорофеич. Ман мӗншӗн пӗтес? Эпӗ улпут мар, служащи. Халӗ сирӗн патӑрта ӗҫлетӗп, сирӗн пурлӑхӑр патшалӑх аллине куҫсан — унта ӗҫлӗп. Халӗ управляющи, ун чух, тен, патшалӑх чиновникӗ пулӑп.

Глинская. Ҫитӗ! Каламаллине каласа пӗтер. Кайран мӗнле резолюци йышӑнчӗҫ?

Дорофеич. Пӗлместӗп, Варвара Кирилловна. Мӗншӗн тесен... мана пухуран хӑваласа ячӗҫ. «Сан пек йӗксӗксене пухӑва кӗртме юрамасть!» — терӗҫ.

Глинская. Мӗн тумалла ӗнтӗ, сан шутпа, Дорофей Дорофеич?

Д о р о ф е и ч. Ман шутпа-и? Тармалла!

Г л и н с к а я. Пурлăха пăрахсах-и?

Д о р о ф е и ч. Пурлăх çинчен шухăшласси иртрĕ, Варвара Кирилловна. Пурпĕр туртса илеççĕ. Халĕ пуç çинчен ытларах шухăшламалла.

Н и н а кĕрет.

Г л и н с к а я. Илтетĕн-и, Нина? Дорофеич пурлăха пăрахса тармалла, тет.

Н и н а. Тĕрĕс калать. Хамăр ирĕкпе каймасан, ирĕксĕр хăваласа ярĕç.

Г л и н с к а я. Тĕлĕнмелле...

Н и н а. Евангелири асамлă вăйсенчен тĕлĕнмен, пурнăçри законлă ĕçрен мĕншĕн тĕлĕнетĕр? Пурнăçра, маман, пурте законлă пулса пырать. Паян эсĕр пур, ыран — çук.

Д о р о ф е и ч. Дьякон та, ав, эпĕ çук, тет. Те малашнехине сиссе калать.

Г л и н с к а я. Вера турĕ çакна, эс ун хутне кĕретĕн.

Н и н а. Ĕненместĕп. Саваламан шухăшласа кăларнă ăна. Хăйне халăх итлемест те, айăпне çын çине йăвантарать.

Д о р о ф е и ч. Халăх ку влаçа, чăнах та, юратмасть ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Саваламансем халăха улталаççĕ çеç. Çавăнпа халăх пăлханать те. Тепĕр тесен, халăх пăлханнинчен тĕлĕнмелли çук-ха: халăх вăл авал та нумай пăлханнă. Мана урăххи тĕлĕнтерет: ĕлĕк пăлханакансем çаратма, çунтарма пуçлатчĕç, халĕ апла мар. Пит йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Сăмахран, çарана туртса илчĕç, анчах пĕр капан та çухалман. Хурал тăраççĕ вĕт. Леш хутора çунтарнăшăн та рабочисене хытă ятларĕç, тет. Апла пулсан, халăха ăслă çынсем ертсе пыраççĕ. Улпут пурлăхне сыхласа, унпа усă курма вĕрентеççĕ.

Г л и н с к а я. Эсĕ канаш парас вырăнне большевиксене мухтама пуçларăн пулас?

Д о р о ф е и ч. Мухтава тивĕçлине мухтасах пулать, Варвара Кирилловна. Ну, сывă пулăр... Усалпа ан асăнăр... Нина Александровна... *(Пуç таять.)* Варвара Кирилловна. *(Аллине чуптăвать.)*

Г л и н с к а я. Эсĕ чăнах тарасшăн-и?

Н и н а. Пытанма вырăн пулсан, тар, Дорофеич.

Д о р о ф е и ч. Ман мĕншĕн пытанас? Эпĕ нейтральнăй патшалăх пек çех. Самана лăпланиччен хулара ывăл

патӗнче пуранӑп... Ҫайран пӗр-пӗр ҫӗре директора кӗрӗп.

Глинская. Ҫак хӑрушӑ вӑхӑтра пире пӑрахатӑн! Ҫылӑха пӗл, Дорофеич.

Дорофеич. Ҫылӑх ҫинчен дьяконпа калаҫса пӑхӑр. Вӑл турӑ та, ҫылӑх та, нимӗн те ҫук, тет. Нимӗн те ҫук тенине ӗненсех каймастӑп та, турӑпа ҫылӑх ҫукки ҫинчен шухӑшласа пӑхас пулать. Сывӑ пулӑр! *(Каять.)*

Нина *(балкон ҫине тухса)*. Мӗнле илемлӗ ҫанталӑк. Ҫӳлте, сенкер таса тӳпере, пӗлӗтсем ярӑнаҫҫӗ... аялта, ҫӗр ҫинче, тулса ҫитнӗ ыраш хумханать. Пучаххисем пӗр-пӗрне пуҫ таяҫҫӗ. Хӗвел ӑшшипе савӑнасси вӗсен те нумай юлмарӗ. Ыраша вырӗҫ, хӑмӑл юлӗ... Ҫитес ҫул ыраш вырӑнӗнче кӑтра сӗлӗ хумханӗ.

Глинская. Нина...

Нина. Мӗн, маман?

Глинская. Дорофеич калашле, чӑнах та тармалла мар-и?

Нина. Ӑҫта?

Глинская. Хулана.

Нина. Пытанма вырӑн ҫук. Ялтан — хулана, хуларан — яла. Ку ҫӑлӑнни мар. Тарса ҫӑлӑнаймӑпӑр. Урӑх мел шыраса тупас пулать, анчах мӗнле мел? Малта хӑрушӑ кӗрешӳ... Ҫав кӗрешӳре тӑшмана ҫӗнтереймесен, пирӗн ӗмӗр татӑлать. Кӗрешмелле, анчах кӗрешме пирӗн вӑй ҫук. Пирӗн ҫӗрнӗ чарак... февральте хуҫӑлчӗ. Ҫапах кӗрешмесӗр парӑнма юрамасть.

Даша кӗрет.

Даша. Барыня, сире Петр Петрович курасшӑн. Аялта кӗтсе тӑрать.

Глинская. Ҫала, кунта килтӗр.

Нина. Даша, кучера лаша кӳлме хуш. Ҫайран ман пата пыр.

Даша каять.

Глинская. Эсӗ ӑҫта каясшӑн?

Нина. Питӗре... Кӗрешӳ пуҫлама.

Глинская. Халӗ ҫех кӗрешме вӑй ҫук темерӗн-и?

Нина. Кӗрешме пултараймасан та, чӗпӗтме вӑй ҫитӗ-ха. *(Каять.)*

Петров кӗрет.

Петров. Салам, Варвара Ҫирилловна.

Глинская. Салам, салам... Ларăр, тархасшăн... Мĕн çăмăлпа килсеттĕр ман пата?

Петров. Ĕçĕ сире кăмăллă мар та... Мĕн тăвăн, самани çавнашкал.

Глинская. Қалăр хăвăртрах... Мана арестлеме килтĕр-и?

Петров. Мĕн аташатăр? Мĕншĕн сире арестлес? Лăпланăр. Ман ĕç... Мĕнле каламалла... Халăх хушнине тăвасси.

Глинская. Ну?

Петров. Паян вулăсри ял уполномоченнăйĕсен пухăвĕнче шкул юсама укçа паманни çинчен тухса ларăм...

Глинская. Шкул юсама укça ыйтас тетĕр-и? Ан тархаслăр, пĕр пус та памастăп.

Петров. Эпĕ тархаслама килмен... Пухура резолюци йышăнчĕç...

Глинская. Мĕн тăвас ман сирĕн резолюципе?

Петров. Сирĕн çурта шкул туса, хăвăра флигеле куçарас терĕç.

Глинская. Қу мĕн? Çурта туртса илни пулать-и?

Петров. Вăхăтлăха çех... Шкул начар пирки...

Глинская. Қу закона пăсни пулать, Петр Петрович! Эпĕ кĕпĕрнене жалоба çыратăп.

Петров. Çырасси сирĕн ĕç вăл, жалоба çырма пултаратăр... Анчах усси пулас çук.

Глинская. Эсир те, Петр Петрович, вăрă-хурахсемпе пĕрле ĕçлетĕр-и?

Петров. Сăмаха шухăшласарах калас пулать, Варвара Қирилловна. Халăх вăрă-хурах мар. Резолюцие халăх уполномоченнăйĕсем йышăнчĕç. Қу — пĕрре. Тепĕр енчен, тӳррипе каласан, улпутсен ĕçне, чăнах та, вăрă-хурахла ĕç теме пулать вара. Эсир ĕмĕр халăха пусмăрласа, çаратса пурăннă.

Глинская. Астăвăр, Петр Петрович! Қуншăн сире тĕрмене хупаççĕ.

Петров. Эпĕ халăх хушнине тăватăп. Мана сирĕн çуртри пурлăха опиç тума хушнă.

Глинская. Вон! Илтрĕр-и? Вон!

Дарйăпа Лида кĕреççĕ.

Дарья. Петр Петровича хăвалама юрамасть, Варвара Қирилловна. Вăл комитет янă çын.

Глинская. Мĕнле эс хăвăн барыньупа çапла калаçма хăятăн? Батрачка...

Дарья. Эпĕ комитет председателĕ. Пирĕн çынсене ĕçлеме кансĕрлесен, эпĕ сире арестлеме хушатăп.

Глинская. Нина! Ниночка! Илтетĕн-и, мана арестлесшĕн! *(Каять.)*

Лида. Барыня мĕншĕн кăшкăрать, тетя Дарья?

Дарья. Хăйĕн улпутлăхне çухатрĕ, çавăнпа кăшкăрать. Çырма пуçлăр. Эпĕ аялта пулатăп. *(Каять.)*

Лида *(балкон çине тухса)*. И-и... Кунтан пĕтĕм ял курăнать. Авă, ял çумĕнче улпут хирĕ... Ырашĕ тинĕс пек хумханать. Лере, аякра, ял хирĕ...

Петров. Залне пĕрремĕш номерлĕ пӳлĕм тейĕпĕр... Лида, çыр.

Лида *(çырса)*. Пĕрремĕш номерлĕ пӳлĕм...

Петров. Малалла çыр: сĕтел — иккĕ.

Лида *(çырса)*. Иккĕ.

Петров. Рояль пĕрре... çемçе пукан... *(Шутлать.)*

Лида. Ку залра миçемĕш класс пулать, атте?

Петров. Çӳлти хутне халăх çурчĕ тăвăпăр... Ку пӳлĕмре спектакльсем лартăпăр.

Лида. Класс тусан авантарах пулĕ. Переменăсенче ачасем балкон çинче вылĕччĕç.

Петров. Балконлă пӳлĕме класс тума юрамасть пулĕ, хĕрĕм.

Лида. Мĕншĕн?

Петров. Ачасем вылянă чух карлăк урлă аяла ӳкме пултараççĕ.

Лида. Дежурнăй мĕншĕн?

Петров. Дежурнăй хăй те карлăк çине утланса ларсан? *(Балкон çине тухать.)* Кунта чăнах та аванмĕн... Юрĕ, Лида. Кăнтăрла класс пулĕ, каçхине клуб. *(Аяккалла пăхса.)* Миçе çул эп çакăн пек шкул кĕтнĕ. Çĕрнĕ шкулта вĕрентсех вилетĕп пулĕ тенĕччĕ. Ĕмĕт çитрĕ... Çак балкон çинчен ачасем хăйсен хирĕсене пăхса савăнĕç...

Лида. Анчах хирĕ пит аякра.

Петров. Çывăхри те халăхăнах пулĕ... Пĕтĕм çĕр халăхăн пулĕ.

Лида. Улпутсем пулмĕç-и вара?

Петров. Пулмĕç.

Лида. Ăçта кайĕç вĕсем?

Петров. Çавна татăклăн калама пултараймастăп, хĕрĕм.

Лида. Пурлăхне туртса илсен, мĕнле тăранса пурăнĕç вĕсем?

Петров. Ĕçлĕç.

Лида. Ĕçлеменнисем?

Петров. Ăçтан пĕлем? Эпĕ пророк мар вĕт.

Лида. Сан пурне те пĕлмелле, атте. Эсĕ революционер-çке.

Петров. Революционер мар çав.

Лида. Епле революционер мар? Эсĕ улпутсене хирĕç, халăхшăн тăрăшатăн...

Петров. Вăл çапла та, анчах партие çырăнман-ха.

Лида. Çырăн, атте, çырăн. Анчах Саваламансен партине ан çырăн. Вĕсен партийĕ халăха улталать.

Петров. Эсĕ ăçтан пĕлетĕн?

Лида. Ялта çапла калаççĕ.

Петров. Юрĕ... Эпĕ... *(Вăрттăн кулать.)*

Лида. Тĕрĕс, атте... Эпĕ те, ӳссен, большевик пулатăп. Улпутсемпе кĕрешетĕп.

Петров. Малашне улпутсем пулмаççĕ терĕм-иç.

Лида. Апла кампа кĕрешмелле вара? Юрĕ... Улпут майлисемпе кĕрешĕп.

Петров. Çемçе пукан... Çыртăн-и? *(Лида хутне пăхать те зала кĕрет.)* Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

Лида *(аяккалла пăхса)*. Атте! Кил-ха кунта... Çырма урлă темĕн чухлĕ халăх каçать...

Петров *(балкон çине тухса)*. Сĕвекасси чăвашĕсем пулас. Шурă тумпа...

Лида. Асту-ха... Малти хĕрлĕ ялав йӑтнă. Хĕвел çутинче вут пек ялкăшать. *(Тепĕр енне тăрса.)* Атте, кунталла пăх-ха... Аслă çулпа та килеççĕ... И... мĕн чухлĕ халăх! Кусем те хĕрлĕ ялавпа...

Петров. Кусем Ӳтемĕш тутарĕсем.

Лида. Мĕншĕн арçынсем çех? Пĕр хĕрарăм та çук...

Петров. Тутарсен йăли çавнашкал: хĕрарăмсене арçынсемпе хутшăнтармаççĕ.

Лида. Хĕрарăм çын мар-им?

Петров. Йăли çавнашкал вĕсен. Малашне улшăнĕ-ха. Революци, кивелнĕ йăласене пĕтерсе, çĕнĕ йăла тăвать. Пурăна киле хĕрарăм президент та пулĕ.

Саваламан кĕрет.

Саваламан. Эсир мĕн тăватăр кунта? Варвара Кирилловнăн сехрине хăпартнă. Вырăн çинче аран сывласа выртать.

Петров. Эпĕ нимĕн те туман. Пухура резолюци йышăнни çинчен çех каларăм.

Саваламан. Халĕ мĕн тăватăр?

Петров. Опиç тăватпăр.

Саваламан. Сире кам ирĕк пачĕ? Эпĕ ун çинчен постановлени кăларман!

Петров. Кăларман пулсан, кăларăр.

Саваламан. Маншăн сирĕн резолюци закон мар.

Петров. Кăлармасан, арестлĕç.

Саваламан. Кам? Кам мана арестлеме пултарать?

Петров. Халăх. Халăх вăл... мĕнле калас... вăй.

Саваламан. Правительство ячĕпе хушатăп: халех тасалăр ку çуртран.

Петров. Эпĕ кайăп... Ман влаçа хирĕç тăма халĕ вăй çук. Каяр, Лида, комитета пĕлтерер. *(Каяççĕ.)*

Саваламан. Хăть шуйттана пĕлтер, хăрамастăп. Учитель большевиксен енне çаврăнса ӳкнĕ... Чим, кăтартăп-ха эп сире!

Нина кĕрет. Вăл çул тумĕпе. Саваламана курман пек пулса, тепĕр алăк патнелле утать.

Салам, Нина Александровна!

Нина *(сиввĕн)*. Салам. *(Кайма тăрать.)*

Саваламан. Нина Александровна! *(Леш чарăнать.)* Эпĕ сирĕн пата килтĕм...

Нина. Мĕнле ĕçпе? Калăр, итлетĕп. Анчах кĕскенрех: эпĕ васкатăп.

Саваламан. Вулăсра лару-тăру хăрушланать.

Нина. Пĕлетĕп. Пирĕн çурта, тырра, пурлăха туртса илмелле тесе, резолюци йышăннă. Сирĕн çав резолюцие çирĕплетсе постановлени кăлармалла. Малалла мĕн?

Саваламан. Уесран халăха пусарма салтаксем ячĕç те, анчах сахал.

Нина. Ан суйăр. Сахал мар, вĕсем эсир хушнине тумаççĕ.

Саваламан. Çапла, вĕсене те пăснă. Паллах, кунашкал лару-тăру вăхăтлăха çех. Малашне улшăнĕ.

Нина. Эпĕ акă мĕн ыйтасшăн сиртен.

Саваламан. Тархасшăн.

Нина. Мĕн тăвасшăн эсир? Тӳррипе калăр, суймасăр.

Саваламан. Халĕ халăха чарма вăй çук. Çавăнпа кунта ĕçлени усăсăр. Ку — пĕрре. Тепĕр енчен, кунта

пурăнма та хăрушă: урнă халăх темĕн те тума пултарать.

Нина. Урăхла каласан, сирĕн карланкăсене хупларĕç пулать. Ахаль мар сире большевиксем «карма çăварсем» теççĕ.

Саваламан. Эсир пире, революционерсене, кураймастăр ĕнтĕ.

Нина. Революционер... Эсир пире нимĕнле сиен те туман. Мĕншĕн сире кураймасăр тăмалла? Чăн-чăн революционерсене эпĕ, чăнах та, кураймастăп. Сирĕн пеккисем йĕрĕнтереççĕ çех. Сывă пулăр. *(Кайма тытăнать.)*

Саваламан. Нина Александровна!

Нина *(чарăнса)*. Тата мĕн?

Саваламан. Эсир те кунтан кайăр.

Нина. Ăçта?

Саваламан. Эпĕ сире илме килтĕм.

Нина. Çук, Гаврил Романыч, эп сирĕнпе каймастăп. Эпĕ тăшманпа пикенсех кĕрешес тетĕп. Çĕнтерсен — савăнăç, çĕнтермесен — вилĕм! *(Каять.)*

Саваламан та кайма тăрать. Ваня кĕрет.

Ваня. Ăçта каятăр? Кайма юрамасть. Сире те сăмах парăпăр. Анчах пухури пек Учредилка çинчен ан палкăр. Пуху йышăннă резолюцие пурнăçласси çинчен калăр.

Саваламан. Мĕнле сăмах? Ăçта каламалла?

Ваня. Паян кунта таврари ялсен пухăвĕ пулать.

Саваламан. Эпĕ сире митинг тума ирĕк паман.

Ваня. Вăл кирлĕ те мар. Сăмах ирĕклĕхĕ, пуху ирĕклĕхĕ — закон.

Саваламан. Эпĕ закона хирĕç мар... Анчах халĕ митинг тума вăхăт мар.

Ваня. Халăх хăçан пухăнмаллине хăй пĕлет.

Саваламан. Халех салатăр пухăннă халăха.

Ваня. Пултараймастăп, гражданин Саваламан.

Саваламан. Ку — анархи! *(Хăвăрт тухса каять.)*

Ваня. Гражданин Саваламан! Митинг пĕтиччен ан кайăр. Сирĕн сăмах каласах пулать... Эсир как-никак халлĕхе власть-ха.

Дарья, Вася, Мухамедьян, Абдрахман, Трифон кĕреççĕ.

Ваня. Ну, мĕнле, тетя Дарья, шутласа пĕтертĕр-и?

Дарья. Каласа пар, Мухамедьян Валиевич.

Мухамедьян. Тăвата ялпа уйăрсан, кашни çынна çур пилĕкшер ыраш, сакăр хăлаç сĕлĕ тивет...
Ваня. Хĕрарăмсемпе хĕрсене шута илтĕр-и?
Мухамедьян. Шутларăмăр... Тутар арăмĕсене те ята кĕртрĕмĕр... Анчах ĕнесене валеçме май килмест, Иван...
Ваня. Ма? Ĕнесĕррисене çеç парас...
Дарья. Ĕнесĕррисем нумай-çке, Ваня...
Мухамедьян. Иван, халăх пухăнчĕ. Митинг уçмалла пулĕ.
Ваня. Қăшт тăхтар, хуларан пĕр çын килмелле.
Мухамедьян. Те килет вăл, те килмест. Халăха нумай кĕттерме юрамасть... Халĕ ĕç вăхăчĕ.
Ваня. Тухнă тесе телефонпа пĕлтерчĕç.
Мухамедьян. Тухнă пулсан, кăшт кĕтĕпĕр.
Ваня. Ну, Мухамедьян, сăмах калама хатĕрлентĕн-и?
Мухамедьян. Хатĕрлентĕм, Иван, пит лайăх хатĕрлентĕм. Акă хут çине те çырса хутăм. *(Хутне кăтартать.)*
Ваня *(хутне пăхса)*. Эсĕ тутарла кала.
Мухамедьян. Қалама тутарла калăп. Қăна сана ăнланмалла пултăр тесе çыртăм. Унсăрăн йăнăш каласран хăратăп. *(Хучĕ çине аллипе кăтартса.)* Акă куна каламалла-и?
Ваня. Қаламалла.
Мухамедьян. Юрĕ... Совет влаçĕ сывă пултăр!— тейĕп.
Ваня. Анчах митинга кама уçтарас? Тетя Дарья, эсĕ уçатăн пулĕ.
Дарья. Çук, Ваня, пуçласа калама пултараймастăп. Ман шутпа, Васьăна уçтармалла.
Ваня. Мĕнле, Вася?
Вася. Ман чĕлхе лайăх çаврăнкалаймасть. Шухăша хăвăрт калаймастăп. Тытăнкăллă тухать.
Мухамедьян. Аван тухать, Ваççили. Паян вулăс пухăвĕнче Саваламана епле çапрăн? Халăх мĕнле алă çупрĕ? Эсĕ, Ваççили, чун хавалĕпе калаçатăн. Сăмахусем картлашкаллă пулсан та, чĕрене пырса тивеççĕ.
Вася. Юрĕ эппин, уçăп. Ваня, комитет ячĕпе уçмалла-и е парти ячейки ячĕпе-и?
Ваня. Қомитет ячĕпе.

Пурте балкон çине тухма хатĕрленеççĕ.

*(Дарьйăна чарса.)* Тетя Дарья! Эсĕ хăвăн сăмахунта хутора çунтарни çинчен те кала. Улпут пурлăхне салатма юрамасть, вăл халăхăн пулать, те. Ăнлантăн-и?

Д а р ь я. Ăнлантăм. Йăнăш тунă тейĕп. Çапла-и?

В а н я. Тĕрĕс, тетя Дарья.

Д а р ь я балкон çине каять. В е р а кĕрет.

Вера Андреевна! Пит вăхăтлă çитрĕр! Салам! *(Алă парать.)*

В е р а. Салам, Ваня. Анчах митинга мĕншĕн улпут çурчĕ умĕнче уçатăр?

В а н я. Балкон çинчен калаçма авантарах терĕмĕр. Халăх пит нумай пухăннă. Пурте итлесшĕн.

В е р а. Хуçисем кунтах-и?

В а н я. Кунтах.

В е р а. Кăшт йăнăшрах пулмарĕ-ши? *(Кĕске пауза.)* Пуху мĕнле иртрĕ?

В а н я. Аван. Саваламанпа пит хирĕçрĕç. Ну, уçар митинга.

В а н я балкон çине тухать, Вера, тĕкĕр патне пырса, çÿçне тÿрлетет. Н и н а кĕрет.

Н и н а *(хаваслă пек.)* Верочка! *(Пырса чуптăвать.)* Эсĕ Питĕре каятăп темерĕн-и?

В е р а. Ĕçсем çавнашкал çаврăнса килчĕç... Каяймарăм.

Н и н а. Саваламан калани тĕрĕс пулчĕ пулать?

В е р а. Ăнланаймарăм... Мĕн çинчен калатăн?

Н и н а. Эсĕ большевик-и?

В е р а. Çапла.

Н и н а. Пирĕн патăрта пурăнса, пире хирĕç ĕçлерĕн пулать?

В е р а. Мĕн тăвăн? Вăрттăн ĕçлеме тиврĕ.

Н и н а. Манăн савнă тусăм манăн тăшман пулчĕ. Хăвăнтан илтиччен ĕненмерĕм. Саваламан суять пулĕ терĕм. *(Сасартăк кăшкăрса.)* Вера! Эсĕ суятăн!

В е р а. Суймастăп, Нина.

Нина нумайччен Вера çине пăхса тăрать, унтан сасартăк тухса каять. Вера, çÿçне тÿрлетсе, хăвăрт балкон çине тухать, В а с я çумне тăрать.

В а с я. Юлташсем! Вулăсри батраксемпе чухăнсен комитечĕ ячĕпе...

Çав вăхăтра Нина кĕрет. Аллинче браунинг. Тĕллесе перет. Вася суланса каять. Сцена хыçĕнче халăх кĕрлет. Сцена çине Дашăпа Саваламан чупса кĕреççĕ. Саваламан Нинăна çавăрса илет, Даша балкон çине чупать. Васьăна ыталаса илет.

Саваламан. Мĕн турăр, Нина Александровна?

Нина. Кĕрешӳ пуçларăм!

Даша. Вася... чунăм...

Ваня пӳлĕме чупса кĕрет, Нинăна Саваламан аллинчен çăлса илет.

Ваня. Акă мĕнле хĕр эсир! Эпĕ сире урăхла тесе... *(Нинăна пăвма тытăнать.)*

Вера *(Ваня патне пырса)*. Ваня, мĕн тăватăн?!

Ваня. Хамăн савнă юлташшăн çак илемлĕ çĕлене пăватăп.

Саваламан. Вера Андреевна! Чарăр... Вăл ухмаха ернĕ.

Вера. Ваня, чарăн!

Саваламан. Çынна пăвма юрамасть!

Ваня. Сирĕлĕр ман çумран!

Вера. Васьăна кăшт çех тивнĕ.

Ваня Вера çине пăхать, Нинăна аллинчен вĕçертет. Пауза. Петровпа Глинская та кунтах.

Вера. Нина, мĕншĕн айăпсăр çынна петĕн?

Нина. Эпĕ ăна пемен. Урăххине, вăйлăрах тăшмана вĕлересшĕнччĕ.

Вера. Кама?

Нина. Сана! Питĕре те юри сана вĕлерме каясшăнччĕ.

Петров *(Варвара Кирилловнăна)*. Капла хăтланатăр пулсан, сире флигельте те пурăнтарма хăрушă. Ялтан пуçĕпех каятăр пулĕ, Варвара Кирилловна.

Ваня. Гражданин Саваламан! Нина Александровна Глинскаяна комитет членне вĕлерме тăнăшăн халех арестлĕр! Амăшне 24 сехет хушшинче ялтан кăларса ямалла, пурлăхне комитет аллине памалла тесе, постановлени кăларăр. *(Каялла пăхса.)* Вася! Мĕнле, калаçма пултаратăн-и?

Вася. Пултаратăп, Ваня.

Ваня. Апла пулсан — уç митинга.

Вася *(балкон çинчен сцена хыçнелле пăхса)*. Юлташсем!

Халăх алă çупать, кĕрлет. «Интернационал» юрлама пуçлаççĕ. Юрă вăйланнăçемĕн вăйланать.

Н и н а *(темĕскере аса илет, ура çине сиксе тăрать).* Илтетни, маман? Пирĕн пытару маршĕ. *(Вăл, ниçта каймa пĕлмесĕр, балкон алăкĕ патне чупса пырать, тухма талпăнать, анчах каялла чакса, урайне тĕшĕрĕлсе анать.)*

Ч а р ш а в ерипен хупăнать

1940 ç.

# ТĂВĂЛ ХЫÇÇĂН ТĂВĂЛ

*(Константин Иванов)*

4 пайлă, 5 картинăллă, прологлă драма

## ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Иванов Константин Васильевич** — поэт.
**Яковлев Иван Яковлевич** — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕ, 59-та.
**Цыганов Григорий Данилович** — Яковлевăн ача чухнехи юлташĕ, вырăс, иккĕшĕ те пĕр çултах.
**Праски** — Слакпуç хĕрĕ, Иванов тантăшĕ.
**Родион Анисимыч** — учитель, тăлмач, кăшт тытăнчăклăн калаçать.
**Михеле** — ватă çын, Яковлевпа кĕтӳ кĕтнĕскер.
**Корнилий, Пикпав** — ялти çынсем.
**Ваня** — Чĕмпĕрти ремесла шкулĕнче вĕренекен, Цыганов тăванĕ.
**Илья, Федор** — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем.
**Вера, Тоня** — Чĕмпĕрти хĕрсен шкулĕнче вĕренекенсем.
**Громов** — чухăн гимназист.
**Тарас** — Иванов тăванĕ.
**Иван** — Чĕмпĕр шкулĕнчи хуралçă.
**Ваçинкка** — Иванов ашшĕ.
**Алтатти** — Иванов амăшĕ.
**Квинтильян** — Иванов шăллĕ, шкула çӳреме пуçланă ача.
**Ваçлей, Санька, Варук, Тарук** — Иванов тантăшĕсем.
**Макçăм** — юмăç.
**Кулине** — карчăк.
**Сретенский** — жандарм офицерĕ.
**Полици агенчĕ.**
**Городовой.**
**Уретник.**

Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекен ачасемпе хĕрсем, улахри хĕрсемпе каччăсем, городовойсем, ялти çынсем, рабочисем, мещенсем.

## ПРОЛОГ

Чӗмпӗр. Сӗве шывӗ хӗрринчи дамба. Сулахайра Чӑваш шкулӗ курӑнать, сылтӑмра — Ремесла шкулӗ, аякра — хула. Ремесла шкулӗ ҫумӗнче, хыҫал енче, завод майлӑ икӗ хутлӑ чул ҫурт, ун ҫумӗнче— ҫӳллӗ тимӗр труба.

Чаршав уҫӑличченех заводсем кӑшкӑртни илтӗнет. Пӗрисем ҫывӑхра, теприсем аякра улаҫҫӗ.

Сцена урлӑ васкаса рабочисем ирте-ирте каяҫҫӗ. Сцена хыҫӗнче «Отречемся от старого мира» юрлани илтӗнет. Юрӑ пуҫлансанах, Ремесла шкулӗнче вӗренекенсемпе Чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасем пӗрерӗн-икшерӗн, каярахпа ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнма пуҫлаҫҫӗ. Ваня тухать, ҫӳллӗ вырӑна хӑпарса тӑрать. Рабочисем, работницӑсем, хула ҫыннисем — арҫынсемпе хӗрарӑмсем пухӑнаҫҫӗ. Лайӑх тумланнисем катара тӑраҫҫӗ. Ивановпа Илья кӗреҫҫӗ.

Ваня. Юлташсем! Пӗтӗм Российӑра стачка! Пӗр завод та, пӗр фабрика та ӗҫлемест. Эпир, Ремесла шкулӗнче вӗренекенсем, рабочисем ҫумне хутшӑнатпӑр! Чӑваш шкулӗнче вӗренекенсене те хутшӑнма чӗнетпӗр... Халӑх юнӗпе вараланнӑ патшана тронӗ ҫинчен сирпӗнтермелле! Фабрик-заводсенче ӗҫ кунӗ сакӑр сехет пулмалла. Улпутсен ҫӗрне хресченсене памалла!

Сцена хыҫӗнче шӑнкӑрав сасси. Кӑшт тӑрсан, шӑнкӑрав шӑнкӑртаттарса, Иван кӗрет.

Иван. Сакӑр сехет, ачасем... Уроксем пуҫланаҫҫӗ...
Ваня. Паян вӗренмеҫҫӗ, пичче!
Сасӑсем. Тӗрӗс. Паян вӗренместпӗр!
Иван. Мӗн пулнӑ апла?
Ваня. Стачка! Урӑхла каласан — забастовка!

Громов тухать. Вӑл гимназист формипе, тумӗ кивелнӗ. Йӑвантарнӑ полици будки ҫине хӑпарать те кӗсйинчен хут кӑларать.

Громов (*вулать*). «Кăвак тинĕс тӳремĕ çийĕн çил пĕлĕтсене пухать. Пĕлĕтпе тинĕс хушшинче, хура çиçĕм евĕр, мăнаçлăн тăвăл йыхравçи вĕçет. Пĕрре çуначĕпе хума сĕртĕнсе, тепре çĕмĕрен пек тӳпене ыткăнса, хăюллăн кăшкăрать вăл,— савăнăç илтеççĕ пĕлĕтсем çав вĕçен кайăк сассинче. Çав сасă тăвăлшăн! Вăл сасăра— хаярлăх вăйĕ, ĕмĕт вут-çулăмĕ, çĕнтерӳ шанчăкĕ...»

Иванов. Мĕнле илемлĕ сăвă! (*Хăй çумĕнче тăракан ачана.*) Кам çырнă çак сăвва, Илья?

Илья. Пĕлместĕп, Костя.

Громов (*вулать*). «Нăйлатаççĕ чарлансем тăвăл умĕн, ниçта вырăн тупаймаççĕ, тăвăлран хăранипе тинĕс тĕпне пытанма хатĕр вĕсем...»

Иванов. Тĕлĕнмелле илемлĕ çырнă! Ку сăвва чăвашла куçарас пулать! (*Ваня патне пырать.*) Кала-ха, Ваня, кам çырнă ку сăвва?

Ваня. Максим Горький. «Тăвăл йыхравçи» ятлă вăл.

Громов (*вулать*). «Гагарсем те какалаççĕ — гагарсем туймаççĕ çапăçу киленĕçне, аçа çапни хăратать вĕсене...»

Иванов. Ытарма çук аван çырнă! Куçаратăп...

Городовой чупса кĕрет. Хашкать.

Городовой. Мĕнле митинг? Саланăр, господа! Саланăр, тетĕп! (*Громова.*) Эс мĕн вулатăн! Прокламаци?

Ваня (*городовоя пӳлсе*). Ваше благороди...

Городовой. Ну?!.

Ваня. Эсир авланнă çын-и?

Городовой. Авланнă пултăр, сире мĕн ĕç?

Ваня. Арăмăра тăлăха хăварас темесен, вĕçтерĕр кунтан.

Городовой. Мĕн? (*Кăкăрĕ çинче çакăнса тăракан пĕчĕк шăхличне çăварне хыпать, шăхăртать.*)

Ваня (*городовой шăхличне тытса илет*). Шăхличĕ кансĕрлет пулас сире, ваше степенство.

Городовой. Ку — бунт! Ку, ку... эп сире! (*Револьвер йĕннине аллипе тытать.*)

Ваня. Пăшалăр та йĕннинчех вырттăр... Илтнĕ пулĕ, виçĕмкун пĕр городовой пăшалне алла тытнăшăнах çӳллĕ кĕпер çинчен Сĕвене чăмнă... Халĕ, хăвăр пĕ-

летĕр, шыв ăшах мар, сунас лекме пултарать. *(Громова.)* Вула, юлташ!

Городовой ним тума пĕлмест: пĕрре Ваня çине пăхса илет, тепре — Громов çине.

Громов *(вулать)*. «Ухмах пингвин хăйĕн самăр ÿтне ту хушăкне пытарать...»

Городовой *(Громов патне чупса пырса)*. Чарăн! Чарăн, тетĕп сана!

Громов *(вулать)*. «Мăнаçлă тăвăл хыпарçи çеç хăюллăн та ирĕклĕн вĕçет кăпăкпа шуралнă тинĕс çийĕн...»

Городовой. Эп сире кăтартăп! Эп сире... *(Каять.)*

Громов *(вулать)*. «Хуралнăçемĕн хуралаççĕ пĕлĕтсем, аннăçемĕн анаççĕ тинĕс çине... Уйрăлаççĕ те татăлса хăпараççĕ хумсем çÿлелле, аслатие хирĕç... Кĕрлет аслати! Çилпе ăмăртса, кăпăкланса ахлатаççĕ хумсем. Ак çирĕппĕн çавăрса тытать те çил хум кĕтĕвне çилленсе, хаяррăн ывăтать чул çыран çине... Мерчен тĕслĕ шыв арканса пĕрхĕнет те тумлам-тумламăн сирпĕнет!..»

Сцена хыçĕнче юрă пуçланать. Юрă çывхарнăçемĕн çывхарать. Громовăн юлашки сăмахĕсем илтĕнми пулаççĕ.

Цыганов. Юлташсем! Пурте демонстрацие! *(Хĕрлĕ ялав çĕклет.)*

Пурте «Отречемся...» юрлама тытăнаççĕ. Ваня хыççăн тухса каяççĕ. Лайăх тумланнă ик-виçĕ ача, мещенсем, Иванов, Илья кунтах юлаççĕ.

Иванов. «Мăнаçлă тăвăл хыпарçи çеç хăюллăн та ирĕклĕн вĕçет кăпăкпа шуралнă тинĕс çийĕн...» Вăйлă.

Илья. Атя, Костя.

Иванов. Ăçта?

Илья. Демонстрацие.

Иванов. Кайрăмăр! *(Кĕсйинчен хут кăларать те, Ильяпа иккĕшĕ юрласа яраççĕ.)*

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр,—
Малалла, малалла, малалла!

Ильяпа Иванов сцена çинчен тухса каяççĕ.

Чаршав

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

## Пĕрремĕш картина

Слакпуç ялĕ. Чаршав уçăличченех урамра арçынсем революци юррине юрлани илтĕнет. Юрă çывхарнăçемĕн çывхарать. Чаршав ерипен уçăлать.

Шатрун çуртăн пĕр пӳлĕмĕ. Сĕтел, пукансем, кравать. Кантăксене карнă. Кĕççепе витнĕ пысăк арча. Кĕтесре турăшсем. Вĕсем тавра тĕрленĕ алшăлли. Ик алăк. Сĕтел хушшинче Ваçинкка па Тарас. Иккĕшĕ те урамалла пăхаççĕ. Ваçинкка умĕнче эрех, черкке. Алтатти тепĕр кантăк умĕнче пăхса тăрать.

Алтатти. Ах, тур-тур! Каллех ристансене хăваласа каяççĕ...

Сцена хыçĕнче: «Шăпланăр! Юрлама юрамасть!» тесе кăшкăрни илтĕнет. Юрă тата вăйланать те ерипен шăпланать.

Тутар та пур, вырăс та, чăваш та. Çĕпĕре ăсатаççĕ пулĕ ĕнтĕ... Кашни кун тенĕ пекех станцие хăваласа каяççĕ...

Ваçинкка. Кусем, леш, Мелекес таврашĕнчи хресченсем пулĕ-ха. Улпут вăрманне каснă, терĕç... Çуртне те çунтарса янă имĕш... Çурчĕ пит чаплăччĕ...

Юрă илтĕнми пулать.

Алтатти. Ай-яй пăлханчĕ ку çулсенче халăх. *(Пӳлĕмрен тухса каять.)*

Ваçинкка *(Тарас енне çаврăнса)*. Хирти тырра ăна пӳлмене кĕрсе ӳкиччен мул теме май çук. Çумăр çумарĕ, вăрлăхне те пухса илейместĕн. Кăçал, ав, микула ирттернĕренпе йĕркеллĕ çумăр çумарĕ те... Хăш çул тата кашласа ларакан ыран-паян вырас тырра пăр çапса каять...

Тарас. Ун пек инкекрен турă сыхлатăр та-ха... Ырашĕ ман япăх мар. Леш, Силпи чиккинчи çур пилĕкĕн кăна пуçĕ япăхрах. Айлăмра юр час каймарĕ те...

Ваçинкка. Пайти пулмасран хăратăп-çке, Тарас Кузьмич...

Тарас шухăша каять.

Упик илесшĕн марччĕ-и сан çĕрне?

Тарас. Вăл яланлăха илесшĕн... Пирĕн пеккисен çĕрне сутăн илсе, çĕнĕ саккунпа, ялтан уйрăлса тухса, хуттăр тăвасшăн... Яланлăха сутас килмест-çке çĕре...

Çĕрсĕр пуранаймасть ĕнтĕ хресчен... Ķăшт хушатăн пулĕ, Василь Николаич?

В а ç и н к к а. Юрĕ эппин, хăвăрах вырса паратăр пулсан, çур пилĕк пуçне аллăшар пус хушăп... Стурунана кайма укçа кирлĕ тетĕн те, çавăнпа çеç. Пулăшас пулать. Ют çын мар, тăван.

Т а р а с *(шухăшласа)*. Сахалтарах та ĕнтĕ...

В а ç и н к к а. Акнă тыррине илесшĕн те марччĕ, хăвăра хĕрхенсе çеç... Пайти пулать-и унта, çук-и, тура пĕлет. *(Аяккалла.)* Алтатти! Арча уççине парсамччĕ.

Алтатти кĕрет, çăра уççине Ваçинккана парать.

А л т а т т и *(кантăкран пăхса, çепĕççĕн)*. Ķвинтильян! Мĕн тусан çинче йăваланатăр? Çерем çинче выльăр, ачам.

В а ç и н к к а *(пысăк арчине уçать. Арчи уçнă чух темиçе сасăпа янăраса каять)*. Ķĕçтентин ăçта кайнă, иртенпех курăнмасть?

А л т а т т и. Вăл Ķăрлайклăна каятăп терĕ.

В а ç и н к к а *(укçа илсе)*. Тарас Кузьмич анисене сутăн илни çинчен хут çырмаллаччĕ.

А л т а т т и. Макçăм юмăçпа сăмахлама пуçласан, часах уйрăлаймăн. Пуçлать вара пулни-пулманни çинчен палкама, çăвара карсах итлесе ларатăн. Суеçтерме пит ăста та. Авалхи юмахсене, чӳк кĕллисене шыв пек юхтарать.

В а ç и н к к а *(укçа шутласа)*. Юмăç патĕнче пулни темĕнех мар-ха вăл, Макçăм патне такам та çӳрет, анчах уретник паян ман çума çыпçăнчĕ: «Мĕншĕн, мĕн çăмăлпа сан ывăлу Ķăрлайклă ялне çӳрет?» — теме пуçларĕ.

А л т а т т и. Вăл юмах итлеме çӳретĕп, тет. Ķĕнеке çырма кирлĕ тет-и?

В а ç и н к к а. Ķĕнеке таврашне пăрахсан та юрать ĕнтĕ: вĕренесси пулмасть пуль. Ķилти ĕçе тытăнмалла.

А л т а т т и. Ĕçлессе халĕ те тарçăсемпе танах ĕçлет. Вĕренесшĕн-çке-ха.

В а ç и н к к а. Бастовщиксене вĕренме илеççĕ-и? *(Тараса укçа парса.)* Ме, тыт укçине, Тарас Кузьмич. Çăнăхне ыран килсе илĕр. Ķарчăк, эс парса яр вара. Сакăр пăт, кивçен... *(Тараса.)* Арăмна каласа хăвар: тыррине çапсанах кӳрсе патăр. *(Çăраççине арăмне парать, хăй сĕтел патне пырса эрех тултарать.)*

**Т а р а с.** **Ķилĕшнĕ пек тăвăпăр ĕнтĕ.**

Васинкка. Çул курки ĕç-ха, эппин.

Тарас (*тĕппипех ĕçсе*). Ну, эпĕ каям ĕнтĕ...

Васинкка. Тата тепĕрне, Тарас Кузьмич... (*Эрех тултарма тытăнать.*)

Тарас (*черккене парса*). Тавтапуç, Василь Николаич, çитрĕ... (*Каять.*)

Васинкка. Аран калаçса татăлтăмăр. Курăк шўрпи çисе пурăнаççĕ хăйсем, çапах хакне чакарасшăн мар.

Алтатти. Ана çинчи тырра сутасси çăмăлах мар ĕнтĕ.

Васинкка. Хырăм тирĕ пĕрĕнсен, шăркана ларнă ырашна та сутăн. Хăйпе çиччĕн-çке, пурте çăкăр кавлесшĕн. Çĕпĕре ĕç шырама каять.

Алтатти. Пит нумай илсе тултартăн кăçал. Епле пуçтарса кĕртĕпĕр?

Васинкка. Тырри çеç пултăр, ялта чухăн сахал мар: вырса та, çапса та парĕç. (*Чўрече витĕр пăхса.*) Левентей, çўрен лашана кўл, станцине леçсе ярăн.

Алтатти. Эс каясах тетĕн-им?

Васинкка. Каяс. Самарта тырă хакĕ ўснĕ, тет. Хак пур чух сутас. (*Турăш умне тăрса, лампадкине çутать, хăвăрт сăхсăхса.*) Йăлăнсах ыйтатпăр, çĕре ўксех пуççапатпăр, таса чунпа тархаслатпăр: суттăма хаклă сутма, илессине йўне илме пулăшсам пире, ырă туррăмăр! (*Арăмне.*) Тарçăсене хăвăрпа сĕтел хушшине ан лартăр-ха, тархасшăн. Кĕçтентин хыççăн ан кай, ун кăмăлĕ çемçе, çынна пит хĕрхенет. (*Сăхсăхать.*) Тата йăлăнсах ыйтатпăр: панă çĕрти ан палăртăр, илнĕ çĕрти ан иксĕлтĕр...

Сцена хыçĕнче кўршĕ сасси илтĕнсе каять.

Кўршĕ. Эс, эс айăплă! Эс усала вĕрентрĕн!

Васинкка (*кĕлтума пăрахса*). Мĕн кăшкăрать кўршĕ?

Алтатти. Праски пирки карчăкне ятлать пулĕ, Упик каллех евчĕ янă пулас. Микихверне илсе парасшăн Праские. Çураки пĕтерсен пуçларĕç те кашни эрнерех евчĕ яраççĕ.

Васинкка. Пуян Упикпе хурăнташланатăп тесе мухтанать, ахаль мар пулĕ. Улпута паратăп хам хĕре, тет.

Алтатти. Мĕнле улпута?

Васинкка. Упик улпут пуласшăн-çке. Çĕрне кастарса, ялтан уйрăлса тухасшăн.

Алтатти. Пирĕн те уйрăлса тухас мар-и, Ваçинкка? Лайăх çĕрсене касса параççĕ, тет, уйрăлакансене...

Ваçинкка. Ку шухăша пуçăнтан кăларса пăрах, Алтатти... Шанчăклă ĕç мар вăл. Иртнĕ çулсенче епле тустарчĕç улпутсен пурлăхне хресченсем! Пурăна киле кусене те тустарма пуçлĕç ак. Халăх вăл, пĕрре урса кайсан, чарăна пĕлмест... Микихверĕ чăнах та йĕркеллĕ ача мар ĕнтĕ: ăстăнне те турри хĕрхенкелесе çеç панă, курăнать, юлхавлăхĕ те çителĕклĕ.

Алтатти. Ĕçме юратать тата... Тăр-кăнтăрлах урам тăрăх ӳсĕр çапкаланса çӳрет.

Иккĕшĕ те кайма тăраççĕ, Иванов кĕрет.

Иванов. Чим-ха, атте... *(Ашшĕ чарăнать.)* Эпĕ Тарас пиччене куртăм...

Ваçинкка. Леш, çĕрне тара панин хутне çырасси çинчен...

Иванов *(ашшĕне пӳлсе, хумхануллăн)*. Ку... Ку... Тискер ĕç...

Алтатти. Мĕн пулнă, ачам?

Иванов. Итле-ха, анне... Тарас пиччен пилĕк ача, арăмĕ чирлĕ, аран çӳрет... Çавăн пек çынна çаратма юрать-и вара? Вăрă-хурах та...

Ваçинкка. Эс ман ĕçе ан хутшăн, эпĕ хамăнне хам пĕлетĕп. Ак, Кăрлайклă ялне çӳреме пăрах.

Иванов. Мĕншĕн? Эп юмăç пăхтарма çӳреместĕпçке, юмах итлеме.

Ваçинкка. Макçăм кӳрши патне мĕн тума çӳретĕн? Вăл та юмах ярса парать-и?

Иванов. Мĕнле Макçăм кӳрши патне?

Ваçинкка. Леш, вырăнтан кăларнă учитель патне.

Иванов. Родион Анисимович патне-и? Паян курман ăна. Станцие кайнă, терĕç.

Ваçинкка. Вырăнтан мĕншĕн кăларни çинчен каласа пачĕ-и?

Иванов. Каларĕ. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи хресчен пăлхавĕсемшĕн кăларчĕç, тет. Пит вăйлă пăлханнă, тет, унти хресченсем. Улпутсен вăрманĕсене касрĕç, тет, именисене çунтарчĕç, тет. Хăш-хăш тĕлте çĕрĕсене валеçме тытăнчĕç, тет.

Ваçинкка. Сăвă çырас теместĕн-и çавăн çинчен? Çыр, çыр... Чĕмпĕр шкулĕнчен хăваласа кăларни çитмен, ристан тумĕпе Çĕпĕр тăрăх утас килет-и тата?.. Ыран уретник патне кай... Пыма хушрĕ...

Иванов. Виçĕмкун ун патĕнче пултăм-çке. Ик эрне сиктерсе регистрацине çӳреме хушрĕ вăл.

Ваçинкка. Ан хăра, вăл-ку пулас çук: укçа кивçен илчĕ.

Алтатти. Ак харам пыр! Миçе тенкĕ кивçен илчĕ вăл Кĕçтентин килнĕренпе? Тавăрасси çинчен шухăшламасть те пулĕ?

Ваçинкка. Тавăрас тесе илмест ĕнтĕ вăл...

Алтатти. Апла мĕншĕн паратăн тата?

Ваçинкка. Лапăртатать тепри... Ан пар-ха... Ыранах савнă ывăлна тытса каять. Эс укçишĕн ан пăшăрхан-ха, Алтатти, укçине тупăпăр. Кĕçтентин ристана тухсан, суту-илӳ тума мар, çын çине тухма та намăс пулĕ... *(Константина.)* Ӳлĕм Кăрлайклă ялне ура ярса пуснă ан пултăр! Илтрĕн-и? Паян, ав, станцие миçе çын хăваласа кайрĕç? Сыхланарах пурăн. Унсăрăн эсĕ те çавсем хыççăн утăн. Санăн та пашпăрту тасах мар.

Иванов чĕнмест.

Ну, ман каяс пулĕ, карчăк... Леш, купчăйне паянах çырнă пултăр. Ыран староста патне кайса пичет пустар. Илтрĕн-и?

Иванов. Çырмастăп эп унашкал тискер хут!

Ваçинкка. Мĕн?!

Иванов. Ку çынна çаратни пулать, ку...

Ваçинкка *(пӳлсе)*. Хуп çăварна! Кам çăкăрне çинине мантăн-им?

Иванов. Юрать, кирлĕ мар мана сан чухăнсен куççуллипе тăварланă çăкăру! Ыранах килтен тухса каятăп!

Ваçинкка. Ăçта? Ют çĕрте икĕ эрнерен ытла пурăнма юраманнине мантăн-им? Мĕн чĕнместĕн? Çунат шăммисем хуçăк пулсан, тӳпенелле ан пăх: вĕçейместĕн.

Аслати кĕмсĕртеттерет.

Çумăр киличчен станцие çитес... *(Арăмне.)* Тараса сакăр пăчĕпех ан пар, кашни пăтран вуншар кĕрепенкке тытса юл.

Алтатти. Ултă пăт çеç памалла-и вара?

Ваçинкка. Хучĕ çине сакăр пăт илнĕ тесе алă пустар.

Ваçинккапа Алтатти каяççĕ.

Иванов. Турăçăм! Хам куç умĕнче тăван атте чухăнсене пăвать... Эпĕ нимĕн тума та пултараймастăп... Намăс, намăс! «Хура çиçĕм евĕр вĕçсе, тĕттĕм пĕлĕте çĕмĕрен пек шăтарса, шăлать тинĕс хумĕн кăпăкне тăвăл хыпарçи...» *(Сĕтел çинчен кĕнеке илет, ун ăшĕнчен хут кăларать, вулать.)* «Акă вăл, Демон пек, мăнаçлăн,— Тăвăл хура демонĕ вĕçет... Вĕçет те кулать... макăрать... Пĕлĕтсенчен кулать вăл, хавасланнипе макăрать вăл!..»

Праски кĕрет, алăк патĕнче итлесе тăрать. Аслати тата кĕмсĕртеттерет.

*(Праские курмасть, малалла вулать.)* «Аслати хаярлăхĕнче ывăну пуррине туять сисĕмлĕ демон! Вăл пĕлет: хĕвеле пĕлĕтсем хуплас çук, хуплаймаççĕ вĕсем! Çил улать... Аслати кĕмсĕртеттерет!»

Аслати кĕмсĕртеттерет. Иванов кантăк патне пырать.

Праски *(çепĕççĕн)*. Кĕçтентин...

Иванов *(илтмест, çаплах вулать)*. «Кăвак çулăмпа ялкăшаççĕ пĕлĕт кĕтĕвĕсем тинĕс çинче».

Праски *(хытăрах)*. Кĕçтентин...

Иванов *(Праски çине пăхса)*. Праски! Эп эс кĕнине сисмен те... Мĕн алăк патĕнче тăратăн? Тĕпелерех ирт.

Праски *(вырăнĕнчен хускалмасăр)*. Сана кансĕрлес мар терĕм... Чун хавалĕпех вулатăн та...

Иванов *(Праские тĕпелелле çавăтса кайса)*. Итле, Праски. Мĕнле илемлĕ çырнă! *(Вулать.)* «Кăвак çулăмпа ялкăшаççĕ пĕлĕт кĕтĕвĕсем тинĕс çинче... Çиçĕм çĕмĕренĕсене çавăрса тытать те тинĕс хăй шывĕнче сӳнтерет... Вут-çĕлен пек явăнса çухалаççĕ çиçĕм хĕлхемĕсем тинĕсре. Тăвăл! Час тăвăл пуçланать...»

Праски. Пирĕн килте те паян тăвăл пулчĕ.

Иванов. Тăвăл? Мĕнле тăвăл?

Праски. Ара, Упик каллех евчĕ янă.

Иванов. Қалăм эрнинчех ĕçне татрăм, темерĕн-и? Мĕн тума çӳреççĕ тата?

Праски. Эпĕ каймастăп терĕм те, атте пит парасшăн. Хулăм çинчен те калаçса татăлнă, тет.

Иванов. Эсĕ мĕн каларăн? Қилĕшрĕн-и?

Праски. Қирек мĕн хăтланăр, пуссан та, Микихвере каймастăп, терĕм.

Иванов. Тĕрĕс! Ҫала-ха, Праски, сан савни пур-и?

Праски. Савни кашни хĕрĕнех пур пулĕ те-ха вăл...

Иванов. Тата мĕн? Савнине качча кай.

Праски. Ҫалаҫса пăхман-çке-ха... Ҫалаçма та вăтанатăп.

Иванов. Апла пулсан, хам калаçăп. Сан евчӳ пулăп. Юрать-и?

Праски. Кулăшла çын эс, Кĕçтентин.

Иванов. Мĕн тетĕн?

Праски *(хытăрах)*. Кулăшла çын, тетĕп. Хĕр енчен евчĕ пулать-и вара?

Иванов. Кӳршĕ хĕрĕ, тата тăван тесе...

Праски. Тупнă тăван...

Иванов. Тăван пулмасăр... Сан асларун амăшпе ман кукамай ашшĕ пĕр килте çуралнă-çке.

Праски. Апла пире ерхерей хучĕсĕр венчет те тумаççĕ пулĕ?

Иванов. Венчете каймалла пулсан, ерхерейренех ыйтса тăмăттăмăр та-ха...

Праски. Анчах венчете кайма тивмест пулĕ çав...

Иванов. Мĕн тетĕн?

Праски *(ассăн сывласа)*. Эх, Кĕçтентин... Санпа чух эп хамăн хурлăха манатăп... Тĕксĕм тĕнче çуталса каять...

Иванов. Ачаранпах пĕрле ӳснĕ те... Пĕр-пĕрин шухăшне витĕр куратпăр.

Праски. Пурне те курмастпăр çав...

Урамра хĕрсем хурлăхлă юрă юрлама пуçлаççĕ.

Ҫаллех хурлăхлă юрă юрлаççĕ...

Иванов. Самана çавнашкал, Праски.

Урамра хуткупăс калани, каччăсем юрлани çывхарать. Пауза. Иккĕшĕ те итлесе тăраççĕ.

Пĕр каччи.

Ан кулянăр, мучисем,
Чĕлĕм парши килет, тет,
Туртăр вара чĕлĕме
Анăраса кайиччен...

Пурте харăс.

Анчах халех килмест, тет.

П ё р  к а ч ч и.

Ан кулянăр, мучисĕм,
Çĕнĕ пурнăç килет, тет.
Пурнар вара савăнса,
Çут тĕнчене мухтаса!

П у р т е  х а р ă с.

Анчах хăех килмест, тет.

И в а н о в. Илтетĕн-и, Праски? Çапах та тăвăл çĕкленетех! Каяр кĕвĕ калама.

П р а с к и. Çумăр çăвать пулас...

И в а н о в *(кантăк витĕр пăхса)*. Иртсе кайнă.

П р а с к и. Эпĕ кайса тумланам-ха. Эс мансăр ан кай вара. Юрать-и?

И в а н о в. Юрать, Праски.

П р а с к и каять, Иванов ун хыççăн пăхса юлать, унтан, кантăк патне пырса, пăхса тăрать.

И в а н о в.

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ÿсет,
Аслă Слакпуç ялĕнче
Праски ятлă хĕр ÿсет...

Хăвăрт тетрадьпе кăранташ илсе, сĕтел хушшине ларать, лампа çутса ярать, çырма пуçлать. Урамра хуткупăс сасси илтĕнет.

И в а н о в *(çырнă чух вуласа)*.

Пичĕ-куçĕ... пит хÿхĕм...
Хирти сарă... чечек пек...

К в и н т и л ь я н кантăк витĕр пăхать. Пичĕ тусанпа вараланнă.

К в и н т и л ь я н. Пичче, Праски аппа кам инкĕшĕ пулать?

И в а н о в *(шăллĕ çине пăхмасăр çырать)*. Епле кам инкĕшĕ?

К в и н т и л ь я н. Микулай манпа тавлашать. Праски аппа ман инке пулать, тет.

И в а н о в. Мĕнле Микулай?

К в и н т и л ь я н. Леш, Микихвер шăллĕ. Эпĕ: ман инке пулать, терĕм. Чăнах та, ман инке пулать вĕт Праски аппа?

И в а н о в. Паллă мар-ха, Квинтильян.

К в и н т и л ь я н. Епле паллă мар? Эсĕ ăна качча илетĕн вĕт?

И в а н о в. Кам каларĕ?

К в и н т и л ь я н. Ялта çапла сăмахлаççĕ.

Иванов. Акă мĕн, шăллăм: питне çу та апатлан, унтан çывăрма вырт.

Квинтильян. Çывăрма? Эпир кĕвĕ каланă çĕре каятпăр-ха. *(Кантăк патĕнчен каять.)* Микулай!

Иванов *(çырнă чух вуласа)*.

Çӳхе тути кулнă чух...
Каччă чунĕ çемçелет...

Ура çине тăрать, тетрадьне илет те вулама тытăнать.

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет...
Аслă Слакпуç...

Слакпуç... Слакпуç... *(Тетрадьне сĕтел çине хурса тӳрлетет, каллех вулать.)*

Аслă Силпи ялĕнче
Праски ятлă хĕр ӳсет...
Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек,
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.

Урамра Праски кăшкăрни илтĕнет: «Хурах! Çăлăр! Хăтарăр!» Юлашки сăмахне каласа пĕтереймест, çăварне хуплани сисĕнет.

Иванов *(кантăк патне пырса)*. Праски!

Квинтильян *(кантăк витĕр)*. Пичче, Праски аппана вăрласа кайрĕç.

Иванов. Камсем?

Квинтильян. Пĕри Упик Микихверĕ, ыттисене паллаймарăм. Виççĕн.

Иванов *(пӳртрен тухать, сцена хыçĕнче)*. Караçка пичче! Хăвăртрах кăвак ăйăра кӳл... *(Кĕрет, кантăк патне пырса.)* Квинтильян, Васлей пиччӳпе Санькăна шыраса туп. Кала: пирĕн пата килччĕр. Праски аппана хăтарма каймалла, те...

Квинтильян. Юрать! *(Каять.)*

Иванов *(тумланса)*. Вăрă-хурахсем!

Алтатти *(кĕрет)*. Пулать этем: хăй умĕнче хĕрне вăрлаттарса ярать. Кантăк витĕр пăхса ларать, çăварне те уçмарĕ, тет. Малтанах калаçса татăлнă курнать.

Иванов. Праски пурпĕр Микихвер арăмĕ пулмасть.

Алтатти. Мĕнех тăвăн, ачам? Венчет сăнчăрĕпе çыхаççĕ те каччăпа хĕре, пĕр-пĕрне савмасăрах ĕмĕрĕсене ирттереççĕ вара.

Урамра пăшал пени илтĕнет, шав пуçланать. Иванов кантăк патне пырать. Сасăсем: «Хăвалăр, тытăр! Тарчĕ!»

Староста. Санька! Васлей! Мĕншĕн тытмарăр? Сирĕн çумăртанах иртсе кайрĕ-çке.

Санька. Пире мĕн ĕç? Кирлĕ пулсан, хăвăр тытăр!

Хуткупăспа пĕр-иккĕ çухăрткалани илтĕнет.

Иванов *(кантăк витĕр)*. Мĕн пулнă, Санька?

Санька *(урамра)*. Кăрлайклă учителĕ тарнă.

Иванов. Родион Анисимович-и?

Санька *(урамра)*. Çавă.

Анисимов кĕрет.

Иванов. Родион Анисимович!

Анисимов. Шăп!.. Ăçта пытанма пулать?

Иванов. Кайрăмăр... Чăлана пытанăр.

Иккĕшĕ те тепĕр пӳлĕмелле утаççĕ.

Анисимов. Шуйттан уретникĕ! Станцинче пилĕк рабочипе сăмахланăшăнах арестлерĕ: «Эс мĕншĕн митинг тăватăн?» — тет. Пулать тăм пуç... Митинг... Тахçанах хăй вулăсĕнчен ăсатасшăнччĕ-ха мана. Халĕ сăлтав тупрĕ.

Пӳлĕме кĕрсе каяççĕ.

Алтатти. Эх, самана, самана... Тĕк пурăнма та памаççĕ çынна.

Иванов каялла тухать.

Иванов. Анне, кун çинчен ан шарла вара, юрать-и?

Алтатти. Сисетĕп, ывăлăм.

Санькапа Васлей кĕреççĕ.

Иванов. Кăвак ăйăра кӳлнĕ-и, Санька?

Санька. Кӳлнĕ.

Иванов. Кайрăмăр. Хăваласа çитеймĕпĕр тата.

Санька. Сирĕн ăйăрпа шуйттана та хăваласа çитме пулать.

Санькапа Васлей каяççĕ.

Алтатти. Эсир ăçта кайма пуçтарăннă?

Иванов. Праские хăтарма.

Иванов кайма тăрать. Алтатти ун çулне пӳлет.

Алтатти. Ан кай, Кĕçтентин!

Иванов. Мĕншĕн, анне?

Алтатти. Пĕрре вăрласа кайнă хĕре пурпĕр качча илейместĕн.

Иванов. Илетĕп!

Алтатти. Ялйышсем мĕн калĕç?

Иванов. Кирек те мĕн калаччăр, Праские никама та памастăп! Чарса ан тăр, анне...

Алтатти. Ямастăп!

Иванов. Анне! *(Амăшне сирсе ярса каять.)*

Алтатти. Кĕçтентин!.. Ан кай...

Урамра уретник сасси: «Ивановсен кил-çуртне хупăрласа илĕр. Пĕр çынна та ан кăларăр!» Уретникпе Иванов кĕреççĕ.

Уретник. Сире ĕненместĕп, господин Иванов: эсир шанчăкран тухнă çын. Евдокия Васильевна, сирĕн пата Кăрлайклă учителĕ килмерĕ-и?

Кĕске пауза.

Алтатти. Килмен, ырă çыннăм...

Уретник. Апла пулсан, вăл ăçта та пулин пытаннă. *(Кантăк витĕр.)* Староста, теçетниксем! Кил хушшине ухтарăр.

Иванов. Пире кайма юрать-и, ваше благороди?

Уретник. Ухтару пĕтмесĕр кил хушшинчен никама та кăлармастăп.

Юнашар пӳлĕмре питлĕх ӳкет. Уретник револьверне кăларать те, алăк патне чупса пырса, алăка яр уçса ярать.
Тепĕр пӳлĕмре Квинтильян тăрать. Плашка йăтнă. Уретник ăна курать те тепĕр алăкпа тухса каfive.

Чаршав

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### Иккĕмĕш картина

Яковлев хваттерĕнчи пӳлĕм. Стена çинче Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Толстой портречĕсем. Уйрăммăнах Илья Николаевич Ульянов тата Ушинский портречĕсем курăнаççĕ. Сĕтел, пукансем.

Яковлевпа Вера. Иккĕшĕ те сĕтел хушшинче лараççĕ. Вера вулать.

Вера.

Хĕвел анса пытанать,
Силпи ялĕ лăпланать.
Тĕттĕм пулса çитеспе
Пирĕн туй та саланать.
Ялти хĕрсем, каччăсем
Вăййа тухнă выляма,
Тухнă пирĕн Нарспи те
Хĕр ĕмĕрне ăсатма:
Юлашки каç выляса
Юлас арăм пуличчен,
Юлашки каç Сетнере
Курас юта кайиччен.
Сетнер тăрать çавăнтах,
Пусне усса, хуйхăрса.
Сарă хĕрĕн кусĕнчен
Анать куççулĕ юхса.
Вăйă çынни салансан,
Пайтах вĕсем калаçрĕç.
Ыталаса пĕр-пĕрне,
Тĕттĕм çĕрте сухалчĕç...

Яковлев *(Вера çине пăхмасăр)*. Мĕншĕн чарăнтăн? Вула.

Вера. Урăх çук, Иван Яковлевич.

Яковлев. Çук? Епле çук, этак-так?

Вера. Çак таран анчах çырнă пулĕ.

Яковлев. Сетнерпе Нарспи тарчĕç эппин?

Вера. Паллă мар, Иван Яковлевич.

Яковлев. Тарчĕç пулĕ... Анчах ăçта тарса кайĕçха вĕсем?

Вера. Ниçта та каяс çук та... Анчах, каччи килнĕ çĕре хĕрĕ пĕркенчĕк айĕнче пулмасан, туй пăсăлать. Пуян Тăхтаман унашкал намăса тӳсет-и? Михетере кусĕнчен сурать те тухса каять. Кайран Нарспи çине çаврăнса та пăхмасть. Михетерĕн ирĕксĕрех ячĕ кайнă хĕрне Сетнере пама тивет. Нарспипе Сетнере çавă кирлĕ те.

Яковлев. Чее, чее ку чухнехи çамрăксем, чее, этак-так...

Вера. Пĕрне-пĕри юратаççĕ пулсан, мĕн те пулин шухăшласа тупасах пулать ĕнтĕ.

Яковлев. Тĕрĕс, тĕрĕс... *(Ура çине сиксе тăрса.)* Екатерина Алексеевна! Катя! *(Каллĕ-маллĕ уткалать.)*

Вера. Екатерина Алексеевна хулана кайрĕ, Иван Яковлевич.

Яковлев. Ай-ай-ай... Шăп кирлĕ вăхăтра кайнă тата. «Сарă хĕр» сыпăкĕн пуçламăшне тепĕр хут вуласа пар-ха.

Вера *(вулать)*.

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет,
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

Пичĕ-куçĕ пит хÿхĕм,
Хирти сарă чечек пек,
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.

Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччă чĕри çĕкленет,
Çÿхе тути кулнă чух
Каччă чунĕ çемçелет.

Я к о в л е в *(пÿлсе)*. Ну, мĕнле?

В е р а. Аван çырнă...

Я к о в л е в. Аван çеç мар, пит аван, калама çук аван, урăм-сурăм аван çырнă. *(Тетрадь çине пăхса.)*

Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччă чĕри çĕкленет,
Çÿхе тути кулнă чух
Каччă чунĕ çемçелет.

*(Верăна хулĕнчен тĕксе.)* Илтетĕн-и, этак-так? *(Ахăлтатса кулать.)* Маттур, маттур, разбойник! *(Каллех пÿлĕм тăрăх çÿресе.)* Халĕ сăмахлăпăр сирĕнпе, госпожа Фукс! «Чăваш чĕлхи чухăн, чăваш чĕлхипе этемĕн тарăн шухăшĕсене, савăнăçĕпе хурлăхне каласа пама май çук», тет. Йăнăшатăр, этак-так! Этем çинчен мĕнле çырнă-ха унта?

В е р а *(хут çине пăхса)*.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен...
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать!
Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.

Я к о в л е в. Çавă çав, пăхăнма тивет çав...

Шăнкăрав. В е р а хăвăрт тухса каять.

Я к о в л е в *(Вера хунă хутне илсе вулать)*.

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
Вылять унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать.
Вахă йăмра тайăлса
Тĕсне пăхса савăнать!

Ку, ку... Левитан! Чăн-чăн художник, этак-так... Катерина Алексеевна! Катя! *(Аллипе сулса.)* Эх, килте çук-çке-ха вăл...

В е р а, унтан М и х е л е, К о р н и л и й тата П и к п а в кĕреççĕ.

В е р а. Ялтан килнĕ çынсем сире курасшăн, Иван Яковлевич. Кăнна Кушкисем тет-и?..

Я к о в л е в. Пит вырăнлă килнĕ... *(Алăка яр уçса.)* Михеле тете! *(Алă парать.)* Корнилий! *(Алă парать.)* Сана паллаймастăп вара.

Корнилий. Ту Таяпасем, Иван Яковлевич, Енел Упанкин кӗрӳшӗ.

Яковлев. Пикпав? *(Алӑ парса.)* Астӑватӑн-и, кӗвӗ каланӑ чух Ырсем тӗми ҫинче кӗрешрӗмӗр?

Пикпав. Епле астӑвас мар? Пилӗк эрнене яхӑн хул ыратса ҫӳрерӗ. Пит хытӑ ҫавӑрса ҫапрӑн эс мана ун чух, Иван Якальчӑ.

Яковлев. Ху ура явма тытӑнтӑн та...

Пикпав. Ура явмасӑр епле ҫӗнӗн сана? Пит вӑйлӑччӗ эс.

Яковлев. Вӑй ҫителӗклӗччӗ ӗнтӗ, Пикпав тусӑм... Ну, ларӑр, тӑвансем... Михеле пичче, мӗншӗн ура ҫинче тӑратӑн? Лар, лар...

Михеле. Сан пит ӑшӑ кунта, Иван... Сӑхмана хывас пулӗ. Тулта сулхӑнтарах та, сӑхман тӑхӑнтӑм...

Яковлев *(хывӑнма пулӑшса)*. Хыв, хыв... Халь чей ӗҫӗпӗр. *(Верӑна Михеле тумтирне парса.)* Вера, тухса ҫак Михаил Андреевич сӑхманне... *(Вера кайма тытӑнать.)* Кухаркӑна кала, сӑмавар ларттӑр...

Вера. Юрать, Иван Яковлевич, калӑп. *(Каять.)*

Яковлев. Вера, Верочка!

Вера каялла кӗрет.

Қама та пулин Иванова чӗнме яр-ха. Халех ман пата килтӗр.

Вера. Хӑш Иванова? Шкулта Иванов виҫҫӗ-тӑваттӑ.

Яковлев. Чӑваш халӑхӗн чаплӑ поэтне, Константин Васильевич Иванова, «Нарспи» авторне!

Вера каять.

Яковлев *(сӗтел ҫинчи хутсене илсе)*. Сӑмавар вӗриччен пӗр япала вуласа парам сире... Итлӗр... *(Вулать.)*

Хӗвел тухнӑ-тухманах
Тӗтӗм кайрӗ ял ҫине,
Куҫне уҫнӑ-уҫманах
Чӑваш ларать мунчинче.
Ҫимӗк кунӗ йӑлипе
Ҫынсем мунча кӗреҫҫӗ,
Ҫимӗк курӑкӗпеле
Ҫанҫурӑмне хӗртеҫҫӗ.

(Ват аттесем, аннесем
Ҫапла хушса хӑварнӑ.)
Ҫапла паян чӑвашсем
Мунча кӗрсе тасалнӑ,
Ҫӗнӗ кӗпе-йӗмпеле
Тухрӗҫ вӗсем урама,
Тухрӗҫ вӗсем ерипен,
Утрӗҫ ирех туй курма.

Мӗнле, Михеле тете?

М и х е л е. Ӑнланмалла ҫырнӑ... Кусне уҫнӑ-уҫманах манашкал старик мунчара ларать иккен... *(Кулать.)* Ӑшши парать пулӗ те икӗ хурӑн милӗкпе ҫурӑмне хӗртсе илет... *(Кулать.)* Ӑнланмалла ҫырнӑ... Ялти ҫынсене вуласа парасчӗ... Ҫассах кайӗччӗҫ...

Я к о в л е в. Кӗнеке ҫапса кӑларӑпӑр, Михеле тете... Пӗтӗм халӑх вулӗ.

М и х е л е. Хут пӗлменнисене ачасем вуласа парӗҫ. Аслӑ ывӑлӑн ачи тӑватӑ ҫул вӗренчӗ... Мӗкӗте хӗрӗ те вӗренет. Пӗчӗкҫеҫҫӗ хӑй, ҫапах кӗнеке тытса ларать. Сармантей ҫинчен вуласа парать мана. Сармантейӗн сарӑ чӑххи сар ҫӑмарта тунӑ, тет, имӗш. Шӑши пынӑ, тет те, ҫӑмартине хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ, тет... Сармантейӗ те йӗрет, тет, сар чӑххи те какалать, тет...

К о р н и л и й. Эсӗ, кукка, Сармантейсем ҫинчен кайран калаҫӑн, халӗ хамӑр ӗҫ ҫинчен каласа пар. Сармантей ҫинчен итлесе ларма Иван Яковлевичӑн вӑхӑт та ҫук пулӗ.

Я к о в л е в. Калаҫтӑр, калаҫтӑр...

М и х е л е. Сармантей ҫинчен те ӑнланмалла ҫырнӑ... Ара, ҫӗр пирки канашлама килтӗмӗр сан пата, Иван. Ял пухӑвӗнче суйласа ячӗҫ Курмилайпа иксӗмӗре... Пурнӑҫ пит хӗсӗнсе ҫитрӗ. Ҫӑҫал ҫӗре ҫӗнӗрен уйӑртӑмӑр та, кашни ята ҫур пилӗкшер кӑна тиврӗ.

К о р н и л и й. Ахтапан пуссинче сакӑршар хӑлаҫ ҫеҫ лекрӗ.

М и х е л е. Сакӑршар кӑна ҫав... Ҫӗрӗ те пит начарланчӗ. Ара, тислӗк тӑкмасан, ҫӗр кӑрачланать ӗнтӗ... Ҫӗр вӑл тислӗке юрататъ.

К о р н и л и й. Выльӑх усраймастпӑр... Выльӑхсӑр ӑҫтан тислӗк пултӑр.

М и х е л е. Ара, выльӑх усрамасан, тислӗк пулмасть ӗнтӗ.

П и к п а в *(пӳлсе)*. Ҫавӑнпа икӗ ялпа пухӑнса канашларӑмӑр та, Шӳпкев улпут ҫӗрне сутӑн илсе пулмӗши, терӗмӗр.

К о р н и л и й. Улпучӗ хӑй ют патшалӑхра перӗнсе вилнӗ, тет-и? Халӗ ҫӗрӗ банк аллинче имӗш. Банк урлӑ илмелле, тет.

П и к п а в. Укҫине тӳрех тӳлемелле мар, тет, ҫирӗм ҫул хушши пӑртакӑн-пӑртакӑн сапласа пымалла, тет.

Я к о в л е в. Ҫӗрӗ аякра-ҫке...

М и х е л е. Аякра та... Иртнӗ ҫул Киштек улпут ҫӗрне сухалама тухрӑмӑр та... Ун ҫӗрӗ хамӑр ял хирӗ ҫумӗн-

чех те... Сухалаттармарĕç, стражниксем хăваласа ячĕç... Улпут çĕрне сухалама юрамасть, ку саккунлă мар терĕç.

Корнилий. Хăваласа яни мĕн, вунă çынна Павана илсе кайса тĕрмене хупрĕç...

Яковлев. Саккунлă мар терĕç эппин?

Михеле. Саккунлă мар терĕç çав. Тĕрĕссипе каласан, çĕрĕ авал халăхăн пулнă та-ха... Емелкке паттăр пăлхавĕ хыççăн Кĕтерне патша хресчен çĕрĕсене улпутсене касса пană, тет.

Шăнкăрав. Вера кĕрет.

Вера. Иван Яковлевич, сире Цыганов курасшăн...

Яковлев. Цыганов? Мĕнле Цыганов?

Вера. Питĕртен, тет.

Михеле. Киштек вырăсĕ мар пулĕ те? Астăватăн-и, улпут ĕнисене кĕтетчĕ...

Яковлев. Астăватăп, астăватăп... *(Верăна.)* Кала, кĕтĕр. *(Вера каять.)* Салтака кайнă çул вăл ман пата кĕрсеччĕ, унтанпа курман.

Михеле. Салтакран яла таврăнмарĕ вăл. Питĕрте карап тăвакан çĕрте ĕçлет, тет, пулас...

Цыганов кĕрет.

Цыганов. Каçарăр, эп сире чăрмантармарăм-и?

Яковлев. Григорий Данилыч! *(Цыганова алă парса.)* Миçе çул курман сана?

Цыганов. Çавăнпа кĕрсе курас терĕм авалхи тусăма.

Яковлев. Тавтапуç манманшăн. *(Михеле çине кăтартса.)* Кăна паллатăн-и?

Цыганов. Чим, ку Михаил Андреич мар-и вара? *(Михелене алă парса.)* Михаил Андреич! Пурăнатăн-им?

Михеле. Пурăнатăп-ха...

Цыганов. Миçере ĕнтĕ эс?

Михеле. Çĕре çитме çичĕ çул çеç юлчĕ, тетĕп те-ха...

Цыганов. Тăхăрвун виççĕре! Маттур, маттур!

Михеле *(Цыганов çине пăхса)*. Чим, ку чăнласах Криша пулчĕ-и? Урамра курсан, ниепле те паллас çук. Пит ватăлса кайнă вара. Астăватăн-и, улпут ĕнисене кĕтнĕ чух пирĕн пата пыраттăн. Иванпа иксĕр çерем çине лараттăр та тытăнаттăр калаçма. Эсĕ вырăсла, вăл чăвашла. Пĕр-пĕрне ăнланмасăрах шăкăлтатса лараттăр.

Цыганов. Пĕр уйăхран аванах калаçа пуçларĕ.

Михеле. Ачи пит тăнлăччĕ...

Цыганов. Пирĕн ялйышсем мĕнле пурăнаççĕ, Михаил Андреич?

Михеле. Пурăнни-мĕнĕ... Улпут патĕнче ĕçлекелесе выçăллă-тутăллă пурăнкалаççĕ çав. Çĕр пит япăх-çке Қиштекĕн. Лайăх çĕрсем улпутах юлчĕç, хресченсене чăкăл-чакăл хирсем çеç лекрĕç. Элексантăр патша хресченсене улпут чуралăхĕнчен хăтарнă пек турĕ те улпут тарçи туса хучĕ ав... Ирĕке кăларнин йăли çеç пулса тухрĕ...

Вера *(кĕрсе)*. Сăмавар вĕрерĕ, Иван Яковлевич.

Яковлев. Пит аван. Халĕ чей ĕçме кайăпăр, тăвансем.

Верăсăр пуçне пурте тепĕр пӳлĕмелле утаççĕ.

Цыганов. Чĕмпĕре мĕн çăмăлпа, Михаил Андреич?

Михеле. Çĕр пирки. Шӳпкев улпучĕ перĕнсе вилнĕ, тет те, çавăн çĕрне сутăн илес тетпĕр... Иртнĕ çул сирĕн улпут çĕрне валеçме тытăнтăмăр та сирĕн ялсемпе...

Пурте пӳлĕме кĕрсе каяççĕ. Пӳлĕмре калаçни илтĕнет.

Вера *(сĕтел çинчи хулăн тетраде илсе вулать)*.

Кĕмĕл-мерчен тухъяпа
Сарă хĕрĕ шыв ăсать,
Сарă каччă калаçса
Хăй лашине шăварать...

Ой, Қостенька!.. Мĕнле çырма пĕлнĕ эс кун пек?

Шăнкăрав. Вера каять. Пауза. Анисимовпа Вера кĕреççĕ. Анисимов кăшт уксахлать.

Анисимов. Пĕр самантлăха çеç. Васкавлă ĕçпе килнĕ, те.

Вера. Юрать. *(Хăвăрт каять.)*

Анисимов *(сĕтел хушшине ларса, хулăн тетраде пăхса)*. «Нарспи». Чим, чим, ку мĕнле япала? *(Страницисене уçкаласа пăхать, вулать.)*

Яковлев *(кĕрсе)*. Вула, вула, Родион Анисимыч.

Анисимов. Қам çырнă кăна?

Яковлев. Қонстантин Иванов!

Анисимов. Чăнах-и?.. Хальччен нимĕн те шарламарĕ-çке.

Яковлев. Ăнланатăр-и, этак-так? *(Поэмăна илсе.)*

Ку пирĕн илемлĕ литература ĕлкĕрнине пĕлтерет. Çырса пĕтерсенех, пичетлетпĕр те ялсене яратпăр. Хура пӳртсенче, улахсенче, хурал пӳрчĕсенче, пухусенче вулĕç чăвашсен малтанхи поэмине. Шур сухаллă стариксем, шăлсăр карчăксем, ачаллă арăмсем, çамрăксем итлесе ларĕç чипер Нарспи пурнăçĕ çинчен...

Анисимов. Анчах пичетлесси пулмасть пулĕ, Иван Яковлевич.

Яковлев. Мĕншĕн, этак-так?

Анисимов *(папкине уçса)*. Ак, шкулта вуламалли кĕнеке çине те ала пусмарĕ цензор.

Яковлев. Кăна вырăсларан куçартăмăр-çке.

Анисимов. Каларăм та, кĕпĕрнери шкулсен директорĕ ырламасан, алă пусмастăп, терĕ.

Яковлев. Директор патĕнче пултăр-и?

Анисимов. Халь анчах ун патĕнчен килтĕм.

Яковлев. Мĕн каларĕ?

Анисимов. «Эпĕ чăвашла пĕлместĕп, темĕн çырнă унта эсир»,— терĕ.

Яковлев. Ак, разбойник! Толстой, Лев Николаевич Толстой, вырăссен чаплă писателĕ, юри пуçламăш шкулсенче вĕренекенсене вулама тесе çырнă ку кĕнекене вăл, этак-так...

Анисимов. «Хусана округ попечителĕ патне ярăр. Попечитель ырламасан, шкулсем валли чăвашла кĕнеке кăларма та ирĕк памастăп»,— терĕ.

Яковлев. Ку мĕне пĕлтерет, Родион Анисимыч?

Анисимов. Цензор калаçнинчен çӳлтен хĕсме пуçлани сисĕнет, Иван Яковлевич.

Яковлев. Хĕсеççĕ, хĕсеççĕ, Родион Анисимыч... Кунтисем те, Хусантисем те хĕсеççĕ. Каллех пирĕн шкула хупасшăн пулĕ ĕнтĕ... Çук, ăнланмаççĕ пире, Родион Анисимыч.

Анисимов. Ăнланмаççĕ мар, ăнланасшăн мар, Иван Яковлевич.

*Михеле, Цыганов, Пикпав кĕреççĕ.*

Яковлев. Мĕншĕн час тухрăр? Эп халех пыратăп... Михеле тете, эсĕ чей юратаканччĕ-çке.

Михеле. Халь те ĕнтĕ... Чей ĕçменни нумай пулатчĕ-ха. Фамилни чей пулас, шăрши пит лайăх... Верукĕ тата сахăрне курка çине ярса парать... Чей тути те пур, пылакне те пылак...

Я к о в л е в. Паллашăр, тăвансем... *(Цыганова, Анисимов çине кăтартса.)* Ку — пирĕн тăлмач.

Ц ы г а н о в *(Анисимова алă парса)*. Хавас сирĕнпе паллашма... Цыганов...

Я к о в л е в. Цензора ятлатăп, Григорий Данилыч... Никама кирлĕ мар этем, вăл та пире чĕпĕтет... Чăвашла кĕнеке пичетлеме чарасшăн...

Ц ы г а н о в. Хальхи пуçлăхсем Раççейри халăхсене вĕрентесшĕн мар: тĕттĕм халăх лăпкăрах, теççĕ.

Я к о в л е в. Эпир Илья Николаевичпа çапах та шкул уçрăмăр.

Ц ы г а н о в. Илья Николаевич пеккисем кăна халăхшăн тăрăшаççĕ. Унашкал çынсем пулмасан, шкулсенче дворянсемпе пуянсем кăна вĕренĕччĕç.

Я к о в л е в. Нумай пулăшрĕ чăваш халăхне Илья Николаевич. Ялсенче миçе шкул уçрĕ. Вăл пулман пулсан, пирĕн шкул та вăй илеймен пулĕччĕ.

М и х е л е. Халăха çутта кăларма тăрăшатчĕ ĕнтĕ Илья Николайччă. Çав пирĕн ялта шкул уçса пачĕ вĕт, Илья Николайччă уçрĕ... Ĕлĕк прошени тавраш çырмалла пулсан, Пăрăнтăка вулăсри писарь патне е Шўпкеве тиечук патне каяттăмăр. Халĕ кўршĕсем салтакри ачисем патне çыру çыртарма пирĕн пата пыраççĕ. Ваççа çырса парать вара. Çăмарта илсе пыраççĕ çырнăшăн пама. Ваççа илмест: ашшĕ хушмасть. Пит тав тăваççĕ Ваççана кўршĕсем.

Я к о в л е в. Илтетĕн-и, Григорий Данилыч? Тăхăрвун виçĕ çул хура пўртре пурăннă старик ывăлин ачисем хут пĕлнипе мухтанать! Кам çав ачасене çыру çырма вĕрентет? Пирĕн шкултан вĕренсе тухнă учительсем вĕрентеççĕ!

Шăнкăрав. В е р а кĕрет.

В е р а. Сире çыру, Иван Яковлевич *(çырune парать)*.

Я к о в л е в. Тавтапуç, Верочка. *(Вера каять.)* Каçарăр, тархасшăн, эп çырune пăхса тухам-ха... Васкавлă тенĕ те... *(Вулать.)* «Ĕнер театрта округри шкулсен попечительне тĕл пултăм... Сирĕн шкул çинчен сăмах тапратрăм...» *(Мăкăртатать.)* «Яковлев сепаратлă шухăшлă учительсем вĕрентсе кăларать, чăваш халăхне Раççейрен пистерме тăрăшать, тет». Ак, разбойник! Илтетĕн-и, Григорий Данилыч? Эпир ачасене вырăс халăхĕпе алла-аллăн пурăнма вĕрентетпĕр, вăл, этак-так... *(Каллех вулать.)* «Петербурга министр патне кайма шухăш-

лать, сирĕн шкул ҫинчен доклад тума хатĕрленет...» *(Уткаласа ҫӳрет.)* Вăтăр ҫичĕ ачана шкултан кăларса янипе тăранмарĕҫ пулать. Вăтăр ҫичĕ пулас учителе кăларса ятăм... Вăтăр ҫичĕ ҫĕнĕ шкул уҫма пулатчĕ, вĕсем вĕренсе тухсан... Ултҫĕр-ҫичҫĕр ача вĕрентсе кăларма пултаратчĕҫ вĕсем ҫулсерен. Халĕ ҫав пулас учительсем, ҫут тĕнчене ылханса, Раҫҫей тăрăх суллана ҫӳреҫҫĕ, ниҫта вĕренме кĕрейменеҫҫĕ... Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вĕсен ячĕсем кашни полици участокĕнче, кашни исправник, пристав, уретник сĕтелĕнче... «Куратăр-и, мĕнле хăтланать Яковлев? Вăтăр ҫичĕ ачана ним хĕрхенмесĕр пĕр харăс шкултан кăларса ячĕ!» — кăшкăраҫҫĕ пулĕ карма ҫăварсем... Ним хĕрхенмесĕр... Куҫҫуль шăпăртатса юхрĕ пĕринчен-пĕри тăнлă ачасене шкултан кăлармалли хут ҫине алă пуснă чух, Григорий Данилыч... Вырăс халăхне, вырăс чĕлхине, литературине чĕререн юратакан ачасем, хăйсемпе пĕрле вĕренекен вырăс юлташĕсемпе тăванпа тăван пек пурăнакансем хăйсене вырăс чĕлхине вĕрентекен ăста учителе хирĕҫ ҫавнашкал хут ҫырма пултарайман. Пултарайман, этак-так! Пирĕн шкула курайман, пирĕн шкула хуптарма ĕмĕтленекен йĕксĕк хĕтĕртнипе ҫырнă вĕсем ăна... Ун пек йĕксĕксем чăваш хушшинче те пур...

Цыганов. Апла пулсан, ачасене шкултан кăларса яма кирлĕ марччĕ пулĕ, Иван Яковлевич?

Яковлев. Тĕрĕс, петици текеннишĕн кăларман та пулăттăм, анчах леш, хĕтĕртекенни, чее ĕҫленĕ: вăл чăваш шкулĕ вырăссене курайман учительсем хатĕрлет теме ҫеҫ мар, унта вĕренекенсем Раҫҫейри тытăма хирĕҫ тесе кăшкăрма та сăлтав тупса панă: ачасене ҫурт тăррине хĕрлĕ ялав ҫактарнă...

Цыганов. Революци иртсен ҫулталăкран хĕрлĕ ялав? Ку вара чăн-чăн провокаци пулать...

Яковлев. Икĕ инкекрен ҫăмăлтараххине суйласа илме тиврĕ: пĕррехĕш класри ачасене кăларса яман пулсан, шкула хупатчĕҫ... Хупатчĕҫ, разбойниксем! Миҫе хут чăвашсен пĕртен-пĕр шкулне хупма тытăнса пăхрĕҫ ĕнтĕ... Мĕнле-мĕнле сăлтав шухăшласа кăлармарĕҫ... Халĕ те, ав, хупасшăн. Эх, Илья Николаевич вилчĕ... Миҫе хут вăл пирĕн шкула ҫăлса хăварчĕ... Халĕ кам пире пулăшĕ? Кам?

Корнилий. Государственнăй Думăна ҫырса пăхсан мĕнле-ши, Иван Яковлевич?

Пикпав. Дума, Дума... Думăран та усси пулма-

рё... Хытăрах сăмахлама пуçласанах, хăваласа салатаççё... Халăх хутне кёрекенсене Çёпёре ăсатаççё.

М и х е л е. Пирён хута кёрекенсем сахал пулё Думинче?

К о р н и л и й. Хусан кёпёрнинчен 3-мёш Думăна пёр чăваша суйласа янă, тет те, анчах вăл та управа членё имёш...

М и х е л е. Унашкал çын халăх хутне кёрет-и? Вёсем хăйсем улпут пулма ёмётленеççё... Лайăх çёрсене кастарса илчёç те ялтан уйрăлса тухрёç... Чухăнсен пурçук çёрёсене сутăн илеççё, хăйсене тарçă тăваççё...

Шăнкăрав. Пауза. Алăка шаккаççё.

Я к о в л е в. Юрать, юрать...

И в а н о в кёрет. Вăл хура кăвак пуставран çёленё пёрмеллё сăхманпа. Шур кёпине сарлака чён пиçиххипе çыхнă. Сăхман тӳмисене тӳмелемен.

Я к о в л е в *(Иванов пӳлёме кёнё-кёменех)*. Ак, çакă çырнă ёнтё, Михеле тете, чăваш мунча кёни çинчен...

М и х е л е. Ăнланмалла çырнă. *(Иванова алă парать.)* Чипер çӳретён-и, ачам?.. Ăнланмалла çырнă, чёренех кёрсе лараççё сăмахёсем...

Я к о в л е в. Григорий Данилыч, паллашăр... Константин Васильевич Иванов, чăваш халăхён пулас ятлă çынни... Чăвашла поэма çырать...

Ц ы г а н о в *(Иванова алă парса)*. Хавас, хавас паллашма...

М и х е л е. Курмилай, Пикпав, каяр пулё? Чăрмантарар мар.

Я к о в л е в. Çук, çук, халё никама та ямастăп... Вера! Кухаркăна кала: сăмавар ларттăр... Пысăккине ларттăр!.. «Нарспи» вулатпăр... Ларăр, тăвансем, ларăр... Эс çакăнта лар, Костенька...

И в а н о в. Каçарăр, Иван Яковлевич, эпё сирён пата сывпуллашма çеç килтём.

Я к о в л е в. Сывпуллашма?

И в а н о в. Халь анчах полици участокёнче пултăм... Мана паянах хуларан тухса кайма хушрёç.

Я к о в л е в. Мёншён, этак-так?

И в а н о в. Ман пеккисене хулара икё эрнерен ытла пурăнма юрамасть, терёç.

Я к о в л е в. Чимёр, чимёр... Мёнле-ха ку? Пёрисем

шкула хупасшăн, теприсем «Нарспи» авторне хуларан хăвалаççĕ...

Михеле. Самани çавнашкал, Иван: тăнлă çынна çăвар уçма памаççĕ.

Яковлев. Çук, çук, кайма юрамасть... Григорий Данилыч, мĕн тумалла-ха?

Цыганов. Илтмерĕн-им, Михаил Андреич мĕн каларĕ? Самана улшăнмасăр нимех те тăваяс çук, тусăм...

Яковлев. Виçĕмçул улăштарма тытăнчĕç те, усси пулмарĕ. Халĕ тата хытăрах хĕсе пуçларĕç халăха.

Михеле. Хытă хĕсеççĕ. Пăлхавччен вулăсра пĕр уретник анчах ларатчĕ, халĕ стражниксем килсе тулчĕç. Уретник яла юланутлă стражниксене илсе пырать. Те çапса пăрахасран хăрать. Пăлхав вăхăтĕнче *(Цыганов çине кăтартса)* сирĕн ялсем пĕрне лайăх ислетнĕччĕ... Кайран Ахтапан вырăсĕсем йĕксĕке măйĕнчен чул çакса Сĕвене пăрахнă, терĕç. Хаяр уретникчĕ.

Яковлев. Самана улшăнасса кĕтме юрамасть, урăх май шухăшласа тупас пулать, этак-так, урăх май...

Цыганов. Урăх май çук, Иван Яковлевич...

Яковлев *(Анисимов патне пырса)*. Родион Анисимыч, сирĕн те паспорт тасах мар пулас? Эсир мĕнле тытăнса тăратăр хулара?

Анисимов. Кашни ик эрне иртсен, Сĕве урлă каçса, пĕр-ик кун Конный слободана кайса çывăратăп. Унтан çĕнĕрен çырăнатăп.

Яковлев. Эпир кăшт урăхларах тăвăпăр... Тăшмана ăна хăй урапи çине лартса ăсатас пулать, этак-так... Паянах куçару комисси енĕпе приказ çырăр. «Ĕлĕк куçарнă Святой Евангелин чĕлхи япăх, халăха ăнланмалла мар пирки Евангелие çĕнĕрен куçарма хушатăп... Куçарнине тӳрлетсе пыма хам чирлĕ пирки»... Чир, чир... Мĕнле чир авантарах-ши? Ага... «хам чирлĕ пирки вăхăтлăха Константин Иванова хушатăп. Куçару комисси председателĕ... Яковлев». Копине ыран çутăлнă-çутăлманах Консисторие леçсе парăр... *(Уткаласа çӳрет.)* Çапла, этак-так!.. Епископ губернаторпа калаçать, губернатор полицмейстерпа... *(Ахăлтатса кулать.)* Ăнланатăн-и, Григорий Данилыч?

Цыганов. Ăнлантăм, Иван Яковлевич, анчах ку майпа...

Яковлев *(пӳлсе)*. ...нумай малалла каяймăн, тесшĕн эс, пĕлетĕп.

Цыганов. Урăхларах каласшăнччĕ те... Ну, сывă

пул, тусăм. *(Алă парать, Михелене алă парса.)* Сывă пул, Михаил Андреич. Кушкăри пĕлĕшсене салам кала.

М и х е л е *(хăйне алă панă чух)*. Пирĕн енне пырсан, Кушка пымасăр ан кай вара, Григорий Данилыч.

Ц ы г а н о в. Тавтапуç, Михаил Андреич, кĕрсе тухăп.

Я к о в л е в. Вера! *(Вера кĕрет.)* Григорий Данилыча ăсатса яма Малый Конный урама тухакан калитке çăраççине пар-ха.

Ц ы г а н о в. Мĕншĕн чăрманатăн? Хапхана питĕрмен пулĕ-çке?

Я к о в л е в. Унтан çаврăнăç... Тата хапха умĕнче, тĕттĕм пулсан, городовой тăрать. Вĕсем пирĕн шкула рабочисем çӳренине юратсах каймаççĕ.

Ц ы г а н о в. Ăнлантăм...

Я к о в л е в п а Ц ы г а н о в алăк патнелле утаççĕ.

Леш, иртнĕ çулсенче пулса иртни усăсăр тени тĕрĕс мар, тусăм. Вăл çапăçу пуçламăшĕ пулчĕ. Вăрçăра, ху пĕлетĕн, каялла чакасси те, малалла тапăнасси те пулать. Пуçа çухатмасăр, йĕркеллĕ чакса, вăй пухса, татах тапăнма пĕлес пулать. Çĕнĕрен тапăнаççех, Иван Яковлевич!..

Пӳлĕмрен тухса каяççĕ.

М и х е л е. Ăслă сăмахлать Криша... Улпутсем çинчен мĕнле каларĕ-ха вăл, Курмилай?

К о р н и л и й. Вăйпа туртса илмелле вĕсен пурлăхне, терĕ.

М и х е л е. Ара, çапла каларĕ çав... Тĕрĕс пулĕ... Хăйсен ирĕкĕпе пире çĕр параççĕ-и вĕсем?.. Ахаль пама мар, схутнăй хакпа та сутасшăн мар.

Я к о в л е в кĕрет.

Я к о в л е в *(Иванов патне пырса)*. Хуларан ниçта та каймастăн, Костенька. Майлаштарăпăр... *(Хресченсене.)* Сирĕн ĕçĕре те... майлаштарăпăр. Халĕ «Нарспи» вула, Костя.

И в а н о в. Малалла вулас-и? Эпĕ тата пĕр сыпăк çыртăм.

Я к о в л е в. Малтанхи сыпăкĕнчен пуçла...

И в а н о в *(вулать)*.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса...

Яковлев *(siксе тăрать)*... Пĕртен-пĕр шкула хупасшăн, разбойниксем!.. «Нарспи» авторне хуларан хăваласа кăларасшăн, этак-так! *(Пауза.)* Вула, вула, Костя...

Иванов.
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса...

Чаршав

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

### Виççĕмĕш картина

Чĕмпĕр. Чăваш шкулĕ. Иванов пӳлĕмĕ. Икĕ пысăк кантăк, пĕр алăк. Пĕр шкап, икĕ сĕтел, сĕтелсене хаçатпа витнĕ. Стенасем çинче Пушкин, Лермонтов, Некрасов портречĕсем, тĕрлĕ ӳкерчĕксем. Пурне те Иванов тунă. Кĕтесре пианино, мольберт. Мольберт çинче тин ӳкере пуçланă Ваня портречĕ. Сĕтел çинче хутсем, лампа. Кăнтăрла. Чаршав уçăличчен сцена хыçĕнче хор вăйă юрри юрлать. Ваня уçă кантăк умĕнче ларать, Иванов мольберт умĕнче. Аллинче кăранташ.

Иванов. Çак юрра итленĕ чух хамăн телейлĕ кунсем аса килеççĕ... Ял... Лăпкă каç... Силпи вăрманĕ хыçĕнчен уйăх хăпарать, сенкер çутине тăмпа шуратнă пӳртсем çине сапалать... Урама тухатăп... Кĕçех крыльца алăкĕ уçăлни илтĕнет, тевет кĕмĕлĕсене чăнкăртаттарса, ман пата кӳршĕ хĕрĕ Праски çывхарать, манпа юнашар ларать, ман алла чăмăртать... Каччăсемпе хĕрсем пуçтарăнаççĕ. Праски уçă сассипе кĕвĕ пуçласа ярать. Вăйă тапранать.

Ваня. Вăйă салансан, каллех çав вырăна пырса ларатăр, Праски каллех сан аллуна чăмăртать...

Иванов. Пĕлетĕн-и, Ваня, çав ытарайми хĕре эпĕ ĕмĕрлĕхе çухатрăм... Нихçан та ӳлĕм унпа юнашар ларас çук, нихçан та пĕр-пĕрин çине пăхса йăл куласа çук...

Ваня. Хăтарма май килмерĕ-им?

Иванов. Хăтарма тетĕн! Чĕмпĕре килнĕ чух юлашки хут курса калаçасшăнччĕ, анчах эпĕ ялтан тухса кайиччен упăшки ăна урама та кăлармарĕ. Пуçна сулахаярах пăр... *(Ӳкерет.)*

Юрă шăпланать. Федор кĕрет. Аллинче нота хучĕ.

Федор. Костя! Мĕнле илемлĕ юрă юрласа пачĕ

мана иртнĕ каç Иван пичче! Э, Ваня та кунта иккен. Салам! *(Ваньăна алă парать.)* Итлĕр, тусăмсем! *(Пианино умне ларса, калама пуçлать, юрлать.)* Хăçан та пулин опера çырсан, çак кĕвĕпе усă куратăпах... Мĕнле вĕçленет сан поэма, Костя, пĕлместĕп, анчах «Нарспирен» опера тума пулать... Нарспи пўртĕнче тĕрĕ тĕрлесе ларать, каç пуласса кĕтсе, Сетнер çинчен шухăшлать... *(Вылямa чарăнса.)* Калăр-ха, тусăмсем, пулĕ-ши пирĕн хăçан та пулин театр?

И в а н о в. Театр çинчен ĕмĕтленет тепри. Кунта пĕртен-пĕр шкула хупасшăн.

В а н я. Театр пулатех, тусăмсем! Эсĕ трагеди çыратăп темерĕн-и? Çыр, Константин, çыр... Афишăсем çинче... Ячĕ мĕнлеччĕ-ха сан трагедин?

И в а н о в. «Шуйттан чури».

В а н я. Чăваш театрĕ... Паян Константин Иванов çырнă «Шуйттан чури» трагедие выляççĕ, пуçламăшĕ каçхине 8 сехетре...

Ф е д о р. Е: «Паян «Нарспи» опера пулать» тесе çырĕç...

И в а н о в *(кулса)*. Композиторĕ — Федор Павлов!

В а н я. Ĕненĕр, тусăмсем! Унашкал самана пулатех... Театр та пулĕ, кашни ялта шкул... Халĕ телейлисем çеç хут вĕренеççĕ. Ун чух пиншерĕн-пиншерĕн гимназисенче, реальнăйсенче, семинарисенче вĕренĕç, çĕршерĕн-çĕршерĕн университетсенче, институтсенче... Чи хакли — халăх хăй хуçа пулĕ, хăй пурнăçне хăйне кирлĕ пек тăвĕ... *(Хĕрсе кайнипе, кантăк патĕнчен кайса, уткаласа çўреме тытăнать.)* Анчах пулас илемлĕ пурнăçшăн кĕрешес пулать, тусăмсем!

И л ь я *(сцена хыçĕнче)*. Иван тетене хĕрўллĕ салам!

И в а н о в. Ав, артист та çитрĕ.

И л ь я кĕрет.

И л ь я *(алăка уçнă чух)*. «Судйисем камсем? Вĕсем, ватсупнăскерсем, ирĕклĕ пурнăçа чунтан курайманскерсем, Очаковпа Крыма илнĕ вăхăтри кивĕ хаçатсем евĕр сăмахласа, кашни самантра тавлашма хатĕрскерсем, мĕн киввипе мĕн çĕннине туймасăр, пĕрмай юрлаççĕ пĕр юрра!» *(Ваньăна алă парса.)* Салам, Ваня! Решени йышăнтăм: шкултан вĕренсе тухатăп та сцена çине... Малтанхи çулсенче «апат хатĕр, ваше сиятельство» сăмахлă рольсене выляма çеç тивĕ, анчах хăçан та пулин Чацкий рольне вылятăпах.

Иванов. Ав, Ваня пирĕн те театр пулĕ, тет.

Илья. Хăçан?

Иванов. Пурăна киле.

Илья. Ой! Чăнласах пулсан... Мĕн тăвăп-ши ун чух эпĕ?! Костя трагедисем, комедисем çырĕччĕ, Федя — опера.

Федор *(кулса)*. Оперетта...

Илья. Тĕрĕс, оперетта та кирлĕ!

Иванов *(кулса)*. Туман тиха пилĕкне ан хуç-ха!

Илья. Епле туман тиха пилĕкне? Пурăна киле темĕн те пулма пултарать...

Ваня. Тĕрĕс, Илья!

Илья. Çапах, Костя, «Аса пула инкек» куçарса пар. Халех хатĕрленме тытăнас. Хăшпĕр трагиксем выляс рольсене çичшер, сакăршар çул хатĕрленĕ, тет.

Федор. Артист, эс мĕншĕн спевкăна пымарăн?

Илья. Каçар, Хĕветĕр тусăм, театрта пултăм.

Анисимов *(кĕрет)*. Салам, господа! *(Иванов патне пырса, Ваня портречĕ çине пăхса тăрать.)* Каснăлартнă Ваня! Анчах вăл савăклă йĕкĕт, портрет çинче пит хурлăхлăн пăхать... Эп сан патна, Константин Васильевич...

Иванов. Пĕлетĕп... *(Сĕтел çинчен хулăн хутсем çине тунă ÿкерчĕксене илет.)* Çĕнĕ букварь валли ÿкерчĕксем хатĕр...

Анисимов *(ÿкерчĕксене пăхса)*. Аха, сăвăласа çырнă... *(Вулать.)*

| | |
|---|---|
| Шурă юр ирĕлет, | Ешĕл курăк ÿсет... |
| Çеçенхир чĕрĕлет, | Вăл хăçан пулать? |

Аван, аван... *(Тепĕр ÿкерчĕкне пăхса вулать.)*

| | |
|---|---|
| Хĕвел хытă хĕртет, | Сар ыраш çитĕнет... |
| Ашă çил вĕркелет, | Вăл хăçан пулать? |

Иван кĕрет. Аллинче хутпа чĕркенĕ илемлĕ хупăллă кĕнеке.

Анисимов. Ку мĕнле кĕнеке, Иван Маркелыч?

Иван. Пĕлместĕп. Типографинчен илсе килчĕç. Кĕçтентин Васильчăна пама хушрĕç.

Анисимов кĕнекине илет, Иван каять.

Анисимов *(чĕркенĕ хутне пăрахса)*. Его величество валли чăвашла Евангели хатĕр.

И в а н о в. Мĕнле «его величество» валли?

А н и с и м о в. Его величество Российăра пĕрре — патша... Куратăн-и, мĕнле хут çине пичетленĕ? Саспаллисене ылтăнланă. Хуплашки мĕнле! Сĕвене ыврăтсан, çавăнтах шыв тĕпне анса кайĕччĕ.

И в а н о в. Нимĕн те ăнланаймастăп.

А н и с и м о в. Шкулта вĕренекен ачасен ячĕпе патшана парнелеме пичетленĕ ку экземпляра. *(Кĕнекине Иванова парать.)*

И в а н о в. Ку çеç çитмен... Халĕ мана наборщик питрен çупма пултарать ĕнтĕ... Çуптăр... Эпĕ çупка тивĕç...

А н и с и м о в. Мĕнле наборщик?

И в а н о в. Нумай пулмасть типографинче наборщик, вунпиллĕкри ача, мана куçран пăхрĕ те: «Эпĕ сире, Константин Васильевич, поэт тесе... Эсир миссионер ĕçне тытăннă иккен»,— терĕ. Эп Евангели наборне тӳрлетсе ларатăм. «Пĕр алăпа халăх куçне уçатăр, теперинпе — хуплатăр эппин?» — хушса хучĕ ача, мана куçран пăхса. Эпĕ ăна нумай пулмасть «Нарспин» хăшпĕр сыпăкĕсене вуласа парсаттăм... Хăй кулмасть, анчах типографи сăрĕпе вараланнă пичĕ çинчи таса пĕлĕт пек сенкер куçĕсенче мана хĕрхенни сисĕнчĕ. Эпĕ нимĕн те хирĕç калаймарăм, чĕлхесĕр çын пек ун çине пăхса ларттăм. Туятăн-и, Ваня? Константин Иванов — миссионер, Константин Иванов халăх тăнне пăтратакан кĕнеке кăларма пулăшнă. Халĕ çав кĕнекене патшана парнелеççĕ... Халăх, халăх мĕн калĕ?

В а н я. Мухтава тивĕçлĕ ĕç мар ĕнтĕ, чăнах та. Анчах сана çак ĕçшĕн хулара пурăнма ирĕк пачĕç темерĕн-и?

И в а н о в. Вăл çапла та, намăса ăçта хурас?

В а н я. Мĕншĕн килĕшрĕн?

И в а н о в. Мĕн тăвас тетĕн-ха? Полици хуларан хăвалать.

В а н я.

Ку — айăпа сирейместь, тусăм.
Кĕреш те вил ним хăрамасăр
Халăх телейĕшĕн хăюллăн! —

тет Некрасов.

И в а н о в *(хумханса)*. Иван Яковлевича та ăнланаймастăп: ăслă, мăнаçлă çын, халăха чĕререн юратать, ăна çутта кăларас тесе, канма пĕлмесĕр ĕçлет, çавăнтах кирлĕ мар ĕç тăвать. Те икĕ чун ун ăшĕнче?

Анисимов. Нимле икĕ чун та çук. Урăх çулпа кайнă вăл.

Иванов. Çапах та чăваш халăхĕшĕн пысăк ĕç тăвать. Миçе учитель вĕрентсе кăларчĕ, миçе шкул уçрĕ, чăваш çырулăхне чĕртсе ячĕ, ытарайми букварь кăларчĕ, калавсем çырчĕ.

Ваня. Халăха усăллă ĕç тунăшăн ăна хисеп те мухтав, анчах кирлĕ мар ĕç тума пулăшас пулмасть.

Иванов. Урăхла каласан, халăх тăнне арпаштаракан кĕнекесене редакцилеме юрамасть. Çапла-и?

Ваня. Тĕрĕс!

Иванов. Эс манран телейлĕрех, Ваня. Эсĕ тунă пăравуса патшана парнелес çук.

Ваня. Эпĕ хам пăравуспа патшана трон çинчен сирпĕнтерме, рабочисене Питĕре илсе кайма ĕмĕтленетĕп. *(Анисимова.)* Эсир типографине-и, Родион Анисимович?

Анисимов. Çавăнта кайма тухнăччĕ.

Ваня. Кайрăмăр. Эпĕ те çав еннелле...

Анисимов. Сывă пулăр, господа!

Ваня *(Иванов патне пырса)*. Йăнăш турăм тесе хăвна айăпласа ларни усăсăр, Костя.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен!

Кам çырнă-ха çакна? *(Иванов Ваня çине пăхать, йăл кулать.)* Талантлă йĕкĕт эс, анчах пурнăçри хăшпĕр япаласене ăнланаймастăн-ха. Чипер юл, тусăм!

Анисимовпа Ваня каяççĕ. Ваня сасси сцена хыçĕнче: «Салам, хĕрсем!» Вера сасси: «Салам, салам!»

Илья. Хĕрсем кунта килеççĕ...

Тоньăпа Вера кĕреççĕ.

Илья *(реверанс туса)*. Пулас Гамлетран хĕрӳллĕ салам сире, нар пек чипер пикесем!

Хĕрсем алăк патĕнче тăраççĕ.

Мĕншĕн алăк патĕнче тăратăр? Тĕпелерех иртĕр...

Вера. Хуçи йыхăрмасть те...

Илья. Вăл чипер пикесене курсан чĕлхесĕрленет.

Иванов. Чăнах та, мĕншĕн тĕпелерех иртместĕр-ха?

Илья *(икĕ пукана юнашар лартса)*. Ларăр, тархасшăн.

Хӗрсем лараççӗ.

Т о н я. Эпир, хӗрсен шкулӗнче вӗренекенсем, шкула ан хупчăр тесе, министр патне петици çыртăмăр.

И в а н о в. Мӗншӗн министр патне? Его императорское величество патне çырмаллаччӗ. Патшана тархасламаллаччӗ.

Ф е д о р. Лăплан, Костя... Эсир, хӗрсем, ан итлӗр ăна: вăл паян салхуллă.

Т о н я. Арçын ачасем те алă пусаççӗ пулӗ? Хӗрсем пурте алă пусрӗç.

И л ь я *(кантăкран пăхса).* Иван Яковлевич кунта килет. Лекет ӗнтӗ мана. Иртнӗ каç театртан таврăннă чух Дмитрий Иваныча тӗл пултăм... Хӳме çинчен сикрӗм çеç, мана çухаран çавăрса та илчӗ. Пуçларӗ ятлама... Иван Яковлевича элеклесе пачӗ пулӗ ӗнтӗ.

В е р а. Пире те ятлама пултарать вăл. Кайрăмăр, Тоня.

Хӗрсем кайма тытăнаççӗ.

И л ь я. Ӗлкӗреймерӗр, пикесем... Халӗ мӗн суймалли çинчен шухăшлăр. *(Кантăкран пăхса.)* Туйине ытлашши сулламасть, çилӗллӗ мар пулас. Тен, хытах ятламӗ-ха... *(Кӗтессе Федор хыçне кайса тăрать.)*

Я к о в л е в кӗрет.

Я к о в л е в. О, сан патăнта хăна нумай иккен, Константин Васильевич.

В е р а. Эпир, Иван Яковлевич, «Нарспи» итлеме килтӗмӗр.

Я к о в л е в. «Нарспи» итлеме-ши? Кам садра кашни каç пӗр ачапа сак çинче ларать? Эсӗ мар-и?

В е р а. Иртнӗ каç, чăнах та, алгебра вӗреннӗ хыççăн пуç ыратрӗ те, тухса уçăлтăм. Анчах Тоньăпа лартăмăр...

Я к о в л е в. Ӗнер Тоньăпа пултăр, виçӗмкун кампа? Тольăпа-и? *(Кулать.)* Юрӗ, юрӗ... Эс суйма ăста. Сана Екатерина Алексеевна шыратчӗ...

В е р а. Халех каятăп, Иван Яковлевич. *(Пӳрнипе кăчăк туртса.)* Илья, Илья... *(Илья аллипе сулать.)* Эх, санпа... *(Федор патне пырса.)* Паян каçхине спевка пулать-и?

Ф е д о р. Пулмасть, Вера.

В е р а Федора хут парать те хăвăрт каять.

Илья (*хăйпе хăй*). Дмитрий Иванович элеклемен пулас.

Яковлев. Ну, артист, театрта мĕн куртăн?

Илья. Хăçан?

Яковлев. Епле хăçан, этак-так? Паян.

Илья. Паян «Ăса пула инкек» куртăм, Иван Яковлевич.

Яковлев. Аван комеди!.. Вĕренекенсен пурин те кайса курас пулать ăна. Анчах силлогизмсене манмарăн-и, этак-так?

Илья. Манман, Иван Яковлевич.

Яковлев. Суймастăн-и? Қаласа пар-ха?

Илья (*хăвăрт*). Барбаро, Ферио, Дарио, Цезарро, Қамeстро, Фестино, Барокко...

Яковлев. Маттур, маттур, разбойник!.. Аван вĕренетĕн эс, анчах театра ыйтмасăр çӳретĕн. Ыйтмасăр çӳреме юрамасть, юрамасть, этак-так...

Иванов. Типографинчен Евангели илсе килчĕç, Иван Яковлевич. (*Кĕнекине парать.*)

Яковлев. Пит аван, пит аван... (*Кантăкран пăхса.*) Вера! Екатерина Алексеевнăна кала: Иван Яковлевич Питĕре каять, те. Хатĕрлетĕр çул çине... (*Ачасене.*) Эпĕ юрланине итлеме килсеттĕм те, спевка пĕтнĕ иккен, Тоня çĕнĕ юрă юрлать, терĕç те.

Федор. Итлеме кăмăлăр пулсан, юрласа пама пултаратпăр, Иван Яковлевич.

Яковлев. Тоня килĕшет пулсан...

Тоня. Эпĕ хатĕр...

Яковлев. Ларăр, ларăр, ачамсем.

Федор (*пукан çине ларса пианино калама тытăнать.*)

Тоня юрлать.

Яковлев (*юрласа пĕтерсен, Тоньăна ыталаса чуптăвать*). Тавтапуç, тавтапуç, хĕрĕм. (*Павлова алă тытса.*) Сана та тав, Федор... (*Уткаласа çӳрет.*) Çук, этак-так, çакнашкал талантсене çитĕнтерекен шкула хупма памастăп... Памастăпах!

Тоня. Иван Яковлевич, эпир министр патне яма петици çыртăмăр.

Яковлев. Мĕнле петици, этак-так?

Тоня. Ак, вуласа пăхăр. (*Яковлева хут парать.*)

Яковлев (*вуласа*). Тавтапуç, ачамсем, тавтапуç, анчах ку хут çине пĕтĕм чăваш халăхĕ алă пуссан та,

министр пирӗн шкула хӳтӗлес ҫук... Ку ӗҫе пысӑкраххи урлӑ тумалла... Аслӑраххине тархаслама тивет, этак-так...

Иванов. Иван Яковлевич, калӑр-ха, тархасшӑн, эсир Евангелие чӑнласах патшана парнелесшӗн-и?

Яковлев. Вӑхӑтлӑха иксӗмӗре хӑварӑр-ха, ачамсем. Ман Константин Васильевичпа куҫа-куҫӑн калаҫмалли пур.

Илья, Таня, Федор каяҫҫӗ. Пауза.

Яковлев *(уткаласа ҫӳресе)*. Ну, ма ятламастӑн мана? Ятла, ятла, этак-так... Мана хӑшпӗрисем мӗншӗн ятланине пӗлетӗп эпӗ. Яковлев чиркӳ ведомстви тумалли ӗҫе тӑвать, теҫҫӗ. Анчах чӑваш халӑхӗн пӗртен-пӗр вӑтам шкулӗ мӗнле тытӑнса тӑнине пӗлеҫҫӗ-и вӗсем? Ҫук, пӗлмеҫҫӗ! Миҫе хут хупма тапӑнчӗҫ ӗнтӗ ӑна? Чиркӳ кӗнекисем кӑларнипе ҫеҫ тытӑнкаласа тӑрать пирӗн шкул! Халӗ вӗсем те пулӑшми пулчӗҫ. Ҫавӑнпа патшана тархасласа пӑхас тетӗп. Тен, хӳтлӗх тупӑп.

Иванов. Патшаран хӳтлӗх? «Юнлӑ вырсарникуна» астӑватӑр-и, Иван Яковлевич?

Яковлев. Ку мӗне кирлӗ, этак-так?

Иванов. Ҫав кун патша хӑй патне ырӑ кӑмӑлпа пынӑ рабочисене, вӗсен арӑмӗсене, ачисене пин ҫын ытла вӗлернине, икӗ пин ытла суранланине астӑватӑр-и?

Яковлев. Ну, астӑватӑп, астӑватӑп... Тата мӗн?

Иванов. Рабочисем патша патне хӳтлӗх ыйтма пынӑ пулнӑ, анчах его величество вӗсене тӑхлан пульӑсемпе хӑналанӑ... Ҫав айӑпсӑр ҫынсене вӗлерекен, халӑх ирӗкӗшӗн кӗрешекенсене ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн ҫакакан, пиншерӗн-пиншерӗн Ҫӗпӗре ӑсатакан патша патне каятӑр-и? *(Яковлев чӗнмест, уткаласа ҫӳрет.)* Ҫав халӑха курайман хӑрнӑ тытӑм пуҫлӑхне тархасласшӑн-и? *(Яковлев ҫаплах ҫӳрет, ҫаплах чӗнмест.)* Ҫав халӑх юнӗпе вараланнӑ палача, тискертен те тискер тирана пуҫҫапасшӑн-и?

Яковлев. Ӑнланмастӑр эсир мана, ӑнланмастӑр, этак-так. Тӳрӗ ҫулпа ҫӳреме ирӗк памасан, кукӑр сукмакпа утма тивет-ҫке, Костенька... Ну, Нарспи мӗнле? Ҫаплах Тӑхтаман патӗнче асапланать-и-ха?

Иванов. Ҫук, чӑтаймарӗ: упӑшкине наркӑмӑш парса вӗлерчӗ те вӑрмана тарчӗ...

Яковлев. Ну?! Интересно, интересно... Ҫыр, ҫыр... Ҫырса пӗтерсенех пичетлӗпӗр, пичетлӗпӗр, этак-так...

*(Иванова алă парать.)* Сывă пул, Костенька, эпĕ Питĕре каятăп... *(Хăвăрт тухса каять.)*

Иванов *(ăсатса ярать те шухăша каять)*. Тӳрĕ çулпа çӳреме ирĕк памасан, кукăр сукмакпа утма тивет... *(Уткаласа çӳрет, унтан чарăнать те, кăшт шухăшласа.)* Çук, ку тĕрĕс мар! *(Сĕтел хушшине ларса çырма пуçлать.)* Тĕрĕс мар, Иван Яковлевич. *(Çырса.)* Хаяр тăвăл çĕкленет... Çук, апла мар...

Çил тухать те, хум килет,
Çырана пырса çапать...
Тинĕс хумĕ çĕкленет...
Тĕнчене... тĕнчене кисрентерет...

Тинĕс... Тинĕс... Çук, тинĕс мар, вăрман шавлать, вăрман кашлать... *(Вуласа çырать.)*

Шавлать, кашлать сĕм вăрман!
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть...

Праски *(сцена хыçĕнче)*. Константин Васильевич кунта пурăнать-и?

Илья *(сцена хыçĕнче)*. Кунта, кунта. *(Кантăкран пăхса.)* Костя, сан пата пĕр чипер хĕр килет...

Иванов *(Илья çине пăхмасăр)*. Мĕн? Кам килет терĕн? *(Вулать.)*

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
Чарăнассăн туйăнмасть.
Шавлать, кашлать сĕм вăрман!
Тамăкри пек ахăрать.

Праски, Илья, Федор кĕреççĕ.

*(Иванов çаплах чун хавалĕпе вулать.)*

Аçа çапать, шартлататать,
Пĕтĕм тĕнче кисренет...

Илья *(Иванов патне пырса)*. Костя, куратăн-и, кам килнĕ.

Иванов *(Праски çине пăхса)*. Праски! *(Праски патне пырса, алă тытать.)* Сывă-и?

Праски нимĕн те чĕнмест.

Кусем ман тусăмсем... Паллашăр...

Федор *(Праские алă парса)*. Павлов.

Илья *(Праские алă парса)*. Илья Ковшов. Ялта Алтăр Мĕтри Илюшĕ тесе чĕнеççĕ.

Праски ним чĕнмесĕр алă тытать.

Иванов. Епле килме пӗлтӗн эс, Праски? *(Праски чӗнмест.)* Чим, мӗншӗн чӗнместӗн? Тӗпелерех ирт... *(Ҫавӑтса кайса, пукан ҫине лартать.)* Ялйышсем мӗнле пурӑнаҫҫӗ?

Праски чӗнмест.

Илья. Хӗветӗр! Ҫайрӑмӑр!

Иванов. Ӑҫта васкатӑр? Ларӑр-ха.

Илья. Вӑхӑт ҫук, Костя: урок хатӗрлемелле. Ӗнер мана Лебяжьев катехизиса пӗлменшӗн «иккӗ» лартрӗ. Ыран татах «Закон божий»... Чипер юлӑр, тусӑмсем! Вӗҫтертӗмӗр, Хӗветӗр! *(Юрлать.)*

Сарӑ хӗрсен чӗри
Пит ултавлӑ, тет,
Ҫурхи ҫил пекех,
Улшӑнуллӑ, тет.

Илья юрласах пӳлӗмрен тухса каять. Федор ун хыҫҫӑн утать.

Иванов. Тӗлӗнетӗп ҫак Ильяран, пӗрмай юрлать, шӳт тӑвать. Хурланма пӗлмен ҫын... *(Праские.)* Чим, сана мӗн пулнӑ? Ҫилнӗренпе пӗр сӑмах та чӗнмерӗн...

Праски *(Иванов умне чӗркуҫленсе)*. Хӑтар мана, Ҫӗҫтентин! *(Макӑрса ярать.)*

Иванов *(Праские тӑратса пукан ҫине лартать)*. Чим, мӗншӗн йӗретӗн?

Праски. Упӑшкаран тартӑм... *(Ҫаллех йӗрет.)*

Иванов. Лӑплан, Праски. *(Праски ҫумне ларать.)* Йӗркипе каласа пар ӗнтӗ...

Праски. Венчетрен таврӑннӑ хыҫҫӑн хӗнеме пуҫларӗ те мана Микихвер, пӗр кун та патак ҫимесӗр иртмен. Аттесем патне тарса кайрӑм, атте килтен хӑваласа кӑларчӗ. Анне ман хута кӗме тытӑнчӗ те, ӑна та ятласа тӑкрӗ... Ялйышсемпе сӑмахласа пӑхрӑм: «Турӑ ҫапла ҫырнӑ пулӗ, турӑ ҫырнинчен иртеймӗн»,— теҫҫӗ...

Иванов. Турӑ ҫырни мар-ха вӑл...

Праски. Тӳсрӗм, тӳсрӗм, сана аса илтӗм... Ҫӗҫтентин ҫеҫ мана пулӑшма пултарать терӗм...

Иванов. Тахҫанах ҫапла кирлӗ. Халӗ архиерей патне Микихвертен уйӑрма ыйтса хут ҫырӑпӑр... Уйӑрсан...

Праски. Уйӑрсан мӗн?

Иванов. Уйӑрсан-и? Эх, Праски! Пӗлесчӗ сан...

Праски *(савӑнса)*. Мӗн, мӗн, Ҫӗҫтентин?

Иванов. Астӑватӑн-и, иксӗмӗр те вӗренме ӗмӗтленеттӗмӗр...

Праски. Эсӗ вӗрентӗн, мана атте малалла вӗренме ямарӗ-ҫке.

Иванов. Ан кулян, эсӗ ҫамрӑк-ха... Кунта Вера ятлӑ хӗр пур. Иван Яковлевич патӗнче ӗҫлесех, хӗрсен шкулӗнче вӗренет. Эсӗ те вӗренме кӗрӗн. Ҫулла хатӗрленӗн, кӗркунне экзамен тытӑн. Вӗренсе тухсан...

Праски. Учительница пулӑп, ҫапла-и?

Иванов. Эсӗ учительница, эпӗ учитель... Эпӗ те учитель пулма экзамен тытас тетӗп... Яла кайӑпӑр, шкул уҫӑпӑр... Мӗнле пысӑк ӗҫ вӑл тӗттӗм халӑха ҫутта кӑларасси! Ачасене ҫеҫ мар, ҫитӗннисене те... ваттисене те ҫырма, вулама вӗрентӗпӗр... Халӗ хуласенче хут пӗлмен рабочисем валли вырсарникун шкулӗсем уҫаҫҫӗ. Сисетӗн-и, Праски, пӗр ик-виҫ ҫул хушшинче ҫур ял хут пӗлекен пулать!

Праски. Эх, учительница пуласчӗ! Пит кӑмӑллӑ ӗҫ вӑл. Пырать ача шкула... Пӗр саспалли те пӗлмест. Пӗр-ик уйӑхран вулама пуҫлать: «Ат-те, ан-не»... Саспаллине манать те учительница ҫине пӑхать...

Иванов. Каҫ пулсан, эпӗ сана хам сӑвӑсене вуласа парӑттӑм... Ывӑнсан, шкул пусми ҫине тухса ларӑттӑмӑр. Тавралӑхра шӑп... Таҫта аякра хӗрсем кӗвӗ каласҫӗ... Ним чӗнмесӗр итлесе ларатпӑр...

> Автан ҫур ҫӗр авӑтать,
> Ларнӑ ҫӗртех сывӑрать.
>
> Хуллен-хуллен уйӑх та
> Вӑрман хыҫне пытанать...

Праски. Анчах ку ӗмӗт ҫех-ҫке, Кӗҫтентин...

Иванов. Ӗмӗтленни ҫитсен?

Праски. Ҫитес пек те, ҫитӗ-ши?

Иванов. Акӑ мӗн, Праски, эп эконом патне кайса килем-ха. Анчах эс ан макӑр вара. Юрать-и?

Праски. Халь мӗншӗн макӑрас?

Иванов. Эх, Праски! Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе пурнӑҫ ҫав тери илемлӗ, ҫав тери савӑнӑҫлӑ туйӑнать.

> Ялтӑртатать ырӑ кун,
> Усал кунӑн мӗн ӗҫ пур?
>
> Савӑнса утать икӗ чун,
> Ҫичӗ ютӑн мӗн ӗҫ пур?

*(Каять. Сцена хыҫӗнче.)* Иван пичче, сӑмавар ларт-ха!

Иван *(сцена хыҫӗнче)*. Сӑмаварӗ ман вӗресе те тухрӗ пулӗ.

Праски *(пӗччен)*. Эх, Кӗҫтентин... Мӗнле-ха ку? Ачаранпа пӗрле ӳсрӗмӗр. Ҫапах хамӑр шухӑша пӗр-пӗрне калама вӑтанатпӑр. Ҫук, урӑх чӑтма пултараймастӑп. Паян калатӑп! Хӑй те юрататъ-ҫке мана, пӗлетӗп... Костя... Костенька...

*Иван сӑмавар йӑтса кӗрет.*

Иван. Ку вӑхӑтра Константин Васильчӑ пӗрмай чей ӗҫет те, сӑмаварне паҫӑрах лартнӑччӗ... *(Праские.)* Сывӑ ҫӳретӗн-и, хӗрӗм?

Праски. Ҫӳретӗп-ха ерипен... Хӑвӑр мӗнле пурӑнатӑр?

Иван. Пурнӑҫӑн хӳринчен тытса ҫапкаланса ҫӳретпӗр ҫав. Пур чух пылпа, ҫук чух шывпа... Эс ӑҫтисем пулатӑн-ха, хӗрӗм? Хальччен курман та, паллаймастӑп.

Праски. Слакпуҫсем эпӗ, Кӗҫтентин ялӗсем...

Иван *(сӗтеле уҫса)*. Чейӗ те пур ӗнтӗ Константин Васильчӑн? Иртнӗ эрнере ҫеҫ илсеччӗ те... Ҫӑра чей юрататъ-ҫке Константин Васильчӑ. Ҫӗрле ҫырнӑ чух икшер-виҫшер хут ӑшӑтать вара сӑмаварне... Хӑех ӑппаланать... Мӗншӗн хӑв айкашатӑн тесен, сана вӑратас килмест, харлаттарсах ҫывӑратӑн та,— тет вара... Уҫӑ кӑмӑллӑ Константин Васильчӑ. Мӗн ятлӑччӗ-ха эс, хӗрӗм?

Праски. Праски тесе чӗнеҫҫӗ...

Иван. Эсӗ-и-ха вӑл? Илтнӗ, илтнӗ. Константин Васильчӑ пайтах калаҫа пачӗ сан ҫинчен. Пирӗн кӳршӗре Праски ятлӑ чипер пике пурччӗ, тет. Ҫавӑ пулатӑн-иха эс?

Праски. Ҫапла, эпӗ вӗсен кӳрши.

Иван. Халӗ вӑл кӗнеке ҫырать. Пит яка тухать вара, сӑмахӗсем шыв пек юхса пыраҫҫӗ, мӑн кӗрӳ такмакӗ пекех. Час-часах вуласа парать мана.

Праски. Мӗнле кӗнеке?

Иван. «Нарспи» ятлӑ. Нарспие ирӗксӗр пуян Тӑхтамана качча параҫҫӗ... Хӑй вӑл Сетнер ятлӑ йӗкӗте юратать. Упӑшки пулас арӑмӗ туй вӑхӑтӗнче хӑйӗн савнипе вӑрмана тарса кайнине пӗлет те Нарспие хӗнеме пуҫлать... Мӗскӗн Нарспи хӑй савнине асӑна-асӑна кунӗнҫӗрӗн макӑрать.

Праски. Ҫапах упӑшкипе пурӑнать-и?

Иван. Пурӑнать-ха... Ҫав таран ҫеҫ ҫырнӑ.

*Илья, Федор, Иванов кӗреҫҫӗ. Аллисенче хутпа чӗркенӗ ҫимӗҫсем.*

Иванов. Савӑн, Праски! Экономпа калаҫрӑм. Сана кӗркуннеччен хӗрсен шкулне ӗҫлеме илӗпӗр, терӗ.

Илья. Кӗркунне вӗренме пуҫлӑн.

Федор. Хорта юрлӑн. Сасӑ сан уҫӑ, терӗ Константин.

И л ь я. Халĕ кулачпа чей ĕçĕпĕр, савнă Праски. Унтан... Унтан мĕн тăвăпăр? Аха! Хулари тĕлĕнмелле япаласене кăтартма илсе кайăпăр... Гончаров урамĕнче синематограф уçăлнă... Картина çинче шыв хумханать, лашасем, çынсем утаççĕ... Курсан, пуçу çаврăнса кайĕ.

Ф е д о р. Эс пĕрмай хăвăн театрупа та синематографпа аташатăн... Çынна калаçма памастăн.

И л ь я. Шарламастăп, Хĕветĕр тусăм.

И в а н. Чей ĕçме ларăр ĕнтĕ. Сăмаварĕ сивĕнĕ тата...

И л ь я. Тĕрĕс, Иван тете. Сирĕн енче пичче темеççĕ пулас?

И в а н. Тете теççĕ.

И л ь я *(пурне те сĕтел йĕри-тавра лартса)*. Праски, эсĕ кунта лар, Костя кунта, эпир Хĕветĕрпе ак çакăнта ларăпăр. *(Сĕтел хушшине ларать те кулач касма тытăнать.)* Халĕ кулач касăпăр.

И в а н о в. Лар, лар, Праски...

П р а с к и сĕтел хушшине ларать. Ивансăр пуçне пурте лараççĕ.

Ф е д о р. Эй, мансах кайнă... Сана çыру пур, Илья.

И л ь я. Мĕнле çыру? Камран?

Ф е д о р. Вера пачĕ. *(Ильяна хуçлатнă хут парать.)*

И л ь я *(вуласа)*. «Урăх çыру ан çыр. Сада пымастăп... Вера». Пулать тĕнчере кутăн хĕр. Эп ăна темĕн тăршшĕ çырусем çыратăп, вăл виç-тăват сăмах çеç çырать... Юрататăп мана, сисетĕп, хăй çыру ан çыр, тет...

Ф е д о р. Çаплах çырать-и?

И л ь я. Ак, вула... Чим, вĕрентĕп-ха сана! Ман ура умĕнче йăваланăн. «Тархасшăн, юрат мана, Илюш», тейĕн.

П р а с к и. Иван пичче, эс мĕншĕн ура çинче тăратăн? Лар, лар. Чей ĕçĕпĕр.

И в а н. Ĕçĕрех, ĕçĕр... Эп нумай пулмасть ĕçсеттĕм...

П р а с к и *(Илюша чей чашки парса)*. Кĕçтентинăн кунта савни пур-и?

И л ь я. Унăн савни ялта... Çук, çук, суятăп... Халĕ вăл хулара.

П р а с к и. Мĕн ятлă?

И л ь я. Праски.

И в а н о в. Илья!

И л ь я. Шарламастăп, тусăм...

Алăка шаккани илтĕнет.

И в а н о в. Кĕрĕр, тархасшăн.

Полици агенчĕ кĕрет.

Агент. Ҫаҫарӑр, господа... Ҫонстантин Васильевич Иванов кунта пурӑнать-и?

Иванов. Эпĕ Иванов.

Агент. Сирĕн патӑрта Прасковья Григорьевна Убикова ҫук-и?

Иванов. Пур-ҫке. Акӑ вӑл, халĕ ҫеҫ килчĕ.

Агент. Пит аван. Убикова, халех тумланӑр та манпа каятӑр.

Иванов. Ӑҫта?

Агент. Ман ӑна хӑйсен ялне, упӑшки патне ӑсатмалла.

Иванов. Упӑшки ӑна кунсерен хĕнет. Унашкал упӑшкапа ирĕксĕр пурӑнтарма закон ҫук...

Агент. Тĕрĕс, анчах Убикова упӑшкине ҫаратса тарнӑ.

Праски. Суяҫҫĕ! Эпĕ упӑшка килĕнчен пĕр пуссӑр тухрӑм. Виҫҫĕр ҫухрӑм ҫуран килтĕм!

Агент. Нимĕн те пĕлместĕп. Пуҫтарӑнӑр.

Иванов. Милостивый государь... Эсир этем-и е тискер кайӑк-и?

Агент. Ан кӑшкӑрӑр, господин Иванов! Хӑвӑр камне ан манӑр... Ытлашши калаҫсан, сире те Убиковӑпа пĕрлех этаппа хӑвӑр яла ӑсатӑпӑр...

Иванов. Этаппа хӑратаймӑр... Анчах айӑпсӑр ҫынна арестлеме памастӑп. *(Праские хӳтĕлет.)* Ман пӳлĕмрен кайма ыйтатӑп, господин полицейский!

Агент шӑхӑртать, городовой кĕрет.

Агент. Илсе кай ҫак хĕрарӑма!

Иванов агент патне ҫывхарать.

Праски *(Иванова чарса).* Лӑплан, Кĕҫтентин... *(Хӑвӑрт тумланать те Иванов патне пырать.)* Сывӑ пул, тусӑм... Ҫĕнĕ пурнӑҫ пуҫланать пулĕ терĕм, пулмарĕ... Ҫирĕ-ҫирех ман пуҫа ҫичĕ ют. *(Иванов ҫине нумайччен пӑхса тӑрать те хӑвӑрт тухса каять.)*

Праски хыҫҫӑн городовой каять.

Агент. Чӑрмантарнӑшӑн каҫарӑр, господа. Сире, господин Иванов, йĕркеллĕрех пулма сĕнетĕп. *(Каять.)*

Пауза. Иванов епле тӑнӑ, ҫаплах тӑрать.

Иванов. Чей те ĕçеймерĕ Праски... Эх, самана, самана...

Илья. Мĕнле-ха ку? Вăрласа арăм тăваççĕ те, юратман çынпа ирĕксĕр пурăнтараççĕ... Упăшки килĕнчен тарсан, вăрă туса хураççĕ.

Федор. Иван пичче калашле, самана, Илья, самана...

Илья. Самана, самана... Анчах кирек мĕнле саманан та мĕнле те пулин йĕрки пулмалла.

Федор. Йĕркине хамăр куçпа хамăр куратпăр.

Иванов. Çĕнĕ пурнăç пуçланасса кĕтетчĕ Праски... Эпĕ те çавна кĕтнĕ, савнă тусăм... Хăрушă самана! Тискер самана!.. *(Сиксе тăрать те, сĕтел патне пырса, тетрадьри юлашки страницăсене çурса илет. Хучĕсем çĕре ӳкеççĕ.)*

Федор *(пĕр листине илсе)*. Мĕн тăватăн, Костя? Нарспие çуратăн-çке?

Иванов. Пурнăçра эп ĕмĕтленнĕ пек пулса пымасть. Самана хăйĕн тимĕр таканлă аттипе ман ĕмĕте таптаса лапчăтать.

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар Нарспинне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан пултăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часрах ватăлтăр!
Анчах кайран хăвăнах
Ӳкĕнмелле ан пултăр!..

Чаршав

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

### Тăваттăмĕш картина

Сад. Аллея. Икĕ вăрăм сак. Хыçалта хӳме. Сак çинче Илья выртать. Аллинче кĕнеке, пуç айĕнче тата ик-виçĕ кĕнеке.

Илья. Анлă предложение, калăпăш енчен çителĕклĕ... *(Кĕнеке çине пăхса илет.)* Калăпăш енчен çителĕклĕ, шухăш тĕлĕшпе тулли те вĕçлевлĕ, çавăнтах тата художество майĕпе эрешлĕ пулсан, период теççĕ. *(Хăвăрт.)* Анлă предложение, калăпăш енчен çителĕклĕ, шухăш тĕлĕшпе тулли те вĕçлевлĕ, çавăнтах тата художество майĕпе эрешлĕ пулсан, период теççĕ... Ай! аран вĕрентĕм. *(Аллинчи кĕнекине пуç айне хурать те, тепĕр кĕнеке*

*илсе, вулама тытӑнать.)* «Сан сывлӑшу патӗнчен кайсан та, сан куҫ умӗнчен ҫухалсан та, пӗлӗт ҫине хӑпарсан та, хамӑн ҫунатсене сарса, таҫти тинӗсваррине вӗҫсе кайсан та, сан аллу мана хӳтӗлӗ, сан сылтӑм аллу мана тытса чарӗ...» *(Кӗнекине хупса, вуласа тухнине хӑвӑрт калама пуҫлать. Сӑмахӗсене мансан, кӗнекине уҫса пӑхать, сӑмахӗсене арпаштарса ярать.)* Шуйттан асра тытать-и ҫак схоластикӑна!

Сцена урлӑ Вера иртсе каять.

Илья *(сак ҫине ларса)*. Вера!

Вера чарӑнать.

Ӑҫта васкатӑн!

Вера. Родион Анисимыча шыратӑп. Ӑна Иван Яковлевич чӗнет.

Илья. Питӗртен таврӑнчӗ-им?

Вера. Халӗ ҫеҫ таврӑнчӗ. *(Кайма тытӑнать.)*

Илья. Тӑхта, кӑшт калаҫар ӗнтӗ...

Вера. Аван мар, курма пултараҫҫӗ.

Илья. Садра никам та ҫук...

Вера. Эх, санпа... *(Илья ҫумне ларать.)* Ну, мӗн каласшӑнччӗ? Кала хӑвӑртрах.

Илья. Чи малтан Иван Яковлевич ҫинчен. Мӗнле, ҫилӗллӗ-и?

Вера. Пӳлӗме кӗнӗ-кӗменех Екатерина Алексеевнӑна курчӗ те: «Ҫӗнтертӗм разбойника, этак-так!» — тесе кӑшкӑрса ячӗ...

Илья. Пит аван! Вера, эсӗ синематограф курнӑ-и?

Вера. Курман... Мӗнле япала вӑл?

Илья. Картина ҫинче шыв хумханать, лашасем, ҫынсем утаҫҫӗ.

Вера. Ан калаҫ, суятӑн пулӗ?

Илья *(сӑхсӑхса)*. Ак, тупата туршӑн, суймастӑп. Эпӗ виҫӗ хут кӗрсе куртӑм. Гончаров урамӗнче кӑтартаҫҫӗ...

Вера. Интереснӑ. Курасчӗ апла.

Илья. Екатерина Алексеевна сана час-час хулана мӗн те пулин илме ярать... Каяс умӗн эс Ивана кала та, вӑл мана систерӗ... Иксӗмӗр кӗрсе курӑпӑр... Юрать-и?

Вера. Юрать. *(Ура ҫине тӑрать.)*

Илья. Вера...

Вера. Мӗн?

Илья. Эсӗ ман ҫырусене хирӗҫ мӗншӗн пит кӗскен

çыратăн? Юлташсем кулаççĕ... Юратмасть сана Вера, теççĕ... Пĕр вăрăм çыру çыр-ха хăть...

Вера. Юрать.

Илья. Халĕ кай. Ав, Родион Анисимыч килет...

Вера. Родион Анисимыч! Сире Иван Яковлевич хăй патне чĕнет. *(Хăвăрт каять.)*

Илья кĕсйинчен çур листа çине çырнă сăвва кăларать те вулама тытăнать. Вăл вуланă чух Федорпа Ваня кĕреççĕ, итлесе тăраççĕ.

Илья *(вулать)*.

> Ылтăн тăрăллă аслă Мускав çине,
> Кремль шурă чуллă хÿмисем çине,
> Аякри вăрмансем, çÿл тусем енчен,
> Хуп-хура пĕлĕте салатса ярса,
> Хĕп-хĕрлĕ шурăмпуç хĕрелсе килет...

Федор, Ваня *(ала çупса)*. Браво, Ковшов! Браво!

Илья. Мĕнле янрать, тусăмсем?

Ваня. Лермонтовăнни пекех...

Илья. Пултарать çав Костя! Эпĕ çакна вечерта вуласа парасшăн...

Ваня. Вера чĕрине парăнтарасшăнах эппин?

Федор. Вера чĕрине парăнтарĕ-ха вăл, анчах катехизиспа каллех «иккĕ» илчĕ.

Иванов кĕрет. Ун аллинче çыру.

Иванов. Кăна этем тÿсме пултараймасть. Ыранах яла каятăп.

Ваня. Мĕн тума?

Иванов. Епле мĕн тума? Çаплах асаплантăр-и вăл?

Федор. Кам асапланать?

Иванов *(Федора çыру парать)*. Ак вула.

Федор *(çырăвне вулать)*. «Ку çырăва хамăн куççулĕпе çыратăп, çавăнпа хăшпĕр сăмахсем курăнмаççĕ. Хăвăн çемçе чĕрÿпе вула телейсĕр Праскин курăнми сăмахĕсене, Кĕçтентин... Яла илсе çитерсен, Микихвер мана картишне те кĕртмерĕ: алăсене тилхепепе çыхрĕ те, питлĕх çапса, урам тăрăх çавăтса çÿрерĕ. Тÿсеймерĕм намăса, çав каçах çакăнса вилме тăтăм, анчах Микихвер вилме те памарĕ; çакăнма хатĕрленĕ пăявпа юпа çумне çыхса хучĕ те тăна çухатиччен хĕнерĕ. Икĕ эрне вырăн

çинчен тăраймарăм... Кĕçтентин! Савнă тусăм, хăтар мана ку асапран. Ялакилнĕ чух, тархасшăн, наркăмăш илсе кил ман валли... Анчах сасартăк вĕлерекеннине туп, унсăрăн Микихвер каллех вилме памĕ...» Çук, малалла вулама халăм çитеймест.

Илья. Нарспи Тăхтамана вĕлернĕ пек вĕлермелле Праскин упăшкине...

Ваня. Мĕн усси? Вилнĕ Тăхтаман вырăнне Михетер тепĕр Тăхтаман тупса парать Нарспие. Çук, Илья, пĕрерĕн-пĕрерĕн вĕлерсе пĕтерес çук вĕсене.

Иванов. Праски пеккисемшĕн ку тĕнче хĕсĕк... Çук, Праски çакăнса вилни...

Федор. Епле çакăнса вилни?

Иванов. Праски мар, Нарспи... Кайрăмăр ман пата. Эпĕ сире поэмăн вĕçне вуласа парăп.

Илья. Çырса пĕтертĕн-им?

Иванов. Пĕтертĕм.

Пурте каяççĕ. Яковлевпа Цыганов кĕреççĕ.

Яковлев. Питĕре çитрĕм те тӳрех синод пуçлăхĕ патне...

Цыганов. Министр патне мар-и?

Яковлев. Ун патне мĕн тума? Вăл попечительпе пĕр шухăшлă... «Çапла-çапла, ваше сиятельство, ман шкул ачисем Евангели куçарчĕç те его величествăна парнелеме мана Питĕре ячĕç»,— тетĕп. «Его величество патне кĕме май çук, вăл халĕ никама та йышăнмасть; ее величество — патша арăмĕ — ку ĕçпе йышăнма пултарать»,— тет синод пуçлăхĕ. Патша арăмĕ мар, амăшĕ йышăнсан та, юрĕччĕ, тетĕп хам ăшăмра... Пĕр кун пурăнатăп, икĕ кун, виççĕмĕш кун Хусантан телеграмма илетĕп: попечитель Питĕре тухса кайрĕ, тесе пĕлтерет мана леш çыру çырнă çын. Синод пуçлăхĕ çаплах мана хăй патне чĕнмест-ха. Попечитель министрпа сăмахласан, шкула хупаççĕ тесе хăраса пурăнатăп, этак-так. Пилĕк кун иртсен, синод пуçлăхĕ ман пата хăй кӳмине ярать, эпир — патша арăмĕ патне.

Цыганов. Министра систермесĕрех майлаштартăн пулать ĕçе?

Яковлев. Патша арăмĕ патĕнчен гостиницăна таврăнтăм çеç, министр канцелярийĕнче ĕçлекен чиновник ман пата чупса та пычĕ... Министр канцелярийĕнче те ман пĕр пĕлĕш ĕçлет. Пит сутăнчăк чиновниксем ĕçлеççĕ унта. Кăшт тыттарсан, министра мар, ашшĕсемпе амăшĕсене

те сутма хатӗр. Ҫавӑ: Хусан округӗн попечителӗ килчӗ, анчах министр ӑна, хӑй кабинетне кӗнӗ-кӗменех: «Қая юлтӑр, ваше превосходительство, Яковлева ее величество — патша арӑмӗ йышӑннӑ. Яковлев ее величествӑна чӑвашла Евангели парнеленӗ, ее величество ӑна тав тунӑ, действительнӑй статски советник чинне панӑ, халӗ ак ее величество канцеляринчен ман пата хут килчӗ, ее величество Чӗмпӗрти чӑваш шкулне пулӑшма хушрӗ, тесе ҫыраҫҫӗ». Попечительпе министр пӗр-пӗрин ҫине пӑхса тӑчӗҫ-тӑчӗҫ, тет те: «Ее величество хушнине тӑвӑр, ваше превосходительство!» — терӗ, тет, юлашкинчен министр.

Цыганов. Аван, аван майлаштарнӑ...

Яковлев. Аванне аван та, анчах вӑйлисем умӗнче мӗн чухлӗ пуҫа усса тӑма тиврӗ... Хӑшпӗрисем мана тӑрӑхлама тытӑнӗҫ: «Яковлев патша арӑмӗ умӗнче йӑвалантӑ»,— тейӗҫ... Йывӑр вӑл чӗркуҫҫи ҫинче тӑма, ай-ай йывӑр, Григорий Данилыч. Мӗн тӑвас? Пӗртен-пӗр чӑваш шкулне хуптарас килмест-ҫке.

Ваня васкаса кӗрет. Аллинче кӗнеке.

Ваня. Салам, Иван Яковлевич!

Яковлев. Салам, салам, Ваня!

Ваня. Шкула жандарм офицерӗ килчӗ, Иван Яковлевич. Сирӗн хваттер ӑҫтине ыйтать.

Яковлев. Жандарм офицерӗ? Мӗн кирлӗ ӑна, разбойнике?

Ваня. Пӗлместӗп. Сире курасшӑн пулӗ... Авӑ, вӑл хӑй те ҫитрӗ... *(Кӗнекине вуланӑ пек туса утать, хӑй пӗрмай каялла пӑхать. Аллея хӗрринчи чечек тӗми ҫине пырса такӑнать.)*

Ротмистрпа икӗ жандарм кӗреҫҫӗ.

Ротмистр. Қаҫарӑр чӑрмантарнӑшӑн, господин Яковлев. *(Урине шартлаттарса.)* Сретенский, жандарм ротмистрӗ.

Яковлев. Чимӗр-ха, чимӗр... Эсир Хӑят дьякӑнӗн ывӑлӗ мар-и?

Ротмистр. Ҫавӑ, господин Яковлев.

Яковлев. Эпӗ сирӗн аҫӑра аван пӗлетӗп, Пӑрӑнтӑкра пӗрле вӗрентӗмӗр. Эсир духовнӑй семинаринче вӗренместӗрччӗ-и?

Ротмистр. Тӗрӗс, тӑватӑ класс пӗтертӗм.

Я к о в л е в. Апла мĕншĕн Варшава е Томск университечĕсене каймарăр... Ку ман ĕç мар та-ха... Эсир ман пата-и, господин ротмистр?

Р о т м и с т р. Сирĕн пата. Питĕртен Чĕмпĕре паллă революционер килнĕ...

Я к о в л е в. Паллă революционер?

Р о т м и с т р. Социал-демократ, Путилов заводĕнчи рабочи. Хушамачĕ Бобров.

Я к о в л е в. Бобров... Бобров... Илтнĕ, илтнĕ ун çинчен, паллă çын. Кунта мĕн тума килнĕ-ха вăл? Революци иртсе кайнă-çке.

Р о т м и с т р. Тепĕр революци тăвасшăн пулĕ...

Я к о в л е в. Тепĕр революци? Иртнĕ революци çĕнтерейменнипе хурланмаççĕ эппин?

Р о т м и с т р. Хурланмаççĕ...

Я к о в л е в. Анчах ман мĕн ĕç пур-ха Бобровпа?

Р о т м и с т р. Ман ăна арестлес пулать.

Я к о в л е в. Ну, господин ротмистр, ку ĕçре пулăшма пултараймастăп сире. Каçарăр, этак-так.

Р о т м и с т р. Вăл сирĕн патăрта. Пирĕн агент çапла пĕлтерчĕ.

Я к о в л е в. Ман патăмра нимĕнле Бобров та çук.

Р о т м и с т р. Каçарăр, çапах эпĕ сирĕн хваттере ухтаратăп.

Я к о в л е в. Мĕнле, этак-так?

Р о т м и с т р. Ак ордер. *(Хутне кăтартать.)*

Я к о в л е в. Дворянсен предводителĕнчен ирĕк илтĕр-и?

Р о т м и с т р. Унашкал хут дворянсен çуртне ухтарма çеç кирлĕ.

Я к о в л е в. Эпĕ камне пĕлетĕр-и, господин Сретенский?

Р о т м и с т р. Пĕлетĕп. Эсир чăваш шкулĕн инспекторĕ.

Я к о в л е в *(юри хавхаланса, мăнаçлăн)*. Эпĕ статски советник, дворянин. Ку чина ее императорское величество — патша арăмĕ — мана йышăннă хыççăн пачĕç. Илтрĕр-и, господин ротмистр, мана ее императорское величество йышăнчĕ!

Р о т м и с т р *(честь парса)*. Каçарăр, ваше превосходительство, пĕлмен...

Я к о в л е в. Пĕлес пулать, господин Сретенский! Пĕлес пулать, этак-так!

Ротмистрпа жандармсем каяççĕ. Пауза. Яковлев каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет, туйипе çĕре хытă шаккать.

Яковлев. Ак, разбойник! Ман хваттере ухтарасшăн. Семинарист, университетра вĕренес выранне жандармеринче ĕçлет. Наукăсене вĕренес выранне çын хваттерĕсене тустарса çӳрет. Кахал, кахал, этак-так... *(Цыганов умне чарăнса.)* Куртăн-и, статски советник умĕнче хăйне урăхла тытать, разбойник... Хăратман пулсан, тытса каятчĕ-çке сана, этак-так.

Цыганов. Чим, эпĕ камне пĕлнĕ-им эс?

Яковлев. Малтанхи хут ман пата пырсанах сисрĕм. Халь, ак, санăн тепĕр хушаматна та пĕлтĕм...

Цыганов. Тавтапуç, тусăм. *(Яковлев аллине чăмăртать.)*

Яковлев *(шăппăнтарах)*. Кала-ха, Григорий Данилыч, революцисĕр пурнăçа улăштарма май килместех-ши?

Цыганов. Мĕнле?

Яковлев. Вăйлисемпе мирлĕ сăмахласа.

Цыганов. Астăватăн-и, январĕн 9-мĕшĕнче рабочисем патшапа мирлĕ сăмахлама пынăччĕ те, мĕн пулса тухрĕ?

Яковлев. Тĕрĕс, тĕрĕс, хăрушă ĕç пулчĕ.

Цыганов. Пысăк ĕç тăватăн эсĕ, тусăм. Ĕмĕрĕмĕр тĕттĕмлĕхре асапланнă халăхăн куçне уçатăн. Халăх вăл, куçĕ уçăлсан, пурнăç тискерлĕхне лайăхрах курать, пурнăçа улăштармалли наукăна вĕренсе, тискерлĕх мĕнрен пулнине ăнланса, пурнăçа улăштарма тата çирĕпрех тытăнать. Анчах чи пысăк ĕçе эсĕ курмастăн... е курасшăн мар...

Яковлев. Куратăп, Григорий Данилыч, лайăх куратăп, анчах эпир, чăвашсем, пĕчĕк халăх... Вăл-ку пулсан, вăйлисем пире кача пӳрнепех сирпĕтĕç... Уçнă шкулсене те хупĕç. Эсир, вырăссем, вăйлă халăх... Сире вăйлисем хăйсен умне чĕркуçлентерес çук... Вырăс халăхĕ нихçан та никам умĕнче те пуçне тайман...

Цыганов. Пĕчĕк халăх пулсан та, пĕрле çапăçмалла, тусăм. Аса ил-ха пулса иртнисене... Разин, Пугачев вăхăчĕсене, виçĕмçулхи пăлхавсене... Раççейри халăхсем пурте вырăс халăхĕпе пĕрле юн тăкнă...

Яковлев. Тĕрĕс, пĕрле çапăçнă, пĕрле...

Цыганов. Çапла çав, тусăм. *(Алă парать.)* Сывă пул... *(Хăвăрт каять.)*

Яковлев шухăша каять. Ун çурăмĕ хыçĕнчен, чĕвен утса, Ваня иртсе каять. Вăл Цыганов кайнă еннех утать.

Яковлев. «Улăштарас пулать пурнăçа»,—тет Григорий Данилыч... Улăштарас-улăштарас... Анчах мĕнле?.. Пуянсен пурлăхне ирĕксĕр туртса илсен... Çук, çук, ирĕксĕр туртса илсен... Çук, çук, ирĕксĕр туртса илме юрамасть, этак-так, юрамасть... Хресченсем çĕрсĕр аптăраççĕ, улпутсем йӳнĕ хакпа та сутасшăн мар... Сутасшăн мар, разбойниксем! *(Пауза. Тем аса илсе, хĕпĕртенĕн.)* Попечитель пирĕн шкула хупаймарĕ, этак-так! Хуптармарăмăр, хуптармарăмăр...

Сцена хыçĕнче шав.

Федор, Илья тата ытти ачасем Иванова йăтса кĕреççĕ. «Ура» кăшкăраççĕ. Яковлева курсан, шăпланаççĕ те Иванова çĕре тăратаççĕ.

Яковлев. Мĕн пулчĕ, этак-так?

Илья. Костя «Нарспие» çырса пĕтернĕ, Иван Яковлевич! Пире вуласа пачĕ...

Яковлев. Çырса пĕтертĕн-и, этак-так?

Иванов. Пĕтертĕм, Иван Яковлевич.

Яковлев *(Иванова çупăрласа)*. Маттур, маттур, разбойник!

Городовой кĕрет.

Городовой. Константин Васильевич Иванова ăçта курма пулать, господа?

Иванов. Эпĕ Иванов, ваше благороди...

Городовой. Сире васкавлă пакет... *(Кĕнекине уçса.)* Алă пусăр, господин Иванов...

Иванов алă пусать. Городовой ăна пакет парать те тухса каять.

Иванов *(пакетне уçса вулать)*. Çапла çав вăл кашкăр билетлă çынсен пурнăçĕ...

Яковлев. Мĕнле хут ку, Константин Васильевич?

Иванов Яковлева хутне парать.

Яковлев *(вуласа)*. «Полицмейстер хушнипе сирĕн çирĕм тăватă сехет хушшинче хуларан тухса каймалла... Каймасан, этаппа ăсататпăр...»

Чаршав

## Пиллĕкмĕш картина

Слакпуç ялĕ. Ивановсен çурчĕ. Сĕтел тĕлĕнче пысăк лампа çунать. Кĕркуннехи каç. Чаршав уçăличченех хĕрсем юрлани илтĕнет. Улах лараççĕ.

Хĕрсем кĕнчеле арлаççĕ. Сĕтел хушшинче Квинтильян тетрадь çине çырса ларать. Ун умĕнче шурă пиртен çĕленĕ сумка, пĕр çÿхе кĕнеке. Сумкинче те кĕнекесем. Пукан çинче Алтатти чăлха çыхса ларать. Ун çумĕнче карчăк. Алăк патĕнче сухаллă çынсем, Ваçлей. Чаршав уçăлнă чух юрă шăпланать. Тарас лампăран чикаркка тивертет.

Ваçлей. Тĕк тăнă çĕртех пеме пуçларĕç-и?

Тарас. Нимĕн те туман. Кăшкăрашу та пулмарĕ. *(Сĕтел патĕнчен алăк патнелле уксахласа утса.)* Шалу кăшт ÿстерме ыйтрăмăр та апат-çимĕçе лайăхлатăр, терĕмĕр. Шăршланнă лаша какайĕ çитерме пуçларĕç те, шахтерсем чире ерчĕç.

Тарук. Аякра-и вăл, Тарас пичче?

Тарас. Çĕпĕрте, Лена ятлă юханшыв хĕрринче.

Варук. Тупнă ылтăнне хуçисене параттăрччĕ-и?

Тарас. Кама паран тата? Пит пуяççĕ унта акăлчансем.

Ваçлей. Мĕнле акăлчансем?

Тарас. Ара, ылтăн хуçисем пурте тенĕ пекех акăлчансем-çке, вырăссем сахал.

Ваçлей. Ак тата! Пирĕн пурлăхпа пуяççĕ эппин?

Тарас. Концессионерсем теççĕ вĕсене.

Тарук. Аван-ха, эсĕ сывă юлнă, Тарас пичче.

Тарас. Хăрах урана çеç лекрĕ пули...

Ваçлей. Вилнисем те пулчĕç-и, Тарас пичче?

Тарас. Икçĕр аллă çын кантур умне выртса юлчĕç, икçĕр çитмĕлĕшне суранлатрĕç.

Варук. Чуниллисем! Çынна выльăх вырăнне те хумаççĕ.

Тарас. Константин Васильчă кĕçĕр таврăнмасть пулĕ ĕнтĕ.

Алтатти. Таврăнмаллаччĕ те...

Тарас. Чипер каç пултăр, Алтатти аки...

Алтатти. Лармаллаччĕ-ха.

Тарас. Ўлĕм килĕпĕр... Эс пыратăн-и, пуçана?

Сухаллă çын. Каяс пулĕ. Сывă пул, Авдотья Васильевна...

Тараспа сухаллă çын каяççĕ. Пÿртре шăп. Пауза.

Квинтильян *(грифельпе çырмалли доска çине*

*çырса)*. Саккăр çумне çиччĕ... пиллĕк, пĕрре ăсра... иккĕ çумне виççĕ... пиллĕк, пĕрре ăсра, улттă...

Макçăм *(кĕрет. Аран-аран утать. Туяпа)*. Ман килес-ха...

Васлей. Э, Макçăм пичей килчĕ. Эсĕ те Константин Васильча курма килтĕн-и?

Хĕрсем *(пăшăлтатса)*. Макçăм-юмăç килчĕ.

Макçăм. Ара, Кĕçтен тусăма курас тесе килтĕм çав. Курманни нумай пулать. Леш, Родион Анисимыча тытса кайнăранпа курман. Ара, курман çав... Сывă çӳреççĕ-и пурте?

Алтатти. Çӳретпĕр-ха ерипен... Лар, Макçăм мучи, лар...

Макçăм *(алăк патне ларса)*. Ара, тĕттĕм пуличчен çитес тесе, кăнтăрлах тухрăм. Утрăм, утрăм, каç та пулса кайрĕ. Кăрлайклăпа Слакпуç хушши çичĕ çухрăм çеç, теççĕ те, кĕрхи кун кĕске çав. Утасса та хăвăртах утаймастăп ĕнтĕ. Пĕр ана тăршшĕ каятăп та канма ларатăп. Çынна тĕл пулсан, юмăç пăхатăп. Çул çинчех юмăç пăхтараççĕ тата. Мĕн тăвăн, суйса паратăн вара.

Варук. Юмăç пăхнă чух суяççĕ-им, Макçăм мучи?

Макçăм. Ара, юмăç турă мар-çке, хăй курманнине, хăй хăлхипе илтменнине ăçтан пĕлтĕр? Чипер хĕре каччи çинчен суйса паратăп, йĕкĕте савни çинчен.

Карчăк. Макçăм вăл каччă чухнех суйма ăстаччĕ. Улахсенче пĕрмай юмах ярса паратчĕ.

Макçăм. Чим, эс кам пулатăн-ха, тăхлач? Каччă чухнехине аса илтĕн...

Карчăк. Кӳршĕ хĕрне те паллайми пултăн-и ĕнтĕ? Ай-ай-ай. Ватăлтăн иккен эсĕ те... Астумастăн-им, вăййа пĕрле çӳреттĕмĕр-çке.

Макçăм. Ара, чипер Кулине пулмарăн пулĕ те эс?

Карчăк. Çавă, Кулине карчăк.

Макçăм. Çамрăк чух пит туслăччĕ иксĕмĕр... Мăшăрланаймарăмăр: сана Слакпуçне вăрласа кайрĕç, мана Хушăлкари пуян Матвин ват хĕрне илсе пачĕç. Атте пуйса пулми терĕ те, пуяймарĕ: хулăм сахал тӳленĕ тесе, хуньăм ĕне те памарĕ. Килĕшнĕ чух юпах тихапа сăвакан ĕне пама пулчĕ. Ĕне вырăнне пушмак пăру пачĕ. Пит хытăччĕ ман хуньăм.

Квинтильян. Юмах каласа парсамччĕ, Макçăм пичей?

Алтатти. Эс кĕнеке вула, ачам...

Квинтильян. Эп уроксене пурне те вĕрентĕм, анне.

Макçăм. Каласа парас, Кĕçтен тусăм та юмах итлеме юрататчĕ. Кашни пымассерен çĕнĕ юмах каласа параттăм вара. «Тимĕр тылă» текеннине пит кăмăллатчĕ.

Квинтильян. Ку юмаха кĕнеке çине пичетленĕ, пичей...

Макçăм (*илтмесĕр*). Тата тăлăх арăм çинчен хунă юмаха çырса илсеччĕ.

Квинтильян. Итле, Макçăм пичей, «Тимĕр тылла» вуласа парам. (*Кĕнеке кăларса вулать.*) «Тимĕр тылă».

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпать инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? Пĕлĕр-ха?
Акă мĕншĕн, калам-ха...

Макçăм. Чим, апла пуçланмастчĕ-çке юмах.

Пирĕн чăваш арăмĕ
Тимĕр тылла юратмасть.
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Йывăççи те начар мар...

Квинтильян. Малалла çаплах çырнă, Макçăм пичей, итле.

Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларать, тет.
Тимĕр тылла тытсанах
Шăлĕсемпе шаккать, тет...

Урамра хуткупăс калани илтĕнет, пĕрремĕш картинăри каччăсен юрри çывхарать. Квинтильян сасси илтĕнми пулать. Санькапа каччăсем кĕреççĕ. Санька хуткупăс каласах кĕрет.

Санька. Сывă çӳреççĕ-и пурте? Кĕçтентин халь те таврăнман-и?

Алтатти. Таврăнаймарĕ-ха.

Карчăк. Каяс пулĕ... (*Макçăм патне пырса.*) Макçăм, эс хăтусем патне чарăнтăн-и?

Макçăм. Хăтасем патне çитеймерĕм-ха... Çавсем патне кĕресшĕнччĕ.

Карчăк. Атя. Кĕçтентин паян килмест, тет, ав...

Макçăм. Апла ыран килес эппин... Юри Кĕçтен тусăма курма тесе килтĕм. Ырă кaç пултăр, Алтатти.

Алтатти. Кунтах çывăрмаллаччĕ, Макçăм мучи.

Макçăм. Хăта çилленĕ тата... Пилĕк çул килмен те... Ара, пилĕк çул çав... Кĕçтен çав çул килте пурăнчĕ... Çавăнтанпа Слакпуçне килмен... Каяр, Кулине...

Карчăкпа Макçăм каяççĕ.

Санька. Мĕншĕн шăппăн ларатăр, хĕрсем? Улахра юрлаççĕ.

Васлей. Ташă кĕвви кала-ха, Санька. Хĕрсене ташлаттарар.

Санька ташă кĕвви калама тытăнать.

Хĕрсем! Ташласа парăр-ха...

Хĕрсем вырăнтан та хускалмаççĕ.

Алтатти. Мĕн вăтанса тăратăр? Ташлăр, ташлăр... Варук, эс ташлама ăстаччĕ.

Тарук. Атя, Варук аппа, ташласа кăтартар.

Варукпа Тарук ташă пуçлаççĕ. Ташласан-ташласан, Васлей: «Эх!» — тет те вĕсемпе пĕрле ташлама тытăнать. Васинкка кĕрет. Ăна курсан ташлама пăрахаççĕ. Пурте турахупĕсене йăтса кайма пуçтарăнаççĕ.

Васинкка. Ăçта ваксатăр, хĕрсем? Улахран тĕттĕм пулнă-пулманах саланмаççĕ. Ларăр, ларăр...

Алтатти. Эсĕ таврăнасса пĕлмен те...

Васинкка (*пўлсе*). Юрать, юрать, карчăк... Чăвашăн йăли çавнашкал: хуçи килтен кайсан, улах лараççĕ... Юрлама çăмăлтарах пултăр тесе, пĕрер витре сăра ăсса тух... Сăри пур пулĕ-ха?

Алтатти. Сăри пур-ха вăл...

Васинкка (*сукна сăхманне хывса*). Ну, хĕпĕртĕр, хĕрсем! Пысăк лавкка уçатăп. Хулари пек пулĕ... Виçĕ вакун тавар илсе килтĕм.

Алтатти. Тырăпа суту-илў туни çитмест, тата лавкка уçас терĕн-и?

Васинкка. Лавкка та кирлĕ, карчăк... Ку таврара пысăк лавкка çук. Явлăк-тутăр илмех çынсем Белебее каяççĕ те. Халăх нушине пĕлес пулать. Сан çырткаламалли пур-и? Çикелес те староста патне кайса килес.

Алтатти. Апат кăмакарах-ха. Кĕçтентина кĕтсе, хамăр та çименччĕ.

Васинкка. Кĕçтентин килет-им?

Алтатти. Вăл ĕнер Чĕмпĕртен килчĕ, паян ирех Белебее тухса кайрĕ.

Васинкка. Унта мĕн ĕçпе кайрĕ тата?

Алтатти. Учителе экзамен патăм, тет, вырăн ыйтма прошени парас терĕ.

Васинкка. Ненай... Кĕçтентин пеккисене вырăн памаççĕ пулĕ? Ну, апатне антар-ха эс...

Хĕрсем, мĕншĕн юрламастăр? Юрлăр-ха пĕр-пĕр савăнăçлăраххине... Санька, кала купăсна, кала... *(Каять.)*

Пурте шăп лараççĕ. Санька хуткупăсне пĕр-иккĕ тăсса илет те чарăнать.

В а р у к. Квинтильян, «Нарспи» вула-ха луччă.

С а н ь к а. Миçе хут итлемен çав «Нарспие», итленĕçем итлес килет.

Т а р у к. Епле çырма пĕлнĕ ăна Кĕçтентин пичче.

В а р у к. Силпире Нарспи ятлă хĕр чăнах та пулнă имĕш. Ăна та ирĕксĕр качча панă, тет те, упăшки хĕненине тӳсеймесĕр вăрмана кайса çакăннă, тет.

В а ç л е й. Силпи вăрманĕнче халĕ те Нарспи тĕми пур, теççĕ.

Т а р у к. Эпĕ, хама ирĕксĕр качча парсан, пĕр кун та пурăнмастăп упăшкапа.

В а ç л е й. Ăçта кайăн?

Т а р у к. Таратăп.

В а ç л е й. Ав, Праски тарса пăхрĕ те, каялла тытса килчĕç.

С а н ь к а. Уретник таврашсем пуянсем мĕн хушаççĕ, çавна тăваççĕ ĕнтĕ.

Т а р у к. Праски аппана çаплах хĕнет, тет, Микихвер.

С а н ь к а. Халь арăмне хĕнеме ансат Микихвере: хута кĕрекен çук, ялйышсенчен уйрăм пурăнаççĕ.

В а р у к. Хĕрхенетĕп çав Праские. Миçе çул асапланать ĕнтĕ... Хĕр чухне мĕнле чиперччĕ вăл. Кĕçтентинпа вăййа тухатчĕç... Юнашар тăрса кĕвĕ калатчĕç. Пурте вĕсем çине пăхса савăнатчĕç.

Т а р у к. «Нарспие» итленĕ чух Праски çинчен çырнă пекех туйăнать вара.

В а р у к. Вула, вула, Квинтильян.

К в и н т и л ь я н *(кĕнеке уçса)*. Иртнĕ каç ăçта çитиччен вуласаттăм-ха?

Т а р у к. Нарспипе Сетнер вăрмана тарчĕç.

К в и н т и л ь я н. Э, ак çакăнта çитнĕччĕ-иç. *(Вулать.)*

Сетнер тутлă çывăрать
Çуллĕ юман кутĕнче,
Нарспи ларать тĕлĕрсе
Сетнер пуçĕ вĕçĕнче...

Т а р у к. Ма çывăраççĕ вĕсем? Халех шăпăрçăпа икĕ пуса каччи килеççĕ ĕнтĕ,

Квинтильян (*вулать*).

| | |
|---|---|
| Нарспи тӗлӗк тӗлленет: | Шăлӗсемпе шаккаса, |
| Ашшӗ йытă пулнă та, | Сиксе çӳрет вăрманта... |

Васинкка (*сцена хыçӗнче*). Эс мана ан вӗрент, Алтатти, Кӗçтентина сахалтарах итле.

Квинтильян (*вулать*).

| | |
|---|---|
| «Ăçта тартăн, усал хӗр? | Йытă ури айӗнче |
| Пуçна çийӗп тупсассăн?!» | Шăтăртатать сӗм вăрман... |

Тарук. Ах, тур, тур!.. Халех çитеççӗ вӗт, тытаççӗ... Ма çывăраççӗ-ха вӗсем?

Санька. Ан шарла-ха, Тарук!

Квинтильян (*вулать*).

Çывăх, çывăх, ак çитет!
Нарспи йăлтах вăранать.

Васинкка (*сцена хыçӗнче*). Квинтильян!

Квинтильян (*кӗнекене Санькана парса*). Ме, Санька пичче, вула. (*Хăвăрт тепӗр пӳлӗме каять.*)

Санька (*вулать*).

| | |
|---|---|
| Пăхать: хăйӗн патнелле | — Сетнер, Сетнер! Тытрӗç-çке! |
| Виç юланут кустарать: | Тăр, тăр! Тарса хăтăлар! |

Иванов кӗрет.

Иванов. Салам, тантăшсем!

Пурте. Кӗçтентин килчӗ! Кӗçтентин пичче таврăнчӗ! Константин Васильевич çитрӗ!

Иванов (*пальтине хывса пăтаран çакать, пурне те алă тытса тухать.*) «Нарспи» вулатăр эппин?..

Васлей. Сана курас тесе, пӗтӗм ял килнӗччӗ паян сирӗн пата.

Варук. Кăрлайклă ялӗнчи юмăç Макçăм та килнӗччӗ.

Иванов. Ну? Шел, курса калаçасшăнччӗ Макçăм туспа.

Васлей. Вăл хăтисем патне кайрӗ. Ыран килетӗп, терӗ.

Иванов. Пит аван.

Тарук. Тарас пичче те пулчӗ.

Иванов. Тарас пичче? Таврăннă-им?

В а ç л е й. Таврăнасса таврăннă та, анчах уксахлать.
И в а н о в. Мĕншĕн?
В а ç л е й. Жандармсем пăшалпа печĕç, тет. Çĕпĕрте ылтăн тăпри кăларса пурăнтăм, тет. Шывĕ мĕн ятлă терĕ-ха?
В а р у к. Лена.
И в а н о в. Ха, унта пулнă-и-ха вăл?.. Тĕрĕс, унта тискер ĕç пулса иртнĕ.
С а н ь к а. Мĕнле, вырăн пачĕ-и инспектор?
И в а н о в. Вырăн çук, тет.
С а н ь к а. Ах, эсремет! Епле вырăн çук пултăр-ха... Кăрлайклăра Родион Анисимыча арестленĕ хыççăн учитель пулман, Хушăлка шкулне те учитель çуккипе хупса лартнă.
И в а н о в. Мĕншĕн юрламастăр, хĕрсем? Санька, вылянтар-ха купăсна.

Санька купăс калама пуçлать, Иванов юрă пуçласа ярать. Ун çумне хĕрсем, унтан арçынсем хутшăнаççĕ. К в и н т и л ь я н кĕрет.

К в и н т и л ь я н. Пичче, атте Самартан таврăннă. Виçĕ вакун тавар илсе килнĕ. Старостăпа иккĕш лавкка уçаççĕ.
И в а н о в. Лавкка? Мĕнле лавкка?
К в и н т и л ь я н. Станцинчи пекки пулĕ. Хĕвелçаврăнăш, мăйăр, канфет, премĕк сутаканни.
И в а н о в. Ăçта вăл?
К в и н т и л ь я н. Леш пӳртре апат çиет.

И в а н о в хăвăрт каять.

С а н ь к а. Ну, иккĕн пуçлаççĕ ĕнтĕ халăх тирне сĕвме.
В а ç л е й. Мĕнех туччăр вĕсем халăха? Лавкка тĕрме мар, ирĕксĕр хăваласа кĕртме çук.
С а н ь к а. Хушăлкари пуян Матви ывăлĕ мĕн хăтланать, илтмен-им? Лавкка уçнă та пĕтĕм яла хăй аллине çавăрса илнĕ.
В а ç л е й. Мĕнле?
С а н ь к а. Кĕтмелле тавар сутса. Хушăлкасем халĕ хăйсен тыррине выриччен пуян тыррине выраççĕ. Ял тырри тăкăнать, лешин ĕнтĕ кĕлетре. Вырнă, çапнă...
В а ç и н к к а *(сцена хыçĕнче)*. Мĕн? Мĕн? Мана ятлама?!

Çамрăксем калаçма чарăнаççĕ, пӳртре шăп.

Иванов *(сцена хыҫӗнче)*. Пӗлетӗп! Лавкка уҫса, чухӑнсене тарҫӑ вырӑнӗнче усрасшӑн! Вӗсене чура тӑвасшӑн! Вӗсене... *(Ӳсӗрме пуҫлать.)*

Санька. Тӗрӗс, Кӗҫтентин!

Ваҫинкка *(сцена хыҫӗнче)*. Аҫу килӗнче пурӑнас тетӗн пулсан, ман ӗҫе ан хутшӑн! Ҫӑварна ытла карас килсен, тухса кай ман килтен! *(Хӑвӑрт тухать те, халатне тӑхӑнса, нимӗн чӗнмесӗр, тепӗр алӑкпа тухса каять.)*

Варук. Мӗн ҫитмен Ваҫинкка пиччене? Тӑван ывӑлне килӗнчен хӑвалать...

Санька. Ывӑлӗ ун ҫулӗпе каясшӑн мар, ҫавӑнпа. Ну, вула, Квинтильян, малалла. *(Пӳрнипе кӑтартса, кӗнекине парать.)* Ак ҫакӑнтан пуҫла.

Квинтильян *(вулать)*.

Маттур шӑпӑрҫӑ паян
Икӗ пуса каччипе
Тытса килчӗҫ вӑрмантан
Сетнерпеле Нарспие...

Урамра Праски сасси илтӗнет: «Вӗлер, вӗлер хӑвӑртрах! Ан асаплантар!»

Варук. Чимӗр-ха, ку Праски сасси мар-и вара?

Пурте итлеҫҫӗ.

Микихвер *(урамра)*. Савни таврӑннине пӗлнӗ те ун патне чупнӑ? Ак сана! Ак сана!

Санька. Атьӑр, йӗкӗтсем!

Каччӑсем хӑвӑрт тухса каяҫҫӗ.

Тарук. Мӗнле тӳсет-ши Праски аппа?

Алтатти *(сцена хыҫӗнче)*. Тархаслатӑп, ан тух, Кӗҫтентин. Темӗн пулма пултарать... Микихверӗ ӳсӗр пулӗ...

Иванов *(сцена хыҫӗнче)*. Епле чӑтса тӑрас ман, анне? Праские хӗнет вӑл.

Алтатти *(алӑка хупса, сцена хыҫӗнче)*. Ямастӑп!

Иванов *(сцена хыҫӗнче)*. Анне!

Микихвер *(сцена хыҫӗнче)*. Ҫын арӑмӗ ҫумӗнче сан мӗн ӗҫ пур, ҫара ҫерҫи?!

Санька *(сцена хыҫӗнче)*. Ут, ут! Урӑл малтан...

Микихвер *(урамра)*. Чим, уретнике калатӑп, ак...

Ваҫлей. Ытла ан кар ҫӑварна!

Пӗр алӑкран каччӑсем Праские ҫавӑтса кӗреҫҫӗ, тепӗр алӑкран Алтатти кӗрет. Праски ун патне ыткӑнать.

П р а с к и (*макăрса*). Мĕншĕн, мĕншĕн ман çакнашкал асап тӳсмелле-ха?

А л т а т т и. Лăплан, хĕрĕм, лăплан... (*Пукан çине ун çумне ларать.*)

М и к и х в е р (*урамра*). Эп кăтартăп сире, кĕлмĕçсем!

С а н ь к а. Қăшкăр, кăшкăр... Тупăннă паттăр! Урамра арăмне хĕнет. Тăхтаман хăраххи!

Иванов кĕрет.

П р а с к и. Хăçан та пулин пирĕн пек телейсĕрсене ăшăтакан çут хĕвел тухĕ-ши?

И в а н о в. Тухĕ, Праски, тухĕ...

П р а с к и (*Иванов çине пăхса тăрать те ун патне ыткăнать.*) Қĕçтентин!..

И в а н о в. Савнă тусăм... (*Çавăнтах ӳсĕрме пуçлать, кăшт çеç кайса ӳкмест.*)

П р а с к и (*Иванова ыталаса, пукан çине лартать*). Мĕн пулчĕ сана, Қĕçтентин?

И в а н о в (*каллех ӳсĕрет те, шурă тутăрпа çăварне хупласа*). Нимех те мар... Пуç çаврăнса кайрĕ...

П р а с к и (*Иванов тутăрĕ çине пăхса*). Чим, сан тутăру çинче юн. Пӳлĕхçĕм!.. Чирлемерĕн-и эс?

И в а н о в. Пирĕн пурнăçа самана таптарĕ, Праски... Иксĕмĕрĕнне те таптарĕ: манăнне те, санăнне те...

Қантăксем çине пушар çути ӳкет.

В а р у к. Чимĕр-ха, чимĕр, вут-кăвар тухнă пулас?

С а н ь к а (*кантăк витĕр пăхса, хумханмасăр*). Микихверсен хуттăрĕ çунать.

И в а н о в. Ав, куратăн-и, Праски, хĕвелтухăç хĕрелет!.. Хĕвел те часах тухĕ...

Пӳртри çамрăксем пурте кантăк патĕнче урамалла пăхса тăраççĕ. Пĕр Тарук çеç пăшăрханать.

Т а р у к. Мĕн пăхса тăратăр? Атьăр сӳнтерме!

В а ç л е й. Çунтăр ара, пире мĕн ĕç!

М и к и х в е р (*урамра*). Çунатпăр! Халăх! Сӳнтерме атьăр!

С а н ь к а. Улпут пултăмăр тесе мухтанатчĕ-ха Микихвер. Ак сана улпут. Ыттисен хутăрĕсем те çаплах алкăшĕç, ак.

Т а р у к. Праски аппа, эс мĕн ларатăн? Çунатăр вĕт!

Праски те, ыттисем те вырӑнтан хускалмаҫҫӗ. Чан ҫапни илтӗнет.

Санька (*кантӑкран пӑхса*). Аван ҫунать!

Ваҫинкка (*чупса кӗрет, халатне хывса*). Алтатти, кивӗ сӑхман ӑҫта? (*Пуҫтарнӑ вырӑна тустарса, сӑхманне тупать, тӑхӑнать.*) Эсир мӗн пӑхса тӑратӑр? Пуян Упик ҫунать вӗт? Сӳнтерме атьӑр!..

Никам та хирӗҫ чӗнмест. Ваҫинкка хӑвӑрт тухса каять.

Ваҫинкка (*сцена хыҫӗнче*). Ҫараҫка! Леврентей! Атьӑр сӳнтерме.

Алтатти. Вут-кӑвар тухсан, ял вӗлле хурчӗ пек кӗрлекенччӗ. Халӗ пӗр сас-чӗвӗ те ҫук.

Ваҫинкка (*урамра*). Халӑх! Мӗн пӑхса тӑратӑр? Сӳнтерме атьӑр!

Иванов. Тӑрӑшни усӑсӑр, атте. Ку ҫулӑма никам та сӳнтереймӗ. Ҫӗнӗрен ҫӗкленет тӑвӑл! (*Тӑрса кантӑк патне пырать. Пушар ҫути ун ҫинче вылять.*) «Мӑнаҫлӑн вӗҫет хӑюллӑ тӑвӑл хыпарҫи ҫиҫӗм хушшинче,— хаяр ахӑракан тинӗс ҫинче. Кӑшкӑрать... Ҫӗнтерӳ пророкӗ кӑшкӑрать: тата вӑйлӑрах кисреттӗр тӑвӑл!»

Иванов юлашки сӑмахӗсене калана чух музыка пуҫланать.
Чаршав ерипен хупӑнать.

# ПУРНĂÇĂМ ÇИНЧЕН КĔСКЕН

Тутар республикинчи Теччĕ районĕнче (ĕлĕк — Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнче) Кушкă ятлă чăваш ялĕ пур. Ял çумĕпе Кăнна шывĕ юхса выртать. Ял ячĕпе юханшыв ятне пĕрлештернĕ те, Кăнна Кушки пулса тăнă. Вырăсла ăна Кильнинские Кошки темелле пулнă пек те, анчах Кошки Ново-Тимбаево тенĕ.

Çав ялта 1893-мĕш çулхи сентябрĕн 14 (1)-мĕшĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă та ĕнтĕ эпĕ. Хăшпĕрисем ман биографие çырнă чух мана вăтам хресчен çемйинче çуралнă тесе çыраççĕ. Тĕрĕс мар вăл. Эпĕ çуралнă чух пирĕн çемье питĕ чухăн пурăннă. Вăтă хура лашапа виç-тăват сурăхсăр пуçне пирĕн выльăх та пулман. Ара, икĕ ят çĕрне çеç акса пурăннă-çке-ха эпир.

Атте эпĕ пĕчĕкçĕ чух «стурунара» çÿренĕ: Хусанти учительсем вĕрентсе кăларакан семинаринче стурăшра ĕçленĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, леш, хамăр янташăн Иван Яковлевичăн кучерĕ пулнă. Эпĕ шкула кайнă çул, пирĕн çемьере ят хушăнсан тин, атте киле таврăнчĕ. Çав çул эпир ĕне туянтăмăр, урам урлă пурăнакан Шăхран Тихханĕсемпе — Тиххăн Петĕркки писателĕн ашшĕсемпе пĕрле плуг илтĕмĕр. Çапла вара вăтам пурăнакан хресченсен ретне кĕтĕмĕр.

Ялти икĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан, 1907-мĕш çулта эпĕ çав хамăр ял çынни уçнă Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕтĕм. Пĕлÿсем панăшăн кăна мар тав тăвас килет ман çав шкула, унта вĕреннĕ чух эпĕ аслă вырăс халăхĕн литературипе пĕрле чăвашсен тин çуралнă поэзине, театра, вырăс тата чăваш халăхĕн музыкине, живопиçне юратрăм, ман пуçăмра художник пулас ĕмĕт çуралчĕ. Çав ĕмĕт мана чăваш поэзин классикĕпе Константин Ивановпа туслашма пулăшрĕ, мĕншĕн тесен вăл та живопиçе юрататчĕ, вăл та художник пулма ĕмĕтленетчĕ. Çав ĕмĕтех мана Хусанти художество шкулне вĕренме кĕме хавхалантарчĕ те ĕнтĕ. Анчах Хусанта вĕреннĕ чух ман пурнăçра пысăк «инкек» сиксе тухрĕ: манăн художник пулас ĕмĕт ерипен-ерипен сÿне пуçларĕ, ун вырăнне артист пулас ĕмĕт çуралчĕ.

Малтанхи çул вĕреннĕ чухнех эпĕ кашни каç тенĕ пек театра çÿреме пуçларăм. Паллах ĕнтĕ, кашнинчех укçа тÿлесе çÿреме пултарайман эп, çавăнпа укçасăр çÿреме май тупрăм: революциччен театрсенче сăмахсăр рольсене вылякансене шалу тÿлеместчĕç, шалу вырăнне вĕсем, сцена çине тухман чух, театрти сутăнман вырăнсене йышăнса, спектакльсем пăхма пултаратчĕç. Статистсем тетчĕç вĕсене. Анчах вĕсен хушшинче телейлисем те пулкалатчĕç: хăш чух режиссерсем ик-виç сăмахлă рольсене çавсене паратчĕç. 1912-мĕш çулта мана çав телейлисем шутĕнче пулма тÿр килчĕ: «Комъ грядеши?» спектакльте эпĕ суккăр римлянин рольне вылярăм. Вăл халăх хушшинче императора хирĕç: «Нерона вилĕм!», «Кирлĕ мар пире Нерон!» тесе çеç кăшкăрать пулин те, çапах та роль вĕт. Çавăн хыççăн ман пуç çаврăнмаллипех çаврăнса кайрĕ: ара, хулари пысăк театрта вырăссен чаплă артисчĕпе А. П. Двинскийпе пĕрле вылянă-çке-ха эп!

...1917-мĕш çул. Кĕркуннехи çанталăк хĕл енне сулăннă пулсан та, Хусанăн аслă урамĕсем, çуркуннехи пек, кĕрлеççĕ. Стенасемпе хÿмесем çинче Совет влаçĕн малтанхи декречĕсем халăха савăнтараççĕ. Театрсемпе клубсенче, дворянсем пуçтарăнакан керменĕн, университетăн пуху залĕсенче кашни каç тенĕ пек митингсем пулса

иртеççĕ. Большевиксем Октябрьти аслă революци рабочисемпе хресченсемшĕн калама çук пысăк тивлет иккенне халăха ăнлантараççĕ. Хусанти чăвашсем те — студентсем, Совет учрежденисенче ĕçлекенсем, рабочисем, прачкăсем, хĕрлĕ гвардеецсем — янташлăх пухăвĕсене пуçтарăна пуçларĕç. Халиччен хулара çăвар уçма вăтаннă чăвашсем, хăйсен ĕлĕкхи тертлĕ пурнăçне аса иле-иле, телейлĕ малашлăхĕ çинчен калаçаççĕ. Çак хавхаланулла вăхăтра ку таранччен пурнăçланма пултарайман, ăшăмра çеç усраннă, чăвашла спектакль лартас ĕмĕте вырăссен паллă артисчĕ Николай Петрович Россов çунатлантарчĕ. Унпа калаçни çинчен эпĕ хампа пĕр пӳлĕмре пурăнакан, художество шкулĕнче вĕренекен чăвашсене Константин Васильевпа Петр Федорова каласа патăм. Вĕсем чăвашла спектакль лартас шухăша хĕпĕртесех ырларĕç. Çитес янташлăх пухăвĕнче эпир хамăр шухăша пухури çынсене пĕлтертĕмĕр те, çав кaçах чăвашсен малтанхи драмкружокне аллă çынна яхăн çырăнчĕç.

Хамăрăн оригиналлă пьеса пулман пирки, вырăс классикĕн А. Н. Островскин «Ху пурăнас тенĕ пек ан пурăн» драмине чăвашлатса куçартăмăр та репетицисем тума тытăнтăмăр. 1918-мĕш çул, январĕн 27(14)-мĕшĕнче купцасен клубĕ пулнă çуртра чăвашсен малтанхи спектаклĕ пулса та иртрĕ.

1921-мĕш çулта февралĕн 12-мĕшĕнче Чăвашсен патшалăх театрĕ мунчала складĕнчен тунă çуртра ĕçлеме пуçларĕ.

Çав çулсенчех эпĕ виçĕ оригиналлă пьеса çырса пăхрăм: «Хум» тата «Шăпăрлансем» ятлă пĕр пайлă драмăсем, «Хĕрлĕ шуйттан» ятлă тăватă пайлă пьеса. Кусем çинчен çапла калас килет: шухăшĕсем вĕсен тарăнах, анчах драматурги ăсталăхĕ енчен шăйрăксем çителĕклĕ вара.

1925-мĕш çулта эпĕ чăвашла кинокартинăсем ӳкерес ĕçпе интересленме пуçларăм. Ку ĕçре мана хавхалантараканĕ те, пулăшаканĕ те чăвашсен малтанхи киноактриси Тани Юн пулчĕ. «Чăнах та, украинецсем, грузинсем, армянсем, Вăтам Азири хăшпĕр халăхсем хăйсен пурнăçĕ çинчен фильмсем ӳкереççĕ, мĕншĕн-ха эпир, чăвашсем, ӳкерместпĕр?» — терĕмĕр те, эпĕ Чăваш обкомĕпе, облаç пуçлăхĕсемпе калаçса татăлтăм та, «Атăл пăлхавçисем» ятлă киносценари çыртăм, Ленинградри «Севзайкино» ятлă киностудипе пĕрле фильм ӳкертĕмĕр. Çапла пуçланса кайрĕ «Чăвашкино». Ултă çул хушшинче эпир «Сарпике», «Хура юпа», «Ял», «Киремет кати» ятлă фильмсем, «Чăваш çĕршывĕ», «Октябрь тивлечĕпе», «Чăваш çырулăхĕ пуçланни 60 çул» ятлă документлă фильмсем ӳкертĕмĕр. Сценарисене пурне те тенĕ пек хам çыртăм. «Киремет катипе», «Асту» сценарисене çеç А. Чистяковпа Н. Мранька писательсемпе пĕрле çыртăм.

1932 çулта Чăваш республикин правительстви мана çĕнĕрен хамăр театрта ĕçлеме куçарчĕ. Пилĕк çул эпĕ театрăн художествăллă руководителĕ пулса ĕçлерĕм. Пит ăнăçлă пулчĕç çав çулсем театршăн та, маншăн та; театр академи театрĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ, эпĕ çав çулсенче драматурги енĕпе ăнăçлă ĕçлерĕм. Тĕрĕссипе каласан, çав çулсенче тин эпĕ хама драматургсен ретне кĕнĕ тесе шутлатăп.

Режиссура ĕçне çав çул эпĕ хам çырнă драмăллă поэмăран — «Атăл кĕввисенчен» пуçларăм. Поэмăна Шупашкарти Хĕрлĕ площадьре лартрăмăр. Спектакле чăваш поэчĕсем П. Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, А. Петокки, Г. Краснов-Кĕçĕнни хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсем çырнă сăввисене трибуна çине хăпара-хăпара вуларĕç. Чăваш хорĕпе симфониллĕ оркестрĕ те спектакльте пысăк вырăн йышăн-

чӗҫ. Пуҫланасса та спектакль В. Воробьев композитор ҫырнӑ «Октябрь ҫулӗ» ятлӑ юрӑпа пуҫланатчӗ. Ӑна Шупашкарта сахалтан пилӗк пин ҫын пӑхрӗ. Ҫайран ку спектакле Горькири хула театрӗнче, Автозавод клубӗнче, Патӑрьелӗнчех ӑна ҫирӗм пин ҫын, Елчӗкре вунпилӗк пин ҫынна яхӑн пӑхрӗҫ.

«Атӑл кӗввисем» маншӑн — режиссершӑн та, драматургшӑн та пит пӗлтерӗшлӗ спектакль пулчӗ: кинора ӗҫленӗ вӑхӑтра, уйрӑмах Мускавра ӗҫленӗ чух, эпӗ тӑван театрӑн чӗри тапнине—актерсемпе актрисӑсен халне, пултарулӑхне курман. Ку спектакльте театр сӑн-пичӗ уҫҫӑн курӑнчӗ. Ҫав ҫулхи хӗллехи сезона уҫма «Ҫӗр ҫӗкленет» драмӑна кашни артистӑн пултарулӑхне, ӑсталӑхне асра тытса, произведенин пулас сӑнарӗсене сцена ҫинче курса ҫыртӑм. «Сатурпа Илем» драмӑри, «Кӗпер» комедири рольсене те выляс актерсен пултарулӑхӗсене курса ҫыртӑм. Пит ӑнӑҫлӑ ҫырӑнаҫҫӗ пьесӑсем ҫав меслетпе ӗҫлесен.

1932-мӗш ҫултан пуҫласа пирӗн театрӑн хӑвачӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пычӗ. Театр ӳсӗмне хӑпартакансем — драматургсемпе актерсем. Ҫавсене ырӑ сӑмахпа асӑнмасӑр иртсе каяймастӑп.

1940-мӗш ҫулта эпӗ «Пугачев парни» («Ӑру вӗҫӗ») драма ҫыртӑм. Фашистсене пӗтлекен, совет ҫыннисен вӑрҫӑри, тылри паттӑрлӑхне кӑтартакан пьесӑсем тата тӑваттӑ ҫыртӑм: «Савнисем», «Сенкер двойка», «Ачамӑрсем», «Телейлӗ ҫуркунне».

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче «Тӑвӑл хыҫҫӑн тӑвӑл» («Константин Иванов»), «Савӑнӑҫ хуҫисем», А. Орлов-Шуҫӑм композитор валли «Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан», «Шупашкарта» музыкӑллӑ комедисем, «Ҫӑлтӑр витӗр ҫул» опера либретти, П. Пустыльник композитор валли «Нарспи» опера тата «Зора» балет либреттисем ҫыртӑм. Чӑваш академи театрӗнче лартма А. Островскин «Вӑрманне», М. Горькин «Мещенӗсене» иккӗмӗш хут Н. Гогольӑн «Ревизорне» куҫартӑм. Малтан куҫарни ҫухалнӑччӗ.

Юлашки ҫулсенче Тани Юнпа иксӗмӗр «Эх, Иван», «Чӗре хушнипе», «Аптӑранӑ кӑвакалсем» ятлӑ пьесӑсем ҫыртӑмӑр, иртнӗ ҫул «Тӗрлемес тавраш ӗнче» историлле драма тата А. Орлов-Шуҫӑмпа пӗрле Андриян Николаевпа Валентина Николаева-Терешкова космонавтсем ҫинчен ораторилле опера либреттине ҫыртӑмӑр. Хӑшпӗр арисен сӑввисене Г. Краснов-Кӗҫӗннипе Н. Евстафьев поэтсем ҫырма пулӑшрӗҫ.

Манӑн литература ӗҫӗ Чӑваш театрӗн кунҫулӗпе, «Чӑвашкино» ӗҫӗсемпе ҫыхӑнса пынӑ. Хам ӗмӗрте эпӗ 40-е яхӑн пьеса куҫарнӑ, вӗсенчен 6-не чӑвашлатнӑ, оригиналлӑ пьесӑсем, киносценарисем, операпа оперетта, балет либреттисем —30, калавсемпе асаилӳсем — 20 ытла ҫырнӑ; сцена ҫинче 64 роль, кинора 10 роль вылянӑ.

Ман пуҫа час-часах пӗр шухӑш пырса кӗрет: кам пулнӑ пулӑттӑм-ши эпӗ, Совет влаҫӗ пулман пулсан?..

Чӑваш театрне пуҫарса яма, сцена ҫинче хам юратнӑ рольсене — Расплюева, Кочкарева, Хлестакова, Саввӑна, Рогожкина, Жорж Дандена, XIX-мӗш Карла, чаплӑ Кина, Иорика, Арлекина, Сатура, кинора — Евче, Салмана, Васильча, Ульфургина, Шамана — выляса, халӑх юратнӑ пьесӑсене сцена ҫинче лартса, чӑваш фильмӗсене ӳкерсе, пьесӑсемпе калавсем ҫырса, совет ҫыннисене ҫӗнӗ пурнӑҫ тунӑ ӗҫре пулӑшма, вӗсене савӑнтарма, вӗсемпе пӗрле хамӑн телейпе хӗпӗртеме мана Октябрьти Аслӑ революци тивлетлӗ кунҫул пачӗ.

1973 ҫул, Шупашкар — И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ

*Хӑй ҫырса хӑварнине кӗскетсе кӑларатпӑр. Редакци.*

**ТУПМАЛЛИ**

Сатурпа Илем . . . . . . 3
Пугачев парни . . . . . 59
Тӑвӑл хыҫҫӑн тӑвӑл . . 114
Пурнӑҫӑм ҫинчен кӗскен . 173

**Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский**

**САДУР И ИЛЕМ**

**Три пьесы**

На чувашском языке

Редактор Р. М. Митрушкина
Художник Е. Е. Михайлова
Художественный редактор
Э. М. Юрьев
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Н. П. Печникова

ИБ 1316

Сдано в набор 01.12.82. Подписано в печать 16.06.83. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 5,5. Усл. печ. л. 9,24. Усл. кр.-отт. 9,5. Учетно-изд. л. 9,33 Тираж 3000 экз. Заказ № 4982. Изд. № 68. Цена 70 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000 Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли. 428019 Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

70 пус

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ